Л 17
15761.40.

Александра Лазарева

Хер чёри

Национальная библиотека ЧР
4-015761

СТОК СРОКА ВОЗВРАТА
НИГА ДОЛЖНА БЫТЬ
ЗВРАЩЕНА ЖЕ
ЗАННОГО

15761 чув

ЧĂВАШ АССР КĔНЕКЕ ИЗДАТЕЛЬСТВИ
ШУПАШКАР — 1971

Кт
К с(44в)
Л 17

Александра Лазарева

Хёр чёри

повесть
Колосвем

7—3—3
47—71М

Александра Лазарева кĕнекисене пирĕн вулакансем лайăх пĕлеççĕ ĕнтĕ. Пуринчен ытларах писательница чăваш хĕрарăмĕн тĕрлĕ вăхăтри — ĕлĕкхи тата хальхи — пурнăçĕпе ĕçĕсем çинчен çырать («Чипер Анна», «Ырă ĕмĕт», «Çутă пĕве», «Пирĕн таврара», «Çурхи кăмăл» тата ытти кĕнекесем).

Ку кĕнекене А. Лазарева юлашки 2—3 çул хушшинче çырнă произведенисене кĕртнĕ. Вĕсен тĕп теми — эпир Тăван çĕршыва пĕтĕм чун-чĕререн юратни, хамăр халăх телейĕшĕн пурнăçа та пама хатĕр пулни. Туй вăхăтĕнчех пĕччен тăрса юлнă Алевтина хăй ирĕкĕпе фронта кайса паттăр ĕçсем тăвать («Алевтина» повесть), Калерия Петровна учительница ĕмĕр тăршшĕпех çамрăк ăрăва патриотла воспитани парать («Вĕсен амăшĕ» калав). Галина Андреевнăн вăрçăран таврăнайман упăшкин инçетри вилтăприне пионерсем тирпейлĕн пăхса усраççĕ («Хисеплĕ пассажир»). «Ялан кĕтнĕ хăна» калаври çынсем вара — вăрçăпа мирлĕ ĕç паттăрĕсем.

«Хĕр чĕри» повеçре автор çемьепе йăла ыйтăвĕсене хускатать.

15761 - чв



С(ЧУВ)
Л—17.



Повесть

Алевтина

ПУЛСА ПЁТМЕН ТУЙ

Сан чёрӳнте юратӳ хёмленсе тăнă чух эсё ёçре те хёрӳллё пулатăн.

Алевтина — ялти чи илемлё, яштака та тăп-тăп пӳ-силлё, сар чечек пек хёр: юлашки пёр-ик çул хушшинче ун çине ку тăрăхри нумай каччă куç хывнă ёнтё. Анчах пуринчен ытла ăна çӳллё те патвар, хурарах сăнлă Унисём килёштернине пурте пёлсе çитрёç. Унисём çакна хăй те пытармарё. «Пурте пёлччёр эпё сана юратнине, пётём тёнче пёлтёр, уншăн вăтанмалли çук»,— терё вăл пёррехинче, Алевтинăпа иккёшё тёл пулсан.

Вёсем мён ачаранах туслă пулса ӳсрёç, колхоз çамрăкёсен шкулёнчен пёрле вёренсе тухрёç. Кайран мăнисемпе пёрле колхозра ёçлеме тытăнчёç. Ӳссе çитсен, Унисёме ытти çамрăксемпе пёрле Совет Çарне илчёç, унтан вăл виçё çул хушши çав тери лайăх çырусем çырса тăчё. Алевтина çав çулсенче колхозра ырми-канми ёçлерё, хăйён ёçёпе ял хушшинче ыр ятлă пулчё.

Киле таврăнсан, Унисёме колхозра бригадир турёç. Вăл çулсенче бригадир ёçё председателённинчен те йывăртарахчё теме юрать. Уй-хире тырă-пулă акасси те, ăна пухса кёртесси те çăмăлах марччё ун чух. Мён тăвас тетён: машинсем хальхи пек йышлă марччё, ёçсене пуринчен ытларах çын вăйёпе, алăпа тума тиветчё. Çавăнпа Унисёмён çу каçа пёрре те тăраниччен сывăрма май килместчё. Çутăлнă-çутăлман тăрса тухатчё те çынсене ёçе чёнсе çӳретчё. Хăшёсем хушнă ёçе вăхăтра тумасан, вăл питё тарăхса каятчё, хăй тёллён вăрçса илетчё: «Эх, пуласчё çарти пек уставсем, кăтартнă пулăттăм эп вёсене, кашни наяна вуншар кунлăха гауптвахтăна лартăттăм!»

...Çуркунне, çёр типсе çите пуçласан, хёвел хёртсе пăхнă кун, çамрăк бригадир колхозниксене, кёреçесем çёклеттерсе, Тайлăм уя ертсе тухрё. Кунта çурхи шыв çёре нумай вырăнсенче урлă-пирлё çурса, тарăн шырлансем туса хăварнă-мён. Акана тухиччен çак шырлансене, тăпра тултарса, тикёслесе хăвармаллаччё.

Пёр-пёринпе кăмăллăн калаçса, кулкаласа ёçлекен çынсемшён кун иртни те сисёнмест. Акă, кăнтăр вăхă-

че те иртсе кайрĕ, хĕвел каç еннелле сулăнчĕ. Çав вăхăтра ялтан велосипед çине утланнă арçын ача тухрĕ те ĕçлекенсем еннелле çĕмрен пек вĕçтерсе пычĕ. Пурте палларĕç ăна — ку Вăрăм Лука ывăлĕ Илюш пулчĕ. Амăшĕ ăна валли çимелли леçме янă иккен.

Илюш велосипед çинчен аннă-анман ашшĕ аллинчи кĕреçене ярса тытрĕ те чĕлхене çавăрса çыртсах ĕçлеме тапратрĕ.

— Ак хайхи, Лукан заместителĕ килчĕ,—кулкаласа илчĕç хăшпĕрисем.—Маттур йĕкĕт, кунтан çын пулать!

Илюш, хăйне мухтанипе хавасланса, тата хытăрах тăрăшрĕ. Сирпĕтрĕ кăна тăпрана. Унтан сасартăк, тем аса илсе, ĕçлеме чарăнчĕ те, çаннипе сăмсине шăлса, пурне те илтĕнмелле каларĕ:

— Э-э... Мĕн çав... Мансах кайнă калама: пирĕн ялта хĕр çураçаççĕ!

— Кама? Кам хĕрне?— тĕлĕнсе ыйтрĕç темиçен пĕр харăс. Хăшĕсем ĕçлеме те пăрахрĕç.

— Алевтинăна! Лесник хăтана килнĕ ун патне! Çĕнĕ тăрантаспа. Лаши вара... ай-ай-ай капмар! Тĕсĕ йăм-хура, çăмарта пек яка, çӳ-ӳллĕ... Рысак!

Çакна илтсен, Униçĕм чĕри пăчăртанса илчĕ. Аллинчи кĕреçине пĕррех çĕре чиксе лартрĕ, ассăн сывласа ячĕ.

— Лука пичи, эс ман вырăна юлатăн, хамăн йăпăрт кайса килмелли пур-ха...—терĕ вăл. Хăй çавăнтах васкаса анаталла утрĕ, улăха çитсен, тин çеç шăтса тухнă симĕс курăк çинче çӳрекен колхоз лашисенчен пĕрне çилхинчен тытса утланчĕ те йĕвенсĕр-мĕнсĕрех ял еннелле тĕпĕртеттерчĕ...

...Ашшĕпе амăшĕ Алевтинăна тахçантанпах çывăхри вăрман хуралçине — Хура Пракуха кавча парас пирки калаçатчĕç. Вăл, çав Пракух, амăшĕпе кăна пурăнать. Пуян ĕнтĕ: лаши те, ĕни те, ытти выльăхсем те картиш туллиех. «Вăрман хуçине» нихăш енчен те тиркеме çук. Алевтина ашшĕне те ыйтнă-ыйтман пулăшать вăл. Вутă-шанкă кирлĕ-и, хапха юпилĕх юман-и... Çакна Униçĕм лайăх пĕлет, çавăнпа та халь унăн чĕри кăкăртан сиксе тухас пекех тапрĕ. Нивушлĕ Алевтина çав çынна кайма килĕшĕ?..

Анчах кăлăхах пăшăрханнă-мĕн вăл. Уйран юлан-утлă çын сиккипе килнине курсанах, Алевтина ăна

хирĕç чупса тухрĕ. Вăл хытă пăлханать пулмалла, пит-çăмартисем хĕрелсе кайнă. Çавăнпа хăй тата илемлĕрех куранать.

— Эс мĕн... кавча каятăн темеççĕ-и?— лаша çинчен сиксе ансанах ыйтрĕ Униçĕм.

— Ухмах эсĕ,— терĕ те ăна Алевтина, йăл кулса илчĕ.— Эс пур çинче ăçта каям ĕнтĕ эпĕ?

— Сана çураçма килнĕ вĕт?

— Пулин! Лараççĕ вĕсем эрех ĕçсе. Эп сана куртăм та тухса тартăм...

Униçĕм чунĕ тинех лăпланнă пек пулчĕ. Вăл Алевтинăна ик аллинчен çатăрах ярса тытрĕ. Унтан вĕсем хăйсем те сисмерĕç, ансăр пралукпа уялла тухса хуллен кăна пахчасем хыçĕпе утрĕç. Кăшт кайсан, Униçĕм хĕре хăйсен пахчине кĕрсе курма сĕнчĕ. Алевтина пĕр сăмахсăрах килĕшрĕ.

Илемлĕ сад пахчинчи улмуççисен те, çырла йывăççисен те папкисем тулса çитнĕ, хăшĕсем çурăлмах пуçланă. Вĕсем ĕнтĕ ыран-паянах шап-шурă чечеке лармалла.

Çырма тĕпĕнче çăлкуç тапса тăрать. Качча хĕре çавăн умне илсе пычĕ.

— Ытла лайăх-çке сирĕн кунта,— терĕ Алевтина.

— Тиркемелле мар. Ялта никам пахчинче те çăлкуç çук, пирĕн, çырмаллă вырăнта, çеç пур. Тата çакă çăлкуç шывĕ питĕ сиплĕ теççĕ. Вăл ĕлĕкреннех пирĕн йăха вăй-хал кĕртсе тăнă имĕш. Хăвах пĕлетĕн, ялта тĕрлĕ халăх пурăннă — пуянни те, чухăнни те. Анчах пирĕн асаттепе асанне çулне çити никам та пурăнайман. Асанне тăхăрвун пиллĕкре, асатте тăхăрвун çиччĕре вилнĕ. Çав çăлкуç шывне ĕçсе пурăннăран çавăн пек çирĕп пулнă сирĕн карчăкпа старик, теççĕ хăшĕсем. Халь те ялти чылай çынсем, килйышра сасартăк чирлекен-тăвакан пулсан, пирĕн çăлкуç шывне ăсма килеççĕ. Аякри уйсене ĕçлеме кайнă чух кӳршĕсем яланах кăкшăмсене çакăнти шыва тултарнă. «Ку шывпа танлаштарсан — сăра ниме те тăмасть»,— тет Крахъян кинемей халь те.

Пĕр хушă шарламасăр тăнă хыççăн Униçĕм каллех калама тытăнчĕ:

— Ĕлĕкрех вара çапла пулнă, тет: çĕрме пуян Иккантăр çак çăлкуçшăн пирĕн кил вырăнĕпе хăй вырăнне улăштарас тесе тапăннă аттене, улăштарнăшăн укçа

нумай пама пулнă. Анчах пирĕн атте пурпĕрех килĕшмен. «Ман çăлкуçне çитекен пуянлăх çук çĕр çинче»,— тенĕ пулать вăл.

— Тĕлĕнмелле...— пăшăлтатса илчĕ Алевтина.

— Эсĕ те ĕçсе пăх-ха, Алевтина, сана мĕнле пек туйăнĕ?— терĕ Униçĕм, çăлкуç патĕнчех выртакан йывăç куркапа шыв ăсса парса.

Алевтинăн чăнах та шыв ĕçес килнĕччĕ-ха. Леш вăрман хуралçи хăтана пырсан, самаях пăлханса, ĕçес килнине те тӳссе ларчĕ вăл. Ăна сăра та, эрех те ĕçтересшĕнччĕ, анчах вăл яхăнне те ямарĕ. Тен, çавăнпах-и, Униçĕмсен шывĕ питĕ килĕшрĕ ăна.

— Ну, мĕнле пек?— чăтаймасăр ыйтрĕ Униçĕм.

— Питĕ лайăх, чуна уçсах ячĕ. Тĕрĕсех пуль эс калани...

— Эсĕ мана кавча тухсан, эпĕ саншăн çак çăлкуç пекех ĕмĕр-ĕмĕр таса пулăп. Санăн чунна пĕрре те ыраттармăп. Ĕненетĕн-и?—хĕр куçĕнчен пăхрĕ Униçĕм.

— Эсĕ, Униçĕм, яланах тĕлĕнмелле лайăх сăмахсем калатăн, кĕнекесенче çырнă пекех... Мĕнле юратас мар-ха сана?— вăтанса йăл кулса илчĕ Алевтина.

Униçĕм вара хăй савнă хĕре пĕрремĕш хут ытала-са чуптурĕ. Вĕсен таса юратăвĕшĕн савăннă пекех, çывăхри улмуççи çинче ларакан темле кайăк хăйĕн савăк юррине юрласа ячĕ...

...Кăçалхи çуркунне Униçĕм хăй бригадинчи çынсене пушшех те хыпалантарса ĕçлеттерме тытăнчĕ. Мĕншĕн тесен çураки иртсенех унăн туй пулмалла — вĕсем Алевтинăпа мăшăрланма килĕшрĕç. Алевтина ашшĕпе амăшĕ те, Униçĕм амăшĕ те хирĕç пулмарĕç çакна...

Туя ялти сынсем те пĕр-пĕр уява кĕтнĕ пекех кĕтрĕç, тăванĕсем ĕçме-çиме хатĕрлерĕç.

Туй кунĕ çанталăк иртенпех çав тери лайăх пулчĕ. Уяр тӳпере пĕр пĕлĕт татки те курăнмасть, ачаш сенкер тĕс чуна лăплантарать çеç.

Хĕвел йăмрасем çӳллĕш хăпарсанах ял тăрăх кĕçĕн кĕрӳсем хитре тăрантас кӳлнĕ, çилхи-хӳрисене хăюсемпе капăрлатнă, мăйĕсене шăнкăравсем çакнă лашасемпе чупма тытăнчĕç. Купăс калаççĕ, пурне те илтĕнмелле кăшкăраççĕ:

— Туй! Туй, туй пулать! Пурте туя пымалла!..

Качча килĕнче пĕтĕмпех хатĕр. Кил хушшинче çĕнĕ

хăмасенчен тунă тăват кĕтеслĕ шыльăк. Пĕр кĕтессинче ятарласа вăрмантан илсе килсе лартнă ем-ешĕл çамрăк çăка. Ун туратти çинче тĕрлесе илемлетнĕ шурă питшăлли çакăнса тăрать. Мăн сĕтел çинче сăра витрисем, эрехĕ, кукли-икерчи...

Кăнтăрла çитеспе туй халăхĕ пухăна пуçларĕ, картиш майĕпен çĕр тĕрлĕ сасăпа тулса ларчĕ. Туй арăмĕсем паçăрах хатĕр ĕнтĕ — пурте питĕ капăр, чăнкăрчăнкăр тенкĕсемпе, шӳлкемесемпе...

Часах туй юрри, ташă-кĕвĕ пуçланать. Анчах ку туя каччă килĕнче пуçлани кăна-ха. Туй пуçĕ урапа çине сăра пички хурса хĕр килне тухса кайсан вара туй халăхĕ те тапранчĕ. Васкамасăр, урам тăрăх ташласа-юрласа хăпарчĕ вăл. Тусан кăна мăкăрланса юлать.

Хĕр килĕнчи хăтасем эрех-сăрапа хирĕç тухса илчĕç. Кунти шыльăка кĕрсенех, хаваслă та чарусăр туй арăмĕсем хăйсен юррисене шăрантарма тытăнчĕç:

Туй тăвар та, çуй тăвар,
Пуçа усса ларар мар.
Хăта хĕрне илетпĕр,
Хĕрĕ пырать ирĕкпех.

Ял вĕçĕнчи шурă пӳрт,
Ырă кил те лайăх кил.
Унăн хуçи Униçĕм,
Ырă çын та лайăх çын...

Хĕрсех, сарăлсах пыракан туй шавĕ пур çын чунне те хăпартлантарса ярать. Курма пухăннă çынсем, паян пĕрлешекен çамрăк мăшăра мухтаса, шăкăл-шăкăл калаçаççĕ.

Сасартăк çак çĕр тĕрлĕ сасăпа кĕрлекен туя районти ялхуçалăх пайĕн пуçлăхĕ, Униçĕм пиччĕшĕ Антон Арманов, пырса çитрĕ. Кунти çынсем ăна пурте лайăх пĕлеççĕ. Ăна тӳрех малалла иртме çул пачĕç. Униçĕм савăнса кайрĕ: килчĕ-ха, эппин, Антун пиччĕш! Хытă чĕннĕччĕ ăна, анчах ерçменнипе килеймест пуль тесе хăранăччĕ. Çав вăхăтрах тата Униçĕме Антон ытти чухнехи пек савăнăçлă пулманни кăштах кӳрентерсе те илчĕ. Пĕр курка сăра çеç ĕçрĕ пиччĕш, эрехне тытмарĕ. Питĕ хытă ĕшеннĕ, такам çине кӳреннĕ пек,

хащ! сывласа ячĕ те шыльăк сакки çине ларчĕ. Кăшт тăхтасан, сывлăш çавăрса илнĕ пек пулчĕ, унтан, ура çине тăрса, пурне те пăхса çаврăнчĕ те сăмах пуçларĕ:

— Юлташсем, тăванăмсем! Эпĕ сирĕн пата ырă хыпарпах килмерĕм çав... Вăрçă пуçланнă, тусăмсем! Кĕçĕр ылханлă нимĕç фашисчĕсем пирĕн çĕршыва тапăннă...

Çак сăмахсем çынсене кĕтмен çĕртен пуçран çапнă пекех пырса тиврĕç.

— Вăрçă?! Чăнах та вăрçă пуçланнă-и?!

— Ай-уй, турă!..

— Мĕн пулать ĕнтĕ капла?!

— Кĕтмен хурлăх...— хăраса кайса пăшăлтатрĕç çынсем.

— Çапла çав, юлташсем, питĕ шутсăр пысăк хурлăх ку! Хăвăрах шутлăр: ак çак самантра, эпир кунта туй тунă чух, лере,— Антон аллипе хĕвеланăçнелле кăтартрĕ,— хăрушă вăрçă пырать, юн тăкăнать... Çĕршывра паян мобилизаци пуçланчĕ. Çавăн пирки килтĕм те эпĕ — мана районти военкоматран ячĕç. Манăн сирĕн ял Советĕнчен вăрçа кайма тивĕçлĕ арçынсене илсе каяс пулать,— терĕ Арманов.

— Камăн каймаллине ăçтан пĕлес? Е пурин те пĕр тăруках каймалла-и? — ыйтрĕ пĕри.

— Ăна пĕлтерĕç. Халлĕхе ман алăра чи малтан каймаллисен списокĕ пур...

Унччен те пулмарĕ, туй халăхĕ хушшине колхоз почтальонĕ, шыçмакрах пит-куçлă Катюк пырса кĕчĕ. Вăл ним каламасăрах хăйĕн сăран сумкинчен шурă хут таткисем — повесткăсем ĕнтĕ — кăларчĕ те, хушаматсене вуласа салатса пама тытăнчĕ. Упăшкисем çав повесткăсене илсен, арăмĕсем ĕсĕклеме пуçларĕç. «Пĕтрĕмĕр, Микула!», «Мĕн курасси пур-ши, Кириле?»..

Чи юлашкинчен Катюк сĕтел хушшинче Антонпа юнашар ларакан Униçĕме пырса пачĕ. Униçĕм сăнпичĕ хут пек шуралса кайрĕ. Çав вăхăтра кĕлетрен шукăль тумланнă Алевтина — пулас çĕнĕ çын — тухса шыльăка кĕчĕ. Униçĕм ăна хирĕç сиксе тăчĕ те çатăрах ыталаса илчĕ.

— Пулмарĕ пирĕн туй, чунăм... Пĕрлешичченех уйăраççĕ!

— Ах, Униçĕм, мĕншĕн кун пек телейсĕр пултăмăр-ши?! — терĕ те Алевтина, шăппăн йĕрсе ячĕ.

— Ан кулян, Алевтина! — ун куçĕнчен пăхрĕ Унисçĕм.— Вăрçи, тен, нумаях пымĕ-ха. Тен, часах тăшмана аркатса таврăнăпăр, ун чух эпир санпа тата телейлĕрех пулăпăр. Чи хакли — пирĕн юрату... Ăна нихçан та, никам та, нимĕнле вăрçă та сӳнтереймĕ. Çапла мар-им, чунăм?

— Кăна питĕ тĕрĕс каларăн эсĕ, Унисçĕм,— терĕ унччен шарламасăр ларакан Антон.

Алевтина куççуль витĕрех йăл кулса илчĕ.

— Ну, ачамăрсем, ним тума та çук, çирĕп пулăр, хуйха-суйха ан парăнăр, тетĕп çеç эпĕ сире. Пурнăçра тем те пулать — кĕтмен хурлăх та, инкек те, савăнмалли те... Шанчăка çухатмăпăр, малашне ырри те пулĕ-ха,— терĕ вĕсем çине пăхса Алевтинăн ватă ашшĕ.

Вăл ĕнтĕ пурăнса курнă çын, хăй те граждан вăрçинче темиçе фронтра çапăçнă, киле хăрах хулсăр таврăннă. Унăн сăмахĕсем яланах тĕрĕс пулаççĕ.

— Атте, эпир хамăра пурпĕрех пĕрлешнĕ мăшăр тесе шутлатпăр. Алевтинăна эпĕ хамăр патах илсе каятăп, киле хăваратăп,— терĕ Унисçĕм, ун çине тӳррĕн пăхса.

— Паллах, хăвăрăн ирĕк...

— Тĕрĕс калатăн, ывăлăм, кинĕн пирĕн патрах пулмалла,— сăмах хушрĕ ку таранччен шарламасăр ларнă Унисçĕм амăшĕ.— Эппин, пырăр эсир. Эпĕ каямха. Унисçĕм валли кутамкка та хатĕрлес пулать.

Карчăк, пурне те ырă сунса, шыльăкран тухрĕ те куçĕсене шăла-шăла утрĕ.

Туй халăхĕ те, курма пынисем те килĕсене саланчĕç. Туй кунĕ хурлăх кунĕ пулса тăчĕ. Кашни киле тенĕ пекех никам кĕтмен хуйхă пырса кĕчĕ.

Каçхине çамрăк мăшăр Унисçĕмсем патĕнче пулчĕ. Пĕрремĕш те юлашки каç. Асату каçĕ. Унисçĕм патне кĕрсе тухакансем чылай пулчĕç. Алевтинăн ашшĕпе амăшĕ те пырса ларчĕç. Савăнас вырăнне хуйхăрчĕç кăна. Сăмах-юмах вăрçă çинчен çеç пулчĕ. Тин çеç пуçланнăскер, хăçан пĕтĕ-ши вăл? Мĕнпе пĕтĕ? Нумай та пулмасть çартан таврăннă Унисçĕм ĕнентерсех каларĕ: нумая пымасть, эпир вăйлă, тăшмана часах çапса аркататпăр!

— Эс каланă пек пулинччĕ...—ассăн сывларĕ Алевтина ашшĕ.

Çуллахи çĕр питех те кĕске, часах иртсе кайрĕ.

Пĕтĕм ялĕпе илсен те, вăл каç ачасемсĕр пуçне никам та чăлкăм куç хупмарĕ.

Ирхине, хĕвел пӳрт тăррисем çӳллĕш хăпарсанах, колхоз правленийĕ умне халăх пухăнма пуçларĕ. Пĕр сакăр сехетсенче вара ялтан лавсем ерипен кăлтăртатса тухрĕç те район центрĕ еннелле кайрĕç. Анчах лавсем çинче халлĕхе кутамккасем çеç выртрĕç, пулас салтаксемпе вĕсене ăсатакансем пурте çуран утрĕç.

Ĕнер туйра юрланă-ташланă хĕрарăмсем куççуль юхтарсах йĕреççĕ. Каякан арçынсенчен чылайăшĕ ĕçкелесе тухнă. Хушăран ĕлĕкхи салтак юррисене тăскаласа яракансем те пур:

Çыран хĕрринчен уйрăлсан,
Пĕчĕк киммĕм хыт юхать.
Тăван килтен тухса кайсан,
Чунăм хытă хурланать...

Алевтинăпа Униçĕм чи кайра утса пычĕç. Мĕн калаçассине çĕр каçа пĕтĕмпех калаçса пĕтернĕ ĕнтĕ. Халĕ кашни хăй шухăшĕпе, шарламасăр утать.

«Качча тухсан хуйхи-суйхи тупăнсах пырать», тенине Алевтина пайтах илтнĕ. Анчах вăл качча тухса мăшăрлă пурнăçпа пĕр кун та, пĕр сехет те пурăнманха, пурпĕрех унăн чунĕ çав тери ыратать. Кун çинчен вăл каласа пама та пултараймасть. Кĕтмен çĕртен савнă мăшăрсăр ют килте юласси калама çук йывăр. Алевтина ăна-кăна шăл çыртсах тӳсĕччĕ-ха, Униçĕм çеç сывă юлса каялла чипер таврăнтăрччĕ. Урăх нимĕн те кирлĕ мар!..

...Колхозра тӳрех пысăк улшăнусем пуçланчĕç. Темиçе кун хушшинче пĕр вăйпитти арçын та юлмарĕ. Пĕтĕм ĕç хĕрарăмсемпе ватă-вĕтĕ çине тиенчĕ. Алевтинăна Униçĕм вырăнне бригадир туса хучĕç. Вара вăл упăшкин сăран сумкине çуса тасатрĕ те, ăна хăй çакса çӳреме тытăнчĕ.

Часах ĕççи вăхăчĕ те çитрĕ. Утă çулма каяс кун Алевтина кăвак çутăллах килĕрен кĕрсе тухма тытăнчĕ. Анчах халь çынсене ĕлĕкхи пек ĕçе чĕнсе çӳреме кирлĕ те мар иккен, хĕрарăмсем хăйсемех, пĕр сăмахсăрах тухаççĕ. Çавăнпа вăл тек çӳремерĕ, правлени умĕнчи тимĕре çапса çеç чĕнме тытăнчĕ.

Çанталăкĕ çав тери уяр тăчĕ. Çулса пăрахнă курăк лайăх типрĕ. Ĕнтĕ улăхсенче, варсенче утă куписем шăкăриех ӳссе ларчĕç. Халĕ вĕсене ферма çывăхне турттарса капана хывмалла çеç. Çурри таран патшалăха памалла. Çар валли. Фронт валли. Çак ĕçе ыран пуçăнас тенĕ чух, шăп кăнтăрла иртсен, Атăл леш енчен сарă-хура пĕлĕтсем курăнса кайрĕç. Урам варринчех çавраçил çĕлен пек явăнса, пĕтĕрĕнсе çӳлелле хăпарчĕ. Кăшт тăхтасан, асар та писер çил-тăвăл тапранчĕ. Вăл улăм витнĕ çурт тăррисене тăпăлтарма пуçларĕ. Ӳсентăрансем çĕре çити авăнса илеççĕ, урамри ватă йывăçсем хуçăлаççĕ. Чӳрече кантăкĕсене мăйăр пек пăр муклашкисем шатăртаттарса çапма тытăнчĕç.

Чăн-чăн ахăрсамана ĕнтĕ!

Алевтина, тăвăл иртсе каясса кĕтсе, чылай хушă сарай çумне тĕршĕнсе тăчĕ. Пăтранчăк пĕлĕтсем хĕвел-тухăçнелле сулăнса кайсанах, вăл улăхалла ыткăнчĕ.

Çитрĕ. Пăхрĕ те — чĕри кĕç çурăлса тухатчĕ: сысна çĕре йăштанă пекех çавăрттарса тăкнă утă куписене. Хăшпĕрисене тĕпренех, пĕрчĕ юлмиччен, салатнă, вĕçтерсе кайнă.

Алевтина сăрт хĕррине ларчĕ те ним тума аптранипе макăрсах ячĕ. Мĕн тери тăрăшнăччĕ вĕсем! Пĕтĕмпех сая кайрĕ! Кам пуçтарса пĕтерес ăна тепĕр хут?..

Çав вăхăтра, кĕтмен çĕртен, ун умне хăйĕн ашшĕ пырса тухрĕ. Вăл халь колхоз председателĕ. Ăна нумай пулмасть вăрçа тухса кайнин вырăнне суйласа лартрĕç.

— Эх, мĕскĕн бригадир!.. Макăр тавай, макăр, вара пĕтĕмпех пулать,— терĕ вăл тарăхнă сасăпа.— Вăт, пурăн ĕнтĕ çавăн пек лĕпĕркке хĕрарăмсемпе ĕçлесе! Мĕн ухмахланатăн эсĕ? Хальхи вăхăтра хĕрарăм пулма пăрахас пулать! Вăрçă вăхăчĕ! Макăрнипе нумаях ĕç тăваймăн. Ак мĕнле приказ паратăп сана: çумăр йĕпетни часах типет. Ав, кур, хĕвел те тухрĕ. Пĕтĕм утта улăхра пĕр пĕрчĕ юлмиччен пуçтарса, тӳрех ферма патне турттарса капана хывнă пултăр. Патшалăх валли те ăсататпăр. Анлантăн-и?

— Юрĕ...— пуçĕпе сулчĕ çеç бригадир.

Çавăн хыççăн Алевтина, хуть те тем пулсан та, нихçан та макăрмарĕ. Йывăр ĕçĕнчен те хăраса ӳкмерĕ: «Куç хăрать те, ал тăвать. Çине тăрсан, ĕç ăнатех,

пулатех мĕн тăвас тени!» — çынсене çапла каласа ĕçлеттерчĕ вăл.

...Унăçĕм çул çинчен пĕр открытка çырса ячĕ. «Фронт патнелле çывхарса пыратпăр»,—тенĕччĕ унта. Тепре çапăçу хирĕнченех виç кĕтеслĕ пĕчĕк çыру килчĕ. «Çĕрĕн-кунĕн çапăçу кĕрлет. Кунта мĕн пулса иртни çинчен каласа пĕтерес çук. Эпĕ хамăн телейлĕ çăлтăрăма шанатăп. Çавăнпа та маншăн ан хăра»,—тенĕччĕ.

Унтан вара пĕр сас-хура та пулмарĕ. Алевтина кунĕн-çĕрĕн кĕтрĕ, хăй те нумай çырчĕ, анчах тек пĕр сăмах та кĕтсе илеймерĕ. Чуна çав тери йывăр пулсан та, пурнăçне пурăнасах пулать...

Çур иртрĕ, хĕл пулчĕ, вăл та иртсе кайрĕ. Çак çулталăк хушшинче мĕн чухлĕ халăх пĕтрĕ пуль? Ялти çынсем патне час-часах вĕсен тăванĕсем паттăрсен вилĕмĕпе вилни çинчен пĕлтерекен хутсем килеççĕ. Унăçĕм пирки те çавăн пек хут килесрен чĕри ыратсах пурăнчĕ Алевтинăн. Ун пек пулсан, вăл ниепле те тӳссе иртterес çук пек туйăнать...

Вăрçă чарăнасси паллă мар. Нимĕç хурахĕсем пирĕн çĕр çине шалтан шала кĕреççĕ. Çакăн пек хăрушă вăхăтра ăçтан-ха лăпкăн пурăнăн? Килте те киленме çук, ĕçре те ăш çунать. Сывă алăсем çеç нимрен хăрамасăр ĕçлеççĕ.

Çурхи ăшă каçсенче, ĕç хыççăн, хĕрсем урама тухаççĕ. Пĕр-пĕринпе каласса лăпланаççĕ, тепĕр чух, ытла кичем пуласран, шӳт туса, кулкаласа та илеççĕ. Унăçĕм йăмăкĕпе, Варуçпа, Алевтина та тепĕр чух урама тухкалать. Хĕрсемпе пĕрле вăл та салхуллă юрăсем юрлама юратать:

Шурă-шурă кăвакарчăн,
Ма вĕçетĕн пĕр-пĕччен?
Мĕн шыратăн ирĕн-каçăн
Кăвак пĕлĕт тӳпинче?..

Шурă-шурă Шураппаçăм,
Ма салхуллăн эс ларан?
Куçăнтан мерчен куççулĕ
Ирĕн-каçăн юхтаран?

...Каллех шăрăх çу кунĕсем çитрĕç. Пĕррехинче çĕрĕпех аслати кĕмсĕртетрĕ, çиçĕм çиçрĕ, анчах çумăрĕ

кăшт кăна çукаласа иртрĕ. Ирхине Алевтинăн килти выльăхсене кĕтĕве хăйĕн хуса яма тиврĕ,— хунямăшĕ чирлĕччĕ; Варуç вара, амăшне сĕт вĕретсе пама тесе, вучах умĕнче тăрмашатчĕ. Урамран кĕрсен, Алевтина хунямăшĕ çине пĕрре пăхса илсенех лешĕ макăрнине асăрхарĕ. Унăн чĕри яштах турĕ: тен, вăл Униçĕм пирки хут илнĕ пулĕ те, киненчен пытарнă ăна? Чăтаймарĕ, Варуça, çенĕхе чĕнсе тухса, тĕпчеме тытăнчĕ. Лешĕ нимĕн те пĕлмест, илтмен, курман иккен ун пеккине. Алевтина тинех лăпланчĕ те уя тухса çуреме шутларĕ. Тен, ыраш пулса çитет, вырма тухмалла мар-и? Çула май вăл хăйĕн тăван килне, ашшĕпе амăшĕ патне, кĕчĕ.

Шарик ятлă хура йытă тăван çын пынăшăн хурине вылятсах йăпăлтатма тытăнчĕ. Алевтина хăй те унпа пĕчĕк ача пекех выляса илчĕ.

Çав вăхăтра унăн ашшĕ, чĕлĕмне йăсăрлантарса, тарăн шухăша кайса тăчĕ.

— Эсĕ, хĕрĕм, нимĕн те пĕлместĕн-им?— ыйтрĕ унтан, ассăн сывласа ярса.

— Çук-çке, мĕн пĕлмелле вара манăн?— тĕлĕнсе пăхрĕ ун çине Алевтина.

— Чĕлхуне чарма пĕл-ха эсĕ!— кăшкăрса ячĕ çав самантра амăшĕ.

— Мĕнех ĕнтĕ, пĕлмеллине çыннăн пурĕпĕр пĕлес пулать, пытарса пурăннинчен мĕн усси?— терĕ ăна хирĕç ашшĕ.— Униçĕм пирки хут килнĕ. «Сирĕн ывăлăр хыпарсăр çухалнă»,— тесе çырнă...

— Чăнах-и?! Ах, аннеçĕм, пĕтрĕ ман пурнăç!— амăшĕнчен уртăнчĕ те Алевтина, йĕрсе ячĕ.

Хытăран хытă, хытăран хытă макăрчĕ вăл. Куçĕсем те курми пулчĕç, чĕри те сиксе тухас пек тапрĕ.

— Çитĕ ĕнтĕ, çитĕ! Чарăн!— терĕ те юлашкинчен ашшĕ, пуртрен васкаса тухса кайрĕ: вăл çын кулянни-не, макăрнине тусме пултараймасть.

Амăшĕ вара хĕрне пĕтĕм чунтан лăплантарма тăрăшрĕ. Яланах çепĕç каласа пĕлекен карчăк халь тата ытларах йăваш пулчĕ.

— Ара, вăл таранах ан татăл ĕнтĕ, хĕрĕм! Пĕчĕк ача тавраш çук-ха санăн. Ав, хăш-хăш хĕрарăмсем вĕт-шак ачи-пăчисемпех тăлăха юлаççĕ. Униçĕм пирки «хыпарсăр çухалнă» тесе çеç çырнă, кам пĕлет, тен, çынни чиперех пурăнать-ха? Эпĕ тĕлĕк куртăм кун пирки. Униçĕм вилмен, хăçан та пулин тавăнатех вăл.

Çав кун Алевтина тахçанччен уйра, ыраш пуçи хушшинче çӳрерĕ. Анчах та хăй нимĕн те курмарĕ — ырашне те, умри сукмакне те... Ытла та йывăр пулчĕçке ăна, тӳсме çук йывăр!..

Вăхăт шурĕ. Пĕр вĕçĕм хуйхăрнипе Алевтина начарлансах кайрĕ, чĕри те ыратакан пулчĕ. Ăна çав тери салху пулчĕ, халăхпа пĕрле ĕçре чух çеç унăн чунĕ кăштах уçăлчĕ.

Пĕррехинче, Алевтина шăп уй хапхи тĕлне çитнĕ чух, вĕсен ялне тăрантас кӳлнĕ лаша пырса çитрĕ. Алевтина хапхине те хăех уçса кĕртрĕ. Тăрантас çинче пĕр старикпе хĕр лараççĕ. Хĕрĕ палланăскерех пулчĕ. Вĕсем колхоз çамрăкĕсен шкулĕнчен пĕрле вĕренсе тухнăччĕ. Хурамалăх хĕрĕ Нина Патманова. Шкулта вăл хытанка хĕрача кăваччĕ, халь çав тери тĕрекленсе кайнă!

— Ой, Алевтина! Эсĕ-çке ку!— кăшкăрса ячĕ Нина, тăрантас çинчен сиксе анса.

Вĕсем пĕр-пĕрне ыталаса илчĕç.

— Мĕн эсĕ ĕлĕкхи улпут майрисем пекех тăрантассемпе çӳретĕн?— терĕ Алевтина, кулкаласа.

— Салтака каятăп, тусăм, вăрçа!— терĕ Нина.

— Чăнах-и?!

— Чăнах пулмасăр! Ĕнер повестка илтĕм.

— Хăçан каймалла?

— Тепĕр виç кунтан.

— Епле май килчĕ? Эх, мана та çавăн пек повестка мĕншĕн памаççĕ-ши?

— Санăн хăвăн каяс кăмăлу пур-и-ха?

— Пур çав! Упăшка вырăнне кайăттăм.

— Апла, эсĕ кĕтсе ан пурăн. Вĕсем пурне те ямаççĕ вĕт. Тыт та военкомата ху кай. Эпĕ пĕркун унта чылай хĕрсем хăйсен ирĕкĕпе фронта яма ыйтма пынине куртăм.

— Тавтапуç, Нина, ырă сăмахушăн. Тупата каятăп, паянах каятăп!

— Чим-ха, акă мĕн. Кайсан ыйт унта: 12-мĕш командăпа пĕрле ярăр, те. Тен, иксĕмĕр пĕрле, пĕр çĕрте пулăпăр.

— Юрать. Эсĕ ăçталла капла?

— Йыснасем патне сывпуллашма килетĕп.

Çав самантра Алевтинăн чĕрине уçă сывлăш вĕрсе

кĕнĕн туйăнчĕ. Вăл тӳрех каялла таврăнчĕ. Васкасах таса çипуç тăхăнчĕ те ĕçмесĕр-çимесĕрех района тухса утрĕ.

«Вăрçă чарăнасси тахçан-ха! Унта халь кашни çын кирлĕ. Эпĕ те усăллă пулма пултаратăп. Тепĕр тесен, эпĕ Нинăран мĕнрен кая? Иксĕмĕр те пĕр тан вĕренĕ...» — çула май шухăшласа пычĕ вăл.

Военкоматра Алевтинăн хытах çине тăма тиврĕ. Вăл темиçе хут та Нина Патманова ятне асăнса илчĕ. Çавăнпа çĕнтерчĕ те-и, тен. Ăна комиссие кĕртсе кăларчĕç те киле таврăнса, кĕтме хушрĕç: «Повестка яратпăр...»

Алевтина ик-виçĕ кун хушши лăпкăнах пурăнчĕ. Хăй военкомата кайса килни çинчен никама та каламарĕ. Анчах кайран каллех унăн ăш вăркама тытăнчĕ: ма чĕнмеççĕ, нивушлĕ улталарĕç? Ахальтен çеç лăплантарса ячĕç-ши? Тепĕр хут военкомата кайса пăхас-ши? Пĕррехинче вара правленире шăп çавăн пек шухăшласа ларнă чух Катюк почтальон ăна повестка пырса тыттарчĕ.

— Тинех!— терĕ хăй ăшĕнче Алевтина, хĕпĕртесе. Анчах çынсем умĕнче пăлханнине палăртмарĕ, лăпкă пулчĕ.— Пăхăр-ха, мана та черет çитрĕ,— терĕ çеç...

АЛЛА ПĂШАЛ ТЫТСАН...

Районти çар комиссариатĕнчи комисси Алевтинăпа Нинăн сывлăхне тепĕр хут тĕрĕслерĕ. Унта: сывлăхĕсем лайăх, çар службине юрăхлă, терĕç.

— Ну, хĕрсем, халь калăр-ха ĕнтĕ, хăвăрăн шутпа, эсир фронта мĕнпе усăллă пулма пултаратăр?— ыйтрĕ вĕсенчен хура уссиллĕ полковник, комисси тĕрĕсленĕ хыççăн.

Алевтинăпа Нина тăруках ним калама аптрарĕç, пĕр-пĕрин çине пăхса, хĕрелсе кайрĕç.

— Мĕн хушаççĕ...— терĕ унтан Алевтина.

— Апла-ха, эппин. Анчах ним пĕлмен çынна мĕн хушатăн? Сăмахран, эсир пĕрре те пулин алла пăшал тытса курнă-и?

— Шкулти Осоавиахим ячейкинче эпир винтовка пайĕсене пĕтĕмпех вĕренсеттĕмĕр. Паллах, унтанпа манма та пултарнă. Анчах аса илме йывăр мар пулĕ...— терĕ Нина.

— Ун чух эпир арçын ачасенчен те тĕлрех переттĕмĕр,— хушса хучĕ Алевтина, хăйне Нинăран кая хурасран шикленсе.

— О, ку пит аван вара!— ывăç тупанĕсене сăтăрса илчĕ полковник.— Апла пулсан, эпир сире хĕрсене снайпер пулма вĕрентекен шкула йышăнма сĕнĕпĕр. Унтан лайăх вĕренсе тухсан вара фронта ярĕç. Çавăн пек килĕшĕпĕр-и? Хирĕç мар-и эсир?

— Çук, çук, пĕртте хирĕç мар!

Хĕрсем иккĕшĕ пĕрле, пĕр çĕрте пулма май килнĕшĕн тем пекех савăнчĕç. Анчах полковник вĕсен савăнăçне çийĕнчех пĕтерсе лартрĕ.

— Çапах та, хĕрсем, халлĕхе сирĕн хăвăрăн килĕрсене тавăрăнма тивет,— терĕ вăл,— мĕншĕн тесен хĕрсен снайпер шкулĕ уçăлайман-ха. Вăл уçăлни çинчен пĕлсенех, эпир сире чĕнсе илетпĕр...

— Çук, эпир ĕнтĕ киле каймастпăр,— терĕ Алевтина.

— Каялла тавăрăнма намăс пире,— юлташĕ майлă пулчĕ Нина.

— Итлĕр-ха, пулас салтаксем, пасарти пек тавлашмăпăр!— сассине хытарчĕ полковник.— Хăнăхас пулать сирĕн: мĕн хушаççĕ — çавна тумалла. Ыйтусем урăх çук пулсан — кайăр, чĕниччен колхозра ĕçлĕр.

Нинăпа Алевтина шăпăртах пулчĕç. Чунĕсене хытарса, яла тавăрăнчĕç те хĕл ларичченех колхозра малтанхи пек ырми-канми ĕçлесе пурăнчĕç.

Çапах та кĕтнĕ кун çитрĕ. Чĕнсе илчĕç вĕсене. Асатрĕç.

...Хĕр-снайперсен шкулĕ Мускав çывăхĕнчи ĕлĕк темле граф пурăннă кермене вырнаçнă-мĕн. Виççĕр хĕр шутĕнче Нинăпа Алевтина та унта тăватă уйăх хушши вĕренчĕç. Çарти çирĕп йĕркесене пăхăнса пурăнма, çар ĕçне вĕренсе пыма малтан йывăртарах пулчĕ ĕнтĕ, хĕрсем çапах аптрамарĕç, куллен-кун хăнăхсах пычĕç.

Команда тăрăх ир-ирех, улттăрах, тăраççĕ те, хăвăрт кăна тумланса, физзарядкăна чупаççĕ, ирхи апат хыççăн уя каяççĕ те кăнтăрла иртсен тин казармăна тавăрăнаççĕ. Унтан, апат çисе кăшт кансан, каллех занятисем пуçланаççĕ: матчасть, баллистика, темтепĕр...

Вырăсла ытла вăйлах пĕлменнипе Алевтинăпа Нинăна вĕренме ытти хĕрсенчен чылай йывăртарах пулчĕ, çапах вĕсем ыттисенчен каях юлмарĕç. Тепĕр чух

ăнланма йывăртарах япаласем пулсан, пулăшакансем тупăнчĕç. Снайпера вĕренекенсем хушшинче тĕрлĕ халăх хĕрĕсем пур: вырăссем, украинкăсем, белоруссăсем, грузинкăсем, тутарсем тата ыттисем те. Вĕсем пурте питĕ час туслашса кайрĕç, пĕр çемье пек, çывăх тăвансем пек пулса çитрĕç.

Çăва тухсан, вĕренӳ тата ытларах хĕрӳленчĕ. Хирти занятисемсĕр пуçне, çав тери йывăр походсем, «бросоксем» пулчĕç. Тӳсме çук хĕвел хĕртет, тусан йăсăрланать, эсĕ хăвăн пĕтĕм пурлăхна — винтовка, патронсем, шинель скатки, каска, кĕреçе йăтса, вунă-вунпилĕк километр утатăн, вырăнĕ-вырăнĕпе чупатăн, хырăмпа шăватăн. Çавăнтах хăвна валли окоп та чаватăн, никам асăрхамалла мар маскировка тăватăн...

Анчах снайперсемшĕн чи кирли вăл — тĕл пеме пĕлни. Тăшмана пĕрре куç хупса илнĕ хушăрах, питĕ хăвăрт курса лектерме пĕлмелле.

Снайпер винтовкипе çеç мар, противотанковăй пăшалпа та, ручной пулеметпа та пеме вĕрентрĕç хĕрсене, гранатăсем ывăтма та хăнăхтарчĕç. Вăрçăра пурте кирлĕ пулать!

Алевтинăпа Нинăна Тула хĕрĕ Роза Панкова мĕн вĕренсе тухичченех пулăшрĕ. Çав тери пултаракан хĕр пулчĕ вăл! Темшĕн-çке — те вĕсем ялан сăпайлă пулнăшăн — чăваш хĕрĕсене килĕштерчĕ те, пĕр хĕрпе калаçса татăлса, вырăнне те улăштарчĕ, вĕсемпе юнашар выртса-тăма пуçларĕ.

...Роза калаçма питĕ юратаканскерччĕ, çывăрма выртсан та час шăпланмастчĕ. Алевтинăпа Нинăна хăй çинчен те каласа пачĕ вăл: ашшĕне нимĕçсем вĕлернине пĕлсенех, фронта хăй ирĕкĕпе кайма шут тунă. Запасри полкра пĕр çамрăк сержантпа паллашнă та туслашсах кайнă. Сержанчĕ, Роман Петров, чăваш каччи иккен. Вăрçă хыççăн вăл Розăна Чăваш республикине илсе кайма сăмах панă. Анчах вĕсен часах уйрăлма тӳр килнĕ — Романа запасри полкран десанта илсе кайнă. Халь Роза вăл ăçтине те пĕлмест. Анчах манмасть ăна, пĕрмай асăнать...

...Снайперсен шкулĕнчен пурте аванах вĕренсе тухрĕç. Нумайăшĕ — вăл шутра Алевтинăпа Нина та— ВЛКСМ Центральнăй Комитечĕн грамотине илчĕç. Роза Панковăна вара унăн хăйĕн ятне çырнă снайпер винтовки тыттарчĕç.

Çакăн хыççăн Роза, «увольнительнăй» илсе, Мускава тухса кайрĕ. Унăн кунта аякри тăванĕсем пур имĕш. Анчах паян хăйсен канмалли кун пулсан та нумай çӳремерĕ, кăнтăрлах таврăнчĕ.

— Килĕр-ха, хĕрсем...— кăчăк туртрĕ те вăл Алевтинăпа Нинăна, лешсем пырсанах пĕчĕк чăматанне уçса кăтартрĕ: унта пĕр кĕленче портвейн, темиçе çĕрулми катлечĕ, пĕр ывçă канфет выртать.

— Ку мĕне пĕлтерет?— тĕлĕнсе ыйтрĕ Нина.

— Мĕн куратăн — çавна пĕлтерет. Тăвансем сире валли парса ячĕç. Ыр курар-ха пĕрре! Хире, уçă сывлăша, ирĕке тухар!...— терĕ Роза хавассăн.

Виçĕ хĕр-салтак, çултан пăрăнса, уй варринерех кайрĕç те çемçе çерем çине тăсăлса выртрĕç.

— Кам пĕлет, кун пек лăпкăн выртасси, тен, нихçан та пулмĕ...— терĕ Роза.— Атьăр-ха, хăна пулар малтан!— Вăл хăйĕн чăматанĕнче мĕн пуррине пĕтĕмпех кăларчĕ. Унтан шăвăç кружка çине эрех тултарчĕ.—Мĕншĕн ĕçетпĕр?

— Фронтра çапăçакансемшĕн, çĕнтерӳшĕн!—терĕç хĕрсем.

— Хамăрăн телейшĕн!

Роза малтан хăй ĕçрĕ, унтан тусĕсене яра-яра пачĕ. Ку таранччен хĕрсенчен нихăшĕ те кун чухлĕ эрех ĕçмен, çавăнпа та кĕçех ӳсĕрĕлнĕ пек те пулчĕç, шавлăн калаçма-кулма тытăнчĕç. Кулнă хушăрах куççулĕ те пулчĕ. Алевтина Униçĕме аса илчĕ те ун куçĕсем шывланчĕç. Роза хăйĕн Романĕ çинчен ним пĕлменнипе хурланчĕ... Кăшт лăпланнă пек пулсан вара вăл юрă пуçласа ячĕ:

Споемте, друзья, ведь завтра в поход
Уйдем в предрассветный туман.
Споем веселей, пусть нам подпоет
Седой боевой капитан.

Хушса юрламаллине вара пурте пĕрле янăратрĕç:

Прощай, любимый город!
Уходим завтра в море.
И ранней порой
Мелькнет за кормой
Знакомый платок голубой...

— Итлĕр-ха, чăвашсем, хăвăран юррăрсене юрлăр-ха,— терĕ унтан Роза.— Хăш чухне Роман юрлатчĕ те — питĕ килĕшетчĕç вĕсем мана...

— Юрла, Алевтина, эсĕ ăста вăл енпе...

Алевтина кĕттерсе тăмарĕ, килĕшрĕ.

— Сире хамăн юратнă Униçĕм юррине юрласа парам-ха, эппин...

Сывă пулăр, тусамсем,
Ан кулянăр пирĕншĕн.
Ĕнтĕ эпĕр салтаксем,
Çĕнтермешкĕн каятпăр...

— Ах, хитре кĕвĕ-çке!... Татах юрлăр-ха, астуса юлам. Хăçан та пулин, Романпа тĕл пулсан, тӳрех чăвашла юрласа яратăп вара...— терĕ Роза.

— Мĕнле юрă вĕрентес-ши ăна?— Нинăран ыйтрĕ Алевтина.

— Çăмăлтараххине ĕнтĕ...

Хĕрсем умлă-хыçлă темиçе юрă юрларĕç. Розăна пуринчен ытларах «Ан авăн, шĕшкĕ» килĕшрĕ те, вăл ăна çине тăрсах вĕренме тытăнчĕ.

— Куна манмастăп ĕнтĕ, Роман валлиех усратăп!— терĕ вăл.

...Лайăх вĕренсе тухнă снайперсене чи малтан фронта тухса каякан ротăна куçарчĕç. Унта Алевтина та, Роза та, Нина та лекрĕç. Кайран вара кашнинех мăшăрăн-мăшăрăн уйăрчĕç, мĕншĕн тесен снайперсен малти линире, «ухутара», яланах икшерĕн пулмалла. Пĕри сăнаса пăхса выртаканни, тепри перекенни. Пĕри амансан — тăшмана теприн пеме тытăнмалла, аманнине пăхмалла. Алевтинăпа Нинăна пĕр мăшăр турĕç.

...Хĕрĕх виççĕмĕш çулхи июнь уйăхĕнче Алевтинăпа Нинăна, ытти хĕрсемпе пĕрле, Калинин фронтне ячĕç.

Фронт патнелле çывхарса пынă май хĕрсем хăрушăран хăрушă япаласем курчĕç. Ялсене çунтара-çунтара янă, хăшпĕр ялсенче пĕр пӳрт те юлман, унта-кунта хăрăмпа хуралса ларнă кăмакасем çеç упранкаласа юлнă. Пур çĕрте те бомба-снарядсем ӳксе çурăлнипе пулнă тарăн лакăмсем курăнаççĕ, вĕсене вăйлă çумăр

сем хыççăн шыв тулнă. Шоссе çулĕ те арканса пĕтнĕ, хăшпĕр çĕрте палли те юлман. Çавăнпа хĕрсем ларса пыракан йывăр грузовик пĕрмай унăн-кунăн пăркаланса, чĕтренсе пычĕ. Кайсан-кайсан, мал енчен вăрçă кĕрлени илтĕне пуçларĕ: тупăсем ухлатаççĕ, снарядсем çурăлаççĕ. Пĕр вăрман хушшипе вăрахчен пынă хыççăн, йывăçсем сайралма пуçласан, грузовик чарăнчĕ.

— Анăр! Тек каймастпăр!— команда пачĕ ăсатма килнĕ лейтенант. Унтан строя тăма хушрĕ.

Унччен те пулмарĕ, вĕсем патне вăрмантан темиçе офицер тухрĕç. Çакăнта вара хĕрсен пĕр-пĕринпе уйрăлма тиврĕ,— вĕсене тĕрлĕ полксене ячĕç. Хăшĕсем шывланнă куçĕсене те шăлкаласа илчĕç — кам пĕлет, тен, урăх нихçан та тĕл пулма тӳр килмĕ?

Алевтинăпа Нина, тăватă хĕрпе пĕрле, пĕр полкăн виççĕмĕш батальонне лекрĕç. Ик-виç орденлă, хаяртарах сăнлă, хĕрĕхсенчен иртнĕ комбат вĕсемпе ашшĕ хăйĕн ачисемпе калаçнă пекех калаçрĕ, батальон мĕнле вырăнта тăнине, снайперсен окопĕсем ăçтарахра пулма пултарассине карттă çинче кăтартсах ăнлантарса пачĕ. Çавăнтах халь килнĕ кашни икĕ снайпера опытлă снайпер-наставник пама хушрĕ.

Алевтинăпа Нинăна малтанхи вăхăтра вĕрентсе ĕçе хăнăхтарса пыма Мамонтов хушаматлă сержант аллине пачĕç. Хĕрсене ку сержант килĕшмерĕ. Вăл каласма юратманскер пулчĕ. Малтанах çăра куçхаршисем айĕпе вĕсем çине темле тиркенĕ, йĕрĕннĕ пекрех пăхрĕ. «Э-эх, тупăннă снайперсем! Сирĕнпе аппаланни — вăхăта сая яни çеç!» — тенĕ пекех туйăнчĕ.

Анчах çынни лайăх иккен. Тăрăшсах вĕрентрĕ хĕрсене.

— Пирĕн ĕç ăнăçлă пуласси — пенинчен ытла пеме хатĕрленнинче. Кĕтме пĕлнинче. Тепĕр чух, тусăмсем, пирĕн темиçе сехет мар, темиçешер кун та кĕтме тивет. Васкама юрамасть, шутсăр тӳсĕмлĕ пулас пулать.

Маскировка пирки, тăшман нихçан курмалла мар пытанса выртасси пирки те нумай каларĕ вăл. Тăшманăн йăлисене пĕлсе çитесси пирки те. Пĕр эрне иртрĕ çапла.

— Халĕ ĕнтĕ «ухутана» иксĕрех кайма пултаратăр, шанма май пур сире,— терĕ юлашкинчен Мамонтов.

— Тавтапуç!— терĕ те Алевтина, хăй темшĕн çавăнтах хĕрелсе кайрĕ.

Сержант хĕр çине шăтарасла пăхрĕ. «Вăрçăра тав тумаççĕ, ху мĕн тума пултарнине çапăçура кăтартаççĕ»,— тенĕ пек пулчĕ ку.

Вăрçă тени пĕртте хĕрсем малтан шухăшланă пек мар иккен. Вĕсем малти линие тухса выртсанах хăйсен снайпер винтовкисемпе тăшмана «шĕкĕлчеме» ĕмĕтленнĕ. Пурнăçра ун пек пулмасть-мĕн. Пĕр кун выртрĕç вĕсем хăйсен окопĕнче, ик кун... Тăшмана вара куçпа та курмарĕç.

— Фрицсем ăсланса çитрĕç. Траншейăсенчен пĕлтĕр-виçĕмçулхи пек йăпăрт-япăрт сиксе тухмаççĕ, питĕ асăрханаççĕ. Анчах снайперăн тăшман хăй пуçне кăларса парасса кĕтмелле мар, ăна хăйĕн шырамалла,— çаплах вĕрентрĕ-ха Мамонтов.

Питĕ тимлĕн, куçсем ывăнакан пуличченех сăнарĕç хĕрсем тăшман позицине. Виççĕмĕш кунĕнче Алевтина сасартăк тăшман окопĕн брустверĕ хыçĕнчен каска çĕкленнине асăрхарĕ. Алевтина çав самантрах ăна мушка тĕлне тытрĕ те персе ячĕ. Тăшман салтакĕн пуçĕ çĕрелле тăрăнчĕ.

— Куртăн-и?— чут кăшкăрса яратчĕ вăл хĕпĕртенипе.

— Куртăм, лекрĕ!— терĕ Нина та савăнăçлăн.

Тепрер сехет пек иртсен, Нина та пĕшкĕнсе пыракан нимĕçе асăрхаса кĕрслеттерчĕ. Лешĕ тӳрех тирĕнсе кайрĕ.

Çавăнтан вара Алевтинăпа Нина ĕçĕсем ăнсах пычĕç — вĕсем кашни кун тенĕ пекех пĕрер-икшер фашиста персе ӳкерчĕç.

Хăш чухне вĕсен «ухутана» пĕчченшерĕн та кайма тиврĕ. Хăйсен позицийĕсене вара вĕсем тăтăшах улăштарчĕç. Паян пĕр çĕрте сыхласа выртаççĕ, ыран урăх çĕрте.

Акă, пĕррехинче Алевтина вĕтĕ вăрман çумĕнче, пысăках мар çырма хĕрринче ним палăрми пулса выртрĕ. Кăнтăрла çитеспе çырма леш енчи çӳçелĕхрен витре çĕкленĕ икĕ фриц тухни курăнчĕ. Çырма еннелле шыв ăсма каяççĕ...

Алевтина çав тери пăлханса ӳкрĕ. Унтан кăштах лăпланчĕ те малта пыраканне тĕллесе персе ячĕ. Лешĕ тӳрех ӳкрĕ. Анчах кайрине пеме тӳр килмерĕ, вăл хăйĕн юлташĕ ӳкнине курсанах тĕмеске хыçне пытанчĕ. Тавралăх пĕр хушă шăпах тăчĕ, анчах пăртакранах

тăшман минăсем ывăтма тытăнчĕ. Çине-çине тата! Иквиç тĕлте шултра калибрлă пулеметсем таклатма тапратрĕç. Алевтинăн часрах хăй окопĕн тĕпне йăпшăнма тиврĕ. Вăрахчен выртрĕ вăл ним хускалмасăр. Пирĕн минометчиксем тăшман позицийĕсем çине вăйлă налет туса илнĕ хыççăн тин шăпланчĕç фрицсем...

Кăнтăрла иртсен çумăр чашлаттарма тытăнчĕ, Алевтина лачкам шыв пулчĕ, анчах пурĕпĕр хăйĕн окопĕнчен каçсăр тухмарĕ вăл. Тăшманăн та снайперсем пур-çке, вĕсем те пирĕннисене сыхласах выртаççĕ!

Хăй паян мĕн туни çичен рота командирне «пĕтĕм формăпа» пĕлтернĕ хыççăн вăл кухньăна кайса апат çирĕ те, шăмми-шакки йывăрланнине туйса, çĕрпӳртри сак çине канма выртрĕ. Ирхине тăраймарĕ вара — унăн пуçĕ кашларĕ, кĕлеткинче ыратман вырăн та çук. Кĕтмен çĕртен чирлерĕ вăл...

Çĕрпӳртре вĕриленсе выртнă чух ун çумĕнче час-часах Нина ларчĕ. Вăл пĕрремĕш батальона лекнĕ Роза Панковăран салам каларĕ. Малти линире вĕсем ăнсăртран тĕл пулнă иккен. Роза ĕçĕсем те ăнса пыраççĕ-мĕн: вăл ĕнтĕ вунвиçĕ фашиста леш тĕнчене ăсатнă.

Тепĕр кун каçхине, кĕтмен çĕртен, çĕрпӳрте Мамонтов пырса кĕчĕ. Сылтăм аллинче — вăрманта ӳсекен упасарри çулçисенчен тунă чечек çыххи пекки.

— Тыт, Алевтина, ятарласа сан валли татса килтĕм,— терĕ вăл йăл кулса.— Каçар, ку тăрăхра розăсемпе георгинсем çук...

— Куншăн тав тума юрать-и?— ыйтрĕ Алевтина тахçанхине аса илсе.

— Тав тумалăх çук ку... Курăк кăна вĕт!

Мамонтов ун умне, пушă патрон ещĕкĕ çине ларчĕ.

— Питĕ тарăхатăп-ха, çав тери!—терĕ Алевтина.— Çынсем çапăçаççĕ, эп пур — каска пек выртатăп...

— Ан кӳрен, Алевтина,— ун куçĕнчен йăвашшăн пăхрĕ Мамонтов,— эп халь саншăн та тăрăшатăп. Паян тăваттăшне шаккарăм.

— Маншăн мар ĕнтĕ вăл, хăвшăн.

— Çу-ук, пирĕн саккун çапла: пĕр снайпер стройран тухсан, теприн вара иккĕшĕн тăрăшас пулать.

Мамонтов çав тери ăшă кăмăллă çын пулнине Алевтина пуçласа курчĕ. Сăнран пăхма çеç хаяр иккен вăл, хăйĕн чунĕ пĕртте ун пек мар-мĕн. Чапа тухнă снайпер питĕ килĕшрĕ ăна...

...Ноябрь пуçламăшĕнче, Октябрь уявĕ умĕн, снайперсене ăшă тумтир пачĕç: ватник, хулăн йĕм, çăматă, çĕлĕк. Кĕçех дивизи участокĕнче вăйлă çапăçусем тапранса кайрĕç. Пирĕннисем, наступлени пуçласа, нимĕçсене нумайранпа тытса тăнă çĕртен çапса кăларчĕç те малтанхи кунах çич-сакăр километр хăваласа кайрĕç, нумай яла ирĕке кăларчĕç. Анчах тăшман, çав ялсене каялла илесшĕн пулса, пĕр вĕçĕм контратакăсем турĕ. Çавăн чух вара снайперсен ĕçĕ питĕ ăнăçлă пулса пычĕ, ним çине пăхмасăр малалла ыткăнакан ӳсĕр фрицсене тем чухлех пĕтерчĕç вĕсем...

Астăвать Алевтина — уйрăмах Белкино ялĕ хыçĕнче вăйлă çапăçу пулчĕ. Ыттисенчен маларах тухнă виççĕмĕш батальон çине, тупăсенчен тӳсме çук вăйлă персе тăнă хыççăн, нимĕçсем пилĕк танк ячĕç, вĕсен хӳттипе вара автоматчиксем ыткăнчĕç. Çывхарнăçемĕн çывхарчĕç вĕсем, ĕнтĕ сăнĕсем те курăнакан пулчĕç. Танкĕсем хăлхана хупламалла кĕмсĕртетсе килнĕ хушăрах тупписенчен печĕç, пулемечĕсенчен сапрĕç. Вĕсем, кĕç-вĕç пирĕн окопсем патне çитсе, унти салтаксене тăпрапа хутăштарса хурас пек туйăнчĕ... Анчах çав вăхăтра пирĕн «катюшăсен» икĕ батарейи пĕр харăс залп пачĕ те нимĕçсем вут-çулăм айне пулчĕç.

Кайран мĕн пулнине Алевтина темле тăрăшсан та аса илеймерĕ. Тахăш самантра ăна нимĕç снарячĕн ванчăкĕ хулпуççирен пырса çапнă та вăл тăнне çухатнă...

* * *

Куçĕсене уçсан, Алевтинăна хăй çав тери нумай сывăрнăн туйăнчĕ. Ăçта выртнине чухлаймасăр, вăл тăрса ларма пикенчĕ, анчах, суранĕ сасартăк хыттăн ыратса кайнипе, йынăшса ячĕ те каллех выртрĕ.

Ун патне шурă халатлă ватăрах хĕрарăм пырса тăчĕ.

— Калăр-ха, ăçта эпĕ?— ыйтрĕ Алевтина хуллен.

— Госпитальте, хĕрĕм. Виççĕмĕш кун ĕнтĕ,— терĕ хĕрарăм.— Эсĕ питĕ йывăрччĕ, хăвна операци тунине те астумастăн пуль-ха.

— Мĕнле операци?

— Сан хулпуççирен пысăк осколок кăларса илчĕç. Тата контузи те пулнă курăнать сана...

Алевтина йывăррăн сывласа илчĕ те каллех куçĕсене хупса выртрĕ. Анчах сестра ăна апат çиме хушрĕ.

— Суранăнтан юн нумай кайнă, хĕрĕм, вăйсăрланса юлнă эсĕ. Чăн та, пин кубик таранах юн пачĕç, анчах, вăй кĕтĕр тесен, халь санăн ытларах çиме тăрăшас пулать...

Санитарка Алевтина çумне ларсах ăна кашăкпа тутлă пăтă çитерме тытăнчĕ.

...Госпитальти ырă чунлă çынсем чи çывăх тăвансем пекех туйăнчĕç Алевтинăна. Мĕн тери йăваш вĕсем пурте, мĕн тери ачашшăн пăхаççĕ, пуриншĕн те тăрăшаççĕ-çке!

Алевтина выртакан палатăра хĕрсем татах пур-мĕн, тăваттăн-пиллĕкĕн: связисткăсем, зенитчицăсем, санинструкторсем. Халлĕхе пĕр-пĕринпе паллашсах çитеймен-ха, кашни хăйне май асапланать.

Алевтина, кăшт çĕкленсе, койкăсем çине пăха-пăха илет, унтан татах выртать. Ăна тăван килĕ, ашшĕпе амăшĕ, кавча кайнă Хветли аппăшĕпе унăн ачисем, кӳршĕсем аса килеççĕ. Анчах юлашкинчен чĕринче Униçĕм çеç тăрса юлать. Ах, ăçта-ши вăл, чĕрĕ-ши? Нивушлĕ пĕтрех-ши? Тен... хыпар пур ун пирки?

«Паянах киле çыру çырса ярас...» шухăшлать вăл.

Унтан Алевтина хăйĕн фронтри тусĕсене аса илет: Нина, Роза, Мамонтов Макçăм... Мĕнле-ши халь вĕсем, ăçта-ши? Вĕсем патне те çыру ярас...

Вăраххăн иртсе пычĕç госпитальти кунсем. Суран та питĕ ерипен тӳрленет. Çапах та халь тин хăрамалли çук. Тӳрленетех вăл. Алевтина каллех фронта таврăнать. Çавăншăн телейлĕ вăл. Акă, унпа юнашар койка çинче уринчен аманнă хĕр-летчик выртать. Шăмăсем тĕрĕс сыпăнманнипе, унăн урине икĕ хут та операци тунă. Халь урине çакса хунипе пĕр хускалмасăр выртать. Çапах та хăй нихçан та нăйкăшмасть.

— Вĕçекен те, ташлакан та пулатăп акă!— тет вăл.

Çавăншăн мухтаççĕ ăна. Хăшĕ те пулин «епреме» пуçласан, тӳрех ун çине кăтартаççĕ:

— Эсĕ çав летчицăран вĕрен!

* * *

Госпиталĕн хĕрлĕ кĕтесĕнче час-часах спектакль-концертсем, лекцисем пулаççĕ. Хулари шефсем час-ча-

сах пынипе госпитальти аманнă салтаксене ытла кичĕмех мар.

Пĕррехинче, хăйсен палатинчи икĕ хĕрпе пĕрле концерт итлеме кайсан, Алевтина сасартăк тахăшĕ хăйне ятран чĕннине илтрĕ:

— Аля! Арманова!— терĕ хулăнрах арçын сасси.

Алевтина каялла çаврăнса пăхрĕ те... хыçалти ретре Мамонтова курах кайрĕ. Лешĕ ăна хăй çумне пырса ларма кăчăк туртать... Ку çав тери кĕтмен çĕртен пулнипе, тĕлĕннипе, Алевтина пичĕ-куçĕ пĕçерсех кайрĕ. Вăл васкасах Мамонтов çумне кайса ларчĕ. Мамонтов хĕр аллисене тытса пăчăртарĕ, унтан ун пуçне хăйĕн хулпуççи çине хучĕ те темиçе хут аллипе шăлса ачашларĕ.

— Епле телей! Кун пек тĕл пулассине юри те шухăшласа кăларас çук! — терĕ сержант.— Пулать те иккен çĕр çинче кĕтмен япала...

Алевтина тӳрех нимĕн те калаймарĕ, вăл Макçăмăн гипсласа лартнă ури çине çеç пăхрĕ. Каччă хăйĕн каклишкисене хĕртен тепĕр еннелле илсе хучĕ.

— Питĕ йывăр-и сурану?— ыйтрĕ унтан Алевтина.

— Ытлашшиех мар. Анчах тӳрленессе чылай кĕтмелле пулать, теççĕ... Хăвăн сывлăху мĕнле? Ăçтан лекнĕ сана?

— Акă çакăнтан,— хулпуççине кăтартрĕ Алевтина.— Осколокпа.

— Ун пек кăна пулни юрать-ха,— ассăн сывласа ячĕ Мамонтов.— Унтан та хăрушăрах пулма пултарнă! Ну, сана тĕл пулни вара çав тери савăнтарчĕ! Эс аманни çинчен илтсен питĕ хăрасаттăм... Комбат патне çыртăм — ответ пулмарĕ.

— Эпĕ хам та сан ятпа çыру ятăм... Пирĕн юлташсем мĕнле-ши тата? Ман туссем — Нина, Роза?

— Эс пĕлместĕн-им-ха? Э-э, тусăм... Юлташсем нумай пĕтрĕç. Нина Патмановăна ыттисемпе пĕрле тăванла масар çине пытартăмăр. Ун чух эпĕ сывахчĕ. Роза пирки нимĕн те пĕлмеетĕп, вăл пирĕн ротăра пулман та-ха...

Нина вилни çинчен илтсен, Алевтинăн куççулĕ шăпăрах юхса анчĕ. Пĕтрĕ, эппин, мăнтарăн! Мĕн тери лайăх юлташчĕ вăл!.. Тӳсеймерĕ Алевтина, концерт пуçланасса та кĕтмерĕ, коридора тухрĕ. Мамонтов та юлмарĕ унран, ăна лăплантарма пикенчĕ.

— Мĕн тăвас тетĕн... Вăрçă! Халь тин тем чухлĕ макăрсан та усси пулас çук. Чĕртейместĕн ăна, çĕр айĕнчен кăлараймастăн. Пирĕн халь хамăрăн сывлăха ытларах упрас, сурансене часрах тӳрлетес пулать. Тăшмана тавăрма, тус-юлташсемшĕн тавăрма. Çапла мар-им?— хĕр куçĕнчен ачашшăн пăхрĕ каччă.

Алевтина, унпа килĕшсе, пуçне сулчĕ çеç.

Вăрахчен калаçса тăнă хыççăн, вĕсем пĕр-пĕрин аллисене чăмăртаса уйрăлчĕç. Çав каçран пуçласа вара тăтăшах тĕл пулчĕç.

Пĕр каçхине госпитальте хула театрĕнчи артистсем кĕске кăна спектакль кăтартрĕç, унтан сăвăсем, кулăшла калавсем вуларĕç, юрларĕç. Çавăн чух Мамонтов тахçан шкулта пĕрле вĕреннĕ Арсентий Карушева палласа илчĕ. Артист пулнă иккен! Вăл ача чухнех спектакльсенче выляма юрататчĕ çав, сăвăсем лайăх вулатчĕ... Концерт хыççăн Мамонтов ун патне пырса ал пачĕ.

— Салам, Арсентий...

Артист та ăна тӳрех палласа илчĕ.

— Максимушка! Эсех-и ку?!— ыталаса илчĕ вăл салтака.

— Эпех-ха, эпех! Анчах эсĕ ху мĕнле майпа кунта çитиех килнĕ?

— Театр институтĕнчен вĕренсе тухсан, пĕр режиссер илсе килчĕ те, кунтах тымар ятăм вара.

— Питĕ аван. Пĕчĕк хулах мар ку, артистсене ĕçлемелĕх пур. Вăрçăра пулаймарăн-и?

— Епле пулман! Акă, кур...—Артист сылтăм аллин çĕмĕрĕлсе пĕтнĕ пӳрнисене кăтартрĕ.— Тавраннi çур çул кăна-ха...— Унтан вăл васкама тытăнчĕ:— Пирĕн кĕçĕр тата тепĕр концерт пулать-ха, тăванăм. Ак сана адрес, май пулсанах пыр ман патăма. Анчах та мал тан телефонпа шăнкăравла...— Вăл, блокнот листине татса, чăр-чар çырса пачĕ.— Асту, кĕтетĕп. Пырсан, пĕрер черкке те тупăпăр...

— Тавтапуç! Пыма тăрăшăп!

— Ан ултала, эппин! Çилленетĕп!

Вăхăт сисĕнмесĕрех иртрĕ. Ĕнтĕ çанталăк та ăшăтма пуçларĕ. Суранĕсем тӳрленсе çите пуçланă салтаксене хăш чух хулара çӳреме те ирĕк паракан пулчĕç. Алевтинăпа Мамонтов та сайра хутра хулана тухкаларĕç.

Пĕррехинче, çавнашкал уçăлса çӳреме хатĕрленнĕ чух, вĕсен умне аслă сестра пырса тăчĕ.

— Эсир арăмĕпе упăшки мар-и?— кĕтмен çĕртĕн ыйтрĕ вăл.— Сире яланах пĕрле куратăп та...

— Халлĕхе аплах мар, анчах пулма пултаратпăр,— терĕ ăна Мамонтов, йăл кулса.

— Пит аван япала... Саламламалли çеç юлать сире!

— Тавтапуç ыр сăмахшăн...

— Ма ун пек кирлĕ мара каласатăн?— кăмăлсăрланчĕ Алевтина, сестра иртсе кайсан.

— Епле кирлĕ мар сăмах?—тĕлĕннĕ пек пулчĕ Мамонтов.— Эпĕ кун пирки чăнласах шухăшлатăп. Эс хирĕç пулмасан, эпĕ такам умĕнче те хамăра упăшкипе арăмĕ тесе калама пултаратăп. Чăн та, туйне пирĕн вăрçă хыççăн тин тума тивет... Эх, Аля, пурăнăпăр вара ун чух санпа пирĕн Витебск тăрăхĕнчи шăпчăк юррисене итлесе! Унта пирĕн вырăнсем çав тери илемлĕ, ытармалла мар!

— Ытлашши калаçатăн, Макçăм. Тупнă шӳтлемелли...

— Пĕртте шӳт тумастăп. Эп сана юратнине пĕлетĕн эсĕ, ытти вара пĕтĕмпех санран килет. Мĕн калăн ĕнтĕ мана хирĕç, э?

— Халлĕхе нимĕн те калаймастăп.

— Юрать. Эпĕ тӳсĕмлĕ çын, тем териех кĕтме пултаратăп.

...Çав каçхине Алевтина питĕ нумай шухăшларĕ. Мĕнле-ха капла? Вăл Униçĕмĕн пулса çитеймен саккунлă арăмĕ вĕт. Унпа çырăннă... Анчах унтанпа икĕ çул ытла иртрĕ ĕнтĕ. Юлашки вăхăтра вăл ăна сайрарах аса илекен пулчĕ. Унран ку таранччен те нимĕнле хыпар та çук. Пĕлесчĕ-çке: чĕрĕ-ши вăл е... Шутламан çĕртенех, ăна час-часах Мамонтов аса килет, чĕререн те тухми пулчĕ. Мĕн вара ку, юрату-ши?

...Вĕсен суранĕсем тӳрленсе çите пуçларĕç. Мамонтов, каклишкине пăрахса, пĕр туяпах утакан пулчĕ ĕнтĕ. Пĕрре, хулана уçăлса çӳреме тухсан, Мамонтов Алевтинăна хайхи Карушев артист патне илсе кайрĕ. Урамĕ ялти пекех, пысăках мар йывăç çуртсем, картиш, хыçалта сад пахчи... Карушев артист пурăнакан çурт та ыттисем пекех. Çине тимĕр витнĕ, вырăсла хапха, пӳрт çумĕнче çуллахи веранда.

Мамонтов чӳречерен ик-виҫ хут тăкăртаттарсан Карушевăн кăтра хĕрлĕ ҫӳҫĕ курăнса илчĕ те тĕпĕр самантрах калинкке шăкăрт-шакăрт туни илтĕнчĕ.

— Тусăм! Салам! Эс мана хисеп тумасăрах тухса кайнă пуль тесе кулянсаттăм. Тавтапуҫах килнĕшĕн!— кăшкăрсах ячĕ артист, Мамонтова ыталаса.

— Паллаш, Арсентий! Манăн ҫывăх тус, пулас мăшăр, снайпер Алевтина. Эпир вăрҫăра пĕрле пулнă...— терĕ Макҫăм.

— Эх, чиперккеҫĕм, чиперкке! Мĕнле чунпа вутҫулăм ăшне чикеҫҫĕ пуль сирешкелсене?— терĕ Карушев, Алевтина аллине чуптуса.

Алевтина, кун пек йăлана хăнăхманскер, хĕрелсех кайрĕ.

— Атьăр, атьăр, киле кĕрĕр,— хыпалантарчĕ Карушев.

Вашават ҫын пур ĕҫе те хăвăрт тума ĕлкĕрет. Артист хăнасене, салантарса, тӳрех сĕтел хушшине кĕртсе лартрĕ. Унтан черккесем, эрех кĕленчи, сивĕннĕ ҫĕрулми, тăварланă темиҫе хăяр, ик-виҫĕ чĕлĕ ҫăкăр кăларса лартрĕ.

— Куратăн-и, Карушев артист мĕнле пуян пурăнать? Юрать-ха, эрехне паян хам ĕҫсе яма ĕлкĕреймерĕм,— кулса илчĕ вăл шап-шурă тикĕс шăлĕсене кăтартса.

— Пирĕншĕнех чăрманма кирлĕ те марччĕ...— терĕ Алевтина хĕрелсе.

— Камшăн чăрманмалла тата? Эсир — вăрҫă паттăрĕсем! Ҫитменнине тата, хам та фронтовик пулса курнă!

— Ытлашши ан мухта, Арсентий. Эсĕ малтан хăв ҫинчен каласа пар. Авланман-и-ха?— ыйтрĕ Макҫăм.

— Асту, артист тени хăраххăн пурăнĕ! Киле кĕнĕ эпĕ, Макҫăм! Ҫавăнпа каларăм сана кунтах тымар ятăм, тесе. Ман мăшăрăн малтанхи упăшки вăрҫă пуҫлансанах вилнĕ те... Ҫынни лайăхскер, халь, амăшĕ чирленĕ те, ун патне яла кайрĕ-ха.

Вăл черккесене тултарчĕ.

— Ну, юлташсем... Сирĕншĕн, эппин, фронтовиксемшĕн!

— Кил хуҫи сывлăхĕшĕн!— терĕ Мамонтов.

Алевтина хаяр эрехе пĕр ҫăвар сыпсанах чыхăнса кайрĕ. Арҫынсем вара кăмăлласах ĕҫрĕҫ, хĕрсе кайсах

каласа тытăнчĕç. Ача чухнехинĕ, юлташĕсенĕ аса илчĕç. Унтан артист юрласа та, вуласа та пачĕ.

— Акă ĕнтĕ, концерт та куртăмăр, кайма та вăхăт çитрĕ пулас,— Алевтина ал тунине çыхнă сехечĕ çине пăхса илчĕ.

Мамонтов сĕтел хушшинчен тăчĕ.

— Лайăх кантăмăр, тавтапуç, Арсентий!

— Акă мĕн, юлташсем, эсир кунта яланах килсе ларма пултаратăр,— терĕ кил хуçи.— Тен, эпĕ тепĕр чух килте те пулмăп. Пирĕн уçă яланах ак çакăнта пулать...— ăсатса янă чух çенĕк алăкĕ хыçĕнчи хушăка кăтартрĕ вăл.— Больницăри пурнăç йăлăхтарать те пулĕ. Сывалса çитичченех килсе çӳрĕр...

Алевтинăпа Мамонтовăн çак артиста тав тумалли çеç юлчĕ. Кайран вĕсем ун патне темиçе хут та пычĕç. Пĕррехинче çĕр вырtса та кайрĕç...

Госпитальре виçĕ уйăха яхăн иртрĕ. Алевтинăпа Мамонтовăн суранĕсем тӳрленсе çитрĕç. Комисси вĕсене «строя тăма юрăхлă» тесе йышăнчĕ. Иккĕшĕ те запасри полка кайрĕç, унтан вĕсене — ытти чылай салтаксемпе пĕрле — фронта ячĕç.

Вăрăм пулчĕ хальхинче фронта илсе çитерекен çул. Ун чухне тăшмана хамăрăн çĕршывăн вăрçăччен-хи чиккисем патне çитиех хуса янăччĕ ĕнтĕ.

...Поезд Витебск еннелле пычĕ. Вăрçăн хăрушă йĕрĕсем ытларах та ытларах палăрчĕç. Çунса кайнă ялсем, ишĕлнĕ кĕперсем... Ир енне поезд пĕр разъезда чарăнчĕ те урăх каймарĕ. Малти çула нимĕç бомбардировщикĕсем ĕнер кăна çĕмĕрсе тăкнă иккен.

Поезд çинчи çар çыннисем пурте вакунсенчен тухрĕç.

Кĕçех тахăшĕ ăнлантарса калани илтĕнчĕ:

— Юлташсем, малалла халех каяймастпăр. Мĕншĕнне пурте пĕлетĕр. Çавăнпа камăн вăй пур, кам ĕçлеме пултарать, пурне те çак саперсене пулăшма ыйтатпăр. Хамăр хăвăртрах малалла каясси халь хамăртан килет...

Мамонтов çул тăрăх чылай мала кайса пăхса килчĕ те Алевтинăна çапла каларĕ:

— Малалла каясси часах пулмасть, тусăм. Тен, ыранченех кĕтме тивĕ.

— Мĕн-ха вара? Кĕтес пулать ĕнтĕ,— терĕ Алевтина.

— Акă мĕн... Манăн тăван ял инçех мар кунтан, пĕр çич-сакăр километр кăна. Питĕ кайса курас килет. Мĕнле-ши унта? Пур-ши кам та пулин? Атя, кайса килетпĕр, э? Каçчен тавăнатпăр эпир...

— Кăмăлу пулсан — кайса килме пулать,— килĕшрĕ Алевтина.— Анчах пире айăплăмĕç-ши уншăн? Дезертирсем темĕç-ши?

— Ан хăра, эп ун пирки командирпа калаçса татăлатăп,— шантарчĕ Мамонтов.

Рота командирĕ вĕсене чарса тăмарĕ, тĕттĕм пуличчен каялла çитме хушрĕ çеç. Вара Мамонтовпа Алевтина чугун çул тăрăхах малалла утрĕç.

Çуралса ӳснĕ çĕршыв! Мĕн тери хаклă вăл пирĕншĕн те! Таçта кайсан та, таçта çитсен те асран тухмасть вăл, тĕнчери чи илемлĕ кĕтес. Çавăнпа Мамонтов малалла утнă май ытларах та ытларах пăлханса пычĕ. Тавралла пăхсан, унăн чунĕ тӳсмĕ çук ыратрĕ. Кунта фашистсем пулнă-çке, чипер халлĕн ним те хăварман, пур çĕрте те çунса-ишĕлсе аннă çурт-йĕрсем, хăрăмланса ларнă, хуçăлса-ванса пĕтнĕ йывăç вуллисем курăнаççĕ...

Кăнтăрлаччен вĕсем тепĕр разъезда çитрĕç те пĕчĕк çеç сарă будка умĕнче ваткăллă кивĕ фуфайка, мăн çăматăпа кивĕ çĕлĕк тăхăннă хĕрарăма тĕл пулчĕç. Вăл кунта ĕçлекенскер иккен. Макçăм ăна сывлăх сунчĕ те аллипе сылтăмалла сулса ыйтрĕ:

— Çав енче Васильки ятлă ял пурччĕ, упранса юлнă-ши вăл? Пурăнать-ши унта кам та пулин?

— Пĕлместĕп, шăллăм, пĕлместĕп,— пуçне пăркаласа илчĕ хĕрарăм.— Шанма хĕн, чакса кайнă чух фашист питĕ нумай çунтарчĕ... Эсир çав ялсем мар пуль те?

— Шăп çав ялсем, унта манăн тăвансем юлнăччĕ. Анчах вĕсем çинчен тахçантанпах нимĕн те пĕлместĕп.

— Çитсе курас пулать, эппин, шăллăм. Мĕнле чун чăттăр кайса курмасăр?

Мамонтов пирус тĕпне пăрахса таптарĕ те çурăмĕ çинчи кутамккине тӳрлетрĕ.

— Кайрăмăр, Алевтина! Мĕн пулать те мĕн килет! Кунта çитнĕскер, ман тăван ял вырăнне те пулин курмасăр каймастпăрах ĕнтĕ...

Вĕсем чугун çултан пăрăнчĕç те сылтăмалла утрĕç.

Çанталăк сивех мар, ура айĕнче юр та кăчăртатмасть. Утма çăмăл.

Пĕр çур сехет пек кайсан малта, сăртлăрах вырăнта, аякри кăвакрах та çăмăл тĕтре витĕр пăт-пат çуртсем курăнма пуçларĕç.

Макçăм Алевтина хулĕнчен тытрĕ те тăпах чарăнса тăчĕ.

— Çав пирĕн ял вăл... Вăйлă пурăнатчĕç колхозниксем. Вăрçă умĕн пурте тенĕ пекех çĕнĕ пӳрт ларт-саччĕ, кашнин — сад... Халь, ав, йăлтах пĕтернĕ курăнать. Ялĕпе те çавсем кăна юлнă.

— Питĕ хăрушă...— пăшăлтатса илчĕ Алевтина.

— Уйăрса илейместĕп-ха... Пирĕн кил-çурт юлнăши? Йĕрри-палли те çук мар-и унăн?— çаплах малалла тинкерсе пăхрĕ Мамонтов.— Çук, уйăрса илейместĕп...

Вăл ассăн сывласа илчĕ те çулсăр-мĕнсĕрех малалла утрĕ. Хăвăрт, васкаса утрĕ. Алевтина ун хыççăн аран ĕлкĕрсе пычĕ. Кĕçех вĕсем самаях тарăн çырма хĕррине çитсе тăчĕç. Ялĕ — тепĕр енче. Мамонтов çырманалла чупса анса кайрĕ. Çырма тĕпĕпе, пилĕк таран юр ашса, пăртак пырсан, леш енчен çырманалла кукăрăлса анакан урам вĕçне çитрĕ.

— Макçăм! Тăхта ĕнтĕ мана!— кăшкăрчĕ кая юлнă Алевтина.

Мамонтов ăна илтмерĕ те пулас: çаврăнса та пăхмасăр, тăвалла хăпарма тытăнчĕ. Кил вырăнне те пулин часрах çитсе курасшăн пулчĕ ĕнтĕ вăл. Кам пĕлет, тен, тăванĕсем те пур унта? Патне çитнĕскер, ăçтан чарăнса тăрăн? Васкарĕ каччă, пĕтĕм чун-чĕрипе васкарĕ...

Ах, ма васкарĕ-ши?!

Чылай кая юлнă Алевтина сасартăк малта темскер кĕрслетсе, шартлатса çурăлнине илтрĕ. Çав самантрах çыр тӳпинче тем ялкăшса илчĕ, çӳлелле сарăрах çăра тĕтĕм палкаса хăпарчĕ.

— Мĕн ку, мĕн? Мина мар-и?!

Тĕтĕм сирĕлчĕ те, Алевтина юр çинче Макçăм кĕлетки выртнине курах кайрĕ. Турăçăм! Нивушлĕ...

Пĕтĕм вăйне пухса, Алевтина малалла ыткăнчĕ, Макçăм патне çитсе пĕшкĕнчĕ. Макçăм пичĕ-куçĕ чĕпчĕр юн. Сывламасть...

— А-а-ах, Макçăм!— тăнран тухнă пек кăшкăрса

ячĕ Алевтина.— Макçăм, чунăмçăм!— ун пуçне çĕкле-
ме, ăна силлеме пикенчĕ вăл.—Уç-ха куçна, тăна кĕр-
ха! Макçăм, тетĕп!

Анчах вилнĕ çынна нимпе те чĕртме çук çав...

Хускалмарĕ салтак...

Алевтина сиксе чĕтреме тытăнчĕ, унăн тутисем кă-
вакарса кайрĕç.

— Мĕн... мĕн ту... мĕн туса хутăн? Пĕлетĕн-и э...
эсĕ? Çук, пĕл... пĕлместĕн нимĕн те... пирĕн... пирĕн
иксĕмĕрĕн ача пулать вĕт-ха! Кун çинчен каламарăм
сана... Хăвăнпа пĕрле фронта илсе каймасран хăра-
рăм... Манăн санран уйрăлас килмерĕ... Халь ĕнтĕ пур-
пĕрех уйăрса хăвартăн. Ах, Макçăм, тусăм...

Астумасть Алевтина, мĕн вăхăт макăрса ларнă вăл
сывламан Макçăм умĕнче. Вăл мĕнле хуйхăрнине ни-
кам та илтмерĕ...

— Эсĕ ху çуралса ӳснĕ çĕрех килсе вилтĕн, мана,
ав, ют çĕрте тăр-пĕччен пăрахса хăвартăн... Мĕн тăвас
манăн, Макçăм, пурăнас-и е çакăнтах выртса вилес-и
пĕрех хут?

Тахăш вăхăтра, кĕтмен çĕртен, ун патне шĕвĕр шур
сухаллă пĕчĕк старик пырса тăчĕ.

— Мĕн пулчĕ, хĕрĕм?— ыйтрĕ вăл хуллен.

— Ман юлташ... Мина çине пырса кĕрсе пĕтрĕ,—
терĕ Алевтина, куççульне çаплах чараймасăр. — Тăван
килне курасшăн пулчĕ, ун вырăнне вилĕм тупрĕ!..

— Ун пекки час-часах пулать халь кунта, хăйсем
тарас умĕн пур çĕрте те вилĕм чиксе хăварнă шуйттан
фашисчĕсем. Виçĕмкун ман карчăк та минăпах пĕтрĕ...

Кăшт тăхтасан, тата тепĕр старик пырса тăчĕ. Мак-
çăма тӳрех палласа илчĕ вăл — вĕсен кӳрши пулнă
иккен.

— Пĕтрĕ, эппин, Мамонт йăхĕ,— хуйхăрса илчĕ
çав старик,— иртнĕ кĕркунне ашшĕпе амăшне пытар-
тăмăр, пĕр бомбах вĕлерчĕ вĕсене. Халь акă ку...

«Пĕтрĕ Мамонт йăхĕ», тенине илтсен, Алевтина чĕ-
ри тата хытăрах ыратса илчĕ. Анчах çавăнтах вăл хăй
ăшĕнче: «Çук, пĕтмеççĕ Мамонтовсем... Пур вĕсем, та-
тах пулаççĕ»,— терĕ.

Старикпе пĕрле Алевтина Макçăм кĕлеткине хăйсен
пахчине илсе кайса юрпа витсе хучĕ.

— Çуркуннеччен,— терĕç ваттисем.— Халь ялта
шăтăк алтма пултаракан çын та çук...

Унтан Алевтина, каçа юлас мар тесе, каялла, чугун çул еннелле кайрĕ. Макçăмсен ялĕ курăнми пуличченех ун çине çаврăна-çаврăна пăхрĕ вăл.

«Çук, Мамонтовсен йăхĕ пĕтмен... пĕтмест...—пăшăлтарĕç ун тутисем.— Хăçан та пулин ывăлăмпа е хĕрĕмпе иксĕмĕр килсе куратпăрах-ха кунта...»

Малта, таçта инçетре, хĕвеланăç енче, тупă сассисем илтĕнеççĕ.

Вăрçă çулĕ Алевтинăна çав сасăсем еннелле илсе кайрĕ.

ТĂВАН КĔТЕСРЕ

...Аякран-аякран килекен пуйăс, Сăр урлă каçса, Чăваш çĕршывне кĕрсенех, Алевтинăна хăй киле çитнĕ пекех туйăнса кайрĕ. Вăл текех чӳречерен уйрăлмарĕ, пĕрмай тулалла пăхса пычĕ. Кĕркуннехи çанталăк тĕксĕмрех те пĕлĕтлĕ пулин те, çĕршывĕ пурпĕрех илемлĕ. Выränĕ-выränĕпе калчасем ытармалла мар ешереççĕ, лапамсенче курăк та симĕсех-ха. Пуйăс малалла ыткăннă май, уй-хирсем шыв пек юхса пынăн туйăнать.

Канашран иртсе Шупашкаралла çывхарса пынăçемĕн Алевтина чĕри ытларах та хытăрах пăлханма пуçларĕ. Кам пĕлет — унта, тăван кĕтесре, ĕмĕре темлерех пурăнса ирттермелле пулать-ха унăн?

Акă ĕнтĕ пуйăс Ишлей станцине çитсе чарăнчĕ. Кунта çанталăк пăсăлсах кайнă-мĕн, юрпа хутăш çумăр ишсе çăвать. Анчах салтак атти тăхăннă çыншăн çул çинчи лапра-çĕпре темех мар. Салтак шинелĕ те шанчăклă — йĕперен те, сивĕрен те хăрамасть.

Алевтина кутамккине майласа çурăмĕ хыçне çакрĕ, çĕлĕкне çирĕпрех пусса лартрĕ те, тек ниçталла пăхса тăмасăр, станцинчен сылтăмалла, хăйсен ялĕ еннелле утрĕ. Мĕнех вара çумăрлă тăман? Çутăрах! Пĕр енчен ку аван та пулĕ — тĕл пулакансем тăруках палласа илеймĕç. Кансĕр пулсан та — вăрçă хирĕнче мар, кунта снарядсемпе минăсем çурăлмаççĕ...

Тăван ял еннелле каякан çул юппине çитсен, вăл, чарăнса ассăн сывласа ячĕ. Ун чĕри, пăлханнипе, тата хытăрах тапма тытăнчĕ, сывлама сывлăш та çитмен пек туйăнчĕ. Хăй вăрçă пĕтмесĕрех çакăн пек йывăр çын пулса тавраннасси çинчен вăл никама та çырса пĕлтермен-çке. Кун пек, ытла та кĕтмен çĕртен, епле

пырса кӗрес?.. Эх, пӗрех хут, ӑҫта та пулин урӑх ҫӗрте пурӑнма юлмаллаччӗ! Ӗҫлесен хуть те ӑҫта та йӗркеллех пурӑнма пулать. Анчах халь тин апла-капла шухӑшлани те усӑсӑр ӗнтӗ. Маларах шухӑшламалла пулнӑ!

Ҫапах та, мӗн тӑвас-ха? Тӑванӗсене мӗн калас? Пурнӑҫӑмӑра кӗтмен ҫӗртен ҫакӑн пек йывӑрлӑх килсе тухнине еплерех ӑнлантарса парас? Атте-анне, ялйыш умне мӗнле курӑнас? Тем шутлама та пултараҫҫӗ... Килтен хӗр пуҫҫӑн тухса кайрӑм та, халь акӑ... Эх! Мӗн пулса тухрӗ манӑн?

...Вӑрҫа ӑсатнӑ чух Алевтина ашшӗ ырӑ кӑмӑлпа юлчӗ: унӑн ывӑл ҫук пулсан та, тӑшманпа ҫапӑҫма хӗрӗ каять вӗт-ха! Халӗ ӗнтӗ ӑна никам та: «Эсир Тӑван ҫӗршыва хӳтӗлемен», теме пултараймасть!

— Тӗрӗс тӑватӑн эсӗ, хӗрӗм. Ку чухне алла пӑшал тытма пултаракан сыннӑн тӑшмана хирӗҫ тухмаллах. Граждан вӑрҫи вӑхӑтӗнче те нумай хӗрарӑмсем арҫынсемпе пӗр танах ҫапӑҫатчӗҫ, ӑна эпӗ хам курнӑ. Каях, эппин, хӗрӗм, эсӗ те. Анчах пуҫу сывӑ юлтӑрах ӗнтӗ,— терӗ ашшӗ ун чух.

Халь мӗн калӗ-ши вӑл? «Намӑс кӑтартрӑн, ятна ятӑн!» тесе ятлаҫмӗ-ши? Анне тата? Вӑл макӑрать ӗнтӗ...

Ҫук, тӳрех киле пырса кӗме хӑюлӑх ҫитмерӗ Алевтинӑн. Киле кӗриччен, халь вӑл темле ҫапӑҫӑва та кӗрсе кайнӑ пулӗччӗ. Ҫул юппинче кӑштах шухӑшласа тӑнӑ хыҫҫӑн тӑван ялалла мар, пачах урӑх еннелле, Хуракассинелле утрӗ вӑл. Унта Алевтинӑн кавча кайнӑ аппӑшӗ Хветли пурӑнать. Питӗ ырӑ, ачаш кӑмӑллӑ ҫын. Алевтинӑшӑн ҫав аппӑшӗнчен ҫывӑххи никам та ҫук. Ӑна ҫеҫ вӑл хӑйӗн чӗрине пӗтӗмпех уҫса, тӗрӗссине тӗпӗ-йӗрӗпе каласа пама пултарать.

Йӑмӑкӗ кӗтмен ҫӗртен пырса кӗнинчен аппӑшӗ хытах тӗлӗнмерӗ. Унпа темиҫе сӑмах калаҫса илсенех, мӗн пулнине йӑлт ӑнланчӗ.

— Юрӗ-ҫке ӗнтӗ, юрӗ... Пурнӑҫра тем тӗрли те пулать, пуриншӗн хуйхӑрса ҫитерес те ҫук,— терӗ вӑл.

Алевтина аппӑшне мӑйӗнчен ыталаса илчӗ те, пуҫне ун кӑкри ҫине хурса, ӗсӗкле-ӗсӗкле хӑй ҫинчен каласа пачӗ. Хветли ӑна пӗчӗк ачана ачашланӑ пекех йӑвашшӑн ачашласа лӑплантарма тытӑнчӗ:

— Ан ҫунтар чӗрӳне, кирлӗ мар вӑл... Мӗн усси?

Хальхи вăхăтра пĕр эсĕ çеç инкекре-им? Пĕтĕм Раççейпех шутлас-тăк, миçе мĕльюн ача тăлăха юлатьши? Шучĕ те çук пуль...

Вĕсем ыталаннипех сак çинче ларчĕç. Аппăшĕ лăпкăн калаçрĕ:

— Эсĕ çамрăк пуçпах вăрçа хăвăн ирĕкӳпе кайса çапăçрăн. Куншăн сана хуть те кам та ĕмĕр-ĕмĕр ырламалла. Мĕн тери паттăр пулас пулать çулталăк хушши вăрçăра çапăçма! Çитменнине, аманса та курнă эс, юн тăкнă... Орденне те ахалех паман пуль. Çапах та телейлĕ пулнă-ха, пуçу сывă. Аллу-уру та тĕрĕс-тĕкел. Турра шĕкĕр уншăн... Вилекен сахал-им вăрçăра! Ак, эпĕ те тăлăх арăм пулса юлтăм...—Хветли ассăн сывласа ячĕ.—Манăн ачасем те ашшĕсĕр ӳсеççĕ ĕнтĕ...

— Йысна... Йысна вилнĕ-и вара?— картах сикрĕ Алевтина.

— Вилнĕ çав, вĕлернĕ ăна. Акă, хучĕ те пур.

Хветли чăлан çумĕнчи арчаран, темле кивĕ кĕнеке хушшинчен, кăвак конверт кăларса тыттарчĕ.

Хăрушă хыпара пĕлсен, Алевтина пĕр хушă пуçĕ минресе кайнă пек хытса ларчĕ, каласа чĕлхи те хускалмарĕ унăн.

— Çапла, чунăм, манăн та упăшка çук, Татюкпа Ваçукăн та текех ашшĕ çук ĕнтĕ,—терĕ Хветли, урамра темскер курнă пек чӳречерен пăхса. Вăл йĕрсе ярасран чĕрине хытарчĕ пулас.

Пĕр хушă аппăшĕпе йăмăкĕ иккĕшĕ те чĕнмерĕç. Йывăр шухăш пусса илчĕ вĕсене. Унтан Хветли хуллен каласа пуçларĕ:

— Кун пирки эсĕ ним чухлĕ те ан кулян, Алевтитина... Пулни—пултăр. Таçта йăх-яхланса çӳресе тупман. Çынни лайăхчĕ тетĕн ав. Вăл вилсе кайман пулсан, пĕрлешеттĕрччĕ ĕнтĕ. Ним те ан шутла, никамран та вăтанса ан тăр. Атте-анне те тиркес çук сана уншăн. Çурат та ӳстер. Çитĕнтĕр ашшĕ пек тепĕр паттăр!

— Ӳстересех пулать ĕнтĕ,—терĕ Алевтина.

Аппăшĕ çакăн пек кăмăллăн, йăпатмалла каласнипе ăна тăруках темле çăмăл пулса кайрĕ, пăшăрханни те иртрĕ.

— Сăпаççипах сана, Хветли...

— Мĕншĕн спаççипĕ каламалла мана?— тĕлĕннĕ пек пулчĕ аппăшĕ.

— Ара... лăплантартăн эс мана. Вăй кĕртрĕн...

— Вăйне кĕртме лайăх кăна апат çиес пулать-ха пирĕн. Вăрăм çула килсе ывăнтăн та пуль, хырăму та выçă пуль.

Хветли васкасах вучах чĕртсе апат çакса ячĕ. Вăл пиçессе кĕтсе, аппăшĕпе йăмăкĕ татах нумай калаçса ларчĕç.

— Мĕн кăтартмарĕ ĕнтĕ ку вăрçă!—терĕ Хветли.— Пирĕн ялти сакăрвун килтен аллăшĕ ытла тăванĕсем пирки «вилнĕ хут» илчĕç. Мĕн чухлĕ куççулĕ юхрĕ пуль... Аманнисем те нумай. Вăрçи пĕтиччен тата мĕн чухлĕ пулĕç-ха вĕсем!..

— Вăрçи ытла нумаях пымалла мар ĕнтĕ, эпир халь çĕнтерсех пыратпăр,—ăна лăплантарма пек турĕ Алевтина.

— Ах, часрах пĕттĕрччĕ, часрах тултăрччĕ вăл шуйттан Гитлерăн шăпи!

Унтан Алевтина каллех хăй пирки калаçа пуçларĕ.

— Çапах та, аттерен питĕ именетĕп, аван мар-çке... Вăл хăй пирĕн питĕ таса чунлă, тӳрĕ кăмăллă çын та, ун пек-кун пеккисене юратмасть,—терĕ вăл.

— Ан шиклен ытлашши,—терĕ ăна хирĕç Хветли.— Эс пĕчĕк ача мар, çула çитнĕ çын. Атте те анланĕ. Тискер кайăк мар вăл. Ачасене яланах юратнă. Курăн, килйыш хушăннăшăн хĕпĕртĕ кăна акă.

— Темле-çке, темле...

Çак вăхăтра алăк уçăлчĕ те, пӳрте Хветли ачисем— Татюкпа Ваçук кĕрсе тăчĕç. Вĕсем шкултан таврăнчĕç ĕнтĕ. Амăшĕпе юнашар салтак тумĕ тăхăннă аппăшĕ ларнине курсан, çав тери савăнса шавлама тытăнчĕç. Сывлăш çавăрма та памарĕç Алевтинăна, вăрçă çинчен, фашистсене мĕнле курни, вĕсен тискер ĕçĕсем çинчен ыйтма тапратрĕç...

Тепĕр кунне Алевтинăпа аппăшĕ хăйсен тăван ялне, киле кайма тухрĕç. Хветли çул тăршшĕпех лăплантарса пычĕ йăмăкне:

— Ним те ан шиклен, чиперех кĕтсе илеççĕ ак сана!

Чăнах та, пăшăрханма кирлĕ те пулман. Вăрçă вăхăтĕнче килти çын чĕрĕ таврăнни — пуринчен те хаклă.

Хĕрĕ мĕн сăлтавпа киле таврăннине чухласан та,

ашшĕ нимех те шарламарĕ, кăшт-кашт калаçкаланă хыççăн васкасах ĕçе тухса кайрĕ. Вăл мĕн вăрçă пуçланнăранпах колхоз председателĕнче ĕçленĕ. Тен, хĕрĕ йывăр çын пулса таврăннăшăн старик хăй ăшĕнче кӳренчĕ те пулĕ, анчах ун пеккине вăл нихçан та палăртмасть. Тепĕр тесен тата — япăххи нимĕнех те çук. Пулнă—пулнă... Алевтина дезертир мар вĕт! Тата сывах таврăннă — ку питĕ лайăх. Хĕрарăмсен вара сăмах-юмах нумай тупăнчĕ. Амăшĕ кăшт куляннă пек те пулчĕ, анчах куççулĕ хĕрĕ таврăннăшăн савăннипе çеç тухрĕ.

Вăрçă çынсене пĕтĕмпех урăхлатрĕ. Пĕрин хуйхине тепри ăнланать, пĕрин савăнăçĕшĕн тепри савăнать. Алевтина ялта чунтан кĕтнĕ хăна пекех пулчĕ. Вĕсем патне тăтăшах çынсем пырса çӳрерĕç, вăрçă çинчен, вăл хăçан чарăнма пултарасси çинчен тĕплĕрех ыйтса пĕлесшĕн пулчĕç. Алевтина хăй мĕн курнине, мĕн чăтса ирттернине, мĕн пĕлнине пĕтĕмпех каласа пама тăрăшрĕ.

...Вăхăт çитрĕ, тăван килте тепĕр çын хушăнчĕ. Фронт ачи! Салтак ывăлĕ! Тен, хăй те пулас салтаках-и? Куншăн килтисем çеç мар, ялти пур хурăнташĕпĕшсем те савăнчĕç темелле. Ара, юлашки ик-виç çулта ялта çын хушăнман та вĕт! Чакнă кăна. Çавăнпах пуль ĕнтĕ ялйышсем, çамрăк амăшĕпе «çĕнĕ кайăка» саламлама, кучченеçсемпех пыра-пыра кайрĕç.

* * *

...Хăрушă вăрçă куллен-кун аякран аякка, хĕвеланăçнелле кайни пурне те савăнтарать. Çынсем, çĕнтерӳ кунĕ хăвăртрах çиттĕр тесе, тата хастарлăрах, пĕтĕм вăя хурса ĕçлеççĕ. Хĕл кунĕсенче те ĕç нумай — пĕрисем вăрманта вут-шанкă хатĕрлесе пурăнаççĕ, яла юлнă нумай ача-пăчаллă хĕрарăмсем, ватă-вĕтĕсем çине тăрсах çуракине хатĕрленеççĕ. Кашни килрен, фермăсенчен уя тислĕк турттараççĕ, тырă акмалли хирсенче юр куписем тăваççĕ. Вăрлăх сортлаççĕ, тасатаççĕ... Эвакуацине куçса килнĕ çынсем те пур ĕçсене те хутшăнаççĕ, никам та ĕçсĕр лармасть.

Майĕпе каллех çуркунне çитрĕ. Ăшă енне кайнă кайăксем, таврăнса, йăвасем çавăрма тытăнчĕç. Кун каçипех вĕсен сасси илтĕнет...

Çĕршыв типсе çитсен, Алевтина та халăхпа пĕрле çуракине тухрĕ. Сухаларĕ те вăл, сӳрелерĕ те — иртен пуçласа каçчен. Уйри ĕçсенчен пушансан, амăшĕпе пĕрле килти пахчара тăрмашма тытăнчĕ.

Хĕвеллĕ ăшă кунсенче пĕчĕк ывăлне — Сашăна — хăйпе илсе тухса, меллĕрех вырăн туса лартать те, ешĕл туратсем хуçкаласа парать, умне чечексем пухса хурать, выляса ларать вара лешĕ хăйне май, макăрмасть те.

...Пĕррехинче, хĕвеллĕ лăпкă кун, Алевтина ачине йăпатмалла сăпка юрри юрла-юрлах ĕçлерĕ. Кăмăлĕ лайăх пулчĕ унăн. Ачи макăрмарĕ, хăйĕн ĕçĕ ăнса пычĕ.

Кĕтмен çĕртен пахча алăкĕ хуллен чĕриклетни илтĕнчĕ. Сысна кĕрет пуль тесе, Алевтина аллинчи кĕреçине çĕклерĕ те: «Хоç, эсрелĕ, эп сана акă!» тесе кăшкăрчĕ. Анчах алăкран пахчаналла хуллен кăна... салтак кĕрсе тăчĕ. Униçĕм!..

— Каçар, хăратрăм пулас сана,—терĕ вăл ĕлĕкхи пекех кăмăллă сасăпа.

Алевтина аллинчи кĕреçе кĕпсĕрт! тухса ӳкрĕ. Хăй хут пек шуралса кайрĕ те шап-шур çеçке çурнă улмуççи çумне таянчĕ. Уринче тăруках пĕр вăй та юлманнипе вырăнтан та хускалаймарĕ. Çав самантра çĕрте, кив утиял çинче ларакан пĕчĕк Саша, ют çынран хăранă пек, шар-и-и! çухăрса ячĕ. Анчах Алевтина ăна та илтмерĕ пулас, çаплах вырăнтан хускалмарĕ, пуçĕ çаврăнса кайнă пек тăчĕ. Вара Униçĕм чăтаймарĕ, ача умне пырса чĕркуçленчĕ те темле кайăк пек чĕвĕлтетсе ăна йăпатма тытăнчĕ. Унччен те пулмарĕ, ача чип-чиперех йăл-йăл кулса хăлаçланма тытăнчĕ, аллисене салтак кăкăрĕ çинчи орденсем патнелле тăсрĕ.

— Униçĕм... Эс... ма килтĕн кунта?— аран пăшăлтатса илчĕ Алевтина кăшт тăхтасан.

— Каçар, Алевтина... Тӳсеймерĕм, эс килтине ăнсăртран пĕлтĕм те, тӳрех кунта кĕтĕм çав,— терĕ Униçĕм урмăшнă сасăпа.—Анчах санăн мана вуçех курас килмест пулсан, эпĕ... эпĕ халех кайма пултаратăп. Çапах та темиçе минутлăха та пулин хăвăн патăнта пулма ирĕк парсамччĕ. Манăн сана мĕн тери курас килекен пулни çинчен сăмахпа каласа пама пĕлес те çук. Лере те,— хĕвеланăçнелле сулчĕ Униçĕм.

Алевтина, çаплах йывăç çумне тайăнса тараканскер, куçĕсене хупса, пăшăлтатса илчĕ:

— Эп ун пеккине тивĕçлĕ мар, Униçĕм... Ирсĕр, путсĕр хĕрарăм эпĕ... Урăххипе ача турăм... Санăн халь манран йĕрĕнмелле çеç...

— Кирлĕ мара калаçатăн, Алевтина!—ун патнелле пĕр-икĕ утăм ярса пусрĕ Униçĕм.— Манăн сана ним чухлĕ те тиркес шухăш çук. Эпир мар, пĕтĕмпех вăрçă айăплă куншăн. Мĕн тери телейлĕ пулăттăмăр эпир вăрçă йăтăнса анман пулсан! Халь иксĕмĕр те сывă пулнăшăн савăнмалла çеç. Тата çакăн пек тĕл пулма пултарнăшăн...

Алевтина чĕнмерĕ. Униçĕм унăн питçăмартисем тăрăх куççулĕ юхса аннине курчĕ.

— Санăн ĕнтĕ манпа калаçас та килмест-и?—йăвашшăн ыйтрĕ вăл.

— Уншăн мар, уншăн мар...— куçĕсене уçмасăрах пуçне пăркаларĕ Алевтина.— Мана халь çав тери йывăр... Намăс... Таçта тĕпсĕр шăтăка путса анса каяс килет...

— Ан калаç ун пек! Мĕн намăсĕ пултăр? Эп ăнланман çын-и-мĕн?

— Эс ăнланатăн пуль те, çапах...

— Калаçар мар кун çинчен, Алевтина! Кирлĕ мар! Вăл енне кайсан, манăн та хĕрарăм пулнă. Белоруссинче, вилĕм лагерĕнчен тарсан, мана пĕри виçĕ уйăх пытарса усрарĕ, сывалма пулăшрĕ. Кайран эпир, виçĕ совет салтакĕ, çапах та хамăрăннисем патне тухрăмăр. Пĕтĕмпе каласа кăтартас пулсан — питĕ вăрăм истори вăл, тусăм...

Куçĕсене пĕчĕк чышкисемпе сăтăрса, ача каллех макăрса ячĕ. Ывăлĕн сассине илтсе, Алевтина картах сикрĕ те ун патне чупса пычĕ.

— Çывăрасшăн... Пӳрте кĕртсе выртгарас пулать...—терĕ Алевтина ачана алла тытса.

— Ачу ытла та кăмăллă... Тьфу, тьфу! Куçăхтарас мар!— шӳтлесе илчĕ Униçĕм.

— Ку таранччен лайăхах ӳсрĕ-ха,—ачине çурăмĕнчен лăпкаса илчĕ Алевтина.

— Ашшĕ пурăнать-и хуть?—ыйтрĕ унтан Униçĕм паçăрах ыйтас тенине.

Алевтина тăруках чĕнмерĕ. Унтан пачах халран кайнă пек каларĕ:

— Хам куç умĕнчех нимĕçсен мини çине пулса вилсе выртрĕ. Виллине вара çĕр айне те пытарăмарăм, икĕ старикпе пĕрле çиелтен юр хупласа хутăмăр çеç...

Униçĕмĕн Алевтинăна çав тери шеллес килсе кайрĕ. Ун пек пулнă-ха апла... Униçĕм çут тĕнчере çук пуль, вилнĕ пуль, тесе, вăл фронтра тус тупнă, анчах унпа та телей пулман унăн. Мĕншĕн айăпламалла ĕнтĕ ăна? Асап кăна курнă вăл. Халь те, ав, епле пăлханать... Пулăшас пулать... Пĕрлешес, пĕрле пурăнас...

Ача йăтнă Алевтинăпа пĕрле крыльца умне çитсен, чарăнчĕ. Пырне тем тулнă пек пулнипе, ӳсĕрсе илчĕ.

— Кĕрсе чăрмантарас мар пуль ĕнтĕ манăн, çывăрат ачуна...

Шăп çав вăхăтра урамран Алевтина ашшĕ кĕчĕ те, Униçĕме курсан, юпа пек хытса тăчĕ.

— Эй. тĕнче-е!..— кăшкăрсах ячĕ унтан.— Униçĕм Николайччă, эсех-и, ара, ку? Е тĕлĕк куратăп-и эпĕ?!--Униçĕм патне пырса, ăна ыталаса илчĕ.

— Эпех-ха, Егор Петрович!..— йăл кулчĕ Униçĕм.

— Ак сана хыпарсăр çухалнă çын! Ăçтан сиксе тухрăн эсĕ? Епле тупăнтăн?— пăлханса ыйтма тытăнчĕ Алевтина ашшĕ.

— Вăрçă, Егор Петрович! Тĕрлĕрен пулать. Плен та, унтан тарни те...

— Çавă ĕнтĕ... Алевтина, мĕн эсĕ чĕлхесĕр çын пек тăратăн?— хĕрĕ çине кăмăлсăр пăхса илчĕ старик.— Анӳ ăçта? Халех сăра ăсса тухас пулать. Çук-ха, сăрине эп хам та ăсма пултаратăп, часрах лавккана чуп, пичкерен çуттине ярса паратчĕç унта!

— Чăрманас мар, Егор Петрович...

— Чăрманас мар?! Мĕнле чăрмав вăл? Чăрмав мар ку, савăнăç!

Алевтина васкама тытăнчĕ. Ачине сăпкана выртгарса çывăратрĕ, унтан ашшĕ хушнă çĕре кайрĕ.

Часах çырмаран Алевтина амăшĕ каçхине выльăхсене пăрахса пама пĕр çĕклем курăк çĕклесе килчĕ. Кĕтмен хăнана курсан, çав тери тĕлĕннипе, вăл та тăпах чарăнса тăчĕ те аллинчи курăка çĕре пăрахрĕ.

— Ак ĕнтĕ, ашшĕ, ирхине ĕненмерĕн эс ман тĕлĕке...— мăкăртатса илчĕ вăл нимрен малтан.

— Салам! Сывă-и?— аллине тăсрĕ ун патнелле Униçĕм.— Тем терĕн?

— Э-э, кирле мара каласать вал,—ал сулчĕ Егор Петрович.—Эсĕ вилменни çинчен тĕлĕк куртăм, тет...

— Тĕлĕкĕ тĕрĕс пулнă-çке!

Амăшĕ васкасах сĕтел çине апат-çимĕç хатĕрлесе лартрĕ, часах Алевтина лавккаран таврăнчĕ. Унтан пурте пĕрле сĕтел хушшине ларчĕç, çакăн пек тĕрĕстĕкел таврăнса тĕл пулнă ятпа пĕрер-икшер черкке ĕçрĕç. Алевтина ашшĕ çине тăрсах ыйтнипе Униçĕм хăй пленра пулни, лагерьте асапланни, унтан тарсан пĕр хушă ялта пытанса пурăнни, кайран партизансемпе пĕрле фашистсене хирĕç çапăçни, йывăр аманнă хыççăн ăна самолетпа «Пысăк Çĕр» çине ăсатни, госпитальре чылай выртса сывалса тухни çинчен каласа пачĕ. Халĕ ăна, госпиталь хыççăн, ик эрнелĕх отпуск панă-мĕн.

Сăмах-юмах нумай тупăнчĕ. Егор Петрович та хăй граждан вăрçинче мĕнле аманса килнине аса илчĕ. Кăшт ӳсĕрĕлнĕскер, ĕлĕкхи юрра юрласа ячĕ:

Трансваль, Трансваль, страна моя,
Ты вся горишь в огне...

Кайран вăл çенĕкри вырăн çине тухса выртрĕ те тӳрех сывăрса кайрĕ.

Униçĕм, самаях хĕрнĕскер, сĕтел çине ик аллипе чавсаланса, вăрахчен ним чĕнмесĕр ларчĕ те тăрук пуçне усса ĕсĕклеме тытăнчĕ.

— Кай, Униçĕм, эсĕ пĕртте вăрçă çынни пек марçке капла!—терĕ Алевтина, ним калама аптранипе.

— Эх, Алевтина!.. Эс ху та вăрçă çынни... Анчах пирĕн те чĕре пур-çке! Этем туйăмĕсем пур, пĕтмен вĕсем!..

— Тĕрĕс, пĕтмен,— килĕшрĕ Алевтина.—Тен, вĕсем тата ытларах çивĕчленнĕ-и. Анчах куççулĕ кама, хăш енчен пулăшать?

— Каçар. Куна эпĕ мар, эрех макăртать,—ассăн сывласа илчĕ Униçĕм.

— Ăсатса ярам-и сана?— ун куçĕнчен пăхрĕ Алевтина.

— Ăсатас тетĕн-и?— Униçĕм ура çине тăчĕ.—Алевтина, эс кама ăсатасшăн, кала-ха? Эп санăн саккунлă упăшку, мантăн-им çавна? Мĕншĕн кунта пуранатăн эсĕ? Мĕншĕн килте мар?! Атя киле! Сансăр, пĕччен, каймастăп эпĕ кунтан!

— Униçĕм...—Алевтина ун патнерех пырса тăчĕ.— Ку сăмахсене эс халь кăштах пуçа пынипе калатăн. Урăлсанах урăхла шутлатăн акă. Пирĕн пурнăçра ытла та пысăк улшăнусем пулчĕç. Куратăн вĕт-ха— халь эпĕ пĕччен те мар...

— Кун пирки ан та калаç!— ал сулчĕ Униçĕм.— Ача вăл — çылăхсăр чун. Эсĕ ху та... ху та çылăхсăр, санра нимĕнле айăп та çук. Пĕтĕм чĕререн ĕнентерсе калатăп сана — ку ывăл ача манăн, пирĕн иксĕмĕрĕн пултăр! Килĕшетĕн-и çавăнпа? Ĕнен мана, эпĕ уншăн лайăхран та лайăх ашшĕ пулăп. Чăн-чăн ашшĕ! Мĕн ятлă-ха вăл?

— Саша вăл, Сашок,—терĕ те çакна илтсе тăнă Алевтина амăшĕ, сăпкари ача çине пăхса йĕрсе ячĕ.

— Апла-ха, эппин... Александр Анисимович Арманов! Лайăх илтĕнет вĕт, э? Ыранах ял Советне кайса хам çине çыртаратăп.

— Кун пирки кайран калаçăпăр, юрать-и?—терĕ Алевтина.

— Хăçан вăл — кайран?

— Ну, эппин, вăрçă чарăнсан.

— Çук, килĕшместĕп! Ыранах тататпăр пĕтĕм ĕçе!

* * *

Тепĕр кунне Униçĕм хăй мĕн каланине пĕтĕмпех турĕ. Ирхине вĕсем Алевтинăпа иккĕшĕ ял Советне кайрĕç. Сашăна Униçĕм хăй çине çыртарчĕ. Таврăнсан, Алевтинăна пахчара йăрансем чавма пулăшрĕ. Кăнтăрла иртсен вара ачипе амăшне хăй килне пурăнма куçарчĕ.

Униçĕм амăшĕ, халь ĕнтĕ самаях ватăлнăскер, пĕрченех пурăннă. Униçĕм йăмăкĕ Çĕктерти хăма çуракан завода ĕçлеме кĕнĕ те унтах кайча тухнă. Район центрĕнче пурăнакан Униçĕм пиччĕшĕ Антон çеç сайра хутра пыркаласа кайнă киле... Вăл вăрçа кайман, ăна «броньпа» хăварнă иккен.

Вăрçăччен вĕсен пӳртĕнче, малти стена çинче, чиркӳ чанĕ пекех янратса çапакан сакăр кĕтеслĕ сехет çакăнса тăратчĕ. Униçĕм хăй киле таврăннă кунах çав сехет çуккине асăрхарĕ те амăшĕнчен ыйтрĕ:

— Пирĕн сехет ăçта кайнă, ара?

— Антун илсе кайрĕ ăна,—пушă стена çине пăхса

илчĕ амăшĕ.— Ун пек сехет халь ниçта та тупма çук, эсир килте унсăрах пурăнма пултаратăр, терĕ. Праçниксем чух çеç тыткаланă мăн сăмавара та илсе кайрĕ. Ялта халь никам та чей ĕçмест, терĕ...

— Пăх-ха эс ăна...—мăкăртатрĕ Униçĕм.—Тăван киле çаратма пуçланă-çке ку улпут!

— Илсе кайтăрах, терĕм вара хам та. Пуç сывă пулсан, япали пулать вăл, терĕм,—ал сулчĕ амăшĕ.

Карчăк хăйĕн пĕчĕк мăнукне тӳрех хăйсен пахчинчи çăлкуç шывĕпе чăпăл тума сĕнчĕ. Унтан сипли ним те çук, кун хыççăн вăл нихçан та чирлемĕ,—терĕ. Алевтина унпа килĕшрĕ. Униçĕм тӳрех шывне ăсса килчĕ. Кинĕпе хунямăшĕ ăна ăшăтрĕç те ачана лайăх кăна çуса çывăратрĕç.

Çĕнĕ çынсем темиçе çултан тепĕр хут тăван килте тĕл пулнă сăлтавпа хурăнташсем, кӳршĕ-аршăсем чĕнмесĕрех ĕçкĕ пеккине пухăнчĕç. Ялти çынсем çак мăшăр «вăрçăра тĕл пулнишĕн те» савăннă пулмалла... Вĕсен халь ача та пур ĕнтĕ. Ачи чăнах Униçĕмĕн хăйĕнех пулнине пĕр иккĕленмесĕрех ĕненчĕç. «Эпир вăрçă хирĕнче тĕл пулнă, пĕрле çапăçнă»,—терĕ Униçĕм пурне те.

Вăрçă вăхăтĕнчи çынсем çити-çитми пурнăçпа пурăннă пулин те, чăвашсен ĕмĕрхи йăлипе пĕри те пушă алăпа пымарĕ. Паранкă икерчи, пашалу, йӳçĕтнĕ купăста, хăяр... Хăшĕсен сăра та, «сырец» тенĕ эрех те пур. Вăрçă вăхăтĕнче тунсăхласа çитнĕрен пулас, çынсем халĕ пĕрле пухăнса калаçса ларма питĕ хавас. Вăрçăран аманса таврăннă е вăхăтлăха отпуска килнĕ салтаксемпе пурте тĕл пулса калаçма тăрăшаççĕ. Ĕçки-çики тени вара ячĕшĕн кăна ĕнтĕ, ĕлĕкхи мар, çапах та çынсем юрласа чунĕсене уçаççĕ:

Вĕç-вĕç, куккук, вĕç, куккук,
Вăрман хĕрне çитиччен...
Чăт-чăт, тăван, чăт, тăван,
Çакă вăрçă пĕтиччен...

Вăрахчен ларчĕç çынсем Униçĕмпе Алевтина патĕнче. Сăмах-юмах нумай пулчĕ. Пуринчен ытларах— вăрçă çинчен. Ытла та йăлăхтарса çитерчĕ-çке вăл. Ана пула пурнăç та калама çук йывăр. Часрах пĕтĕ-

ресчĕ-çке ăна! Лăпкă пурнăçпа, хуйхă-суйхăсăр пурăнасчĕ!

Шутлă вăхăт пит хăвăрт шăвать. Акă, Алевтинăн телейлĕ кунĕсем каллех иртрĕç. Хуйхи-суйхи вара, тен, ĕмĕрлĕхех çитĕ? Унăн упăшкине тепĕр хут фронта ăсатма нумайăшĕ пычĕç. Униçĕм хăйĕн пĕчĕк ывăлне ялтан тухичченех икĕ аллипе ыталаса йăтса пычĕ. Вара, шăп уй хапхи патне çитсен, Алевтина ыйтнипе, ялти учительница Униçĕмпе Сашока пĕчĕк кăна фотоаппаратпа ӳкерсе илчĕ.

...Вăрçă çаплах чарăнмарĕ-ха. Анчах пирĕннисем, хула хыççăн хула, вуншар та çĕршер ял ирĕке кăларса, малаллах каяççĕ. Эппин, çывхарсах, çывхарсах килет пирĕн çĕнтерӳ, тен, нумаях та юлмарĕ-и телейлĕ кун çитесси!..

Халĕ Алевтина пурнăçĕ чылай йывăрланчĕ. Правлени ăна ĕне ферми заведующийĕ пулма хушрĕ.

— Пĕчĕк ачапа кансĕртерех пулать-ха ĕнтĕ мана ун пек ĕçре,— терĕ вăл. Çапах та хирĕçсех тăмарĕ — кайрĕ.

Кӳлĕнмеллипех кӳлĕнчĕ вара Алевтина çак лава. Халь ĕнтĕ темле йывăр пулсан та туртмаллах ăна. Çав вăхăтрах килти пурнăçа та япăха кăларма юрамасть. Пурне те ĕлкĕрмелле. Униçĕм амăшĕ ялан ачапа, ним тума та вăхăт юлмасть унăн. Тата сывлăхĕ те начартарах.

...Сисмесĕрех çанталăкĕ сулхăнлатса лартрĕ, кĕр те çитсе тăчĕ. Пĕчĕк Саша чупакан та пулчĕ. Ăна тăхăнтарма кĕпе-йĕм те, ăшă тумтирĕ те кирлĕ. Анчах ăçтан тупса илетĕн-ха вĕсене? Ниçта та нимĕн те çук.

Алевтина ашшĕ-амăшĕн тахçанхи кивĕ тимтирĕсенчен мĕн те пулин майлаштарас тесе, тăван килне кайрĕ. Анчах унччен малтан унăн аппăшĕ, Хветли, ятарласа пырсах хăйĕн ачисем валли майлăрах япаласене пуçтарса илсе кайнă иккен. Тата унăн ывăл ачи халĕ кунта, кукамăшĕпе кукашшĕ патне, пурăнма куçнăмĕн. Паллах, Алевтинăн аппăшне тата йывăртарах. Вăл кунтисенчен те чухăнрах пурăнать. Вĕсен колхозĕнче кăçал тырă вуçех паман, тет. Çавăнпа Алевтина тăван килĕнче нимĕн те тупаймарĕ, Униçĕмсем патĕнчех кĕлетре çакăнса тăракан кивĕ кĕрĕке тытрĕ.

Вара çавна унтан-кунтан касса-сыпса, Саша валли пĕчĕк пальто пекки çĕлерĕ. Ачана хĕл каçма чипер тумтирех пулчĕ. Савăнчĕ уншăн çамрăк хĕрарăм. Кайран кун пирки çав тери кӳренмелле пулассине пĕлме пултараймарĕ çав вăл ун чух...

Ку вăл çуркунне, шыв-шур тапраннă вăхăтра пулчĕ. Вĕсем патне, кĕтмен çĕртен, район центрĕнче пурăнакан Униçĕм пиччĕшĕ Антонпа унăн арăмĕ пырса кĕчĕç. Хаклă хăнасем килнишĕн савăнса, Униçĕм амăшĕ те, Алевтина та вĕсене мĕнле те пулин лайăхрах пăхас тесе хыпаланма пуçларĕç.

Алевтина, хăйсен килне кайса, амăшĕнчен пĕрре апат пĕçермелĕх аш илсе пычĕ. Хунямăшĕ, аслă ывăлĕ ĕçме юратнине пĕлсе, таçтан сăмакун та тупрĕ. Унтан кил хуçисем тĕпел кукринче, çунакан кăмака умĕнче, апат-çимĕç хатĕрлеме тытăнчĕç.

Антон арăмĕ Вельмира Ивановна та (Алевтинăн инкĕшĕ пулать ĕнтĕ вăл халь), вĕсемпе пĕрле кăмака умĕнче тĕрткеленчĕ, тек вĕрентме тăрăшрĕ.

— Эпĕ апат-çимĕçе ресторансенчи поварсенчен те лайăхрах пĕçерме пĕлетĕп,—пакăлтатрĕ вăл.

Антон та мухтанса илчĕ арăмĕ пит тутлă пĕçернипе.

— Юрать, ара, юрать,—терĕ амăшĕ.—Яланах çапла пурăнмалла пултăр — пĕçерĕр те çиймĕр, пĕçерĕр те çиймĕр! Кинĕн урăх ĕçĕ те çук пулас-ха...

Кинĕ хăйне тĕртсе илнине сисмĕш пулса ирттерсе ячĕ.

Апат çисе тăрансан, Антон сĕтел хушшинчен тухрĕ те пĕр хушă каллĕ-маллĕ уткаларĕ. Унтан тин хăй паян шыв-шур çине пăхмасăрах тăван киле мĕн ĕçпе килни çинчен калама тытăнчĕ.

— Анне, мĕнле шутлатăн эсĕ... Çак пирĕн хуçалăхра манăн тӳпе пур-и, çук-и?— терĕ вăл, амăшĕ умĕнче тăп чарăнса, ун куçĕнчен пăхса.

— Ывăл тенин тӳпи пурах ĕнтĕ вăл... Ĕлĕкренех çапла пулнă. Килĕ-çурчĕ нимĕне тăмасан та, ывăл уйрăлса тухнă чух пĕтĕмпех çурмалла тунă,—терĕ амăшĕ, авалхи пурнăçа аса илсе.

— Питĕ тĕрĕс каларăн. Халĕ, анне, акă мĕн: эпĕ çак кил-çуртран икĕ тӳпине сутатăп. Пĕр тӳпи хамăн, тепри санăн. Эсĕ ху малашне пирĕн пата пурăнма куçатăн. Пирĕн те ача пур, пăхас пулать ăна. Тепĕр чух

ӳнта-кунта каймаллисем тупӑнаççé те, ачана никампа хӑварма çук. Ну, тата килти ытти шӑкӑр-макӑр ӗçсем те тупӑнаççӗ...

Амӑшӗ тӗлӗнсе, хӑраса кайрӗ, куçӗсене мӑч-мӑч хупса илчӗ.

— Тур çырлах, Антун, эс... мӗн калаçатӑн? Ачине пӑхма та ӳркенместӗп, ытти ӗçсенчен те хӑрамастӑп эпӗ, анчах та çак хамӑн кил-çуртран виличчен те кӑлараймастӑн мана. Акӑ, турӑ умӗнче сӑхсӑхсах калатӑп! Ачине яла илсе килсе ярӑр, эппин, хӑвӑр ерçместӗр пулсан, чиперех пӑхса усрӑп, ача ӳстерсе курман çын мар-ха...

— Çук, çу-ук! Ку пустуй сӑмах! Хамӑр ачана тем пулсан та ялта усрамастӑпах. Кунта мӗн çисе пурӑнӗ вӑл?!—терӗ Антон арӑмӗ, ку таранччен чӗнмесӗр ларнӑскер, сӗтел хушшинчен сиксе тухса.—Ан итле ӑна, Антоша, хамӑр калаçса татӑлнӑ пек, ик тӳпине сутатӑн та — ӗçӗ те пӗтрӗ!

— Мӗнле тӑруках кун пек шухӑш тытрӑр эсир? Авалтанпа тымар янӑ кил-çурта мӗншӗн çакӑн пек çине тӑрсах сутмалла-ха?— сассине хытарчӗ амӑшӗ.

— Эпир пурӑнма хулана куçатпӑр. Эп унта хам валли çурт илетӗп, мана укçа кирлӗ,—терӗ Антон сиввӗн.

— Хӑйӗн пайӗпе вӑл мӗн тӑвас тет, çавна тума пултарать... Сутсан та, илсен те никамӑн та ӗç çук унта!— кӑшкӑрнӑ пекех каларӗ ун арӑмӗ.

— Вӑрçӑ пӗтиччен уйрӑлма тӑхтамалла мар-ши? Акӑ, Униçӗм таврӑнать те, чиперех йӗркеллӗн калаçса татӑлӑр... Вӑрçӑри çынна кӳрентерес марччӗ. Унӑн та килӗ, çемйи пур вӗт!— парӑнмарӗ амӑшӗ.

— Мана халь кирлӗ, ӑнланатӑн-и — халь, халь, эп кӗтме пултараймастӑп!— аллисене сулкаласа, хаярланса каларӗ Антон.— Униçӗмӗн пока никам та çукха! Ку ачи — хӑйӗн мар, ӑна тӗп-тӗрӗс пӗлетӗп, арӑмӗ те такамӑн! Акӑ, кур, Мира,— арӑмӗ еннелле çаврӑнчӗ вӑл,— ачин тумтирне те ман кӗрӗкрен çӗленӗ! Янтӑпа пурӑнасшӑн çынсем!

Çак самантра сӗтел çинчи чашӑк-тирӗке пуçтарса тӑракан Алевтинӑна чӗринчен çӗçӗпе чикнӗ пекех туйӑнчӗ. Алӑри япаласем чанкӑр-р! кӑна каялла сӗтел çине тухса ӳкрӗç. Вӑл, ӑнран тухнӑ пек пулса, кӑвакарса кайрӗ. Алли-урисем чӗтреме тытӑнчӗç. Пӗр сӑ-

Мах та ченеймере, сапка патне чупса пырса, ачинĕ йăтрĕ те, лăп-лап чĕркекелесе урамалла тухса вирхĕнчĕ.

Ăшă çĕртен сивве тăрук илсе тухнă ача чыхăнса кайрĕ. Хунямăшĕ, ача пальтине йăтса, вĕсем хыççăн хашкаса чупрĕ, хăваласа çитсе, ача çине витсе ячĕ. Анчах Алевтина ăна йышăнмарĕ, çул çинех пăрахса хăварчĕ...

Тем тĕрлĕ йывăрлăха та тӳссе ирттерме пулать, анчах ним сăлтавсăр, пĕр айăпсăр кӳрентернине чăтма çав тери йывăр иккен. Пурнăçра кама усал тунă-ши Алевтина? Çук, нихçан та, никама та пĕр сив сăмах каламан, кӳрентермен, çын кăмăлне хуçман. Апла пулин те, хăшĕ-пĕрисене кансĕрлет иккен вăл! Тĕрĕс марçке ку, тĕрĕс мар!..

Макăрса пынине çынсем курасран, вăл пĕр тăкăрлăк тăрăх пахчасем хыçне тухрĕ. Тăван килне, ашшĕамăшĕ патне çитиччен лăпланма тăрăшрĕ. Мĕн пулса иртнине вĕсене вуçех пĕлтерес мар, терĕ. Вĕсене унăн текех пĕртте хуйхăртас килмест-çке!..

Çав вăхăтра, кĕтмен çĕртен, пахчасем хыçĕнчи Хурăн варĕнчен темле хăрушла кăшкăрнă сасăсем илтĕнса кайрĕç. Алевтина васкасах куççулĕсене шăлкаласа типĕтрĕ те çырма хĕррине пычĕ. Тарăнах мар çырма тĕпĕнче кĕрлесех çурхи пăтранчăк шыв юхать. Ĕлĕкхи пĕве вырăнĕнче икĕ хĕрача аллисенчи патаксемпе такама хăваласçĕ. Алевтина вĕсем патнерех пычĕ те ферма ĕни Илем йăшса кайнă юр ăшне хырăмĕ таранах путса ларнине курчĕ. Вара вăл, çав тери хăраса, хĕрачасем патнерех чупса пычĕ. Вĕсем фермăра ĕçлекен Улимпи ачисем иккен, амăшне пулăшма фермăна яланах çӳреççĕ. Халĕ вĕсем ферма картинчен тухса кайнă Илем ятлă ĕнене шырама тухнă та, тупнă ав.

Хĕрачасем темле çухрашса хăваласан та, ĕне вырăнтан тапранаймасть. Вăл хăй те çынсенчен пулăшу ыйтнă пек: «Му-у! Му-у-у!» — тесе илет.

Алевтина, аллинчи ачине Таис ятлă хĕрачана тыттарса, ăна халех амăшĕ патне леçсе хăварма хушрĕ. Хăй вара тӳрех ĕне патне пычĕ.

— Ах, Илем, Илем! Мĕн мурĕшĕн килсе лекрĕн кунта! Тухас пулать пирĕн часрах, атту пĕтетпĕр!

Унтан вăл, юр айĕнчен тухнă темле хăма таткисене, патаксене пухса, ĕне айне чиккелерĕ, ун валли çул

тума çемçе юра таптаса хытарчĕ, сывăхри кăртаран лайăх кăна кĕске кашта кăларса илчĕ те ĕнен малти урисем хыçне чиксе йăтма пуçларĕ.

— Атя, Илем, тух! Епле пулсан та тух!..

Ĕне пĕрре сиксе илчĕ, тепре, татах сикрĕ, малти урисемпе çӳлелле тухрĕ, анчах урăх хускалаймарĕ. Алевтина каштине каярах куçарса, ĕнене пилĕк тĕлĕнчен çĕклеме тытăнчĕ. Пĕтĕм вăйне пухса, шăлне çыртса, пур шăнăрĕсене те карăнтарса çĕклерĕ.

— Тухсам ĕнтĕ, Илем!..— чут çеç макăрса ямарĕ вăл.

Тапаçлансан-тапаçлансан, ĕне, кайри урисемпе те шывлă юр ăшĕнчен тухса, хытăрах çĕре ӳкрĕ те пĕр хушă хашкаса выртрĕ.

— Пулчĕ! Çăлăнчĕ пирĕн Илем!— хĕпĕртесе кăшкăрса ячĕ çакна пăхса тăнă хĕрача.

Анчах çав самантрах Алевтина, хăйне пилĕкĕнчен тытса, пĕшкĕнсе ларчĕ, вăрăммăн йынăшса ячĕ.

— Мĕн пулчĕ, Алевтин аппа?!— хăраса ыйтрĕ хĕрача.

— Тем, вар ыратса кайрĕ-ха...— терĕ Алевтина аран-аран.

Унăн куçĕсем хуралса килчĕç. Çав вăхăтра ун ачине леçме кайнă Таис каялла чупса çитрĕ. Хĕрачасем Алевтинăна ура çине тăма пулăшасшăн пулчĕç, анчах вăл, хытă ыратнăран, вĕсене хăйне тытма чарчĕ.

— Чимĕр-ха, тен, кăшт тăхтасан, иртсе кайĕ...— терĕ вăл хуллен кăна.— Мĕн пулчĕ-ши мана капла?

Хĕрачасем кĕтрĕç. Вăхăт самаях иртрĕ, Алевтина çаплах тӳрленсе тăраймарĕ. Кăшт тăхтасан йĕпе юр çине йăванса кайрĕ. Таис тени хăйĕн сăхманне хывса ун айне сарчĕ те часрах яла, фельдшерица патне чупрĕ.

Кăшт тăхтасан Алевтина, варне аллипе тытса, ура çине тăма пикенчĕ, анчах та вăй çитереймерĕ. Пыршисене такам çĕçĕпе тирсе тăнăн туйăнчĕ ăна.

— Вăрçăра аманнă пекех пулчĕ-çке ку...—йынăшса йĕрсе ячĕ вара вăл.

Çав вăхăтра унăн ашшĕ пырса çитрĕ,— Таис Алевтина ачине леçме кайсан çырмара мĕн пулни çинчен каласа хăварнă иккен ăна.

— Ухмах пуль эсĕ!— кăшкăрсах пăрахрĕ вăл.— Кам этемми тăр-пĕччен ĕне туртса кăлартăр?! Çынсене кайса чĕнмеллеччĕ, унччен вилсех каймĕччĕ выльăхĕ!

— Хăранипе ним шухăшлама та пĕлмерĕм çав,— терĕ Алевтина хуллен, çаплах варне тытса.

— Хытах ыратать-и?

— Ыратать...

— Вар-хырăм вырăнтан хускалчĕ пуль, эппин, санăн. Эх, тĕнче! Инкек куçа курăнса килмест çав!

Кĕçех ик-виç хĕрарăмпа пĕрле фельдшерица хашкаса çитрĕ. Алевтина мĕншĕн аптраса ӳкни çинчен ыйтса пĕлсенех, ашшĕне каларĕ:

— Еоор Петрович, халех, пĕр самант тăхтамасăрах, больницăна ăсатас пулать ăна! Вăрăмрах çунине кӳлĕр, выртса пымалла пултăр, тата çемçерех сарăр. Ăсатма хам каятăп. Вăхăта сая ярас мар, хăвăртрах, хăвăртрах! Темрен тем пулма пултарать...

* * *

Алевтина больницăра вăрахчен выртрĕ. Ытла йывăр йăтнипе унăн ăшчиккинче тем хускалнă, терĕç. Тухтăрсем мĕн пулнине медицина чĕлхипе çеç каланă пирки тĕрĕссине никам та пĕлмерĕ. Операци хыççăн ун патне никама та кĕртмерĕç — ашшĕне те, хунямăшне те. Вĕсем илсе пынă апат-çимĕçе те илсе юлмарĕç: «Юрамасть», терĕç.

Чылайран, Алевтина кăшт самайлансан, ун патне чи малтан Катюк почтальон пырса кĕчĕ. Вăл ун валли çыру илсе пычĕ. Яланхи пекех, виçĕ кĕтеслĕ çыру.

— Униçĕмрен пулас...

— Тĕрĕс, Униçĕмрен,—терĕ вăйсăрлансах çитнĕ Алевтина.

Çыруне хăвăрт кăна вуласа тухрĕ те, пĕр хушă чĕнмесĕр шухăша кайса выртнă хыççăн, йăл кулса илчĕ.

— Питĕ савăнмалли çыру,— терĕ вăл Катюка.— Пирĕннисем тăшмана хăваласа малалла каяççĕ иккен. Çак кунсенчех Берлина пырса кĕретпĕр, тенĕ Униçĕм. Мана хăйсен килĕнчех пурăнма хушать. Анчах мĕнле кайса кĕрес унта? Пиччĕшĕпе инкĕшĕ çисе ярĕç...

— Ал сул вĕсем çине!— терĕ Катюк.— Униçĕм мĕнле хушать, çапла ту. Леш хулари улпучĕсем тек пырса та çӳрес çук ĕнтĕ. Антунĕ хăйĕн тӳпине сутса ячĕ вĕт...

— Чăнах-и?! Пит лайăх апла. Сывă пулсан, Униçĕм таврăнсан, кил-çуртне лартăпăр-ха ăна. Пăянам лайăх

карчăк манăн, ăна хисеплетĕп эпĕ. Униçĕм шăп амăшĕ пек пулнă...

— Тĕрĕс ку, Алевтина. Халь те вăл сан валли çупа чăкăт парса ячĕ. Кин мана ан çиллентĕр, эп айăплă мар, тет...

— Çу-ук, эпĕ ăна çилленместĕп. Малашне эпир унпа лайăхах пурăнăпăр-ха.

...Çакăн хыççăн та, района почта илме пырсан, Катюк кашнинчех Алевтина патне больницăна кĕрекĕре тухрĕ.

Пĕррехинче, пĕтĕм тавралăх ешĕл тумпа витĕнме тытăннă чух, сывалса çитме пуçланă Алевтина больница картишне хăех хуллен утса тухса ларчĕ. Кунĕ ытармалла мар — хĕвелĕ çуллахи пекех пăхать, ăшă, лĕм çил çук. Тӳпере ывăнма пĕлмен тăри юрри шăранать. Картишĕнче, тин çеç шăтса тухнă курăк çинче, тăват-пилĕк çулхи арçын ачапа хĕрача мечĕкпе перкелешсе выляççĕ. Вăрахчен пăхса ларчĕ вĕсем çине Алевтина.

«Темиçе çултан ман Сашок та çакăн пек вылякан пулать акă...» — шухăшларĕ вăл тулли кăмăлпа.

Сасартăк урам енчен тахăшĕ кăшкăрнине илтрĕ:

— Алевтина-а!

Сасă еннелле çаврăнса пăхрĕ те Катюк-почтальона курах кайрĕ. Ун патнеллех чупса килет вăл.

— Мĕн, мĕн, Катюк? Çыру пур-и?— кăртах сиксе илчĕ Алевтина.

— Çук-ха, çыру мар!— кăшкăрчĕ Катюк.— Унтан та хаклăраххи!

— Мĕн тата?

— Вăрçă... Вăрçă чарăннă!..— Катюк Алевтинăпа юнашар лап! ларчĕ те ăна ыталаса чуптума тытăнчĕ.— Мĕнешкел савăнăç ку, мĕнешкел телей!..

— Ан та кала, тусăм! Кунтан пысăк телей пулма та пултараймасть! Пĕтĕм халăх телейĕ вăл!

Вĕсен савăнăç куççулĕсем юха-юха анчĕç.

...Нимĕн те пĕлмен çав ун чух Алевтина. Тепĕр вунă кунтанах, киле таврăнсан, хăйĕн Униçĕмĕ фашизмăн тĕп йăвине — рейхстага штурмланă чух паттăрсен вилĕмĕпе вилнине пĕлтерекен хурлăхлă хут килесси çинчен пĕлме пултарайман...

ПАТТĂРСЕМ — ВИЛĔМСĔР!

(Эпилог вырăнне)

...Шăвать вăхăт, пĕр чарăнмасăр шăвать.

Çул хыççăн çул иртет. Çамрăксем ӳсеççĕ, аслисем ватăлсах пыраççĕ. Пурнăç йĕрки çапла...

Хăй аллă çула çитнине Алевтинăн ĕненес те килмест. Тĕлĕнмелле! Унăн пĕртен-пĕр ывăлĕ Саша та авланса ача-пăчаллă пулчĕ ĕнтĕ...

— Эх, мĕншĕн пĕр çирĕм çул каярах çуралманши?—тет вăл час-часах, кӳршипе, Ультипе, тĕл пулсан.

— Эпĕ те çавнах калатăп мар-и! Пурнăç лайăхлансах пырать. Эпир ав... ватăлатпăр. Çав тери кӳренмелле вĕт ку,— тет ăна хирĕç Ульти.

— Пурнăçне пĕтĕм колхозпа пĕр шухăшлăн ĕçлесе юсарăмăр. Паллах, совет самани пулман пулсан, ырлăхне курас çукчĕ эпир. Юрать-ха, çак тĕнчере Ленин пулнă, мĕнле пурнăç тумаллине вĕрентсе хăварнă!

Калаçсан-калаçсан хĕрарăмсем хăйсен пахчисенче тăрмашма тытăнаççĕ.

Алевтина яланах хăйĕн ĕçне пăхса савăнать. Хăй аллипе лартса ӳстернĕ улмуççисем, çырла йывăççисем шап-шурă чечекре. Вĕсене уçă çил те хĕрхенет, тейĕн: йывăç çулçисем пĕр-пĕринпе выляни пек вĕлтĕртетсе çеç илеççĕ. Час-часах тата Алевтина çырма тĕпĕнчи çăлкуç умне пырса тăрать, шухăша каять. Униçĕм сăмахĕсене аса илет: «Çак çăлкуçра — сиплĕ шыв... Пурнăç сĕткенĕ пек вăл...» Çакăнтан пуçланчĕ те ĕнтĕ Алевтинăн тумхахлă кунçулĕ. Тем те курма тиврĕ ăна пурнăçра. Çапах та телейлĕ вăл. Хăй пурнăçне ахаль пурăнса ирттермен. Тăван çĕршыва хӳтĕленĕ, кайран— ырми-канми ĕçленĕ. Тулăх та телейлĕ пурнăçшăн. Хăйшĕн çеç мар, пĕтĕм халăхшăн.

...Кĕтмен çĕртен, сасартăк, урамран кăшкăрни илтĕнчĕ:

— Алевтина! Мĕн чакаланан пахчунта? Вăл ниçта та тарас çук вĕт. Атя праçник курма!

Ку Сухви карчăк иккен.

— Мĕн праçникĕ?—тĕлĕнсе ыйтрĕ Алевтина.

— Вăрçă чарăнни çирĕм çул тултарнă паян — акă мĕнле праçник! Мантăн-им? Çав ятпа районтан хăна-

сем килсе тулнă пирĕн колхоза. Вăрçăра вилнисĕне асăнса ялта палăк уçаççĕ. Пĕлетĕн-и, манăн вăрçăра вилнĕ икĕ ывăлăн, Мишукпа Ваçукăн, ячĕсене те çырса хунă унта.

— Эс ăна ăçтан пĕлетĕн?

— Ман пек «мать-героиня» пулмалла-мĕн санăн, вара пурне те пĕлеттĕнччĕ. Ачасем мана ăçта мĕн пулнине пĕтĕмпех пĕлтерсе тăраççĕ. Палăк çинче сан упăшкун ячĕ те пур, тет. Чи малта, тет.

— Эппин, чим-ха, тăхта, пĕрлех кайăпăр. Ав, Ультие те чĕнер. Вăл та ман пекех нимĕн те пĕлмест пуль, пахчинче тăрмашать.

Алевтинăпа Ульти, йăпăр-япăр тумланса, урама тухрĕç те татах темиçе хĕрарăм пĕрле тăнине курчĕç. Унтах хĕрсем те, ача-пăчасем те пур. Пурте савăнăçлă, кулкаласа калаçаççĕ.

Ял варринчи пысăк çĕнĕ клуб умне халăх чăнах та питĕ йышлă пухăннă. Пĕр енче шур акăшсем пек шапшур кĕпеллĕ хĕрарăмсем ушкăнăн-ушкăнăн тăраççĕ. Унтан та кунтан çамрăкрах арçынсем мотоциклсемпе, велосипедсемпе кĕрлеттерсе килеççĕ. Шкул ачисем стройпа харăссăн пусса утаççĕ. Клуб çумĕнчи пысăк шăнкăрав пек репродуктор вăрçă вăхăтĕнче юрланă юрăсене янратса чуна хумхантарать.

Пăртакран музыка чарăнчĕ те хĕрлĕ хăмачпа витнĕ трибуна çине ялти хĕрарăмсем палламан çынсем тухса тăчĕç. Ял Совет председателĕ Иван Петровичпа колхоз председателĕ Федор Иванч çеç кунтисем. Кăкарĕсем çинче пурин те орденсемпе медальсем йăлтăртатаççĕ. Кĕçех Иван Петрович карттусне хыврĕ те сăмах пуçларĕ:

— Хаклă юлташсем! Тăвансем! Паян пирĕн калама та çук пысăк уяв — Çĕнтерӳ кунĕ! Çирĕм çул каялла паянхи кун çĕр çинчи чи хăрушă вăрçă чарăннă. Пирĕн совет халăхĕн ывăлĕ-хĕрĕсем фашистла Германие çĕнтерчĕç. Ку çĕнтерӳ пире çăмăллăн килмерĕ. Пирĕн ял Советне кĕрекен ялсенченех çав вăрçăра паттăрăн çапăçса çĕр çын ытла пуçĕсене хучĕç. Эпир паян Тăван çĕршывшăн, халăх телейĕшĕн пуçĕсене хунă юлташсене ĕмĕр-ĕмĕр асăнса пурăнма туса лартнă чаплă палăка уçатпăр,—терĕ вăл.

Вара палăк патнe вăрçăра çапăçнă ял çыннисем утса пычĕç. Вĕсем ун çине витнĕ шурă пире шутарса

ăнтарчéç те, пĕтĕм халăх умне çӳллĕ постамент çинче тăракан бронза тĕслĕ скульптура — салтак тухса тăчĕ. Унăн пĕр аллинче —пĕчĕк ача, тепĕр аллинче — автомат.

Ăна курсанах, Алевтина чĕри хăвăрт-хăвăрт тапма пуçларĕ. Ара, ку каснă-лартнă унăн упăшки, Униçĕм, тăрать вĕт-ха?!. Вăл çавăнтах шкул ачисемпе пĕрле тăракан Униçĕм ятлă мăнукне чĕнсе илсе, ăна аллинчен çавăтса, палăк умнелле илсе пычĕ.

— Акă, тинкер лайăхрах, çакă вăл санăн аслаçу тăрать. Ăна фашистсем вĕлернине эсĕ пĕлетĕн ĕнтĕ. Унăн аллинче санăн аçу, Саша, ларать. Вăл ун чухне санран та пĕчĕк пулнă. Пирĕн кун пек ӳкерчĕк килте те пур...

— Пур çав, пур, килте рамка ăшĕнче çакăнса тăрать,— терĕ мăнукĕ.

Иван Петрович асламăшĕпе мăнукĕ каласнине асăрхаса пăхса тăчĕ.

— Арманова юлташ, кил-ха кунта,—чĕнсе илчĕ вăл унтан хĕрарăма.—Сăмах тухса кала, Алевтина инке. Эсĕ те вăрçăра çапăçса курнă çын,—терĕ.

— Теменле-çке, пултараяп-ши? Тăнпуç та саланса кайрĕ те ĕнтĕ...—иккĕленчĕ Алевтина.

— Атя, мĕн шухăшлатăн, мĕн туятăн, çавна кала.

Алевтина трибуна çине хăюсăррăн хăпарчĕ.

— Иртнĕ вăрçăра эпир хамăрăн хаклă юлташсене, çывăх тăвансене нумай çухатрăмăр. Çапах та чи хаклине — хамăр Тăван çĕршыва тискер тăшмана памарăмăр. Халĕ вара эпир Тăван çĕршывăмăр тата вăйлăрах пултăр, пирĕн нихçан та нимле тăшманран та хăрамалла ан пултăр тесе, пĕтĕм вăя хурса ĕçлетпĕр! Тата тепĕр сăмах калам: манăн Униçĕм вилмен! Акă вăл, пĕтĕм халăх умĕнче мăнаçлăн тăрать! Пирĕн паттăрсем — вилĕмсĕр!— терĕ ватă хĕрарăм.

Халăх нумайччен алă çупрĕ...

Вĕсен амăшĕ

Калав

Вăл кун колхоз агрономĕ Вениамин Добров иртен пуçласа каçалла сулăничченех уй-хирсем тăрăх çӳрерĕ. Колхозниксем ырми-канми тăрăшса ĕçлени харама каймарĕ кăçал: ăçта ан çит — пур çĕрте те тырă кашласа ларать, тинĕс пек хумханать, агроном чĕрине савăнтарать. Ырашĕ те, тулли те, сĕлли те, пăрçи те— пурте.

Добров çак колхозрах çуралса ӳснĕ, кунти шкултах вĕреннĕ, унтан ялхуçалăх институтĕнчен вĕренсе тухнă та хăйсен колхознех таврăннă. Виççĕмĕш çул кăна ĕçлет-ха вăл агрономра, анчах ял çыннисем ăна питĕ хисеплеççĕ, ма тесессĕн Добров пĕтĕм çамрăк вăйне колхоз ĕçне парать, тырпул тухăçлăхне хăпартма тăрăшать.

— Маттур пирĕн Венька...

Çак сăмахсене час-часах илтме пулать ял хушшинче.

Ĕнтĕ часах ыраш вырма тухмалла, вырăнĕ-вырăнĕпе вăл пулсах çитнĕ пек. Агроном çав вырăнсене палăртса çӳрерĕ паян.

«Пĕр-ик кунтан пуçлатпăр...» —шухăшларĕ Добров. Вăл аллинчи сехечĕ çине пăхса илчĕ. Тăваттă çитет иккен. Çавăн хыççăнах кăкăрĕ умĕнчи кĕсйинчен

шап-шур хут татки кăларчĕ те ун çине мĕн çырнине хăвăрт вуласа тухрĕ.

«Хисеплĕ Вениамин Васильевич!

Июлĕн çирĕммĕшĕнче, каçхине çичĕ сехетре, колхоз клубĕнче, пирĕн хисеплĕ те тава тивĕçлĕ учительница Калерия Петровна Петрова 60 çул тултарнă ятпа савăнăçлă пуху пулать. Эпир сана çав пухăва пыма чĕнетпĕр. Педсовет».

— Вăт, ăнман этем, кая юлатăп вĕт!—хăйне вăрçам пек турĕ те Добров, васкасах ялалла утрĕ. Яла çитсен килне те кĕмерĕ, ялпо лавккинелле çул тытрĕ.

«Мĕнле те пулин лайăхрах парне илсе парасчĕ-ха юратнă юбиляра, асăнмалăх пултăр...»—шухăшларĕ вăл.

Анчах хăй мĕн шухăшланине тăваймарĕ Добров. Лавкка хупă иккен.

— Эх, тăмсай, маларах килмеллеччĕ-çке! Мĕн тăвас пулать ĕнтĕ халь? Нивушлĕ пушă алăпах каймалла ку савăнăçлă пухăва?

Добров хăйне çав тери тарăхса, ним тума пĕлмесĕр, лавкка алăкĕ умĕнче темиçе самант шухăша кайса тăчĕ. Продавецĕ ку ялсем пулнă пулсан, ăна кайса чĕнме пулатчĕ-ха, анчах лешĕ урăх ял çынни, ăна ăçтан шыраса тупатăн? Ак, ăнман япала!..

Добров, лавкка крыльци çинчен анса, кил еннелле утрĕ. Анчах пĕр вунă метр пек кайсанах моряк тумне тăхăннă патвар та хитре кавча курах кайрĕ.

— Лавкка уçă и?— ыйтрĕ моряк.

— Хупă, шуйттан...—ал сулчĕ Добров.

— Кая юлтăм, эппин! Эх, шалккă...— Моряк çăварĕнчи пирусне çĕре пăрахса таптарĕ.

Добров ун çине тинкерсе пăхрĕ.

— Чим-ха, тусăм, эс Анатоли вĕт! Васюков?

— Çавă-çке. Паллаймарăн-им? Эп сана тӳрех палласа илтĕм,— кулса ячĕ моряк.— Чăн та, курманни чылай пулать те ĕнтĕ...

— Эккей, епле паттăрланса кайнă эсĕ! Хăçан килсе çитрĕн пирĕн çĕр çине? Отпуск и?

— Отпуска ячĕç-ха. Ĕнер анчах çитрĕм. Паян Калерия Петровнăна чысласси çинчен пĕлтĕм те, ăна парнелеме мĕн те пулин илесшĕнччĕ. Пулмарĕ, хăямат...

— Эп хам та çавăн пирки тарăхрăм мар-и! Кунĕпе уйра çӳрерĕм те, вăхăтра таврăнаймарăм, эсрелĕ...

— Темле тарăхсан та халь тин ним те шухăшласа кăлараймастпăр ĕнтĕ. Хамăр ун куçĕ умне курăнса саламланипех çырлахас пулать.

Вĕсем килĕсене кайрĕç.

Клуба Добров чылай малтан çитрĕ, анчах унта халăх туллиехчĕ ĕнтĕ.

«Пурте хăйсене вĕрентнĕ учительницăна чыслама килнĕ...—шухăшларĕ Добров.— Чыса тивĕçлĕ çав вăл, çав тери тивĕçлĕ...»

Çав самантрах ăна хăй пĕрремĕш кун, пĕрремĕш хут шкула пыни аса килчĕ. Нумайăнччĕ вĕсем, çичсакăр çулхи ачасем. Пĕр хĕрĕх ача. Калерия Петровна вĕсене çав тери кăмăллăн йышăнчĕ, унтан вĕрентме тытăнчĕ... Нумай вăхăт иртрĕ унтанпа, анчах вăл куна Добров ниçан та манас çук. Добров çеç-и? Ыттисем те çавах ĕнтĕ!

...Сцена çинчи хĕрлĕ пусмапа витнĕ вăрăм сĕтел хушшине Калерия Петровнăпа пĕрле тата чылай çын тухса ларчĕ. Вĕсем хушшинче райком секретарĕ, районти çутĕç пайĕн пуçлăхĕ, шкул директорĕ, темиçе учитель, колхозпа ял Совет председателĕсем тата темле полковникпа хулари пек тумланнă хĕрарăм.

Залра ларакансем ура çине тăрсах пĕр-ик минут алă çупрĕç. Райком секретарĕ аллине тăратса шăпланма ыйтсан тин лăпланчĕ халăх. Унтан вăл сăмах каларĕ, юбиляра райкомпа райĕçтăвком ячĕпе саламларĕ, Верховнăй Совет Президиумĕн Указне вуласа пачĕ: шкулта нумай çулсем хушши ăнăçлă ĕçлесе халăха пысăк усă кӳнĕшĕн Калерия Петровна Петровăна Хисеп Грамоти парас...

Добров хăйĕн пирвайхи учительници çине куç илмесĕр пăхса ларчĕ. Ватă ĕнтĕ вăл, çӳçĕсем кăвакарнă, анчах, ĕлĕкхи пекех, илемне çухатман, сăнĕ тĕлĕнмелле кăмăллă, ырă! Чăн та, хытă пăлханни палăрать: хăнăхман вăл хăйне мухтанине итлеме, юратман ытлашши «тутлă» сăмахсене. Сăпай çын яланах çавăн пек.

Анчах унăн пăлханмалли каярахпа, хăйĕн вĕренекенĕсем пулнă çынсем туха-туха саламлама тытăнсан тата ытларах пулчĕ.

Чи малтан трибуна умне полковник тухса тăчĕ. Тĕреклĕ, илемлĕ çын. Кăкри çинче орденсемпе медальсем шӳлкеме пек йăлтăртатаççĕ. Вăл çамрăк мар ĕнтĕ,

унăн тăнлавĕсем кăвакарнă. Çапах та Добров халĕ ăна палласа илчĕ: кӳршĕ ял çынни, тураткассем, Отечественнăй вăрçă хыççăнах вăл отпуска килсе, шкул ачисене пирĕн салтаксен фронтри паттăрлăхĕ çинчен çав тери тĕлĕнмелле каласа кăтартнăччĕ. Ун чухне Добров иккĕмĕш класра çеçчĕ-ха.

— Хаклă Калерия Петровна! Эпир, паян çакăнта пухăннă çынсем, пурте тенĕ пекех сирĕн учениксем пулнă,—тесе пуçларĕ полковник хăйĕн сăмахне.—Эсир пире пурне те Тăван çĕршыва юратма, чăн-чăн совет çыннисем пулма вĕрентрĕр, тĕрĕс пурнăçпа пурăнма, халăхшăн усăллă пулма ăс патăр. Эсир вĕрентсе кăларнă ачасенчен нумайăшĕ иртнĕ вăрçă хирĕнче паттăррăн çапăçрĕç, хăшĕсем килĕсене таврăнаймарĕç, Тăван çĕршывшăн пуçĕсене хучĕç, анчах тăшмана парăнмарĕç. Хаяр вăрçăран сывă таврăннисем вара çаннисене тавăрсах малашнехи телейлĕ пурнăçшăн ĕçлеççĕ. Сирĕн патра вăрçă хыççăн вĕренсе тухнисем те халĕ нумайăшĕ алла хĕçпăшал тытса хамăрăн мирлĕ пурнăçа сыхлаççĕ... Пĕтĕм чĕререн тав тăватпăр сире çавăншăн, ку таранччен мĕн чухлĕ пурăннă — тата çавăн чухлĕ пурăнма ырлăх-сывлăх сунатпăр!..

Полковник Калерия Петровна патне пырса, ăна ыталаса чуптурĕ.

Ун хыççăн трибуна умне президиумра Калерия Петровнăпа юнашар ларакан хайхи хулари пек пит хитре тумланнă хĕрарăм тухса тăчĕ.

— Мана та чи малтан вулама-çырма эсир вĕрентнĕ, хаклăран та хаклă Калерия Петровна,— терĕ вăл.—Унтан эпĕ фельдшера вĕренсе тухрăм... Кайран, вăрçă пуçлансан, хамăн мăшăрпа пĕрле (вăл полковник çине кăтартрĕ) тĕрлĕ фронтсенче тăшманпа çапăçрăм; сахал мар боецсемпе командирсене вут-çулăм ăшĕнчен çĕклесе тухма тиврĕ, уншăн наградăсем те илтĕм, вăрçă хыççăн вара мединститут пĕтерсе тухтăр пултăм... Анчах мана кам çул уçса панă-ха? Эсир, Калерия Петровна! Çавăнпа эпĕ те, ыттисем пекех, ĕмĕрне те манас çук сире, ĕмĕрех тав туса пурăнăп! Хамăр енчен эпир, упăшкапа иксĕмĕр, сире пĕчĕкçеç парне парас терĕмĕр...

Вăл йăпăртлăха сцена хыçнелле тухрĕ те сĕтел çине, ватă учительница умне, питĕ хитре радиоприемник пырса лартрĕ.

Добров çумне хайхи Васюков моряк шăппăн пырса ларчĕ.

— Пăх-ха, çынсем епле чаплă парнесем параççĕ... Пирĕн иксĕмĕрĕн те нимĕн те çук. Намăс вĕт!—терĕ вăл.

— Намăс та-ха, мĕн тăвас тетĕн...—хуравларĕ Добров.

— Çапах та мĕн те пулин шухăшласа кăларас пулать, тусăм!

— Мĕн шухăшласа кăларас? Вĕрент, эппин.

— Акă, эпĕ моряк... Китсем тытакан карап çинче ĕçлетĕп. Манăн пĕр япала пур: кашалот шăлĕ. Начар сувенир пулать-им вăл, э? Кала-ха!

— Пит лайăх парне,— килĕшрĕ Добров.— Анчах манăн ун пекки нимĕн те çук-çке?

— Епле çук? Эс агроном. Вăйлă тырпул ӳстеретĕн. Çапла-и?

— Çапла пултăр. Вара мĕн-ха?

— Часрах уя чуп та, пĕр лайăх кăна ыраш кĕлти туса кил. Çăкăр вĕт вăл. Çăкăртан хакли мĕн пур? Тĕрĕс калатăп-и?

— Тĕрĕс те пуль, ача...

— Атя, чупрăмăр! Малтан ман пата кĕрсе тухăпăр, унтан — уя!

...Вĕсем хашкаса таврăннă тĕле Калерия Петровна умĕнче тĕрлĕ йышши парнесем купипех пухăннăччĕ ĕнтĕ. Трибуна умĕнче ял Совет председателĕ Иванков юлташ тăратчĕ, ватă учительницăна пĕтĕм ялйыш ячĕпе саламлатчĕ.

— Пире хамăра та, пирĕн ачасене те тăван анне пек пăхса вĕрентсе ӳстернĕшĕн тав туса, эпир паян колхоз правленийĕпе пĕрле çапла йышăнтăмăр,—терĕ вăл, хăйĕн сăмахне вĕçленĕ май.— Сире, Калерия Петровна, ватлăхра канма, хăвăрăн пахчара хитре кăна беседка лартса парас, тата пылпа чей ĕçсе пурăнма, колхоз утарĕнчен икĕ вĕлле парнелес, терĕмĕр...

Шăпăр-шăпăр алă çупса ячĕ халăх, ку шухăша чунтан ырласа.

Ял Совет председателĕ президиумрисемпе тем пăшăлтаткаласа илчĕ.

— Тата тухса калас текенсем пур-и?—тесе ыйтрĕ унтан вăл, зал еннелле çаврăнса.— Эппин, Калерия Петровнăна хăйне...

— Пур!—кăшкăрчĕ çав вăхатра Васюков. Вара тӳрех сцена патнелле хăвăрт утса кайрĕ.

— Тăванран та тăван Калерия Петровна,—терĕ моряк,— эпĕ сирĕн юбилее çитме ĕлкĕрнĕшĕн хама питĕ телейлĕ тесе шутлатăп... Мĕншĕн? Мĕншĕн тесен эсир мана шкулта вĕрентнĕ кăна мар, эсир ман пурнăçа та çăлса хăварнă. Астăватăр-и, эп иккĕмĕш класра вĕреннĕ чухне, хамăр кӳлĕри çӳхе пăр çине конькипе ярăнма кĕрсе кайсан, путма тытăннăччĕ? Çавăн чухне эсир, хăвăрăн сывлăхăра шеллемесĕрех, мана çăлма пăрлă шыва кĕнĕччĕ? Эпĕ ăна нихçан та манас çук. Халь ĕнтĕ эпĕ кӳлĕре çеç мар, океанра та путмастăп... Темиçе çул тĕрлĕ океансенче кит-кашалотсем тытса çӳретĕп. Эсир утмăл çул тултарнă ятпа эпĕ, сире чунтан юратнипе, çур океан парнелесе парăттăм, анчах ун пек тума май çуккипе сире океана аса илтерекен пĕр япала паратăп... Акă вăл. Хам тытнă кашалот шăлĕ!

Моряк тем пысăкăш кит шăлне пĕтĕм халăха кăтартрĕ, унтан ăна Калерия Петровнăна тыттарчĕ.

Нихăш парне хыççăн та кун пек хĕрӳллĕн ал çупмарĕ пуль залри халăх!..

Хальхинче парне параканне Калерия Петровна хăй сиксе тăрса ыталарĕ:

— Тавтапуç, ывăлăм, тем пекех тавтапуç...

Çав самантра сцена çине Добров хăпарчĕ.

— Эп килти çын, Калерия Петровна, тинĕсре те ишместĕп, пĕлĕтре те вĕçместĕп, эсир хăвăрах мана çĕр ĕçне юратма хушаттăр, эсир вĕрентнипех манăн агроном пулассăм килчĕ. Акă сире агроном парни...— Вăл ватă учительницăна тулли пучахлă пит хитре пĕчĕк кĕлте тыттарчĕ.— Ман парне те хаксăр мар пуль, тетĕп...

— Хаклă, ывăлăм, пит хаклă...—каллех пăлханса сиксе тăчĕ Калерия Петровна.— Çăкăртан асли нимĕн те çук, тенĕ ваттисем...

Унтан вăл пĕр хушă тытăнса тăчĕ те, çав тери пăлханса кайнăскер, нимех те калаймарĕ.

— Хаклă тăванăмсем, ытарайми ачамсем, пĕтĕм чунтан тав тăватăп сире мана çакăн пек чысланăшăн... Пурте яланах телейлĕ пулăр, ырă та хитре пурнăçпа пурăнăр!— терĕ çеç.

Хисеплĕ пассажир

Калав

Мускаври аэродромран Шупашкара вĕçме хатĕрленсе тăнă кĕмĕл тĕслĕ «АН-24» самолет çине ларакансем паян нумай пулчĕç. Трап тăрăх тĕрлĕ халăх хăпарать — арçынĕ-хĕрарăмĕ, ватти-вĕтти. Хăшĕсем çемйипех каяççĕ пулмалла. Хăнăхрĕç хальхи çынсем хăвăрт çӳреме, кайăк пек вĕçме!

Галина Андреевна васкамарĕ-ха. Ăçта васкас? Ĕлкĕрет вăл, ун вырăнне никам та йышăнас çук вĕт. Тата вăл ахаль те терткелешме, ыттисенчен мала иртме юратакан çын мар. Пур çĕрте те хăйĕн йĕрки пулмалла.

Акă, юлашкинчен пур пассажирсем те иртрĕç пулмалла та, Галина Андреевна трап тăрăх хăпара пуçларĕ. Анчах çурри таран хăпарсанах ăна трап вĕçĕнче, самолет алăкĕ умĕнче, тăракан летчик хăй еннелле кăчăк туртса чĕннине илтрĕ:

— Саламлатпăр сире, гражданка! Иртĕр хăвăртрах...

«Пит кăмăллăн йышăнаççĕ-çке кунта пассажирсене...» — шухăшларĕ те Галина Андреевна хăй ăшĕнче, хăвăртрах хăпарма тытăнчĕ.

— Ак çакăнта, малти кресло çине ларăр, тархасшăн,— терĕ летчик, хĕрарăм самолет ăшне кĕнĕ-кĕмен.

— Ман вунçиччĕмĕш вырăн...—терĕ Галина Андреевна.

— Вăл ниме те пĕлтермест,— ăна хулĕнчен тытсах малти вырăна лартрĕ летчик.— Паян эсир пирĕн хисеплĕ пассажир!

— Мĕншĕн ун пек хисепе тивĕçлĕ пултăм-ши?— кулам пекки туса, летчик çине пăхрĕ Галина Андреевна.

— Мĕншĕнне халех калăп сире. Эсир паян пирĕн сывлăш карапĕн вунă пинмĕш пассажирĕ пултăр. Çавăнпа та эпир сире укçасăрах вĕçтеретпĕр. Билет укçине сире каялла тавăрса парĕç. Ку — пĕрре. Унсăр пуçне, эсир вунă пинмĕш хисеплĕ пассажир пулнă май, пирĕнтен ак çак пĕчĕк сувенира йышăнма ыйтатпăр...— Вăл хăйĕнпе юнашарах кăмăллăн кулкаласа тăракан тепĕр летчик аллинчен пĕчĕк çеç самолет модельне илчĕ те Галина Андреевнăна тыттарчĕ.— Асăнмалăх сире! Çунатти çине пăхăр — унта «Вунă пинмĕш хисеплĕ пассажира», тесе çырнă...

Галина Андреевна хĕр пек хĕрелсе кайрĕ. Ытла та кĕтмен çĕртен пулчĕ-çке, ара, ку!..

— Тавтапуç сире, чăнах та ĕмĕр асăнмалăх ĕнтĕ ку япала...—теме çеç пултарчĕ вăл.

Çакна пĕтĕмпех илтсе, курса ларнă ытти пассажирсенчен нумайăшĕ, хăйсен вырăнĕсенчен тăрса, ун патнелле кĕпĕрленчĕç.

— Кăтартăр-ха сувенирне...

— Телейлĕ пултăр эсир! Кун пекки чăн та вунă пинре пĕрре кăна пулса иртет!

— Питĕ аван, мĕн каламалли!

Летчиксем çаплах ун патĕнчен каймарĕç-ха.

— Каçарăр, хăвăр кам пулатăр эсир? Ăçтисем, мĕн ятлă, мĕн ĕçлесе пурăнатăр? Çырса юлас пулать пирĕн... Бортжурнал çинче сирĕн ятăр яланлăхах юлать. Йĕрки çапла...

— Чăваш республикинчен эпĕ,— терĕ Галина Андреевна, халь те хĕрелме чарăнаймасăр.— Учительница. Ялти шкулта ĕçлетĕп. Хушаматăм — Гаврилова, чаплă хушаматах мар...

— Пит янравлă хушамат,—терĕ летчик, блокночĕ çине хăвăрт çырса пырса.—Эп палланă Гаврилов хушаматлă пĕр летчик иртнĕ вăрçăра икĕ хутчен Совет Союзĕн Геройĕ ятне илнĕ!

— Пулĕ, ара, пулĕ...— терĕ Галина Андреевна.— Телейлĕ пулнă вăл çын.

— Халь ăçтан таврăнатăр? Пĕр-пĕр курортран мар-и? Çулла шкулсенче каникул, учительсен канмалли вăхăчĕ...— Ку сăмахсене летчиксемпе юнашарах пырса тăнă хурарах çамрăк çын каларĕ.—Эп хам та чăваш-ха, хаçатра ĕçлекен çын, тен, эсир паян хисеплĕ пассажир пулни çинчен çырса кăларма пултарăп, çавăнпа та пĕлес килет...

— Курорт таврашне кайса çӳремен эпĕ нихçан та, нушиех пулман манăн,—тавăрчĕ Галина Андреевна.— Эп хамăн упăшкам патĕнчен таврăнатăп, Белоруссирен, Мозырь хулинчен...

— Сирĕн упăшкăр унта ĕçлет-им?

— Ç-çук...—Галина Андреевна ассăн сывласа ячĕ.

— Мĕн тăвать вара?— çине тăрсах тĕпчеме тытăнчĕ чăваш каччи.

— Хĕрĕх тăваттăмĕш çултанпах Мозырь хули варринче, хура тăпра айĕнче выртать...

— Ăнланатăп...

— Хĕрĕх тăваттăмĕш çулта çав хулашăн çапăçса пуçне хунă. Эпĕ çак таранччен те унăн ӳчĕ ăçта вырнине пĕлменччĕ, юрать-ха, ырă çынсем пулăшрĕç ăна шыраса тупма.

— Камсем-ши?

— «Хĕрлĕ йĕрлевçĕсем...»

— Маттур ачасем пулнă!

Ку сăмахсене илтсен, пассажирсем ăна тата тимлĕрех итлеме тытăнчĕç. Галина Андреевна малалла каларĕ:

— Çапла, çирĕм пилĕк çул хушши хамăн юратнă мăшăрăн масарĕ ăçта пулнине пĕлмесĕр пурăнтăм эпĕ. Манăн вăл вилни çинчен пĕлтерекен хучĕ те çук. Вăрçă хыççăн «Гаврилов капитан хыпарсăр çухалнă», тесе çеç пĕлтерчĕç. Хыпарсăр... Анчах кăçал çуркунне Белоруссирен çыру илтĕм: сирĕн упăшкăр Мозырь хулишĕн çапăçса вилнĕ, ăна юлташĕсемпе пĕрле çав хула варрине пытарнă, масарĕ çине палăк туса лартнă, пионерсемпе шкул ачисем унта чечексем лартса ӳстереççĕ. саккăрмĕш шкулти пионер отрячĕн пĕр дружини Гаврилов капитан ячĕпе хисепленсе тăрать, тесе çырнă. Калама çук савăнтăм çав çырăва илсессĕн. Хам юратнă çыннăн вилтăприне те пулин кайса курма май килчĕ-çке халь! Паллах, вĕренӳ çулĕ пĕтиччен кайма май килмерĕ, малтанлăха çав шкулти пионерсене

пĕтĕм чунтан тав туса çыру кăна ятăм. Каникул пуçлансанах пуçтарăнса тухса кайрăм вара...

— Мĕнле йышăнчĕç унта сире?— Чăваш каччи васкасах хăйĕн блокночĕ çине çырма тытăнчĕ.

— Тĕлĕнмелле лайăх йышăнчĕç, теприсем хăйсен тăванĕсене те ун пек йышăнмаççĕ пулĕ!—Галина Андреевна пĕр-ик самант чарăнса тăчĕ.—Эсĕ пирĕн хаклăран та хаклă хăна, терĕç пур çĕрте те. Парти хула комитетĕнче те, ĕçтăвкомра та, пионерсем патĕнче те... Малтан вилтăпри патĕнче пултăм. Питĕ тирпейлĕ усраççĕ ăна — йĕри-тавра тимĕр решетке тунă, варринче — пысăк палăк, ун тавра тем тĕрлĕ чечек ӳсет. Вĕсене Гаврилов капитан ячĕпе хисепленекен дружина пионерĕсем пăхаççĕ... Эп пырсан тепĕр куннех,— ку шăпах вырсарникун пулчĕ,—паттăрсене хисеплесе лартнă палăк патĕнче митинг ирттерчĕç. Халăх тем чухлех пухăнчĕ... Хула комитечĕн секретарĕ сăмах каларĕ — Тăван çĕршывшăн çапăçса пуçĕсене хунă паттăрсене пирĕн халăх нихçан та манас çук, вĕсен ячĕсем ĕмĕр-ĕмĕр хисеплĕ пулĕç, терĕ. Ун хыççăн тата темиçе çын тухса каларĕç, юлашкинчен вара пĕр пит паттăр сăнлă пионер тухрĕ — эпир вăрçă паттăрĕсен мăнукĕсем, яланах вĕсен çулĕпе пырăпăр, Тăван çĕршыва хуть епле тăшмансенчен те тимлĕн сыхлама хатĕр пулăпăр!— терĕ. Унччен тӳссе тăрсаттăм эпĕ, анчах çав ача каланă чух тӳсеймерĕм, куççулĕсем шăпăрах юхса анчĕç... Унтан мана хăйсен хулине кăтартса çӳрерĕç... Вăрçă вăхăтĕнче ку хулана фашистсем тĕппипех ишĕлтерсе хăварнă пулнă, анчах халь вăл тĕлĕнмелле илемлĕ хула — йăлт çĕнĕрен туса лартнă. Вăрçăчченхинчен те чаплăрах, теççĕ хăйсем. Тĕрĕсех пулĕ... Виçĕ кун пурăнтăм эп унта. Юлашкинчен вара упăшкам масарĕ çинчен, асăнса пурăнмалăх, пĕр пĕчĕк енчĕк тăпра илтĕм. Ак кунтах вăл, чăматанра. Киле çитсен вăл тăпра çине чечек лартатăп. Пион текен чечеке пит юрататчĕ ман упăшка. Çавна лартатăп...

Галина Андреевна калама чарăнчĕ. Пĕр хушă пур пассажирсем те шăпах ларчĕç.

— Эсир хăвăр, Гаврилова юлташ, килте халь кампа пурăнатăр? Ачăрсем пур-и сирĕн?—ыйтрĕ унтан летчиксенчен пĕри.

— Пĕчченех. Упăшкам тупăнатех пуль, тесе, урăх мăшăрланмарăм. Хамăрăн ачасем пулманнипе, пĕр тăлăх хĕрачана усрама илтĕм, анчах халь вăл ӳссе çитсе кайăк тухрĕ ĕнтĕ. Пĕтĕм вăхăта, пĕтĕм вăя шкулти ĕçе паратăп. Манăн хальхи ачасене чăн-чăн совет патриочĕсем пулма вĕрентсе ӳстерес килет... Пĕр ĕмĕт кăна манăн: çамрăк ăру телейлĕ пултăр, эпир курнине ан куртăр...

— Çав тери ырă ĕмĕт,— терĕ летчик.—Ырă, хисеплĕ ĕмĕт.

— Сирĕн çинчен кĕнеке çырас пулать, Галина Андреевна,—хушса хучĕ чăваш каччи.— Эсир хисеплĕ пассажир çеç мар, эсир пирĕн çĕршыври чи хисеплĕ хĕрарăмсенчен пĕри...

Кăшт тăхтасан самолетăн хăватлă моторĕсем кĕрлеме тытăнчĕç, калаçасси пĕтрĕ. Унтан самолет çĕртен хăпрĕ те, аэродром çийĕн вĕçсе çаврăнса, хĕвелтухăçнелле çул тытрĕ.

Ялан кĕтнĕ хăна

Калав

Çуркунне вăл чи малтан сухан лартать.

— Пирĕн хулари кĕрӳ симĕс сухан шутсăр юратать. Килсен вара тӳрех пахчана кĕрсе каять те ывçипех татса тухать. Унтан хăй илсе килнĕ эрех кĕленчине уçать. Эрехĕ ахаль йышши мар, хакли. Мĕн ятлăччĕ-ха? Эккей, ватă пуçра ним те тытăнса тăмасть! Темле... Конюх-и çав... Çук-ха, конюх мар, конях тенĕ пек астăватăп. Вара мана хăйпе пĕрле сĕтел хушшине ларма чĕнет. Эпĕ хăйма илсе тухатăп. Сухан-тăвара хăймапа çиетпĕр. Тахçанччеен калаçса ларатпăр иксĕмĕр... Ытла та лайăх çав пирĕн хулари кĕрӳ! Сăмахне таçтан кăна тупса çитерет, калаçать-култарать, калаçать-култарать... Кăçал та килет пулĕ-ха. Унччен суханне лайăхрах ӳстересчĕ,— тет Малани кинемей.

— Чăнах та, пит лайăх кĕрӳ туяннă эсир. Ун пек çын сайра тĕл пулать пуль. Хăй нумай вĕреннĕ çын пулмалла ĕнтĕ, ăс-пуç енчен кивçене каяс çук. Анчах пирĕнпе, ялти чăваш карчăкĕсемпе те, чунтан калаçать. Ман кĕрӳ те хуларах ĕçлесе пурăнать, хамăр пекех чăваш, анчах хăйне кура мар мăн кăмăллă, хăйсем патне хулана кайсан та, кунта килсен те вырăсла çеç калаçать. Нумай та калаçмасть тата, чĕлхи ывăнасран хăранă пек... Улюк кĕрӳшĕ те çавăн пекех. Ара, хула

çыннисем мар-и! Çынпа çын пĕр мар çав. Âçта тĕл пулнă ун пек çынна сирĕн Верук?— тет кӳршĕ карчăкĕ Епракси.

— Верукĕ вăл пирĕн хăй те питĕ пултараканскер-ха. Каç-каç вĕренсех институт пĕтерчĕ. Халь хаçат кăларнă çĕрте пысăк вырăнтах ĕçлет, терĕç-ха. Лайăх пурăнаççĕ... Кĕрсе курасчĕ сан вĕсем патне! Хваттерĕ виçĕ пӳлĕмлĕ, кашнинех урăх тĕслĕ сăрпа сăрланă. Темиçе шкап, урайĕнче кавирсем, чӳречесем умĕнче чечексем. Кĕрӳ пӳлĕмĕнче вара йăлт кĕнеке. Пин те пулĕ! Этем ун чухлĕ кĕнеке вуласан пуçĕ те шыçса каймалла...

— Пирĕннисем те çавăн пекех пурăнаççĕ. Тем те пур... Кам шутлама пултарнă чăваш ачисем çавăн пек ыр курса, пуян пурăнасса!—ассăн сывласа илет Епракси.

— Пуянĕ-мĕнĕ... Вăрласа-туса мар, йăлтах ĕçлесе тупнă. Кĕрӳ шутсăр нумай ĕçлет пирĕн. Тепĕр чух пĕр çывăрмасăр, çĕрĕ-çĕрĕпе çырса ларать. Кĕнекесем çыракан çын та-ха вăл, çавăн пек лармасăр та май килмест пуль çав.

— Сменăпа ĕçлет, эппин? Хăш чух кăнтăрла, тепĕр чух çĕрле. Пирĕн хамăрăннисем те çавăн пек улшăнса ĕçлеççĕ. Тĕрлĕрен пулать, çĕрле те каяççĕ, кăнтăрла иртсен те...

— Сменине мĕнне хăй тăвать вăл, хăех çавăн пек ĕçлет. Хулана кайсан вĕсем патне йăпăртлăха кĕрсен те, темĕн те пĕр ыйтса пĕлет. Колхоз ĕçĕсем çинчен, ялти çынсем мĕнле пурăнни çинчен. Пĕтĕмпех тĕпчет. Пурне те пĕлесшĕн. Эп пурнăç çинчен çыратăп, ман йăлтах пĕлмелле, тет. Тепĕр чух сана та аса илет. Епракси мĕнле пурăнать, тет.

— Э-эх, Малани, каласа парасчĕ ăна хам пурнăçа! Ман пирки çырас пулсан, тупата, çак арчаран та хулăм кĕнеке пулмалла,—терĕ Епракси хăй ларакан арчана аллипе çапса илсе.

— Тĕл пулсан каласа пар, ара, епле те пулсан, кĕрӳ уншăн савăнать çеç. Тĕрлĕ интерессем çинчен вăл кунĕпе апат çимесĕр итлеме хатĕр. Çăва тухсан килет пуль-ха ак...

— Апла, эппин, хамăн та хăвăртрах сухан лартасха. Тен, мана та леш... конях лекĕ!—кулса илчĕ Епракси.

— Ларт, ара, ларт. Хулари çынсем редис тенине те пит юратаççĕ.

— Вăл мĕн чĕмери тата?

— Пĕчĕк çарăк пекскер. Ăна, суханпа хутăш пăтратса, хăймапа çиеççĕ. Мана пĕркун вăррине те хăйсемех парса ячĕç-ха. Сана та пама пултаратăп, ак!

...Çак икĕ карчăк авалтанпах туслă пурăнаççĕ, вĕсен тĕл пулса каласман кун та иртмест. Яланах пĕр шухăшлă пулаççĕ вĕсем.

* * *

Валериан Семенович Авенир хăй çинчен ăçта, кам мĕнле каласни çинчен те, хăйне яланах кĕтнине те пĕлмест. Ун пирки нихăçан та шухăшламасть вăл.

Акă, ăна хăйĕн фронтри тусĕ Илларион Ильич Иванов пĕрмаях хăй патне пырса курма чĕнет. Ăна халь, хăй ыйтнипе, хуларан самаях инçетри яла куçарнă. Унта вăл вăтам шкул директорĕнче ĕçлет иккен.

Ивановпа Авенир иртнĕ вăрçă вăхăтĕнче пĕр полкра, пĕр батальонра пулнă. Пĕр-пĕрне вĕсем вилĕмрен те хăтарнă. Çавăнпа вĕсен туслăхĕ çав тери çирĕп, вĕсем чи сывăх тăвансем пекех пурăнаççĕ.

Илларион Ильич хăйне чи хăрушă самантра Авенир писатель вилĕмрен мĕнле çăлса хăварни çинчен хăйĕн килйышне темиçе хут та каласа панă ĕнтĕ. Авенирăн хăйĕн ротипе фашистсенчен туртса илнĕ сăрта — çарти пек каласан высотана — тытса тăмалла пулнă. Тăшман пĕр вĕçĕм контратакăсем тунă, сăрта каялла илесшĕн çапăçнă. Тупăсенчен те, минометсенчен те пенĕ, юлашкинчен самолетсем янă. Сăрта сысна чавса тухнă пекех çĕмĕрнĕ. Çапах та ротăна сăрт çинчен çапса антарайман.

Анчах çапăçма пултаракансем сахаллансах пынă. Пĕрисем вилнĕ, теприсем йывăр аманнă. Юлашкинчен рота командирне те, Авенир писателе, пĕçĕрен хытă амантнă. Унăн заместителĕ Илларион Иванов ăна епле те пулсан тыл еннелле тухма хушнă. Авенир вăл хушнине хăлхана та чикмен, суранне çыхса ярсан, каллех автоматне ярса тытнă.

— Пулăшу киличчен епле пулсан та тытăнса тăрас пулать пирĕн!

Çав самантра фашистсем каллех контратака пуçланнă... Вĕсем сăрт çине çурри таран хăпарсан, Иванов, юлашки салтаксене тăратса, тăшмана хирĕç «урра» кăшкăрса ыткăннă. Çавăн чух ĕнтĕ мина осколокĕ Иванова пуçранах лекнĕ те вăл тăнне çухатнă. Юратьха, шăп çав вăхăтра сăрт çине çĕнĕ рота пырса çитнĕ те фашистсене каялла хăваласа янă. Юн кайнипе вăйсăрланса çитнĕ Авенир ура çине тăркаланă та хăйĕн замполитне шырама тытăннă. Сăртри кашни вилнĕ салтак патне пырса тĕрĕсленĕ вăл. Юлашкинчен çапах та ним пĕлми выртакан Илларион Ивановича курнă та хăйĕн аялти кĕпине çурса кăларса ун пуçне çыхнă, флягăран эрех сыптарнă. Кăшт тăхтасан вара Иванов тăна кĕнĕ. Таврара никам та пулман, санинструктор рота юлашкипе малалла кайнă. Ĕнтĕ каç та пулса килнĕ, çанталăк тата ытларах сивĕтнĕ. Вара Авенирпа Иванов ура çине аран тăрса, пĕрне-пĕри пулăшкаласа, полк медпунктĕ еннелле утнă...

Кайран вĕсем, тĕрлĕ госпитальсене лексе, пĕр-пĕрне çухатнă та, вăрçă пĕтичченех тĕл пулайман.

Пĕр-пĕрне тупсан вара ĕмĕр-ĕмĕр тăвансем пек туслă пурăнма сăмах пачĕç вĕсем...

* * *

...Илларион Ильич хăйĕн тусне çав тери хĕпĕртесе, чĕререн хапăл туса йышăнчĕ, арăмне халех çимеллиĕçмелли хатĕрлеме хушрĕ. Унăн мăшăрĕ Калиса Романовна та учительница, питĕ кăмăллă чăваш хĕрарăмĕ. Хăна килнĕшĕн вăл та тем пекех савăнчĕ, тӳрех кухньăра чашăк-тирĕк шăкăртаттарма тытăнчĕ. Хăй çав вăхăтрах малти пӳлĕме пыра-пыра калаçăва хутшăнчĕ.

— Илларион Ильичăн сире асăнмасăр пĕр кун та иртмест, питĕ аван пулчĕ-ха эсир килни!

Ивановпа Авенир халĕ ĕнтĕ иккĕшĕ те аллăран иртнĕ çынсем. Акă, директорăн пуçĕ те çап-çутах, шакла. Авенир писателĕн çӳçĕ йĕтĕн пек шупка кăвак. Çапах та халлĕхе иккĕшĕ те патвар-ха, парăнма шутламаççĕ. Кăмăлĕсем çирĕппи те, вăйĕсем пурри те сисĕнет.

Фронтра пĕрле çапăçнă, тем те тӳссе ирттернĕ туссен аса илмелли нумай çав. Малтанхи каç вĕсем кăвак çутă киличченех калаçса ларчĕç. Калиса Романовна та вĕсемпе пĕрлех пулчĕ.

— Аçта прорыв, ăçта йывăрлăх сиксе тухать — ман Илларион Ильича çавăнта яраççĕ. Ку айванĕ хирĕçлеме пĕлмест, яланах килĕшет,—терĕ вăл кăмăлсăрланса.

— Тĕрĕс тăвать! Салтак-коммунистăн çавăн пек пулмалла та,—аллипе сĕтеле çапса илчĕ Авенир.— Салтак вăл — яланах салтак!

Унтан, кăштах хĕрсен, вĕсем вăрçă вăхăтĕнчи юрăсене аса илсе юрларĕç. Сассисем иккĕшĕн те лайăхмĕн, пĕртте аллăран иртнĕ çынсен пек мар, уçă, çирĕп. Уйрăмах фронтри çĕрпӳрт çинчен пысăк туйăмпа юрларĕç ват салтаксем:

Бьется в тесной печурке огонь,
На поленьях смола, как слеза,
И поет мне в землянке гармонь
Про улыбку твою и глаза...

Тепĕр кунне Илларион Ильич хаклă хăнана хăйĕн шкулне кăтартса çӳрерĕ.

Тахçанах, революцичченех уçнă шкул иккен ку. Шăп ял варринче, чиркĕве хирĕç, икĕ кивĕ çурт ларать. Пĕренисем хуралса кайнă, хăш-хăш пĕренисен пуçĕсем те хуçăлса ӳкнĕ. Пĕр çурчĕ икĕ хутлă. Çӳлти хутĕнче учительсем валли пĕчĕк хваттерсем тунă. Икĕ çурт хушшинче тарасаллă кивĕ çăл пур, хыçалалла сад пахчи тăсăлса каять, анчах улмуççийĕсем ватă ĕнтĕ, чалăш-чĕлĕш, хăшĕсем çурри хăрнă.

— Садне пĕтĕмпех çĕнетмелле, çамрăк йывăççем лартмалла,—терĕ Илларион Ильич.—Кăçал кĕркунне тытăнатпăр ĕнтĕ...

Анчах йывăççем хушшинчи чечек клумбисем писателе питĕ килĕшрĕç. Шкул ачисем хытă тăрăшнă курăнать.

— Ман Калиса Романовна ĕçĕ ку. Ботаника вĕрентет-çке вăл,— кулкаласа илчĕ Илларион Ильич.

Пĕлтĕрччен ку шкул сакăр çул вĕренмеллискер пулнă, кăçал ăна вăтам шкул туса хунă иккен. Çавăнпа та директорăн кунта ĕç çав тери нумай. Ав, платниксем шкул валли сĕтел-пукансем, партăсем юсама тытăннă та иккен. Çĕнĕ учительсем те нумай килмелле, хваттерсем кирлĕ...

— Пĕтĕм шкулне халех ремонт тумалла. Кивĕ çуртсене унтан-кунтан сапламалли чылай. Пурăна киле кермен пек чул çурт та лартĕç те-ха, халлĕхе киввисенчех майлашма тивет,—терĕ Илларион Ильич.

— Чим-ха, мĕншĕн вара «пурăна киле» тетĕн? Ăна халех тума тытăнмалла,— терĕ Авенир хĕрсе кайсах.

— Эх, Семеныч! Калаçатăн та... Тăвас тенипех пулмасть çав вăл. Патшалăх планне кĕртмен пире, колхозсем хăйсен вăйĕпе кăна тăваймаççĕ. Укçа кирлĕ, укçа! Çавăнпа та халь çав кив лупассенех ремонт тăвас тетпĕр. Нимрен малтан кăмакасене сӳтсе купалламалла, çĕнĕрен тумаллисем те пур-ха. Анчах ун валли те кирпĕч çук-ха. Ăçтан тупмалла ăна, пĕлместĕп. Ирĕн-каçăн шухăшласа хамăн кукша пуçа çĕмĕретĕп, ним те шухăшласа тупаймастăп. Юнашар колхозăн кирпĕч завочĕ пур, анчах унтан пире лекмест. Памасть вăл пире пĕр кирпĕч те!

— Мĕншĕн памасть?

— Председателĕпе калаçса татăлма çук! Çынни вăл çав ялсемех, хăйсен хуçалăхĕшĕн питĕ тăрăшаканскер, унтан эсĕ пĕр шăрпăк та йăпăр-япăр ыйтса илейместĕн. Ав, виçĕмкун унтан чиркӳ валли виçĕ машин кирпĕч тиесе килчĕç. Паллах, чиркӳ пуян, укçашăн тытăнса тăмасть, ик-виç хак та пама пултарать. Эпир кашни пĕр пусшăн чĕтретпĕр...

— Чăнах-и? Ытла та тарăхмалла-çке капла! Чиркӳ валли кирпĕч пур, эппин, шкул валли — çук? Мĕнле ăнланмалла куна? Колхоз шкула пулăшма тивĕç-и, тивĕç мар-и?

— Ку таранччен тивĕçех те пулман, ма тесессĕн вăл колхозри ачасем пирĕн шкула çӳремен. Вĕсен хăйсен ялĕнчех сакăр çул вĕренмелли шкул пур. Питĕ вăйлă туса лартнă, икĕ хутлă чул çурт, укçине шеллемен пулмалла.

— Вăтам шкулта вĕренекенсем ăçта çӳренĕ?

— Инçе пулин те, район центрĕнче вĕреннĕ. Анчах малашне унти ачасем тăххăрмĕш, вуннăмĕш классенче пирĕн патра вĕренмелле ĕнтĕ. Çӳреме çывăх пулать вĕсене.

— Çавна шута илсе пулăшмалла та ĕнтĕ сире вăл колхозăн!

— Пулăшасшăнах мар-ха вăт. Колхоз укçине нихçан та шыва пăрахмастăп, тет председатель. Пирĕн

ачасем ĕлĕкрех ăçта вĕреннĕ, çавăнтах çӳрĕç, кирлĕ чух машинăпа та ăсатăпăр, тет.

— Пăх-ха эс ăна! Мĕнле çын вара вăл? Салтакра, вăрçăра пулса курнăскер-и?

— Çук, пулман.

— Паллă ĕнтĕ. Салтакпа мĕнле те пулин калаçса татăлма пулатех, алла пăшал тытса курманнипе — питĕ йывăр! Итле-ха, хаçатра туртса илмелле мар-ши ăна? Тен — тăна кĕрĕ?

— Тем тумалла, хам та пĕлместĕп,—пуçне пăркаласа илчĕ Илларион Ильич.

— Эпĕ юриех кайса килем-ха унта,— терĕ Авенир кăшт тăхтасан.

— Усăсăр пулĕ... Пирĕн вĕренӳ пайĕн заведующийĕ вĕсен ялĕсемех, председателĕн пĕлĕшĕ, вăл та унпа темиçе хут та калаçнă, анчах усси пулман. Ытлашши кирпĕч çук манăн, хамăра та çитмест, тесе çаптарать тет. Пире кирпĕчи пĕтĕмпе те пĕр тăватă пин çеç кирлĕ. Çавна та памасть! Чисти эсрел!

Шкула хĕрарăмпа арçын пырса кĕчĕç, физикăпа вырăс чĕлхи вĕрентекен учительсем. Кĕркуннехи экзамена хăварнă ачасемпе ĕçлеме çӳреççĕ иккен. Вĕсем директорпа хăйсен ĕçĕсем пирки калаçма тытăнчĕç. Авенир çав вăхăтра тăватă пин кирпĕч пирки директортан та кая мар хыпăнса шухăшлама тытăнчĕ.

— Ильич, эпĕ кăштах уçăлкаласа çӳрем-ха,—терĕ вăл унтан.

— Çӳре, çӳре. Çырмана анса пĕвере шыва кĕме те пултаратăн.

Валериан Семенович ним шухăшласа тăмасăрах уялла тухрĕ те «Правда» колхоз еннелле уттарчĕ. Инçе мар унта, пĕр пилĕк километр çеç, салтак уттипе пĕр сехет утмалăх кăна.

Паян хĕвел çӳхе те кăлтăрка шурă пĕлĕтсем витĕр çеç пăхкалать. Çавăнпа та ытлашши шăрăхах мар, утма лайăх. Уйра çавăн пек уçă сывлăшпа киленсе çӳресси Авениршĕн ырлăх вăл.

...Çырма хĕрринче, çӳллĕ сăртра ларакан правлени çуртне вăл шаккамасăрах кĕчĕ. Председательпе мĕнлерех калаçасси çинчен çул çинчех тĕплĕн шухăшласа хунăччĕ ĕнтĕ, анчах телей пулмарĕ: председатель хулана темле машин илме кайнă иккен. Бухгалтер вар-

хырăмпа аптранă та больницăра выртать имĕш. Правлениначе пĕр çамрăк хĕр-счетовод çеç ларать.

«Колхоз пурнăçне вăл та лайăх пĕлет-ха,—шухăшларĕ те Авенир, хăйпе илсе çӳрекен корреспондент билетне кăтартнă хыççăн, ыйтса пĕлме тытăнчĕ: колхоз çулталăкра мĕн чухлĕ тупăш илет, кирпĕч заводĕнче миçе кирпĕч туса кăларать, кирпĕчпе мĕнле усă курать... Унтан председатель çинчен те ыйткаларĕ. Чиркĕве миçе кирпĕч сутни çинчен те ыйтма манмарĕ...

Авенир хĕр-счетоводпа калаçса ларнă хушăра правление икĕ çын пырса кĕчĕç, пĕри — бригадир, тепри механизатор. Кăшт тăрсан тата икĕ хĕрарăм пычĕç. Авенир вĕсемпе пуринпе те калаçма именсе тăмарĕ, колхозри ĕçсем çинчен ытларах пĕлме тăрăшрĕ. Пĕрисем председателе мухтарĕç, теприсем пĕлмĕше печĕç. Анчах та «пирĕн председатель пур чухне те тĕрĕс тумасть çав», тенисем те пулчĕç. Чиркĕве кирпĕч сутнине вара пурте тиркерĕç. Авенир çав хушăрах çынсем мĕнмĕн каланине хăйĕн блокночĕ çине çырса пычĕ. Çыннисем çакна курса тĕлĕнсе ларчĕç. Унтан, хĕр-счетовод ăнсăртран вăл писатель пулни çинчен каласан, пăлхансах кайрĕç, пурте унпа уçăмлăрах, ним пытармасăр калаçма тытăнчĕç.

— Колхозĕ «Правда» ятлă, анчах «правди» сахалтарах иккен-ха сирĕн,— терĕ юлашкинчен Авенир колхозниксене.

— Çапларах çав,— килĕшрĕç лешсем,—председатель хăйне ытла мăнна хума пуçларĕ, хăй мĕн шутлать — çавна тăвать, çынсем каланине хăлхана чикесшĕнех мар. Шкул валли кирпĕч памалли çинчен каланă эпир ăна — итлемест...

Каç пуласпа тин Авенир хăйĕн тусĕ патне таврăнчĕ.

...Ирхине вара питĕ тĕлĕнмелле япала пулчĕ. Мăн Çырма шкулĕ умне кăвак çутăллах кирпĕч тиенĕ икĕ грузовик пырса тăчĕç. Ун чух ялти çынсем те, шкулти учительсем те, директор та сывăратчĕç-ха. Шкул картишне шăлма тухнă Матĕрне инке çеç асăрхарĕ вăл машинсене.

— Уç хапхана!—кăшкăрчĕç шоферсем.

— Халех, халех!—чĕннĕ çĕрелле чупрĕ карчăк.

Тепĕр çур сехетрен шкул картишĕнче вĕр-çĕнĕ кирпĕч куписем ӳссе ларчĕç. Икĕ купа!

Илларион Ильичпа Авенир, кун çинчен пĕлсен, тĕлĕнсех кайрĕç. Мĕн пулнă тăруках ку колхоз председательне?! Мĕн сăлтавпа çапла ырăланса кайнă?

Кун çинчен кайран шкулти вĕренӳ пайĕн заведующийĕ кула-кулах каласа пачĕ.

— Пирĕн колхоз правленине паллă писатель килсе кайни çинчен çав кунах пĕтĕм ял пĕлнĕ. Председателе хăйне кун пирки вăл хуларан таврăннă чух яла кĕричченех каласа панă: «Колхоз çинчен пĕтĕмпех ыйтса пĕлчĕ, тет. Чиркĕве кирпĕч сутнăшăн, шкула пулăшманшăн питĕ тиркерĕ, пурне те кĕнеки çине çырса хучĕ, тет...»

Хайхи председатель киле те кĕмен, тӳрех правление çил-тăман пек пырса кĕнĕ. Писательпе каласа пĕтерсе правленире кам-кам пулнă, пурне те чĕнтернĕ. Чи малтан, пуринчен ытларах, хĕр-счетовода пăскăртнă хайхи. Лешĕ куççулĕпех макăрнă. Ыттисене те самаях çунтарса илнĕ председатель.

— Э-эх, тăм писменсем! Хăçан кăшт та пулин ăс кĕрет сире? Вăл писатель ахальтен мар тем çинчен те ыйта-ыйта, эсир каланисене çырса пынă! Кĕтсех тăрăр халь — хаçатра пирĕн колхоза тиркесе çырни сиксе тухать акă! Ахаль статья тă мар, фельетон кăларать акă! Мĕн тумалла сирĕнпе, ухмахсемпе, э? «Председательсĕр эпир нимĕн те пĕлместпĕр», темелле пулман-и сирĕн? Эпĕ кунта пĕтĕм чуна парса хамăр колхозшăн, сирĕншĕн тăрăшатăп, эсир вара, пăхăр çамкасем, колхоза сиен кӳретĕр! Халĕ сире пула миçе пин кирпĕч кăларса пăрахмалла пулать, э?.. Мĕн чухлĕ укçа шыва каять?!— сĕтел çине шакка-шакках вăрçнă председатель. Унтан хуйхăрса илнĕ: —Халь ĕнтĕ ним тума та çук, пирĕн çав писательрен кăштах чеерех пулас пулать. Вăл çырма ĕлкĕриччен шкула икĕ машина кирпĕч леçме тивет. Халăх çывăрса тăриччен кирпĕч шкул картишĕнче пултăр. Никам та шарлаймасть вара!

Çакăн çинчен пĕлсен, шкулти учительсем кулсах вилетчĕç. Илларион Ильич Авенира ыталаса çурăмĕнчен лăпкарĕ.

— Ну, тусăм, тавтапуç сан пулăшнăшăн! Питĕ аван пулчĕ-çке ку! Мĕн пысăкăш хуйхă пĕтрĕ манăн! Пур учительсен, шкул ачисен ячĕпе тав тăватăп сана!..

— Эпĕ нимĕнех те туман-çке. Кун пек пулса тухасси çинчен шутламан та... Анчах председателĕ чăнах та пултараканскер иккен! Ăна çара алăпах тытма çук пулмалла.

Вăл хăйĕн тусĕшĕн савăнчĕ. Илларион Ильич ĕçĕсем кăштах çăмăлланаççĕ ĕнтĕ халь. Кĕркуннеччен шкула юсаса çитерет вăл. Пĕтĕмпех йĕркеллĕ пулать.

Авенир Илларион Ильичпа, унăн килйышĕпе лăпкăн сывпуллашса уйрăлчĕ. Çула май вăл хунямăш патне кĕрсе курас терĕ. Вĕсен ялĕ кунтан инçе мар, пĕр виçĕ километр çеç. Командировкăна тухнă май вăл çуран утса çӳресшĕн. Çавăн пек тусан çеç пурнăçа ытларах курма, сăнама пулать.

Илларион Ильич ăна çур çула çитиех ăсатса ячĕ. Ватă салтаксем, пĕр-пĕрне сывлăх сунса, тата тепĕр хут алă тытрĕç. Хăйне пулăшнăшăн шкул директорĕ тусне татах тав турĕ.

...Авенира хирĕç варкăш çил вĕре-вĕре илет. Ыраш çийĕн хумсем чупса иртсе каяççĕ, çавна курсан таçта тинĕс хĕррипе пынă пек туйăнать...

Тарăнах мар çыран хĕрринче ларакан çĕнĕ çурт чӳречисем пурте уçă. Авенир пĕр чӳречинчен пăхрĕ. Хунямăшĕ пĕчченех, машинпа тем çĕлесе ларать.

— Асанне! (Вăл ăна яланах хăйĕн ачисем пек чĕнет.) Симĕс сухан пур-и кăçал?—кулса ыйтрĕ вăл.

— Ах, тур, тинех çитрĕн-и?— сиксе тăчĕ карчăк.— Ара, суханĕ ватăлса хытса та кайрĕ ĕнтĕ, маларах килмеллеччĕ...

— Ан пăшăрхан, çемçететпĕр эпир ăна,—терĕ те Авенир, картишне кĕчĕ.

Повесть

Хёр чёри

Виҫĕмҫул çуркунне, садсем чечеке ларнă вăхăтра, манăн музыка шкулĕнче вĕренекен чăн кĕҫĕн хĕрача Алина уроксем хыҫҫăн киле таврăнчĕ те алăк патĕнченех çапла каларĕ:

— Анне! Ыран, кăнтăрла иртсен тăватă сехетре, пирĕн класăн концерчĕ пулать. Ашшĕ-амăшĕсене те чĕнеҫҫĕ. Пыратăн пуль?

— Ерҫсен пыратăп,— терĕм эпĕ.

— Ерҫес пулать, анне. Директор питĕ хытă каласа ячĕ: аҫăр-аннĕрсене пурте илсе килĕр, курччăр вĕсем сирĕн пултарулăха, савăнччăр, терĕ...

— Савăнас вырăнне — хурланмалла пулсан?—кулам пекки туса илтĕм эпĕ.

— Хурланмаллах пулмĕ-ха. Пырсан, куратăн акă...

Эпĕ пĕлеттĕм-ха ĕнтĕ, ун пек концертсем музыка шкулĕнче кашни çуркуннех пулаҫҫĕ, ачасем иртнĕ хĕлте мĕн вĕреннине, вĕренӳре еплерех ăнăҫлă утăмсем тунине кăтартса параҫҫĕ. Хăйсен преподавателĕсем умĕнче çеç мар, ашшĕ-амăшĕсем, аслашшĕ-асламăшĕсем, юлташĕ-тантăшĕсем умĕнче те «пултарулăх отчечĕ» тăваҫҫĕ вĕсем. Çав тери пăлханмалла вăл концертсенче. Питĕ савăнмалла тата. Пĕчĕк кăна шĕвĕрсем — çӳçне шакла кастарнă арçын ачасем, пуç тӳпине сенкер-сарă-хĕрлĕ чечексем пек бантиксем лартнă, хăйсем те чечексем пекех курăнакан хĕрачасем — сцена çине хăюллăн утса тухаҫҫĕ те, пĕри рояль калать, тепри сĕрме купăс, виҫҫĕмĕшĕ виолончель, тăваттăмĕшĕ баян... Баянĕ хыçĕнчен хăйĕн пуçĕ те кăшт çеç курăнать, пӳрнисем те çитсех каймаҫҫĕ, çапах та туртать вăл баянне, çине тăрсах туртать те илемлĕ кĕвĕсем кăларать. Пĕр-икĕ сехет хушши вара çав вĕт-шакăрсем Чайковский, Глинка, Шопен, Григ, хальхи вырăс, чăваш композиторĕсен музыкисене хăйсем пултарнă таран янратнине итлетĕн те, сан чĕрӳ тĕлĕнмелле ырă туйăмпа тулать. Çавăнтах хурланса та илетĕн... Эпир ача чухне, çамрăк çăка туратисенчен касса е тăмран тунă шăхличсемсĕр пуçне, нимĕнле музыка инструменчĕсене те пĕлмен-çке! Астăватăп тата — çырмаçатрасем тăрăх ĕнесене çитерсе çӳренĕ чух тĕрлĕ вăрăм курăк кĕпçисене çăвара хыпса кăшкăртаттăмăр. Вăл та музыка пулнă пирĕншĕн! Хальхи ачасем тем тĕрлĕ

музыка инструменчĕсемпе те калама пултарнине курса ларнă чух савăнăç куççулĕ тухать...

Хăйсен ачисен концертне итлеме çав кун ашшĕ-амăшĕсем йышлăн пынăччĕ. Музыка шкулĕн çĕнĕ çуртĕнчи пысăк зал тăп-тулли. Эпĕ хам тем пирки кăшт кăна кая юлса çитрĕм те, ларма вырăн шыраса, стена çумĕпе ерипен утса пытăм. Сасартăк мана темле хĕрарăм ятран чĕнчĕ:

— Ольга Петровна, килĕр, ак кунта пĕр пуш пукан пур!

Пăхатăп—питĕ лайăх палланă çын, Анна Антоновна Ярусова, судья. Темиçе çул каялла эп ун патĕнче халăх заседателĕ пулнăччĕ, унпа пĕрле суд сĕтелĕ хушшинче çирĕм-вăтăр хут та ларнă пуль. Çавăн чух паллашрăмăр унпа. Питĕ тулккăллă хĕрарăм, вăрçăра та пулнă, икĕ орденпа таврăннă, унтан юридически институтран вĕренсе тухнă та çирĕм çула яхăн судра ĕçлет ĕнтĕ. Çав вăхăтрах искусствăна питĕ юратать, театрсенчи пĕр премьерăран та юлмасть, пĕр концерта та ирттерсе ямасть. Çавăн пиркиех хĕрачине музыка шкулне панă, вăл ман ачапа пĕрле фортепьяно класĕнче вĕренет. Пултаруллă, тăрăшакан хĕрача, тет ун çинчен ман Алина.

Эпир Анна Антоновнăпа иксĕмĕр пĕр-пĕрне ал парса ик-виçĕ сăмах хушса илме ĕлкĕртĕмĕр çеç, сцена çине шкул директорĕ—пĕр вăтăр пилĕк çулсенчи хурарах сăнлă, тулли питлĕ те чакăр куçлă хĕрарăм тухса тăрса арçынларах сасăпа каласа пуçларĕ. Унччен такам хуйхатнă хурт вĕлли пекех сĕрленĕ зал шăпăртах пулчĕ.

— Хисеплĕ юлташсем, хаклă ашшĕ-амăшĕсем,— терĕ директор.— Кăçал, ятарласа тунă çĕнĕ çурта куçнă май, пирĕн вĕренӳ, ытти çулсемпе танлаштарсан, нумай ăнăçлăрах пулса пычĕ. Савăнсах калама пултаратăп сире — кая юлса пыракансем те çук халь пирĕн вĕренекенсем хушшинче. Анчах ун çинчен сăмахха калани çителĕксĕр, вăл мухтаннă пек те туйăнма пултарать. Çавăнпа та эпир халех хамăр концерта пуçлăпăр та, ачасем кăçал мĕнле вĕреннине, вĕсен пултарулăхне эсир хăвăрах курăр...

Концерчĕ вара чăнах та лайăх пулчĕ, пурне те çав тери кăмăла кайрĕ. Ачасем пĕрин хыçăн тепри, сцена çине тухса, кăçал программа тăрăх вĕреннĕ произведе-

нисене тĕрлĕ инструментсемпе пĕр таканмасăр, хăйсе не кура мар ăста каларĕç. Залра ларакан ашшĕ-амăшĕсем те, итлеме пынă ытти çынсем те — вĕсем хушшинче композиторсем те, нумайранпа ĕçлекен музыкантсем те пурччĕ — кашни ачанах пĕтĕм чунтан алă çупса ăсатрĕç.

Номер хыççăн номер. Хĕрача хыççăн арçын ача. Арçын ача хыççăн каллех хĕрача. Хăш чух вĕсем икшерĕн. Сĕрме купăс. Рояль. Виолончель. Баян. Каллех сĕрме купăс. Классикăллă музыка. Хальхи. Халăх юрисем. Пĕчĕк музыкант сцена çине тухсан зал сывламан пек ларать. Çынсем пукансем çинче кăшт хускалма та хăраççĕ. Музыка чарăнсан вара зал шăпăр-шăпăр-шăпăр ал çупать. Ача, ура çине тăрса, пуç тайса илет те сцена хыçнелле вирхĕнет. Хăшĕсем, пăлханнипе, пуç тайма та манса каяççĕ — тӳрех тухса чупаççĕ. Çынсем кăмăллăн кулса юлаççĕ...

Акă, концертăн пĕрремĕш пайĕ пĕтрĕ, вунă минутлăх антракт пулчĕ. Иккĕмĕш пайĕнче чи малтан Анна Антоновна хĕрачи Лариса тухрĕ, роялпе Шопен музыкине каларĕ. Питĕ лайăх тухрĕ унăн.

— Маттур!— терĕм Анна Антоновнăна.

Вăл ман çине пăхса йăл кулчĕ те куççульне шăлса илчĕ.

Тепĕр икĕ ача хыççăн ман Алина тухса Норвеги композиторĕ Григ çырнă «Çуркуннене» каларĕ. Эпĕ йĕп çинче ларнă пек лартăм. Пĕр хушă чĕре те тапма чарăннă пек туйăнчĕ. Хытă пăлхантăм çав. Анчах ун пек пăлханма кирлĕ мар-мĕн. Аван каларĕ ман хĕрача. Хĕрӳллĕн, пысăк çĕкленӳпе. Чĕре лăштах пулчĕ.

— Сирĕн те пултарать!— терĕ мана Анна Антоновна, хултан пăчăртаса.— Лайăх пианистка пулать!

— Тур çырлах, тур çырлах...— хаш! сывласа ячĕ çав вăхăтра манран сулахай енче ларакан тепĕр хĕрарăм, çамкипе питне тутрипе шăла-шăла.— Мĕн пулчĕ капла? Мĕншĕн Володьăна çаплах кăлармаççĕ? Тăрук чирлесе кайрĕ-ши? Ансăртран айăпа кĕчĕ-ши?— хăй тĕллĕнех каласа вăл унтан, çаплах тутрипе шăлăнкаласа.— Мĕн пулать капла?

Эпĕ вăл çав тери пăшăрханнине, калама çук пăлханнине куртăм та тӳсеймерĕм, ыйтрăм:

— Эсир хăвăрăн ывăлăр пирки хыпăнатăр-и?

— Кам пирки пултăр тата?— терĕ хĕрарăм, ман

çине пăхмасăрах.— Кĕçех концертĕ те пĕтет пуль ĕнтĕ, çирĕм ача ытла тухрĕ, ăна çаплах кăлармаççĕ...

— Черет çитмен пулчĕ,— терĕм эпĕ.

— Ыттисен çитрĕ-çке! Юри кăлармаççĕ пулмалла! Те хамăн кайса пăхас сцена хыçне?..—Вăл тинех ман еннелле çаврăнса пăхрĕ.— Епле шутлатăр эсир? Аван мар пулĕ-ши ун пек?

— Хутшăнма кирлĕ мар пуль çав. Преподавательсем хăйсем мĕн тумаллине хăйсемех пĕлеççĕ...

— Сиктерсе хăварчĕç-тĕк? Вара мĕнле? Ачи çав тери тăрăшса хатĕрленчĕ! Ниçта тухмасăр, çывăрмасăр тенĕ пек... Питĕ кӳренмелле пулать-çке концерта хутшăнтармасан! Çапла вĕт?

— Кăлараççĕ пуль-ха, концертĕ пĕтмен, малалла пырать.

— Ах, тур, ниçта кайса кĕрейместĕп...

Эпир çапла калаçнă вăхăтра сцена çине шакла пуçлă арçын ача сĕрме купăс çĕклесе тухрĕ.

— Çак мар-и сирĕн ывăл?

— Çук. Манăн баян калать...

Вăхăт шурĕ. Сĕрме купăспа чăваш кĕввине пит хитре каланă шакла пуçлă арçын ача хыççăн хĕрача тухса рояль каларĕ, унтан каллех арçын ача. Манпа юнашар хĕрарăм кăвар çинче ларнă пекех ларчĕ.

— Çук ĕнтĕ, çук, кăлармаççех ман ывăла...—ассăн сывласа, хуйхăрса илчĕ хĕрарăм. Эп асăрхарăм—унăн куçĕсем те шывланнăччĕ. Мĕн тăвас тетĕн, юратать ĕнтĕ хăйĕн ачине, çавăнпа та ыттисенчен уйăрттарса хăварасшăн мар ăна, пурин пекех халăх умне илсе тухасшăн. Эп пĕлместĕп, тен, унăн ывăлĕ питĕ пултарулла, ыттисем пек мар талантлă, тен, чăн-чăн вундеркинд*, çавăнпа та амăшĕн унпа мухтанса илесси те килет-и...

Тата тепĕр арçын ача рояль тухса каларĕ. Унтан сцена çине концерта ку таранччен ертсе пынă çамрăк хĕр мар, каллех шкул директорĕ утса тухрĕ.

— Акă, пĕтрĕ те концерт! Кăлармарĕç ман Володьăна!— чут çеç макăрса ямарĕ манпа юнашар ларакан хĕрарăм.— Кун пек мăшкăлланăшăн Володя вĕренме пăрахма та пултарать, вăл питĕ çавăн пек — кӳрентернине кăшт та тӳсеймест...

---

* Вундеркинд — уйрăмах пултарулла, талантлă ача.

— Чимĕр-ха, тăхтăр, тен...

Эп каласа пĕтереймерĕм, шкул директорĕн хулăн сасси илтĕнчĕ:

— Юлашкинчен, хаклă юлташсем, пирĕн чи пултаруллă вĕренекенсенчен пĕри, пуриншĕн те пример пулса тăракан Володя Апанасов баян каланине итлĕпĕр...

— Ах, тур, тинех!— терĕ ман çумри хĕрарăм.

— Сирĕн ывăл çинчен каларĕ-и вăл?—ыйтрăм эп.

— Çавăн çинчен...— Хĕрарăм сăнĕ тӳрех улшăнчĕ, унăн куçĕсем савăнăçпа çиçсе илчĕç.

Кĕçех шкул форми тăхăннă вуник-вунвиç çулхи сарă сăнлă арçын ача пĕчĕкрех баян çĕклесе тухса пукан çине ларчĕ, баянне чĕркуççи çине меллĕрех вырнаçтарчĕ, залри çынсене пăхса илчĕ. Питĕ хитре, кăмăла каймалла ача иккен. Çӳçне «под-польку» кастарса сылтăмалла тураса хунă, питçăмартисем тулли.

— Вăрçă вăхăтĕнчи юрăсенчен тунă попурри,*— пĕлтерчĕ директор.

Самантранах арçын ача баянне тăсса ячĕ те унăн çинçе пӳрнисем клавишăсем тăрăх вĕлтĕр-вĕлтĕр-вĕлтĕр чупса кайрĕç. Зал калама çук хăватлă музыкăпа тулса ларчĕ. Малтан эпир «Священная война» кĕввине илтрĕмĕр, унтан «Темная ночь», «Землянка», «Синий платочек», «Вечер на рейде» кĕввисем шăранчĕç, юлашкинчен каллех «Священная война»... Концерта пынă ашшĕ-амăшĕсем хушшинче иртнĕ вăрçăра çапăçнисем, вăрçă вăхăтĕнчи йывăрлăхсене тӳссе ирттернисем те сахал марччĕ. Акă, каларăм-çке, хампа юнашар ларнă Анна Антоновна та хĕр пуççăнах фронта хăй ирĕкĕпе кайнă. Çавăнпа вăрçă вăхăтĕнчи кĕвĕсем пурин чĕрине те пырса тиврĕç, вĕсен кăмăлне хускатса ячĕç. Çитменнине тата, çамрăк музыкант баянне ытла та лайăх каларĕ, тĕлĕнмелле хĕрӳллĕ, пысăк туйăмпа...

Тахăш самантра эпĕ Володя амăшĕ çине пăхса илтĕм те, вăл, сцена еннелле тăрăнса, тутисене шыв ĕçес килнипе аптраса çитнĕ çын пек, çула-çула илнине куртăм. Çак самантра уншăн сцена çинче баян калакан ачисĕр пуçне çут тĕнчере урăх никам та, нимĕн те пулман ĕнтĕ, вăл пĕр унпа çеç пурăннă.

---

* Попурри — тĕрлĕ кĕвĕсенчен пĕрлештерсе тунă музыкалла произведени.

Арçын ача, вăрçă вăхăтĕнчи кĕвĕсене каласа пĕтерсе, ура çине тăрсан, залри халăх пĕр-икĕ минут хушши чарăнаймасăр алă çупрĕ, унтан та кунтан: «Маттур, Володя! Матту-ур!» тесе кăшкăрнисем илтĕнчĕç. Ача ик-виçĕ хут пуç тайса илчĕ, çав вăхăтрах хăй çухалса кайнă пек, ним тума пĕлмесĕр тăчĕ, ун çумне шкул директорĕ пырса аллине çĕклесен тин шăпланчĕ зал.

— Халĕ Володя Апанасов пире чăваш кĕввисенчен йĕркеленĕ попурри каласа парать,— терĕ директор.

Куна та питĕ хитре каларĕ Володя. Унăн амăшĕн куççуль шăпăртатса анчĕ. Савăнăç куççулĕ ĕнтĕ. Çынсем алă çупма чарăнсан вара вăл пĕр самант та тытăнса тăмарĕ, часрах ачи патне кайрĕ.

Эпир те, халăхпа пĕрле, ерипен залран тухрăмăр. Пирĕн те, Анна Антоновнăпа иксĕмĕрĕн, хамăрăн хĕрачасене тупмаллаччĕ, киле пĕрле каймалла-çке. Вĕсем пире тумтирсем çакнă çĕрте кĕтсе тăраççĕ-мĕн. Вăл кун иртенпех çумăр çукалатчĕ те, пурте плащсемпе пынăччĕ.

Тумтир илме черетре тăнă чух эпĕ концертра хампа юнашар ларнă хĕрарăма каллех куртăм. Вăл халь ывăлĕпе пĕрлеччĕ, ывăлĕ футляра чикнĕ баянне тытса тăратчĕ. Плащне илсе тăхăнсан, хĕрарăм Анна Антоновна патне пырса тăчĕ те йăл-йăл кулса ыйтрĕ:

— Кăмăла кайрĕ-и концерт?

— Пит аван пулчĕ,— терĕ ăна хирĕç Анна Антоновна.— Сирĕн ывăлăр вара тĕлĕнтермеллипех тĕлĕнтерчĕ!

— Намăс курмарĕ пек çав... Ну, халлĕхе сывă пулăр!

Вăл ывăлĕн аллинчи баяна илчĕ те, вĕсем сарлака коридор тăрăх утса кайрĕç.

— Эсир ку хĕрарăма лайăхах паллатăр пулас?— ыйтрăм Анна Антоновнăран.

— Паллашма тӳр килчĕ çав пĕррехинче,— терĕ вăл.— Таçта мар, хам патрах, судра.

— Судра?!— тĕлĕнсех кайрăм эпĕ.— Пит лайăх çын пек-çке, нивушлĕ суд умне тăмаллах айăпа кĕме пултарнă вара?

— Çук, унăн нимĕнле айăп та пулман. Ачи пирки пулчĕ вăл суд.

Эпир тумланса урама тухрăмăр. Пирĕн хĕрачасем, шăкăл-шăкăл калаçса, малта пычĕç, эпир — вĕсем

хыççăн. Çумăр чарăннăччĕ ĕнтĕ, сывлăш питĕ уçăччĕ, ăшă. Васкамасăр, хуллен кăна утрăмăр. Манăн леш хĕрарăмпа унăн ачи çинчен тĕплĕнрех пĕлес килчĕ те, урампа темиçе утăм тусанах ыйтрăм:

— Ачи мĕн пирки суда лекнĕ тата? Урамра тем тунă-и?

— Çук, çук,— ал сулчĕ Анна Антоновна,— ачине те айăпламан.

— Мĕн пирки пулчĕ вара сучĕ?

— Питĕ кăткăс, пăтравлă истори. Ку хĕрарăм — унăн хушамачĕ Апанасова — çак пĕчĕк баянистăн амăшĕ мар вăл...

— Епле амăшĕ мар? Текех «ман ывăл, ман ывăл» тесе ларчĕ-çке?

— Ун пек калама тивĕç пур çав унăн, мĕншĕн тесен вăл ăна икĕ çулхискернех ача çуртĕнчен илсе çитĕнтернĕ. Çитменнине тата — ку пушшех те тĕлĕнмелле — хĕр пуççăнах! Ачи каласа пуçланăранпах ăна анне тесе пурăннă. Апанасова унăн тăван амăшĕ маррине те, хăй çав ют хĕрарăм хушамачĕпе пурăннине те пĕлмен. Анчах шкула çӳреме пуçласан, виççĕмĕш е тăваттăмĕш класра вĕреннĕ чух, пĕр пакăлти хĕрарăм çак ача Апанасова ывăлĕ пулманни çинчен хăйĕн шăллĕне лĕпĕртетсе панă, лешĕ, унпа пĕрле вĕренекенскер, сийĕнчех ăна каланă. Вара чăн-чăн трагеди пуçланса кайнă. Ачишĕн те, Апанасовăшăн та. Володя, хăйĕн чăн-чăн амăшĕ пурри çинчен пĕлсен, ăна шыраса тупма ĕмĕтленсе, Апанасовăна ним систермесĕрех килтен тухса тарнă...

— Вара? Тупнă-и хăйĕн амăшне?

— Тупасси тупкаланă, анчах хĕпĕртемелли вырăнне çав тери кӳренмелли çеç пулнă... Йышăнман леш амăшĕ, ăнсăртран пырса çыпăçнă йытă çурине хăваласа янă пекех хăваласа янă, кайран ку милици аллине лекнĕ...

Эпир калаçса пĕтереймерĕмĕр. Урампа иртсе пыракан пĕр çăмăл машина пирĕнпе танлашсан тăпах чарăнчĕ те Анна Антоновнăна çула май пыма чĕнчĕ.

— Малаллине иксĕмĕр тепре тĕл пулсан каласа парăп-ха, эппин,— терĕ Анна Антоновна.

Анчах ăна тĕл пулма тӳр килмерĕ. Малаллине эпĕ Апанасовăран хăйĕнчен пĕлтĕм...

* * *

Акă мĕнле пулчĕ вăл.

Çулла, июль уйăхĕн вĕçнелле, эпир пĕр-икĕ эрне хушши пĕтĕм çемйипе Атăл леш енчи канмалли çурта пурăнас терĕмĕр. Пынă каçах ман хĕрача Алина волейбол площадкинче хайхи хăйĕнпе пĕрле вĕренекен пĕчĕк баяниста, Володя Апанасова, тĕл пулни çинчен каласа пачĕ.

— Пĕчченех-и вăл кунта?— ыйтрăм эпĕ.

— Çук, амăшĕпе пĕрле, тет...

«Амăшĕпе пĕрле» тенине илтсенех мана Анна Антоновна калани аса килсе кайрĕ...

«Паллашас-ха ку хĕрарăмпа»,— терĕм вара хам ăшра.

Паллашма йывăр пулмарĕ. Ирхине, столовăя пĕрремĕш хут апат çиме кайсанах, эпир шăп юнашар сĕтелсем хушшине лекрĕмĕр. Апанасова мана хăй палласа илчĕ те йăл кулса пуç тайрĕ.

— Канас терĕмĕр-и пĕртак?— ыйтрĕ вăл.

— Отпускăн çуррине кунта ирттерес терĕмĕр-ха.

— Эп хам та çавăн пекех. Хам валли путевкине фабком пачĕ — преми, Володя валли тӳлесе илтĕм. Икĕ шкулта пĕр харăс вĕренни ывăнтарать мар-и! Кантăр кăштах.

— Тĕрĕс...

Столовăйран тухсан, Атăл хĕррине те пĕрлех кайрăмăр. Эпĕ Апанасовăн ятне ыйтса пĕлтĕм, вăл пин-пин чăваш хĕрĕсем пекех Марье ятлă-мĕн, хулари пек каласан — Маруся. Вунă çул ытла пир-авăр комбинатĕнче ĕçлет иккен. Хăй Муркаш районĕнчен, фабрикăна вунă класс пĕтернĕ хыççăн килсе кĕнĕ. Вăрçăра вилнĕ ашшĕне астумасть, амăшĕ халь килте пĕчченех пурăнать, Маруся ун патне час-часах кайса килет, пулăшать. Хăйне уйрăм пӳлĕм парсан, Маруся ăна Шупашкара куçарса килесшĕн пулнă, анчах амăшĕ ун сăмахне хăлхана та чикмен, хам ĕмĕре пурăнса ирттернĕ кил-çурта пăрахмастăпах, тенĕ.

— Ялти карчăксем çавăн пек вĕт вĕсем, сăнчăрпа туртсан та килтен кăлараймастăн вĕсене,— кулкаласа илчĕ Маруся.

Икĕ эрне хушши эпир пĕр-пĕринчен уйрăлмарăмăр та темелле. Пирĕн ачасем те ялан пĕрле пулчĕç. Кăн-

тăрла шыва кĕчĕç, хăйăр çинче хĕртĕнчĕç. Атăл хĕринчен таврăнсан волейболла выляпĕç, каç-каç — эпир хамăр каймасан та — клубра кино курчĕç. Темиçе кунтан ман упăшка вăлтасем илсе пычĕ те, Володя ирсерен унпа пĕрле пулла çӳреме тытăнчĕ. Пĕррехинче, темлерен, ун вăлтине пĕр виçĕ шит тăршшĕ çăрттан лекнĕччĕ те, вара вăл савăнниле ниçта кайса кĕреймерĕ, хура куçĕсене çутăлтарса каласа пачĕ:

— Чут хама вăлти-мĕнĕпех шыва туртса кĕрсе каятчĕ, аран тытса чартăм! Типпе кăларса пăрахсан та чарма çук мура, сикет те сикет, каялла, шыва чăмаршăн. Ирĕксĕрех хырăмпа хăпарса выртмалла пулчĕ ун çине...

— Тепринче çăрттанĕ-мĕнĕпех путатăн акă!— кулчĕ унран ман хĕрача.— Туртса кĕрсе каять те кӳлĕ тĕпне, унта вара сана ытти çăрттансем кăшлама тытăнаççĕ... Çăрттансем вĕсем — тинĕсре акулăсем пекех, теççĕ!

Анчах Володя вăлтине тек пĕр çăрттан та лекмерĕ, сайра хутра пӳрне тăршшĕ уланкăсем çеç тыткаларĕ вăл. Паллах, уншăн та шутсăр хĕпĕртерĕ ача!

Пит лайăх пурăнтăмăр. Кун хыççăн кун иртрĕ. Маруся хăйĕн ывăлне мĕн тери юратни, уншăн чунне пама хатĕр пулни кашни утăмрах палăрчĕ. Пĕрре, сывĕрех шыва ытлашши нумай кĕнипе пулмалла, ачан пуçĕ кăштах пĕçернĕ пек пулнă та, Маруся тӳрех канмалли çуртри тухтăра чĕнсе пычĕ. Тухтăр Володьăна итлесе пăхнă чух вăл çав тери пăлханчĕ, сăнран та улшăнчĕ, мăнтарăн. «Мĕнле, тухтăр, питех хăрушă мар-и? Воспалени легких мар пуль те?» Лешĕ ăна кирĕç: «Ним хăрамалли те çук, ик-виçĕ кун шыва кĕртмелле мар çеç», тесен тин лăпланчĕ вăл.

Тунмалли çук: эпир, хĕрарăмсем, пĕр-пĕр япала çинчен хăлха хĕррипе кăшт çеç илтсе юлсан, кайран ун çинчен пĕтĕмпе, тĕплĕрех пĕлесшĕн çунатпăр. Хуть мĕн çинчен те вĕçне çитичченех пĕлес килет... Ак халĕ те, Маруся Апанасовăпа пĕрле çӳренĕ чух, хама Анна Антоновна Ярусова судья каласа пама пуçланине пĕрмаях аса илтĕм те, манăн çак хĕрарăмран чăннине ыйтса пĕлессĕм килчĕ. Мĕн сăлтавпа хĕр пуççăнах ют ачана усрама илнĕ вăл? Ку ачин амăшĕ кам пулнă? Ачине мĕншĕн пăрахнă вăл? Тата ачин ашшĕ кам пулнă, вăл ăçта?

Çапах та, темле пĕлес килнĕ пулсан та, манăн кун çинчен сăмах пуçлама хал çитмерĕ. Пĕрре кăна мар чĕлхе вĕçне çитнĕ сăмахах çăвартан кăлармарăм.

«Чăн-чăн трагеди пуçланса кайнă... Ачишĕн те, çак хĕрарăмшăн та...» — аса илтĕм эпĕ судья сăмахĕсене.

Пĕлмесĕр каламан ĕнтĕ вăл. Чăнах та питĕ йывăр пулнă пуль... Анчах Маруся тӳссе ирттерсе янă. Халь лăпланнă. Ачине çав тери юратса пурăнать, ачи те юратать ăна. Иккĕшĕ те телейлĕ вĕсем. Çав вăхăтра эпĕ Маруся пурнăçĕнчи йывăр самантсем çинчен сăмах хускататăп та, унăн асаилĕвĕсене пăлхатса ярса, чĕрине тепĕр хут ыраттарма пултаратăп. Ӳт илме пуçланă сурана, тепĕр хут хускатса, ун çине тăвар сапнă евĕр пулмĕ-ши ку?

«Çук, ун пек юрамасть. Тивес мар. Ыраттарас пулмасть çын чунне. Тен, Маруся хăех каласа парĕ-ха хăçан та пулин. Тен, кĕтмен çĕртенех çавăн пек самант килсе тухĕ...» — терĕм те хама хам, ыйтса пĕлес кăмăла путартăм.

Çав саманта нумай кĕтмелле пулмарĕ.

Пĕр каçхине эпир хамăр пурăнакан корпусăн верандинче Марусьăпа иксĕмĕрех лартăмăр. Вăл кун ман упăшка хулана парти пухăвне кайрĕ, ачасем каç пулсанах клуба «Неуловимые мстители» курма чупрĕç, пирĕн пĕрре курнă фильма тепĕр хут курас килмерĕ. Канмалли çурт таврашĕнче шăпахчĕ, яштака хыр çумне çакса янă репродуктортан сĕрме купăспа калакан çепĕç кĕвĕ çеç пĕр майлă лăпкăн, чуна ачашламалла юхса тăчĕ.

Эпир чылай хушă чĕнмесĕр лартăмăр.

Каласа Маруся пуçларĕ.

— Паян ирхине Володя мана тĕлĕнтерсех пăрахрĕ,— терĕ те вăл, хашш! сывласа ячĕ.

— Мĕнпе?— ыйтрăм эпĕ.

— Пит çунă хыççăн пӳлĕмри тĕкĕр умне пырса çӳçне турарĕ те, тăрук ман еннелле çаврăнса: «Анне, кала-ха, чăнах пур арçынсем те хĕрарăмсене кӳрентереççĕ-и?» — терĕ. Тĕлĕнсе хытсах кайрăм эпĕ... «Мĕн тума ыйтатăн эс куна, ăçтан пырса кĕчĕ сан пуçна ку шухăш?» — тетĕп. «Ахалех, çынсем çавăн пек калаççĕ те»,— тет. «Мĕнле çынсем?» — «Хĕрсем.» — «Мĕнле хĕрсем». — «Çакăнта канаканнисем». — «Тĕрĕс мар, Володя, чипер ăстăнлă, йĕркеллĕ арçын хĕрарăма нихçан та

кӳрентермест, путсӗрсем, ухмахсем çеç кӳрентереççӗ», тетӗп. «Эппин, ман атте путсӗр, ухмах çын пулнӑ, çапла-и? Вӑл сана кӳрентернӗ вӗт? Ан тун, эп пӗтӗмпех пӗлетӗп!» — тесе хучӗ мана хирӗç. Ним калама аптрарӑм... Эсир пӗлместӗр те пуль-ха... анчах Володя ашшӗ нихçан та ман упӑшка пулман вӗт. Володя хӑй те эп çуратнӑ ача мар, çавӑнпа та мана тепӗр чух унпа каласа панӑччӗ,— терӗм эпӗ.— Çуркунне, хамӑр ачасен концертӗ хыççӑн...

— Çапла, çапла, вӑл пирӗн историе пӗлет,—пуçне хуллен сулса илчӗ Маруся.— Çулталӑк каялла кӗтмен çӗртен паллашма тиврӗ унпа...

— Эсӗ унӑн амӑшӗ маррине Володя хӑй пӗлет-и?

— Пӗлет. Пӗлтӗртеннех пӗлет.

— Çапах та «анне» тет вӗт-ха сана?

— «Анне», тет.

— Эп сире сӑнаса пурӑнатӑп та — вӑл сана питӗ юратнӑн туйӑнать.

— Ӑна эп хам та туятӑп. Туятӑп çеç те мар—ӗненетӗп. Маншӑн та çӗр çинче Володьӑран хакли никам та çук. Эпӗ ӑна хамӑн пӗтӗм пурнӑçа патӑм... Эх, пӗлесчӗ сирӗн...

Вӑл пӗр хушӑ чӗнмерӗ. Хурланса та илчӗ пулмалла.

— Итле-ха, Маруся,— терӗм вара эпӗ кӑшт тӑхтасан,— каласа пар-ха, эппин, хӑвӑн пурнӑçу çинчен... Çук, пӗтӗм пурнӑçу çинчен мар, эсӗ Володьӑна епле майпа усрама илни, ӑна мӗнле пӑхса ӳстерни çинчен... Питӗ пӗлес килет. Леш судья каланӑ тӑрӑх, санӑн вӑл ача пирки нумай тӳсме тивнӗ...

— Тивнӗ çав, тивнӗ!— ассӑн сывласа ячӗ Маруся.— Анчах вӑл халь пӗтӗмпех иртсе кайнӑ та — асӑнас та килмест. Тахçан курнӑ хӑрушӑ тӗлӗк пек çеç туйӑнать хам пурнӑçра мӗн-мӗн пулса иртни... Çапах та, кӑмӑлӑр пулсан, каласа кӑтартма пултаратӑп...

— Эп итлетӗп, Маруся.

— Шупашкара эпӗ вунӑ класс пӗтернӗ хыççӑн комсомол путевкипе килсе кӗтӗм... Ун чухне пир-авӑр комбиначӗн çӗнӗ корпусне, çип арлакан фабрикине тума тытӑннӑ-мӗн. Рабочисем çитмен, çавӑнпа та комсомол райкомӗсене çамрӑксем хушшинчен рабочисем пухма хушнӑ. Пире çакӑн пек каласа ӑнлантарчӗç:

малтан стройкăра ĕçлетĕр, ĕçленĕ хушăрах, каç-каç вĕренсе, квалификаци илетĕр, кайран вара, фабрикине туса пĕтерсен, тӳрех цехра ĕçлеме тытăнатăр, терĕç. Çав илĕртрĕ те мана. Темшĕн, манăн мĕн пĕчĕкреннех фабрикăра е заводра ĕçлекен çын пулас килетчĕ...

— Пит аван ĕмĕт пулнă вăл,—терĕм эпĕ,—промышленноçра та çын нумай кирлĕ, унта ĕçлесси — хисеплĕ те чыслă япала.

— Пире, комсомол путевкисемпе тин çеç килнĕ хĕрсене—нумайăйăнччĕ эпир, çĕр аллă çын та пулĕ — вăхăтлăха пĕр кивĕрех барака вырнаçтарчĕç, анчах пĕр уйăх пек ĕçлесенех тăватă хутлă пит хитре çĕнĕ общежитие куçарчĕç. Мĕн ĕçленĕ эпир? Атăлпа илсе килнĕ гравипе хăйăра машинăсем çине тиенĕ, вĕсене пушатнă, фабрикине тунă çĕрте темле канавсем алтнă, кирпĕч, известь йăтнă, бетон çăрнă... Ун чухне стройкăри ĕçсене пуринчен ытларах хальхи пек машинсемпе мар, алăпа тăватчĕç çав. Пĕр сăмахпа, малтанхи вăхăтра эпир разнорабочисем, урăхла каласан — пур ĕçсене те тăвакансем пулнă: ăçта яраççĕ — çавăнта каятăн, мĕн хушаççĕ — çавна тăватăн. Нимĕнле квалификаци та пулман та-ха пирĕн ун чух. Каярахпа, майĕпе хăнăхса пырса, пирĕн хĕрсем каменщиксем те, штукатурсем те, малярсем те пулса тăчĕç, хам эпĕ штукатур пултăм, анчах малтан...

— Йывăр пулчĕ пуль ĕнтĕ?

— Мĕн каламалли! Общежитине таврăнсан, çиелти тумтире хывса пăрахма та лайăххăн ĕлкĕрейместĕмĕр, çавăнтах çывăрса каяттăмăр. Пурăна-киле хăнăхса пытăмăр ĕнтĕ, çапах та çăмăл марччĕ. Анчах та çамрăксемшĕн нимĕнле йывăрлăх та хăрушă мар вĕт! Йытă пек ывăнса килнĕ хыççăн пĕр-икĕ сехет пек канатăн та, тăрсти-тăрсти сиксе ташлама пултаратăн! Эп хам питех ташлаканни йышши мар, анчах хăшĕсем ташша тĕветчĕç кăна...

...Манăн пĕр юлташ пурччĕ, Василиса Салмина ятлăскер. Эпир унпа комбината пынă кунсенчех паллашрăмăр та питĕ туслă пурăнтăмăр. Хăй вăл Куславкка районĕнченччĕ, тутар сăнлăрахскер. Тутарла та пĕлетчĕ вăл. Лара-тăра пĕлменскерччĕ, çав тери çивĕч. Талăкĕпе ĕçлесен те ывăнмастчĕ пуль. Тин çеç çĕр чавса е кунĕпе кирпĕч йăтса таврăнатпăр,— пурте кĕрхи шăпасем пек пулса çитнĕ, пĕр-пĕрине каласма та ӳр-

кенеççĕ,—анчах вăл пит çумалли пӳлĕмре юрра яра парать. Унтан тухсан, коридорта чечĕтка тăкăртаттарса илет.

«Тимĕртен тунă пуль сана, Васька!» — тĕлĕнетчĕç унран хĕрсем. (Сăмах майăн каласан, хамăр хĕрсем те, пирĕн пата кĕре-кĕре тухакан йĕкĕтсем те ăна хăйĕн чăн ячĕпе, Василиса тесе, чĕнместчĕç, пурте «Васька» тетчĕç, анчах хăй уншăн пĕртте кӳренместчĕ). «Гибрид пулмалла эпĕ, чăвашпа тутар хутăш, çавăнпа çирĕп, сирĕн пек лĕпĕркке мар!» —тесе кулатчĕ Василиса хĕрсене хирĕç.

Характерĕ пурччĕ вара унăн. Нихçан та, никама та парăнас çук. Хăйĕншĕн çеç мар, ыттисемшĕн те тăма пĕлетчĕ. Пĕррехинче, пирĕн комплекслă бригадăн бригадирĕ, ĕçе час-часах хĕрĕнкĕ пыракан этем, нарядсене пăтратнипе ĕç укçи сахал тухсан, Василиса чут тытса хĕнетчĕ çавна. Темтепĕр каласа пĕтерчĕ, сикет анчах ăна хирĕç. «Ыранах тӳрлетнĕ пултăр йăнăшна, ылханлă алкоголик, атту-тăк эпир сана траншейăна пăрахса çиелтен чул купаласа хуратпăр!» — тесе кăшкăрать çав. Тӳрлетрĕ вара лешĕ... Пултаратчĕ ĕнтĕ, каламалли те çук. Туалетра лампочка çунса кайнипе ик-виçĕ кун тĕттĕм пулать-и, пит çумалли çĕрте крансем пăсăлаççĕ-и, пирĕн Васька тӳрех коменданта тупса пăскăртать те, çав кунах пурте йĕркене кĕрет. Вăл-ку ăнмасан, хĕрсем вара тӳрех: «Васькăна калас пулать, вăл çул-йĕрне тупать», тетчĕç...

Юрататчĕç ăна пурте. Эп хам та юрататтăм. Пĕррехинче, гриппа ангина пирки больницăна выртмалла пулсан, Василиса ман пата кашни кун çӳрерĕ, тата кашнинчех мĕн те пулин илсе пычĕ. Чĕререн тав турăм эпĕ ăна çавăншăн.

...Вăхăт шурĕ, пирĕн фабрика пулса çитрĕ, эпир цехра ĕçлеме тытăнтăмăр. Епле савăнмастăн-ха? Пĕрикĕ çул каялла тимĕр кĕреçепе носилкăсăр пуçне ним тытма та пĕлместĕмĕр, халь вара квалификациллĕ рабочисем пулса тăтăмăр, çав тери кăткăс станоксемпе ĕçлекен пултăмăр! Ĕмĕтленнĕ ĕмĕт çитрĕ пирĕн! Тата мĕн кирлĕ?.. Укçине малтанхи вăхăтра ытла нумаях илместĕмĕр ĕнтĕ, анчах пĕччен çынна — тирпейлĕрех пурăнсан — çитет: ĕçме-çиме те, тумланма та, театр-киносене кайма та. Аннене пулăшмалăх та юлать пăртакках.

Малтанхипе танлаштарсан, пирĕн хĕрсем паллăмăлла мар улшăнчĕç. Кашни каç тенĕ пекех — ĕç хыççăн — урăх платье тăхăнаççĕ; çӳçне пĕри апла, тепри капла тураса хурать; мăйĕсенче шăрçа, хăлхисенче клипсысем, ал тунисенче кашниннех пĕчĕк сехет. Техник-инженерсенчен ним уйрăмми те çук çав!

Паллах, каччăсемпе те çӳреме пуçларĕç. Хĕр пурнăçĕнче унсăр пулмасть. Пурнăç саккунĕ вăл... Пĕрисем хамăр комбинатрисемпе çӳреççĕ, теприсем кинора-мĕнре, тĕрлĕ вечерсенче хуларисемпе паллашнă. Хăшпĕрисем каччăсене общежитине те илсе пыркалатчĕç,— каçхине мар, каçхине вахтерсем арçынсене темле пуççапсан та кĕртместчĕç, вăл енчен йĕрке çирĕпчĕ,—вĕсем канмалли кунсенче, праçниксенче кăнтăрла пырса ларатчĕç. Хăш чух хĕрлĕ эрехсем илсе пыни те пулкалатчĕ, анчах яланах йĕркеллĕччĕ, шăв-шав пулман пĕрре те.

...Кĕтмен-туман çĕртенех, эп те пĕр каччăпа паллашрăм. Питĕ ăнсăртран пулчĕ вăл. Çуркунне, сирень çурăлнă вăхăтра, пĕр вырсарникун, каçалапа, эпир Васька-Василисăпа иксĕмĕр Атăл хĕррине кайрăмăр. Çуркунне халăх унта кăткă пекех кĕшĕлтетет вĕт, Шупашкар çыннисен чи юратнă вырăнĕ-çке вăл. Пирĕн те кайса курас, халăх хушшинче пулас килнĕ ĕнтĕ. Çанталăкĕ питĕ лайăх пулнипе, каялла килнĕ чух пирĕн автобус çине ларас килмерĕ, Калинин урамĕпе çурранах хăпартăмăр. Пире сасартăк тахăшĕ лаша таптасран асăрхаттарнă пек: «Эй, эй!» тесе хăратрĕ. Картах сиксе каялла çаврăнса пăхрăмăр та — салтак тумĕ тăхăннă каччă иккен.

— Эсĕ мĕн çынсене хăратса çӳретĕн, услап?—кăшкăрса пăрахрĕ çакна Василиса.

— Юрамасть-им?— кулса илчĕ ăна хирĕç каччă.

— Ăçтан юратăр-ха? Пирĕн чĕресем çурăлса кайнă пулсан?

— Хĕр чĕри кăшт хăранипех нихçан та çурăлмасть, эп ăна тĕп-тĕрĕс пĕлетĕп. Хĕр чĕри урăххишĕн çеç çурăлма пултарать...

— Мĕншĕн-ши вăл?

— Хăйне ман пек хитре каччă юратма пăрахсан!

— Ах, тур! Ăçтан сиксе тухрăн эсĕ, кун пек мухтанчăк? Атя, уттар хăвăн çулупа, тата кама та пулин хуса çитсе хăрат, хулиган.

Анчах каччă пирĕнтен хăпмарĕ.

— Пĕрлех каяр-ха, юрататăп эпĕ хаяр хĕрсене!— терĕ вăл.

— Хĕрĕсем хăлха чикки парсан мĕнле?

— Пит аван пулать. Хĕр çапни — чуптунă пекех маншăн.

— Час-час леккелет-и вара сана?

— Вăл хамран килет.

— Патакне ху шыратни, эппин?

Эпир малалла утрăмăр. Каччă пирĕн çинчен, эпир ăçта ĕçлени, ăçта пурăнни çинчен ыйтса пĕлме пикенчĕ, анчах эпир каламарăмăр.Вăл çаплах ыйтрĕ.

— Эс мĕн, милици мар пуль, урамрах допрос туса пыратăн?—терĕ Васька хаярланса.

— Пурĕпĕр пĕлетĕп!— аллипе сулса илчĕ каччă.— Пĕр шит те уйрăлмасăр пĕрле пыратăп та йăлт пĕлетĕп! Курăр акă!

— Ан палкаса пыр!— вăрçса пăрахрĕ Василиса.— Мĕн тума çулăхрăн эс пирĕн çума? Кай уйрăлса! Такам-ха эсĕ, ăçтан пĕлес? Тен, пĕр-пĕр шăпана? Нумай, тет, халь ун пеккисем.

Василиса чарăнса тăчĕ те, эпĕ те чарăнтăм. Тĕрĕссипе каласан, кăштах хăрас шухăш та пулчĕ. Урамра тĕттĕмччĕ ĕнтĕ, ни малта, ним кайра пĕр çын та курăнмасть. Пирĕн Василисăпа иксĕмĕрĕн те ал тунисенче— сехетсем, сумкăсенче кăштах укçа та пур. Кам пĕлет!

— Кай, теççĕ сана!— терĕ Василиса хыттăн.— Асту, хурах кăшкăратпăр! Пĕлĕн вара иртен-çӳренсем çумне мĕнле çулăхмаллине!

Эпир шӳт туманнине, чăнласах хăрама пуçланине ăнланчĕ пулмалла та каччă, тăруках улшăнса урăхла каласма тытăнчĕ.

— Чимĕр-ха, хĕрсем, тăхтăр-ха... Ним çукран чĕрре кĕрес мар. Эсир мана чăнах пĕр-пĕр бродяга тесе шутлатăр мар-и çак?

— Кам тата эсĕ?— кăшкăрса ыйтрĕ Василиса.

— Сирĕн пекех... чипер çынах!

— Курăнмасть эс епле çын пулни! Чипер йĕркеллĕ çын урамра палламан çынсем çумне çулăхмасть.

— Ним шӳтлемесĕр каласан, хĕрсем, эпĕ трактор пайĕсен заводĕнче ĕçлетĕп, ВОХРта*. Çартан тавăнни

---

* ВОХР — (вырăсла) военизированная охрана.

те икĕ уйăх кăна-ха. Халлĕхе нимĕнле специальность та çуккипе çав ĕçе кĕтĕм. Вăхăтлăха. Анчах та кĕçех манăн этем шутлă специальность пулать — каçсерен электросварщиксен курсĕнче вĕренетĕп...

— Пирĕншĕн пулсан, хуть те сысна аçисене касма вĕрен, тем тума кирлĕ пуль вăл пире! Ун çинчен эсĕ хуняма карчăкне кайса рапорт пар, усăллăрах пулĕ!

— Э-эх, йăмăкăм, хаяр йăмăк, çук-ха манăн ун пек начальство, малтан туянас пулать ăна!— кулса ячĕ каччă.—Тен, эсир тупма пулăшăр?

— Эсĕ хаçатра объявлени çаптар: питĕ срочно хуняма карчăкĕ шыратăп, те. Ахалли мар тата, тимĕр тылăлли кирлĕ, те!— Çапла каларĕ те Василиса, хăй те кулса ячĕ. Эп те тӳсеймерĕм, култăм.

— Тавтапуç, ыр канашшăн,— терĕ каччă, честь парса.— Халь ĕнтĕ паллашма та юрать пулĕ. Мана Федор Сидоров, теççĕ...

— Хветĕр-Çитĕр, эппин? Аван ят,—тăрăхласа илчĕ Василиса.

— Эс ху мĕн ятлă?— ыйтрĕ унран каччă.

— Питĕ пĕлес килет-и?

— Ахальтен ыйтмастăп ĕнтĕ.

— Мĕн тума кирлĕ вăл сана?

— Паллашас, терĕмĕр-çке...

— Эп ним те каламан, çăвар та уçман.

— Кала ĕнтĕ!

— Васька эпĕ.

— Ан шӳтле, шӳтлеме эпĕ те пĕлетĕп.

— Чăнах Васька.

— Арçын ячĕ-çке вăл.

— Пулин. Мана хама вăл ят питĕ килĕшет.

Каччă ман çине пăхрĕ.

— Тĕрĕс калать-и ку пичче?

— Тĕрĕс,— терĕм эпĕ,— Василиса ятлă пулнăран çапла чĕнеççĕ ăна пирĕн хĕрсем.

— Эсĕ ху мĕн ятлă тата? Мишка мар пуль те?— халь ĕнтĕ манран ыйтрĕ каччă.

Эпĕ чĕнмерĕм.

— Чутах пĕлеттĕн, анчах пĕр саспаллине йăнăш каларăн,—терĕ маншăн Василиса.

— Мĕнле апла?

— Шутласа туп. Кроссворд шутласа курнă-и эс хăçан та пулин?

— Э-э, чухларăм, пĕлтĕм!— терĕ каччă темиçе самантранах.—Маша, Мария! Çапла-и?

Маншăн каллех Василиса ответ пачĕ:

— Тĕрĕс. Таса чунлă, халиччен юратса курман хĕр Мария, турă амăшĕпе пĕртăван...

— Эсĕ ху кампа пĕртăван вара?

— Арçурипе. Килĕшет-и çапла калани?

— Тĕрĕсех пулсан — килĕшет!

Çакăн пек урлă-пирлĕ калаçса, шӳт тукаласа, эпир тăвалла утрăмăр. Каччă манпа юнашар пычĕ, хăш чух вăл — ăнсăртран пек—ман алла тытса пăчăртама пикенчĕ, анчах эпĕ кашнинчех ун аллине сирсе ятăм. Сисмесĕрех хамăр общежити умне çитрĕмĕр. Вăхăт вунпĕр çине кайнăччĕ ĕнтĕ. Вунпĕрте пирĕн «отбой», алăка шалтан питĕрсе лартаççĕ, кайран вара шаккаса тăн тухать, шакканăшăн вăрçаççĕ, çавăнпа та пирĕн васкамаллаччĕ. Анчах каччă пирĕнтен тăруках уйрăласшăн пулмарĕ, алăка çурăмĕпе картласа тăчĕ те—калаçать те калаçать. Мĕн çинчен калаçнине халь астумастăп та ĕнтĕ, ытахальтен, пирĕнпе пĕрле ытларах пуласшăн çеç пакăлтатрĕ пулмалла. Харсăр Василиса тӳссе тăраймарĕ, каччăна алăк патĕнчен пĕррех аяккалла тĕртсе ячĕ те кĕрсе тарчĕ, анчах эпĕ урамрах тăрса юлтăм.

— Тăхта ĕнтĕ, калаçар пĕртак!—терĕ каччă.

— Мĕн çинчен калаçмалли пур пирĕн? Пурнăçра пĕрремĕш хут, ăнсăртран тĕл пултăмăр пулать те—мĕн сăмахĕ пултăр пирĕн хушăмăрта?—терĕм ăна хирĕç.

— Тен, малашне татах тĕл пулăпăр...

— Мĕн тума?

— Çынсем мĕн тума тĕл пулаççĕ? Пĕр-пĕринпе çывăхрах паллашма, унта-кунта пĕрле çӳреме, юлташлă пулма... Пĕлетĕн-и, эп çак хулара халь пĕр-пĕччен, ВОХРти боецсемĕр пуçне ман паллана çын та çук темелле, вăхăчĕ-вăхăчĕпе çав тери кичем пулать, хуть те леш халăх сăмахĕнчи кăвакал пек кутăн кайса чăм...

— Хĕр тупас пулать, эппин, сан! Кичем пулмасть вара,— терĕм эп ăна.

— Таçта-ха вăл хĕрĕ. Ман пек салтаксене питех пăхмаççĕ çав, вĕсене хаклă костюмлисем, пурçăн галстуклисем кирлĕ.

— Эс те туянăн-ха пурăна киле.

— Пурăна киле... Анчах этем чĕри салтак гимнастерки айĕнче те çав-çавах тапать-çке! Тен, эпир санпа туслă пулăпăр? Эсĕ мана питĕ ырă кăмăллă, ăслă хĕрача пек туйăнатăн... Леш арçури пек мар... — Вăл тин çеç Василиса вирхĕнсе кĕрсе кайнă алăк çине кăтартрĕ.

— Çук, вăл пит лайăх хĕрача, чĕлхи çеç çава пек унăн,—хамăн тусăма хŷтĕлерĕм эпĕ.

— Пĕлместĕп, тен, лайăх та пулĕ, анчах, хамăр хушăра каласан, темшĕн килĕшмерĕ вăл мана...

— Кашни çыннах юрама çук,—терĕм эпĕ.— Тен, куç хысĕнче эсĕ мана çавăн пекех тиркесе тăкăн-ха! Шан сире, арçынсене!

— Çук, Маруся, ун пек пулма пултараймасть. Хăçан тепре курма пулĕ-ши сана?

— Мĕн тума кирлĕ вăл?

— Каларăм-çке! Эп ытла та пĕччен çын...

Вăл эпир ĕçрен хăш вăхăтра тухни çинчен, хăçан пушă пулни çинчен, ĕçре мар чухне мĕн туни, ăçта кайса çŷрени çинчен васкаса ыйтса пĕлме тытăнчĕ.

— Тĕрлĕрен пулать, сменăпа ĕçлетпĕр,—терĕм эпĕ, каччă вылякаласа мар, чĕреренех ыйтнине курса.— Çитес эрнере акă, ырантан пуçласа, ирхи сменăра пулатпăр — çиччĕрен тăваттăччен, тепĕр эрнинче — тăваттăран вуниккĕччен, унтан каллех...

— Ой, пит аван-çке апла!— хăпартланса илчĕ каччă.

— Мĕн аван?

— Ман хамăн та сменăсем çавăн пек ылмашăнса пыраççĕ. Çитес эрнере дежурствăра ирпе пулатăп, унтан кăнтăрла иртсен, виççĕмĕш эрнинче çеç çĕрлехи сменăра тăратăп. Тĕл пулма май пур пирĕн! Хăçан, ăçта курас сана?

— Ку кунсенче ерçместĕп эпĕ,—терĕм ăна хирĕç юриех.

— Мĕн тăватăн?

Эп ăна хирĕç ним калама та ĕлкĕреймерĕм, сасартăк общежити алăкĕ нăтăртатса уçăлчĕ те, крыльца çине пирĕн чи хаяр та усал чĕлхеллĕ вахтер Елень инке тухса тăрса аллинчи тимĕр туйипе урайне танк! тутарчĕ. Тŷрех ятлаçма тапратрĕ:

— Эсир мĕн кунта кĕрт йыттисем пек пĕр-пĕрне

шăршласа тăратăр, уйрăлма та пĕлместĕр?!—Вăл мана пĕррех хулран тытса туртрĕ.— Марш вырăн çине, атту алăка шалтан урлуççи яратăп та, ирччене çакăнта ташласа тăмалла пулать!—Унтан кайча çулса илчĕ:— Эс те вĕçтер кунтан, неччу çĕр хута хĕрсен общежитийĕ умĕнче сĕлеке юхтарма! Кунта сан валли мĕн мар, кунта фабрикăри чи ырă ятлă хĕрсем пурăнаççĕ! Пшол! Атту-тăк халех шăхăртатăп та, милици персе çитет!

Çапла çăтăр-çатăр уйăрса ячĕ пире вахтер...

Эп пӳлĕме пырса кĕнĕ чух Василиса утиял айне кĕрсе выртнăччĕ ĕнтĕ.

— Эсĕ мĕн, ку таранччен манашка пек пурăннăскер, каччă пĕрре куç хĕснипех юратса пăрахмарăн пулĕ-çке?— терĕ вăл ман çине чеереххĕн пăхса.— Киносенче куркаланă эпĕ ун пеккисене. Анчах вăл юрату яланах куççулĕпе вĕçленет...

— Ан ухмахлан, мĕн юратăвĕ пултăр унта,—терĕм ăна хирĕç,—вăл алăкран кĕме памарĕ те тытăнчĕ лăпăртатма...

— Кайча илетĕп, темерĕ-и? Теприсем пĕрре ыталаспăнах пĕр купа суйса тултараççĕ.— Василиса тутлăн карăнса илчĕ.— Эх, каччăсем, каччăсем! Вĕсен пурин пуçĕнче те пĕр шухăш анчах çав... Куркаланă! Шуйттан ратти пурте!

— Ку каччи çапах та сăпайлă пек туйăнчĕ-ха. Нумай пулмасть çартан таврăннă, хăйне тытма пĕлет пулмалла,— терĕм эпĕ.

— Пурĕпĕр килĕшмерĕ вăл мана, темле ытла туглăн калаçма тăрăшать. Лирически, вырăсла каласан. Ун пеккисем тепĕр чух сăвă та çыраççĕ: «О, савниçĕм, савни! Ырă тусăм, хура куçăм! Эсĕ маншăн çут хĕвел!..» Анчах та хăй меллĕ самант пулсанах тĕмсем хыçнелле сĕтĕрет сана...

— Пурте ун пек мар пуль ĕнтĕ,—килĕшмерĕм эпĕ.

— Ан кала! Пурте!

— Эс мĕн вара, ытла нумай курнă çын пек калаçатăн?

— Курнă! Хам та курнă! Ыттисем мĕн курнине те курнă!

...Ирхине улттăра тăрса çăвăнкаларăмăр, çикелерĕмĕр те çиччĕччен чылай малтан ĕçе тухса чупрăмăр, мĕншĕн тесен ĕç пуçланиччен «ĕç вырăнне» хатĕрле-

мелле-çке: тусан-пăрахран тасатмалли те пулать унта, тĕрĕслесе пăхмалли те. Яланхи пекех ĕç лайăх, тикĕс пычĕ. Çип пĕтĕрĕнет, кăшкарсем çине явăнать. Сайра хутра пĕр çип татăлать те, ăна часрах сыпса хуратăн, вара каллех пĕтĕмпех йĕркеллĕ пулать... Ĕç ăнса пынă чух кăмăл та лайăх, станоксем хăлхана хупласа ларт-малла шавланă çĕртех юрлас килет. Тепĕр чух чăнах та юрлатăн — саспа мар, хăв ăшăнта. Çав кун та манăн кăмăл тулли пулчĕ. Юрлас килчĕ. Хама хам теми-çе хут та тытрăм: ĕçлетĕп-ĕçлетĕп те, сасартăк ĕнерхи каччă аса килсе каять, вăхăчĕ-вăхăчĕпе куç умнех тухса тăрать. Сассине те илтетĕп: «Пĕлетĕн-и, эп çак хулара халь пĕр-пĕччен... Этем чĕри салтак гимнастерки айĕнче те çав-çавах тапать-çке! Тен, эпир санпа туслă пулăпăр?.. Эс мана питĕ ырă кăмăллă, ăслă хĕрача пек туйăнатăн...» Кулса та илтĕм хамран: кур-ха, епле сăмахсене астуса юлнă эсĕ! Пăрах ухмахланма! Ĕмĕрте пĕрререн пĕрре курнă çын çинчен шухăшлатăн пулать, айван...

Смена хыççăн пирĕн цехри комсомол пухăвĕ пулчĕ, иртнĕ уйăхра социализмла ăмăрту мĕнле пынине пăх-са тухрăмăр, унтан икĕ хĕрачана комсомола илтĕмĕр. Вăхăт чылая кайрĕ, комбинат проходнойĕнчен тухнă чух çичĕ сехет те çитнĕччĕ ĕнтĕ. Каллех хама хам тытрăм çакăнта: урама тухсанах унталла-кунталла кăнкан пăхкаласа илтĕм эпĕ. Мĕншĕн, мĕн сăлтавпа? Куç-па леш качча шыратăп иккен! Ăнсăртран, мана кĕтсе илме килсе тăман-ши-ха вăл? Ухмах мар-и! Эпир унпа татах тĕл пуласси çинчен калаçса татăлман вĕт-ха, алăкра тăракан вахтер Елень инке пире каçхине çăвар уçма та памарĕ, мана общежитине тĕртсе кĕртрĕ, кач-чине милиципе хăратса хӳтерсе ячĕ!

Паллах, таврара никĕнле каччă та çук. Апла мар, каччисем нумайччĕ-ха, анчах леш Сидоров тени ку-рăнмарĕ.

Тепĕр кунне эпир смена хыççăн ниçта та чарăнса тăмарăмăр, тӳрех киле кайма тухрăмăр. Проходнойĕн-чен иртсен, юлташсенчен уйрăлса, хаçат киоскĕ умĕнче чарăнса тăтăм — эп унта яланах журналсем илеттĕм: «Огонек», «Ялав», «Капкăн». Хальхинче те çав жур-налсенчен хăшне те пулин сутмаççĕ-ши, тесе пытăм. Çук иккен. Вара пăрăнтăм та анаталла, общежити ен-нелле утрăм. Анчах пилĕк утăм та тăваймарăм пул-

малла, мана такам хыçалтан хуса çитсе хуллен кăна хулран тытрĕ.

— Салам, Маруся...

— Ай, кам ку?—картах сиксе илтĕм эпĕ.

Каялла çаврăнса пăхичченех шухăшларăм: çавă ку...

Чăнах-мĕн. Хайхи погонсăр салтак, Сидоров.

— Салам, шӳт тумастăн пулсан...—Манăн пит-куç пĕçерсе кайрĕ.—Аçтан тăрук сиксе тухрăн эсĕ?

— Тăрук мар, паçăрах кунта эпĕ. Дежурствăран ятарласа пĕр сехет малтан тухрăм, хам вырăна пĕр юлташа хăвартăм та...

— Ун пек тума юрать-и вара?

— Ылмашăнма кирек хăçан та юрать. Тепринче эп ун вырăнне тăратăп.— Каччă мана куçран шăтарас пек пăхрĕ.— Эс кĕçĕр мĕн тăватăн? Ерçетĕн-и?

— Мĕн вара?— ыйтрăм эпĕ, темшĕн пăлханма пуçласа.

— «Родинăра» кино лайăх паян.

— Мĕн кăтартаççĕ?

— «Бродяга». Инди картинĕ. Пирĕн ачасем ĕнер кайса курнă та питĕ мухтаççĕ. Кайса курар мар-и çавна?

Эп иккĕленсе тăтăм: мĕнле-ха капла, çынпа лайăх-хăн паллашса та çитмен, тӳрех — кинона! Унта икĕ сехете яхăн юнашар ларас пулать, кайран каллех пĕрле таврăнмалла ĕнтĕ... Хĕрсем мĕн калĕç? Çăмăл ăсланса кайнă темĕç-ши? Уйрăмах Васька-Василиса... Виçĕмкун ку качча тиркерĕ-ха вăл, халь вара, эп унпа кинона кайнине пĕлсен, тем те каласа тăкĕ. Ун чĕлхин чаракĕ çук вĕт, виç сăмах каласах çынна пĕтерсе хума пултарать.

— Ну, кайăпăр-и, Маруся?— мана алран тытрĕ каччă.

— Билет çук пуль...— терĕм эпĕ. ним калама аптраса.— Лайăх картинăсене билетсем пулакан мар...

— Акă билетсем, хатĕр! Эп илсе янтăларăм ĕнтĕ!— гимнастерка кĕсйинчен кăвак хут туртса кăларчĕ вăл.— Ултă сехет валли... Ну, мĕнле? Килĕшрĕмĕр-и?

— Темлĕ-çке...

— Мĕн темли пултăр? Каятпăр!

— Урăх ĕçсем пурччĕ те манăн...—çаплах туртăнса тăтăм эпĕ.

— Ĕç нихçан та пĕтмест вăл, вилсен те виç кунлăх юлать, тенĕ ваттисем. Картинĕ шутсăр чаплă, тет!

Тархасланă пекех ыйтать ман каччă. Килĕшрĕм вара. Ыттисем таçта та çӳреççĕ-çке каччăсемпе, мана мĕншĕн юрамасть? Мĕн пулать уншăн?

— Юрĕ, эппин, кайса курăпăр,—терĕм качча,— анчах эсĕ халь пирĕн хĕрсен куçне ан курăн, эпĕ питкуçа çуса тумланатăп та пиллĕк çурăсем иртсен Константин Иванов палăкĕ патнелле пыратăп...

— Юрать! Питĕ аван!— хавасланса кайрĕ каччă.

Хам та пĕлместĕп, темле хăюлăх çитрĕ манăн çавăн чух. Хăçан тĕл пулмалли вăхăтне те, вырăнне те хамах кăтартса патăм вĕт-ха! Унччен эпĕ, шкулта пĕрле вĕреннĕ арçын ачасемсĕр пуçне, пĕр каччăпа та уйрăммăн, никамсăр тĕл пулманччĕ. Пĕлместĕп ĕнтĕ, те питĕ хăравçă пулнă эпĕ, анчах пĕр-пĕр каччăпа ăнсăртран ăçта та пулин пĕччен юлма тӳр килсенех аяккалла тараттăм. Хальхинче вара питĕ паттăр пултăм мар-и! Анчах çав паттăрлăх кайран мана шутсăр хакла ларчĕ...

Общежитинче çăвăнкаласа апат çинĕ хыççăн хамăн нумай пулмасть илнĕ кăвак костюма тăхăннине асăрхасан, Василиса мана тӳрех çулса илчĕ:

— Ăçта кайма капăрланан капла? Паян праçник те мар, эс çуралнă кун та мар пулас... Леш ВОХР салтакĕ патне тухса шăвăнатăн-им?

— Нимле салтака та пĕлместĕп эпĕ,—терĕм ăна хирĕç,— хамăр ялсем Чапаевскине чĕнчĕç, ача ят хураççĕ.

— Сана кума тăваççĕ-им?

— Ун пек те пулма пултарать. Хам эпĕ нихçан та ача амăшĕ пулса курас çук, çын ачине тытса курам хуть, мана «хреснанне» текенни пултăр!

Чăнах та, Чапаевскинче пирĕн ялтан килнĕ икĕ çемье пурччĕ, хăш чух эпĕ вĕсем патне кайкалаттăм, çавăнпа та халь эпĕ суйни ĕненмеллех пулса тухрĕ.

— Асту, ытлашши ĕçсе ан ларт эс унта, килнĕ чух ăнсăртран вытрезвителе лекĕн тата!— кулса юлчĕ ман тус.

Каччă мана кĕтсе ларнă ĕнтĕ. Эпе Константин Иванов скверне пырса кĕрсенех хирĕç чупса пычĕ.

— Эс килместĕн пуль тесе питĕ хăрасаттăм,—терĕ вăл,—сеанс пуçланасси пилĕк минут çеç юлчĕ...

Кинора эпир питĕ тĕк лартăмăр, пĕр сăмах та чĕнмерĕмĕр. Пĕр-икĕ хутчен каччă ман алла тытса ачашлама пикенчĕ, анчах эпĕ алла туртса илсе тепĕр еннерех сикрĕм. Сеанс пĕтсен, кинотеатртан тухнă чух, вăл çапах та мана хулран тытрĕ те куçран пăхса ыйтрĕ:

— Ну, мĕнле? Килĕшрĕ-и сана картина?

— Шутсăр килĕшрĕ,—терĕм эпĕ.

— Часах тата тепĕр Инди картини пулать, теççĕ...

Ку ĕнтĕ вăл мана: «Кинона татах килĕпĕр çакăн пек»,— тени пулчĕ пулмалла, анчах эпĕ ăна хирĕç нимĕн те каламарăм.

Эпир урама тухса, халăхпа пĕрле Хресчен çурчĕ еннелле утрăмăр. Каччă мана çаплах хулран тытса пычĕ-ха, чармарăм. Шăп кинотеатр кĕтессине, пусма тĕлне çитсен, таçтан мурĕнчен пирĕн ума Василиса тухрĕ тăчĕ.

— Салам телейлĕ мăшăра!— терĕ вăл, пирĕн çула картласа.

— Салам... арçури!— терĕ ăна хирĕç ман каччă кула-кула.

Эп хам чĕлхесĕр пулса лартăм пулмалла, сывлăш та пӳлĕнчĕ манăн, пит-куç сасартăк кăвар пек пĕçерсе кайрĕ. Лекрĕм вĕт, хайхискер, суйи тухрĕ манăн, мĕн тери намăс!

— Ачасене ку чухне кинора ят хураççĕ-и?—ман çине çилленнĕ пек, манран тăрăхланă пек, хура куçĕсемпе пăраласа ыйтрĕ Василиса.

— Мĕнле ачасене?—ăнланмасăр кăн-кан пăхкаласа илчĕ ман каччă.— Эпир кино куртăмăр. Шутсăр вăйлă картина! Юррисем, ташшисем мĕне тăраççĕ! Курман пулсан — кĕрсе кур, ӳкĕнмĕн!

— Кĕрессине кĕрĕттĕм те, мана киносене илсе çӳрекенсем çукрах-ха,— терĕ Василиса тутине пăркаласа.

— Билет илсе парам-и?— сĕнчĕ çавăнтах каччă.

— Тавтапуç, ун пекех ыйткалакана тухман-ха!— ал сулчĕ те Василиса, куçĕсемпе мана тепре çунтарса илсе, Атăл еннелле утрĕ.

— Чăнах та пит хаяр-çке ку хĕрача,— терĕ Сидоров, ун хыçĕнчен пăхса.

— Çапларах çав вăл, тӳрех касса татать, унпа калаçма пĕлес пулать,—терĕм эпĕ.—Мана та кĕçĕр унран пит лайăх лекет-ха..,

— Сана?! Мĕншĕн?

— Улталарăм эп ăна... Кинона каяссине каламарăм, урăх çĕре каятăп, терĕм. Хальччен çынна суйманччĕ, пуçласа суйрăм... сана пула.

— Кинона кайнăшăн мĕн пулнă-ха? Эсир манашкăсем мар пуль? Манашкăсен унта-кунта çӳреме юрамасть, теççĕ.

— Уншăн мар. Эпир пĕр смена-çке, пĕр çемье пек пурăнатпăр, кашни мĕн тунине, мĕнле ĕмĕтпе пурăннине пĕлсе тăратпăр, пĕр-пĕрне пулăшатпăр. Улталама юрамасть ĕнтĕ ун пек пурăннă чух. Анчах эпĕ... улталарăм паян. Аван мар...

— Улталаса тем усал ĕç туман-иç эсĕ? Эккей, кинона кайнă! Уншăн никам та нимĕн калама пултарайманть. Эс юлташусене улталаса пĕр-пĕр арçынпа таçта ресторансене кайса ӳсĕрĕлнĕ пулсан татах каласма пулать хуть... Уншăн коллектива та намăс пулма пултарать. Атту — кино! Ха! Преступлени тунă мар-и!

Эпир хамăр общежитирен чылай аякра, пĕр ансăр тăкăрлăкра уйрăлтăмăр. Вăл мана çитес шăматкун паянхи пекех проходной умĕнче кĕтсе илме пулчĕ.

— Хусантан оперетта килет ун чух, çавăнта кайăпăр,—терĕ.

Эпĕ хирĕç пулмарăм.

Пирĕн пӳлĕмре никам та çукчĕ. Эп кăшт çырткаларăм та кĕнеке тытса выртрăм, анчах вулассиех пулмарĕ. Шухăш çав каччă çинчех пулчĕ. Мĕнле çын-ши вăл? Хăй каланă тăрăх, ăна вунă класс пĕтерсенех çара илсе кайнă, таçта, Туркестанра, чикĕ хĕрринче, Кушка крепоçĕнче служить тунă, шпион-диверсантсене тытнă вĕсем. Килĕнче — Шăмăршă тăрăхĕнче — унăн амăшĕпе йăмăкĕ çеç пурăнаççĕ. Вĕренме, лайăх специальность илме ĕмĕтленет, пысăк квалификациллĕ рабочи пуласшăн. Кайран, тен, заочно вĕренсе, институт та пĕтерме пулĕ-ха, хальхи вăхăтра нумай рабочисем производствăран тухмасăрах инженер дипломĕсене илеççĕ, тет. Паян мана вăйпа тенĕ пекех кинона илсе кайрĕ, çитес шăматкун опереттăна чĕнет... Çук, ыттисем пек мар ку йĕкĕт. Çамрăксенчен нумайăшĕ — акă, комбинатрисенех илер — нимĕнле ĕмĕтсĕр, тĕлсĕр пурăнаççĕ, ĕçлесе илнĕ укçисемпе кашни кун ĕçеççĕ, ӳсĕрĕлсен вара иртен-çӳренсене çулăхаççĕ, хĕрсене кӳрентереççĕ, пĕр-пĕринпе çапăçаççĕ, вунпилĕкшер талăка

лекеççĕ е унтан та ытларах «ĕçлесе илеççĕ». Комбинат картишĕнчи «Крокодилта» кашни эрнерех курма пулать ун пек «паттăрсен» йĕрĕнмелле сăнĕсене: çӳçĕсем кăмака милĕкĕ пек, хăшĕсем «ирландски» сухалсем çитĕнтерсе янă. Пăхсан хăсăк тухать! Ку Сидоров ун йышши пулас çуках. Нушара ӳснĕ, çарта пулса килнĕ, комсомолец. Ĕмĕчĕсем те пит лайăх, ырламалла. Тен, унпа туслашсах кайма пулĕ? Пурăнсан — курăнĕ...

Çапла шухăшласа выртнă май эпĕ сисмесĕрех çывăрса кайнă.

Хĕрсем çур çĕр тĕлнелле тин таврăнчĕç. Эпĕ Василиса сассине илтсе вăранса кайрăм.

— Пăхăр-ха, каччăпа çӳре-çӳре мĕн тери ĕшеннĕ ку пирĕн, хывăнса выртма та вăй çитереймен, мăнтарăн!— терĕ вăл.

— Эс мĕн, кĕвĕçетĕн-и çав?— терĕ ăна хирĕç пирĕнпе пурăнакан тепĕр хĕрача, Агни.

— Асту, кĕвĕçетĕп пуль! Тупăннă... рыцарь! Ун пек çуламан пăрусене эпĕ вуннă та тупма пултаратăп!— татса хучĕ Василиса.

— Темшĕн тупмастăн-çке, çаплах, пирĕн пекех пĕччен сулланса çӳретĕн!— йĕкĕлтесе илчĕ ăна тепĕр хĕрачи, мари хĕрĕ Марьям.

— Кирлĕ мар!— терĕ Василиса.— Йĕрĕнетĕп арçынсенчен. Пурте ăйăрсем вĕсем. Хăçан та пулин кавча каяс пулсан та, пĕр-пĕр ват çынна каятăп, анчах вăл чаплă, талантлă çын пултăр — е писатель, е художник, е музыкант.

— Ваттисен вĕсен пурин те карчăкĕсем пур-çке?

— Туртса илме юрамасть-им? Карчăкне тӳрех çаплакалатăп: эс кун чухлĕ ыр курнă, çитет сана, халь мана ыр курма пар!

— Ай-ай, питĕ тискер ĕмĕт-çке санăн! Хăвăн телейне çын хуйхи çинче тăвасшăн.. Чисти юнĕçен иккен эсĕ! Хăрамалла санран!

— Çавăн пек çав эпĕ.

— Ан палка кирлĕ мара! Ун пек тума санăн та, манăн та, пирĕнтен нихăшин те совесть çитес çук!— сассине хытарсах каларĕ Агни.—Тата... тӳсме пултараймастăп эпĕ арăм пур çĕре пырса сĕкĕнекенсене. Кураймастăп! Тĕнчере арçын пĕтнĕ пек... Арăмĕсене пăрахакан арçынсене этем вырăнне шутламастăп.

— Мораль вăйлă санăн,— лăх-лăх кулса илчĕ Василиса.— Эс ку темăпа лекцисем вулама та пултаратăн пуль, э?

— Манранах лекцисем вуласси пулас çук, анчах комсомолкăн хăйне мĕнле тытмаллине лайăх чухлатăп.

— Çитĕ, улăштар пластинкуна, йăлăхтарчĕ!— хаярăн ал сулчĕ Василиса.— Эп те санран кая мар пĕлетĕп пурнăç йĕркисене!

Пурте çывăрса кайсан, эпĕ Василиса сăмахĕсене аса илсе нумайччен шухăшласа выртрăм: чăнласах калаçрĕ-ши вăл? Нивушлĕ хăй каланă пек тума пултарать? Пĕр-пĕр «ятлă» арçынпа тĕл пулать те, ăна илĕртсе хăй майлă çавăрать, çемйине пăрахтарса, унпа пĕрлешет те «ыр курса» пурăнать? Кай, çук пуль! Тем пирки кăмăлсăр пулса таврăннипе юри каласа тултарчĕ пуль! Унăн чĕлхи чараксăррине пурте пĕлетпĕр. Тепĕр чух юри урлă çаптарать. Кăмăлĕ пурĕпĕр лайăх унăн. Хăйĕншĕн çеç мар, пуриншĕн те тăрăшать. Çавăн пек çын усал тума пултарать-и вара? Ахаль лăпăртатать вăл...

Ирхине Василиса эпĕ ĕнер, хăйне улталаса, каччăпа кинона кайнă пирки мана çыртса илетех, йĕплетех пулĕ, теннĕччĕ, анчах вăл пĕр сăмах та каласмарĕ. Эп те шарламарăм. Пĕр кун иртрĕ, иккĕ иртрĕ, эпир çаплах сăмах хушмарăмăр. Чип-чипер пурăннă çĕртех ютшăнтăмăр пĕр-пĕринчен. Анчах эпĕ ун умĕнче пĕртте айăплă пулман, хăй ним çукран шăртланать те, ман мĕн тăвас? Хăтлантăрах, ара, кам чарать?

Шăматкун эпир Сидоровпа тĕл пулса театра кайрăмăр, Хусан артисчĕсем «Малиновкăри туй» кăтартрĕç. Питĕ килĕшрĕ мана. Унтан, спектакль хыççăн, пĕр сехет пек урамсем тăрăх çӳрерĕмĕр.

— Ну, мĕнле, леш каçхине, киноран таврăнсан, лекрĕ-и сана?—кулкаласа ыйтрĕ Сидоров.

— Çук, ним те пулман,— терĕм эпĕ.— Анчах çавăн хыççăн Васька манпа калаçмасть.

— Мĕншĕн?

— Кам пĕлет, темшĕн кĕвĕçет вăл.

— Хăйĕн каччи пур-и ун?

— Курăнсах каймасть.

— Çавăнпа тарăхса пурăнать пуль, эппин?

— Ун пек те пулма пултарать...

Эпир Сидоровпа час-часах тĕл пулма пуçларăмăр. Халь ĕнтĕ ăна никамран та пытармарăм. Мĕншĕн пытармалла? Хĕрсем каччăсемпе çӳрени — ĕмĕртен пыракан йăла, унтан ним вăтанса тăмалли те çук. Хăвна ху тытма пĕлмелле çеç. Каччи мана ытларах та ытларах килĕшсе пычĕ. Сăн-питрен те хитре. Сарă, кăвак куçлă. Хăй çӳллĕ, йăрăс пӳллĕ. Нихçан та кирлĕ-кирлĕ маррине палкамасть, «хывăх вĕçтермест», сăмахĕсем яланах вырăнлă. Нумай вулать иккен вăл, мана çĕнĕ кĕнекесем çинчен каласа парать, хама вулама сĕнет, час-часах çарти службăна аса илет. Пĕрре те сăра-эрех шăрши кĕмерĕ унтан. Пирусне туртатчĕ ĕнтĕ, анчах ăна та ыттисем пек çине-çине мар, пĕр каçра ик-виç пирус. Хăйне те питĕ йĕркеллĕ тытрĕ. «Юрататăп» тесе те пĕрре каламарĕ вăл, «сана тĕл пулса çакăн пек туслă пурăннăшăн эпĕ питĕ телейлĕ», терĕ çеç. Анчах хăй мана чăннипех юратма пуçланине туяттăм эпĕ...

— Эс мĕн хăвăн каччуна пирĕнтен пытарса усратăн? Илсе кил-ха хăçан та пулин, паллаштар, курар эсĕ хăвна валли мĕнлерех упăшка хатĕрленине,—терĕ пĕррехинче Агни.

— Туртса илесрен хăрать пуль,— кулса илчĕ Василиса.

Эпир унпа калаçма пуçланăччĕ ĕнтĕ, каллех туслă пурăнаттăмăр, хушăран çеç тĕккелесе илетчĕ вăл мана.

— Чăнах, ара, паллаштар ĕнтĕ, çисех ямăпăр сан савнине, хăвăн валли те хăварăпăр,—терĕ Марьям та.—Тен, сире кĕçех свидетельсем кирлĕ пулаççĕ? Çыннине пĕлмесĕр свидетель пулма пултараймастпăр эпир!—кулса ячĕ вăл.

— Мĕнле свидетельсем?— ăнланаймарăм эпĕ.

— ЗАГСра унта свидетельсĕр çырăнтармаççĕ!

— Çавна та пĕлместĕн пулать!

— Э-э-э, эпир ЗАГСа кайиччен пилĕк çул та иртĕха!— терĕм эпĕ.

— Ăна пĕлме çук, тусăм... Хăш чух пĕр наччасра пĕрлешеççĕ!

— Тепĕр уйăхран уйрăлаççĕ пуль, çапла-и?

— Ун пекки те пулкалать, теççĕ. Анчах эсĕ сăмаха аяккалла пăрса ан яр-ха, илсе кил каччуна, вăтанса ан тăр!

Çакăн çинчен эпĕ Сидорова хăйне каларăм та, вăл хапăл тусах килĕшрĕ:

— Пыратăп, ма паллашас мар санăн тусусемпе? Халăх хушшинче пулма юрататăп эпĕ!

Тепĕр вырсарникун пычĕ вара. Çĕнĕ костюм тăхăннă, шур кĕпе, галстук. Тин çеç илнĕ пулмалла, эпĕ ăна «граждански» тумпа пĕрре те курманччĕ-ха. Çӳçне кастарнă, сухалне яп-яка хырнă, хăйĕнчен духи шăрши перет. Халех авланмалли кермене кайма хатĕрленнĕ пек, ытармалла мар. Ман хĕрсем те ăна курсан темле именсе кайрĕç. Каччă пурне те ал тытса тухрĕ те, шалти кĕсйинчен икĕ кĕленче портвейн кăларса лартрĕ, тул енчи кĕсйинчен конфет коробки кăларса хучĕ.

— Кусене мĕн шутпа илсе килтĕн?—кăмăлсăрланса ыйтрăм эпĕ.—Пирĕн пӳлĕмре кун пекки нихçан та пулман...

— Чăвашсем хăнана пушă алăпа çӳремеççĕ, çавăнпа илтĕм, асаттесен йăлине пăсас килмерĕ,—йăл кулса илчĕ Сидоров.— Тата типĕлле паллашни — паллашни-и вăл?

— Эп килĕшместĕп кун пек...

— Ан шарла эсĕ, тур панине хирĕç пулмаççĕ,— терĕ Василиса, мана пӳрнипе юнаса.—Çынни ыр кăмăлпа илсе килнĕ, эс пур—тутуна тăсатăн.

— Илтрĕн-и, ăслă çынсем мĕн калаççĕ?— куç хĕссе илчĕ ман Сидоров.— Ăнланас пулать...

Хĕрсем каçса кайсах ăшталанма тытăнчĕç. Пĕри сĕтел çине çĕнĕ скатерть сарать, тепри стакансем шăлать, виççĕмĕшĕ пур-çук колбассипе сыр касса хурать. Мана çеç нимĕн те тутармарĕç, эс хăнапа лар, кичем ан пултăр ăна, терĕç.

Эпĕ хирĕç пулмарăм...

Тепĕр çур сехетрен эпир пурсăмăр та — пиллĕкĕн ĕнтĕ—сĕтел хушшине лартăмăр. Ман каччă стакансене тултарчĕ.

— Ну, хитре пикесем, паллашнă ятпа, сире ырлăхсывлăх та телейлĕ пурнăç сунса...

— Сана хăвна та çавăн пекех ыр сунатпăр!— аллинчи стаканне пуçран та çӳлерех çĕклерĕ Василиса.

Тĕлĕнтĕм: унччен тиркетчĕ Сидорова, халь акă ыр сунать...

Хĕрсене нумай кирлĕ-им? Часах пичĕсем хĕрелсе кайрĕç, шавлăн калаçма тытăнчĕç. Янраççĕ кăна.

— Ман ташлас килет!— кăшкăрчĕ Василиса,—

Марьям, вунçиччĕмĕш пӳлĕме кайса проигрыватель илсе кил-ха!

Марьям кĕçех проигрывательпе темиçе пластинка çĕклесе пычĕ. Пластинкисем кивĕччĕ ĕнтĕ, вĕсене пин хут та янă пуль, янрас вырăнне хăйăлтатаççĕ кăна, çапах пире вĕсем те юрарĕç.

Василиса тӳрех ман качча çавăрса илчĕ. Каччи ташлама пултарать-мĕн. Фокстротне те, тангине те, вальсне те ташлама пĕлет. Ывăничченех вĕçертмерĕ ăна Василиса. Унтан: ах, пуç çаврăнса кайрĕ! тесе вырăн çине лап! выртрĕ. Сидоров манпа ташлама тытăнчĕ. Унтан Марьямпа, Агнипе. Нихăшне те кӳрентерес мар, терĕ пулмалла. Хашкакан пуличченех ташларĕ. Унтан ман çума пырса ларчĕ те хăлхаран пăшăлтатса каларĕ:

— Питĕ пăчă кунта, атя, уçăлса çӳрер пăртак...

Эпир тухса кайма хатĕрлентĕмĕр. Çакна курса Василиса тăрса ларчĕ те кăмăлсăр ыйтрĕ:

— Мĕншĕн халех каятăр? Пирĕн кампани килĕшмерĕ-им сана, салтак? Тиркетĕн апла?

— Пĕртте тиркеместĕп, анчах манăн паян пиллĕкре поста тăмалла, унччен кăштах канса илес пулать,— терĕ Сидоров.

— Тăхта, эппин, сана савса çул курки парам... лайăх ташланăшăн, юрать-и?—Василиса йăпăр-япăр чăматанне кĕрсе кайрĕ те пуçламан «столичнăй» туртса кăларчĕ. Тĕлĕнсе хытсах кайрăм çав! Хăçан илсе лартнă вăл ăна, мĕн тума?—Уç, ĕçетпĕр!

— Çук, эп урăх пĕр грамм та ĕçместĕп, çитет, сана та ĕçме хушмастăп,—терĕ Сидоров.

— Э, сире пăхса тăратăп пуль!—ал сулчĕ те Василиса, кĕленче пробкине уçса çур стакан тултарчĕ.— Мана юрать! Сире юрамасть вăл, мĕншĕн тесен сирĕн ачашланмалла, чуптумалла, йăпанмалла...

— Васька, чар чĕлхӳне, эрехне те ан ĕç!—кăшкăрчĕ Агни.

— Асту, санран хăраса тăратăп пуль! Кам, ара, эсĕ манпа командовать тума?— Вăл стакана ярса тытрĕ.— Манăн... манăн чун ыйтать паян, пĕлетĕн-и?

— Васька, чипер хăтлан, ӳсĕрĕлсе каятăн!—ун патне чупса пычĕ Марьям.— Мĕн пулчĕ сана?!

— Ним те пулман!

— Ма ĕçетĕн, эппин, кун чухлĕ ĕçнипе çитмест-им?

— Мейĕр, шуйттансем! Ĕçместĕп!—Василиса стаканри эрехе пĕррех урайне чашлаттарчĕ те вырăн çине ӳппĕн ӳксе макăрма тапратрĕ. Эпир юпасем пек хытса тăтăмăр. Мĕн пулчĕ чип-чипер хĕрачана? Эрех турĕ ĕнтĕ çакна. Нервисем выляма тытăнчĕç. Апла-тăк, унăн пĕртте ĕçме юрамасть.

— Эс айăплă,—терĕм Сидорова урама тухсан,— мĕн турĕ тума илсе килтĕн çав портвейна?

— Кам пĕлнĕ ун пек пуласса...— ал сулчĕ вăл.— Тек ĕнтĕ ĕмĕрне те пĕр тумлам илсе килместĕп!

Эпир комбинат умĕнчи скверта лартăмăр. Калаçу питех ăнмарĕ. Сидоров пĕр-икĕ хутчен Василисăна аса илчĕ: мĕншĕн тăруках пăлханса кайрĕ вăл, мĕншĕн макăрма тапратрĕ? Тен, унăн пĕр-пĕр хуйхă-суйхă пулнă, тен, ĕçре кӳренмелли тупăннă?

— Çук, —терĕм эпĕ,—ним пулнине те пĕлместĕп, ĕçĕнче вара пирĕн пурин те пĕтĕмпех йĕркеллĕ, плана ирттерсе тултаратпăр, пурсăмăр та Хисеп хăми çинче...

— Апла пулсан, мĕн те пулин аса илчĕ пуль вăл. Хурланмалли кашни çын пурнăçĕнчех пулма пултарать.

Эп киле таврăннă чух Василиса сывăратчĕ. Ирччен те вăранмарĕ. Ирхине эпир ăна ĕнерхи çинчен аса та илтермерĕмĕр. Яланхи пекех, ĕçе пурте пĕрле пуçтарăнса кайрăмăр, ним пулман пекех. Анчах темиçе кунтан вăл çавăн чухне мĕншĕн пăлханса кайнине кăшт чухлама пуçларăмăр: урай шăлнă чух Агни ун кравачĕ айĕнче çырса пĕтереймен çыру тупнă та, ăна хăй çумне чиксе, кайран мана кăтартрĕ. Питĕ васкаса, ахаль кăранташпах, шултра саспаллисемпе çырнăччĕ:

«Ылханлă чун! Эпĕ сана та, иксĕмĕр хушăмăрта мĕн пулнине те тахçанах маннăччĕ ĕнтĕ, анчах паян сана ăнсăртран урамра куртăм та, çакна çырмасăр тӳсейместĕп. Ăçтан шуйттанĕнчен килсе тухнă эсĕ Шупашкара? Таçта Çĕпĕрелле тухса тарнăччĕ-çке?.. Эсĕ ман тĕлпе темле çамрăк хĕрарăмпа ыталашса иртсе кайрăн, хăвна такам кăтăкланă пекех ахăлтатса пытăн. Сан çĕнĕ майру та чарăна пĕлмесĕр шăл йĕрсе пычĕ. Кулма та, култарма та, макăртма та пĕлетĕн çав эсĕ! Мана улталаса, асаплантарса пĕтернĕ хыççăн тата миçе хĕрарăма çитрĕн-ши, тата миçе айван хĕре макăртрăн-ши?! Йытă эсĕ, йытă аçи! Мĕншĕн çĕр çăтмасть пуль сана, ирсĕре! Мĕншĕн аçа çапмасть? Анчах

ĕмĕр-ĕмĕр çакăн пек ахăрса пурăнăп тесе ан шутла эсĕ, шăпу тулĕ-ха, эсĕ те вĕри куççулĕпе макăрăн!..»

Çак тĕлте кăранташ хуçалнă та урăх çырман вара.

— Мĕн тăвас ку хутпа?—ыйтрĕ Агни.

— Çурса тăк та никама та ан шарла,—терĕм эпĕ.

Çапла турăмăр та вара. Марьяма та каламарăмăр.

Çав кунсенче комбинат çумĕнче каç-каç вĕренмелли пир-авăр техникумĕ уçăласси çинчен пĕлтерчĕç. Унта пуринчен малтан производствăра лайăх ĕçлекенсене, 8—10 класс пĕтернисене, илеççĕ имĕш. Вĕренме кĕнисене вара ирхи сменăра çеç ĕçлеттереççĕ. Экзаменсем вăхăтĕнче ĕç укçи тӳлесех отпуск параççĕ.

Эпир, хамăр пӳлĕмри хĕрсем, çакăн çинчен чылай калаçрăмăр та, вĕренме кĕрес, терĕмĕр. Тăватă çултан мастер е мастер помощникĕ пулатпăр-ши! Сисĕнмесĕрех иртет ку вăхăт.

Анчах Василиса килĕшмерĕ.

— Кирлĕ мар мана,—ал сулчĕ вăл,—кунĕпе станоксем хушшинче чупса йытă пек ывăн та, кайран тата тепĕр пилĕк сехет парта хушшинче лар! Икĕ ĕмĕр пурăнас пур-и? Хама пурăнмалăх эпĕ капла та ĕçлесе илетĕп, çитет мана, чул çурт лартас çук!

— Хăвăн ирĕк,— терĕмĕр ăна,— çавах та вĕренни нихçан та ытлашши пулмасть...

— Вĕренĕрех, вĕренĕрех, пурте инженерсем, техниксем, мастерсем пулăр, чăрмантармастăп сире!

Эпир виççĕмĕр — эпĕ ĕнтĕ, Агни, Марьям — заявленисем патăмăр, экзамен тытрăмăр та пире вĕренме илчĕç. Кун çинчен Сидорова каласа парсан, вăл питĕ ырларĕ:

— Тĕрĕс тунă, маттур!

Çавăнтах хăй кĕçех электросварщиксен курсĕнчен вĕренсе тухасси çинчен пĕлтерчĕ.

— Анчах кунпа чарăнмастăп-ха эпĕ, малалла каятăп! Çамрăк чух пурнăçран мĕн илме май пуррине пĕтĕмпех илсе юлас пулать, кайран каю шăтать...

Ытти шкулсенчи пекех, сентябрĕн пĕрремĕшĕнче пирĕн каçхи техникумра вĕренӳ пуçланчĕ. Малтан темле тĕлĕнмелле пекрехчĕ: ялти шкултан вĕренсе тухнă хыççăн темиçе çултан каллех класра ларатпăр! Ним уйрăмлăхĕ те çук темелле, партăсем вырăнне сĕтелсем лартнă çеç. Малти стена умĕнче хура доска. Преподавательсем пырса кĕрсен ура çине тăрас пулать, вăл

сана хушаматран чĕнсĕ ыйтма пуçласан та вырăнтан тăмалла...

Ку çеç те мар-ха: килĕ парса янă уроксене хатĕрлемелле!

Техникумра занятисем пуçлансан, эпир Сидоровпа сайрарах тĕл пултăмăр. Эрнере е вунă кунта пĕрреиккĕ курнăçатпăр, йăпăрт кинона кайса килетпĕр кăна.

— Эх, Маруся, Маруся, хăçан иксĕмĕр пĕрле пурăнма май пулĕ-ши пирĕн!—терĕ вăл пĕррехинче, чылай ларнă хыççăн, мана тăрук ыталаса.

— Хура курак шуралсан!—кулса ятăм эпĕ.

— Ăна ытла нумай кĕтес пулать,—терĕ вăл.— Манăн часрах квалификациллĕ рабочи пулса пӳлĕм илесчĕ, вара, тен, урăхла калаçăттăн эсĕ, çапла-и?

— Эпĕ вĕренетĕп-çке?

— Пĕрле пулни вĕренме кансĕрлет-и-мĕн?

— Юрĕ, ун çинчен ан калаç халь,—ал султăм эпĕ. Тепринче каллех çавăн çинчен тапратрĕ вăл.

— Çынсем авланаççĕ те частнăй хваттерсенчех пит аван пурăнаççĕ.

— Эсĕ мĕн, чăнласах калаçатăн-и? Пирĕн хушăмăрта ун пирки пĕр сăмах та пулман-çке?— терĕм эпĕ.

— Мĕн калаçмалли пур унта,—ман алла пăчăртаса куçран пăхрĕ вăл.— Пĕр-пĕрне лайăх пĕлсе çитрĕмĕр ĕнтĕ, эс маншăн чи çывăх та хаклă çын пулнине пĕлетĕн, тата мĕн кирлĕ? Эп сана юратни çинчен чĕркуçленсе тăрса каламалла-и? Ун пекки халь спектакльсенче çеç пулать. Итту та ку чухнехи пьесăсене лартнă чух мар, авалхи драмăсене лартнă чух кăна... Килĕш ман арăм пулма, тупата, телейлĕ пурăнăпăр! Усал çын мар эпĕ, кӳрентерес çук сана!

Эп нимĕнле мар пулса кайрăм. Чĕре хытă-хытă тапма тытăннине çеç астăватăп.

Питĕ пăлхантăм пулмалла...

— Кун пек ĕçе йăпăр-япăр тумаççĕ, Федя,—терĕм кăшт тăхтасан,—тĕплĕн шухăшлас пулать. Тата санăн та анӳ пур, манăн та... Вĕсемпе те калаçмаллах ĕнтĕ. Тăхтар, васкар мар...

— Эс мана кăшт та пулин юрататăн-и?

— Юратман пулсан, эп санпа çакăн пек çӳрес те çук...

— Эппин, мĕн тата? Атя, çитес канмалли кун сан анӳ патне кайса килетпĕр. Тепринче — ман анне патне! Юрать-и? Килĕшетĕн-и?

— Каларăм-çке сана, тăхтар пăртак, терĕм...

— Хăçанччен?

— Куç курĕ унта. Çунмасть вĕт-ха нимĕн те.

— Çунать, Маруся. Ман чĕре çунать.

— Çунсах каймĕ, пурăнмалăх юлĕ,—кулса илтĕм эпĕ.

Анчах çак калаçу хыççăн эпир унпа пĕрре те тĕл пулаймарăмăр.

* * *

Маруся Апанасова хăйĕн калавне çав каçхине пĕтереймерĕ. Пирĕн ачасем киноран таврăнчĕç, вĕсене çывратмаллаччĕ ĕнтĕ. Тата вăхăчĕ те чылая кайрĕ.

Кайран мĕн пулнине, хăйĕн мĕн-мĕн тӳссе ирттерме тӳр килнине тепĕр кунне, ирхи апат хыççăн Атăл хĕррине кайсан каласа пачĕ...

* * *

— Пач кĕтмен çĕртен ман пурнăçра питĕ пысăк инкек пулса тухрĕ,— тесе пуçларĕ Маруся.—Ман унччен те, пĕр-икĕ çул хушши пулĕ, сайра хутра сылтăм айăк ыраткаласа илетчĕ, анчах аптрасах кайман. Пĕр хушă ыраткалать, чиккелет те иртсе каять. Халь вара. ĕçленĕ çĕртех, сасартăк тӳсмелле мар ыратса кайрĕ, темле пăчăртаса лартрĕ, çĕçĕпе чикнĕ пек чикме пуçларĕ те эп кăшкăрсах ятăм, ыратнă тĕле икĕ алăпа тытса авăнсах антăм, унтан урайне тăсăлса ӳкрĕм. Юнашар ĕçлекен хĕрачасем ман пата чупса пычĕç. «Мĕн пулчĕ капла? Мĕн пулчĕ?» теççĕ. Анчах эпĕ калаçаймастăп та ĕнтĕ. Сывлăш та тухмасть... Хама цехран епле çĕклесе тухнине те астумастăп, «васкавлă пулăшу» машини çине кĕртсе хунине çеç тĕлĕкри пек астăватăп...

— Мĕн пулнă вара ун пекех?— ыйтрăм эпĕ Марусьăран.

— Аппендицит. Çав тăрук тытса лартнă мана. Ун пек чух çын вилсе кайма та пултарать, теççĕ. Ну, хула больницине илсе çитерсенех тухтăрсем мана мĕн пул-

нине чухласа илнĕ те тӳрех çывратса ярса операци тунă. Кайран сестрасенчен пĕлтĕм: аппендициче манăн кивĕскер пулнă, пӳр нумай пухăннă тет унта, шыçса кайнă. Хам эпĕ нимĕн те туйман, операци туса вырăн çине выртгарнă хыççăн тин чылайран вăраннă. Кăшт хускалма тăтăм та, каснă вырăн вĕлересле ыратса кайрĕ... Анлантăм мĕн пулнине...

Çав кунах, каçхине, ман пата Агнипе Марьям пычĕç. Питĕ пăшăрханнă хăйсем. Çапах та мана лăплантараççĕ: эпир тухтăрпа калаçрăмăр, хăрамалли нимĕн те çук, тепĕр эрнеренех ура çине тăрать сирĕн тусу, терĕ... Манăн мĕн çиес килни, мĕн илсе килмелли çинчен ыйтаççĕ. Ним те кирлĕ мар, терĕм эпĕ, вĕсем çапах та тепĕр куннех темтепĕр илсе пычĕç — панулми, варени, пирожнăй...

...Анчах вырăн çинчен эрнерен тăрасси пулмарĕ манăн. Каснă вырăн пĕрмай пӳрленет иккен. Ӳт илсе пырас вырăнне — йĕри-тавра шыçать. Хускалаймастăп. Кăшт ӳсĕрнĕ пек тусанах тӳсмелле мар ыратать. Пĕррехинче хамăр палатăна тĕрĕслесе тăракан врачпа пĕрле тата ик-виçĕ тухтăр пырса пăхрĕç. Тем пăшăлтатрĕç те хăйсем хушшинче, мана каллех кустăрмаллă носилка çине хурса операци тăвакан пӳлĕме илсе кайрĕç. Каллех нимĕн те астумастăп: çывăратса янă мана. Сестра каларĕ кайран: манăн операци тунă вырăна çĕлени сӳтĕлсе кайнă иккен, тухтăрсем сурана уçса пӳртен тасатнă та çĕнĕрен çĕлесе лартнă...

Эпĕ хам пата тăтăшах çӳрекен Агнипе Марьяма анне патне çырса яма хушрăм, тепĕр виç-тăватă кунтанах вăл пырса темиçе сехет ларчĕ, макăрать, аран лăплантаркаласа кăларса ятăм.

Вунă кун ытла иртрĕ, анчах Василиса ман пата пĕрре те пымарĕ. Питĕ тĕлĕнтĕм унтан: мĕн пулнă? Çиленнĕ-ши ку мана? Çилленме сăлтавĕ çук пек...

— Василиса ма пĕртте килмест, вăл та чирлесе кайман пуль те?— ыйтрăм Агнипе Марьямран.

— Ерçмест вăл,— терĕ Агни.— Кăнтăрла ĕçре, каçхине капăртарах тумланать те, вара эпир ăна çур çĕр иртиччен те курмастпăр. Тăçта çӳрет!

— Каччă тупса янă-им?

— Кам пĕлет ăна. Пире отчет памасть вăл. Калаçасса та сахал калаçать пирĕнпе.

— Хăйĕнне хăй пĕлет пуль, эппин. Леш тата...

Сидоров тени пымарĕ-и пирĕн пата? Пĕлет-и вăл эп кунти çинчен?

— Ăна эпир вуçех те курман,— терĕ Марьям.— Тен, ăна шыраса тупса пĕлтерес? Трактор завочĕ инçе мар, проходнойĕнчи пĕр-пĕр охранникрен ыйтмалла çеç. Кайса пăхар-и?

— Ниçта та ан кайăр,—терĕм эпĕ.

— Мĕншĕн?

— Эпĕ ăна кирлĕ пулнă пулсан, вăл хальччен общежитине те пымалла. Кирлĕ пулман, эппин...

Хĕрсем тухса кайсан эпĕ чылайччен шухăшласа выртрăм: чăнах та, мĕншĕн килмест-ха Василиса? Туслă-çке эпир! Пĕррехинче ăна улталаса Сидоровпа кинона кайнăшăн вăл мăкăртаткаларĕ ĕнтĕ, анчах ку тахçанах иртнĕ, унтанпа каллех килĕштерсе пурăнтăмăр. Сидоров илсе пынă эрехе ĕçсен ташларĕ-ташларĕ те выртса макăрчĕ. Уншăн та ман айăп çук... Эппин, мĕншĕн тăрук сивĕнчĕ-ха ку хĕр манран, мĕн сăлтавпа килсе курмасть? Пĕлтĕр больницăна пĕр эрнелĕх лексен те кашни кун тенĕ пекех пырса кайрĕ. Халь мĕн пулнă? Ним калама та аптрамалла... Ахăртнех, унăн туслăхĕ виçĕ пуслăх çеç пулнă пуль!..

Сидоров пирки те шухăшлатăп: ăна мĕн пулнă тата? Эпĕ çакăн пек сарăмсăр чирлесе ӳкиччен темиçе кун маларахран çеç питĕ кăмăллă калаçрăмăр. Кавча килесси çинчен сăмах тапратрĕ, хăй мана юратни çинчен каларĕ. Эп килĕшес пулсан, тепĕр куннех кайса çырăнма хатĕрччĕ. Анчах мана больницăна леçнĕ хыççăн пирĕн пата пыман та вăл, ман çинчен ыйтса та пĕлмен... Чăн юрату çавăн пек пулать-и вара? Е вăл урăх шухăшпа çеç пурăннă? Мана чунтан юратнă пек пулса ман пуçа çавăрас та улталас... Нумайăшĕ çавăн пек хăтланаççĕ, тет. Хĕрпе пĕр хушă арлă-арăмлă пурăннă пек пурăнаççĕ те кайран унран тарса çӳреççĕ — тек кирлĕ мар вăл! Хулара хĕр тени нумай, кашни каç урăххипе паллашма пулать, чĕлхӳ-çăвару çаврăнтăр кăна! Нивушлĕ вара Сидоров та çавăн йышши, «çăмăл юрату» шыраканни? Пĕртте ун пек туйăнмастчĕ-çке! Тен, ăна хăйне мĕн те пулин пулнă? Тен, ăçта та пулин командировкăна янă? «Пĕрех хут, хĕрачасене трактор заводне кайса пĕлме хушмаллаччĕ»,— ӳкĕнсе илтĕм эпĕ. Çавăнтах тата урăхла та шухăшларăм: «Çук, ун пек тусан эп хам ун хыççăн чупнă пек

пулать... Хĕр тивĕçлĕхне ӳкерес пулмасть нихçан та...»

...Эп майĕпен сывалса пытăм, вырăн çинчен те тăрса хуллен утма пуçларăм, кĕçех больницăран тухаттăм та пуль ĕнтĕ, анчах сасартăк мана пĕçертсе пăрахрĕ, пĕтĕм хал пĕтрĕ те эп каллех тăрайми пултăм. Йĕпе çине сапа! Тухтăрсем: ӳпке шыçнă, терĕç. Хамах айăплă пулнă çав уншăн: больницăри пурнăç йăлăхтарнипе, эпĕ уçă чӳречесем умĕнче вăрахчен тăраттăм. Асăрханма пĕлмен, ухмах. Анчах уншăн тухтăрсем манран ытларах сестрасене ятларĕç: чирлисене пăхма пĕлместĕр! Эпĕ питĕ ӳкĕнтĕм те çав, мĕн тăвас тетĕн? Каллех выртма тиврĕ. Виçĕ эрне таран.

Агнипе Марьям çаплах пыра-пыра кайрĕç. Эп вĕсенчен фабрикăри ĕçсем çинчен, техникумра вĕренӳ мĕнле пыни çинчен ыйта-ыйта пĕлтĕм. Пĕррехинче вĕсемпе пĕрле фабрикăри комсомол секретарĕ Рая Шашкина та пырса кайрĕ, пĕтĕм бюро членĕсем сана хăвăртрах сывалса тухма ыр сунаççĕ, терĕ.

Васька-Василиса çаплах пымарĕ. Эпĕ ĕнтĕ ун çинчен тек ыйтмарăм та. Çапах та, сăмах майăн тенĕ пек, Сидоров пирки ыйтрăм:

— Курăнмарĕ-и çав ман рыцарь?

— Çук, курăнмарĕ,—терĕç хĕрсем.— Тухса кайнă пуль вăл ăçта та пулин урăх çĕре...

Анчах вĕсем суйнă. Курнă хĕрсем ăна. Пĕрре кăна мар курнă. Мана юри каламан. Кӳрентерес, пăлхатас темен. Чирлĕ çынна хĕрхеннĕ. Ун çинчен кайран пĕлтĕм...

Больницăран эпĕ октябрь вĕçĕнче, пĕр ăмăр кун каçаллапа тавраптăм. Çутçанталăка кĕр сăнĕ çапнăччĕ ĕнтĕ, çурçĕртен вĕрекен çил урамсем тăрăх сарăхса ӳкнĕ çулçăсене хăвалатчĕ. Тӳпере тăхлан тĕслĕ пĕлĕтсем кĕç-вĕç пуç çине татăлса анас пек шăваççĕ... Салху...

Общежити умĕнче мана хайхи хаяр вахтер Елень инке кĕтсе илчĕ. Анчах хальхинче вăл пĕртте хаяр пулмарĕ, питĕ ачашшăн, мана хĕрхенсе каласрĕ:

— Ах, хĕрĕм, тинех тавраптăн-и? Ай-у-уй, пĕтсе кайнă-çке эс! Чир тени çавăн пек çав вăл, çынна хĕрхенсе тăмасть... Çапах та аптрамăн-ха, çамрăк çын часах вăй илет. Халь сана пĕр-ик эрнелĕх канмалли çурта ярсан пит аван пулмалла та ĕнтĕ! Ыйтса пăх-ха аслисенчен, тен, путевка тупса парĕç?

— Ниçта та каймастăп, килтех тӳрленетĕп,—терĕм ăна хирĕç.—Ман каçхи техникума вĕренме çӳремеяле. Ахаль те юлташсенчен нумай кая юлтăм пулĕ-ха.

— Эппин, эсĕ апатне тутлăрах çи, вăй илетĕн вара. Укçуна ан хĕрхен, çи те çи!

Пирĕн пӳлĕмре нимĕн те улшăнман, эп кайиччен мĕнле пулнă — çаплипех. Ман вырăна, тусанланасран, тахăшĕ хаçатсемпе витсе хунă. Эп вĕсене илсе пăрахрăм та пĕр хушă канса выртрăм. Сĕтел çинчи кивĕ журналсене пăхкаларăм. Унтан ерипен тăрса электроплитка çинче чей ăшăтрăм. Çимеллисене больницăран таврăннă чухах çула май илсеттĕм. Кăшт çырткаласан каллех выртнă та сисмесĕрех тĕлĕрсе кайнă.

— Ай, Маруся! Чунăм! Таврăннă-çке!..— Марьям кăшкăрнине илтсе варт! вăрантăм эпĕ. Вăл ман пата чупса пырса ыталама, чуптума тытăнчĕ.— Ма систермерĕн, вахтер патне шăнкăравламаллаччĕ санăн, хамăр илме пыраттăмăр! Мĕнле çиткелерĕн пĕччен?

Кĕçех пӳлĕме Агни те пырса кĕчĕ, вăл мана çавăн пекех ыталаса чуптума тытăнчĕ.

— Тунсăхласа çитрĕмĕр сансăр...

Вĕсем пĕр-пĕрне пӳле-пӳлех ыйтма тытăнчĕç: мĕнле туятăн? Халь ним те ыратмасть-и ĕнтĕ? Операци тунă вырăнĕ мĕнле?

— Пĕтĕмпех йĕркеллĕ,—терĕм,—атту пулсан, тухтăрсем маша кăларса та ярас çук...

— Пит аван, пит аван апла пулсан!—хĕпĕртерĕç хĕрсем.— Анчах ĕçе тăруках тухаймастăн пуль-ха çав?

— Вунă кунлăха бюллетень пачĕç,— терĕм,—ĕçне çӳрейместĕп, анчах техникумри занятисенчен юлмастăп.

Вĕсем техникум çинчен каласа пама тытăнчĕç. Вĕренӳ пит лайăх пырать-мĕн. Çĕнĕ преподавательсем пур. Уйрăмах пĕри, СССР историне вĕрентекенни, пурне те литĕ килĕшет, çамрăк, хĕр пек хитрескер, лекцисене шутсăр ăнланмалла, интереслĕ вулать, анчах хăй çав тери именекенскер, пулчĕ-пулмарĕ хĕрелсе каять...

Вăрахчен калаçса лартăмăр. Вăхăт вуниккĕ çине кайсан Василиса пырса кĕчĕ. Сăмах майăн каласан, хĕрсенчен эпĕ ун çинчен пĕрре те ыйтмарăм — ăçта, мĕн тăвать... Агнипе Марьям хăйсем те ăна асăнмарĕç, вăл çĕр çинче çук пекех. Пырса кĕчĕ те хайхи Васи-

лиса, мана курсанах алăк патĕнче пат! чарăнса тăчĕ. Тĕлĕнчĕ ĕнтĕ. Кĕтмен вăл мана.

— Э-э-э, килтĕн-и?—терĕ унтан.

— Килтĕм-ха,—терĕм эпĕ,—салам...

— Салам, салам.— Питĕ сиввĕн тухрĕç унăн сăмахĕсем. Вăл ман пата пырса алă та памарĕ, тумтирне хывса çакса хăйĕн койки пуçĕнчен алшăлли илчĕ те коридоралла патлаттарса тухса кайрĕ. Шалт! хупăнчĕ ун хыççăн алăк.

— Мĕн пулнă ăна? Мĕншĕн çав териех çиленнĕ вăл мана? Эпĕ ун умĕнче нихăш енчен те айăплă мар-çке? Такам темскер элеклесе паман пуль те?— ыйтрăм хĕрсенчен.

Агнипе Марьям чĕнмерĕç. Анчах вĕсем пĕр-пĕрин çине еплерех пăхса илнине асăрхаса, эпĕ вĕсем манран темскер пытарнине, хăйсем лайăх пĕлнинех пытарнине туйрăм. Çапах та тепĕр хут ыйтмарăм.

Часах Василиса пит çуса таврăнчĕ те алшăллине вырăн çине ывăтса, тĕкĕр умĕнче пуçне турама тытăнчĕ. Пӳлĕмре пĕр хушă шăп пулчĕ. Эп вырăн çинче выртаттăм ĕнтĕ, Агнипе Марьям та вырăнĕсене сарса майлама тытăнчĕç. Радио хуллен кăна юрларĕ... Тем ырă мар пулассине сиснĕ пекех, ман ăшчик вăркама тытăнчĕ.

— Ма нихăшĕ те ним те чĕнместĕр? Е ман çинчен мĕн каламаллине эп киличчен пĕтĕмпех каласа пама ĕлкĕртĕр-и?— тĕкĕр умĕнчен вăрт çаврăнса тăрса ыйтрĕ Василиса.

— Мĕн калас пирĕн? Эпир ним те пĕлместпĕр,— мăкăртатса илчĕ Агни.

— Ха! Пĕлместĕр пулать!—кăшкăрнă пекех каларĕ те Василиса, пӳлĕм варринерех тухса тăчĕ.

— Мĕн пĕлмелле пирĕн?—терĕ Марьям ăна хирĕç хуллен кăна.

— Апла пулсан, эп хам каласа паратăп! Манăн ним пытармалли те çук!—урипе пат! тапса илчĕ Василиса. Мана вăл кăшт ĕçнĕ пек те туйăнчĕ.

— Ан лăпăртат, Васька! Чарăн!— кăшкăрчĕ ăна Агни. Вăл Василиса мĕн çинчен калама хатĕрленнине чухларĕ пулас.

— Мĕн тума пытарса пурăнас?— унран та хытăрах кăшкăрчĕ Василиса.— Паян пулмасан та, ыран çавçавах пĕлет вăл! Тĕвве ăна пĕрре кассах татмалла!

Эп хăрама тытăнтăм. Ман пĕтĕм кĕлетке чĕтрĕме ерчĕ. Чăнах та, мĕн çинчен васкасах каласшăн мана Василиса? Мĕн пулнă? Агни мĕншĕн чарасшăн ăна? Ахальтен мар ку...

Çав самантрах Василиса хăвăрт кăна ман паталла утса пычĕ те сĕтел çине сиксе хăпарса ларчĕ. Унăн куçĕсем темле чарăлса кайнăччĕ, çисе ярас пек пăхрĕç. Тата хăрушрах пулса кайрĕ мана...

— Акă мĕн, тусăм Маруся,—терĕ Василиса, урисене сулкаласа.— Ним пытармасăр калаçăпăр, эпир пĕчĕк ачасем мар...

— Чарăн, Васька!— кăшкăрчĕ Агни каллех.—Вырт та çывăр, çынсене те канма пар. Куратăн пуль, Маруся халь те сывалса çитмен-ха, йывăр ăна!

Василиса ун сăмахĕсене хăлхана та чикмерĕ.

— Эп сана тĕп-тĕрĕссине каласа паратăп,—терĕ вăл.— Анчах эс ан макăр, куççуль тăкнинчен усси пулмасть. Акă мĕн: эпĕ Федя Сидорова юрататăп, вăл та мана юратать. Кĕçех пĕрлешетпĕр те, частнăй хваттере куçатпăр. Анлантăн-и? Ай тепре каласа парас-и?

— Васька, сволочь эсĕ! Йыт ами!—кăшкăрчĕ те çав самантрах Агни, ун патне чупса пырса чант! çупса ячĕ. Василиса сĕтел çинчен сиксе анчĕ, пĕçерсе кайнă питçăмартине аллипе тытса çав тери çилĕллĕ сасăпа каларĕ:

— Эсир мана çакăнта çыхса пăрахса хĕнесен те халь тин нимĕн те тăваймастăр! Эпир унпа упăшкипе арăмĕ пулнă ĕнтĕ! Шăхăрса юлтăн эсĕ, Маруся!

Унтан ухмаха ернĕ çын пек ахăлтатса кулса ячĕ.

— Кай! Халех тухса вăркăн кунтан, юхха!—чышкисене чăмăртаса, ниçта кайса кĕме пĕлмесĕр урисемпе тăпăртатса илчĕ Агни.

— Каятăп! Каятăп! Манăн сире тахçанах курас килмест!—ăна хирĕç кăшкăрчĕ те Василиса, тумтирне пăтаран вĕçертсе илсе чупса тухрĕ.

Эпĕ, малтанхи самантсенче тăнран тухса кайнă пек пулнăскер, макăрса ятăм. Хĕрсем мана тем тĕрлĕ те лăплантарма тăрăшрĕç, анчах эпĕ хытăран хытă макăртăм. Ман истерика пуçланчĕ. Марьям такамран валерьянка тупса пырса ĕçтерсен те лăпланаймарăм...

— Сур эсĕ вĕсем çине, сур! Мĕн макăрмалли пур çав çĕленсемшĕн! Çынсем мар вĕсем, чĕр шуйттан-

сем!—мăкăртатрĕ Агни, мана пуçран, çурăмран лăпкаса.

— Вĕсене иккĕшне те пĕр-пĕрин çумне çыхса тĕпсĕр çырмана пăрахăттăм эпĕ, çуркунне пăр çине лартса ярăттăм!— терĕ Марьям.—Ку Васькине тус-юлташ тесе пурăннă вĕт-ха эпир! Мĕнле тус-юлташ пултăр вăл çакăн хыççăн?! Чысне те, намăсне те çухатнă эсрел çеç!

— Леш Сидоровĕ те юратман сана, юри тарап туса пурăннă, йĕксĕк! Юратакан çын çавăн пек тăвать-и?!

Пĕтĕм чунтан тарăхса тиркерĕç хĕрсем Сидоровпа Василисăна, ылханчĕç вĕсене, каламанни те хăвармарĕç. Анчах уншăн мана çăмăл пулмарĕ...

Эпĕ çĕрĕпех çывăраймарăм. Тем те аса килчĕ, тем çинчен те, тем тĕрлĕ те шухăшларăм. Ман ăнланас килчĕ — мĕнле, мĕнрен пулма пултарать çакăн пек ирсĕр япала? Василисăпа эпир комбината килсенех, пĕрле ĕçлеме тытăнсанах паллашса туслашнă, икĕ çул ытла пĕрле, пĕр çăвартан тенĕ пек пурăннă, вăл мана пит лайăх хĕрача пек туйаннă. Эпир пĕр-пĕринчен нимĕн те пытарман, хуть те хăçан та пĕр-пĕрне пулăшма хатĕр пулнă... Мĕнле-ха вара, эпир Сидоровпа чылай хушă килĕштерсе пурăннине, вăл манăн савни пулнине пĕлсе тăнă çĕртех унпа çыхланса кайма пултарнă вăл? Ахальтен мар пуль пĕррехинче ют упăшкасене туртса илсе «ыр курасси» çинчен пакăлтатрĕ! Эппин, çавăн пек ирсĕр шухăш, путсĕр ĕмĕт тахçанах пулнă унăн пуçĕнче! Çиелтен çеç ырă кăмăллă пек курăннă вăл, чĕринче вара шуйттан ларнă! Кĕнекесенче часчасах сутăнчăксем çинчен çыраççĕ, киносенче те кăтартаççĕ вĕсене... Вăрçăччен совет çыннисем пекех курăннă ирсĕрсем кайран хамăр çынсене фашистсене сутнă... Василиса та çавăн пек çын мар-и-ха? Тискер, çынна пĕртте хĕрхенмен, çын чунне ыраттарнăшăн савăнма та пултаракан ирсĕр чĕрчун!

Лешĕ тата, Сидоровĕ! Пур енчен те лайăх çын пек туйăнатчĕ-çке! Мĕн тери хитре калаçатчĕ! Пĕрре те иртĕнместчĕ, хăйне пит йĕркеллĕ тытатчĕ. Юлашки вăхăтра пĕрлешесси çинчен калаçа пуçларĕ. Чăн-чăнах юратнă пек курăнатчĕ. Мĕн пулнă ăна тăруках!? Е вăл унччен каланисем пĕтĕмпех суя пулнă-и? Тен, ним чухлĕ те килĕштермен вăл мана, «çак хулара пĕрпĕччен» пулнăшăн, кичемрен çеç çӳренĕ манпа? Тата

мĕнле-ха вăл Васькăна çав тери хăвăрт юратса пăрахма пултарнă? Ана вăл питĕ тиркетчĕ-ске! «Эпир унпа упăшкипе арăмĕ пулнă ĕнтĕ»,— терĕ Васька. Мĕнлеха çав териех хăвăрт? Вĕсем çырăнман та-ха вĕт! Епле пулма пултарать ун пек? Пулать те пуль çав... чыса та, намăса та пĕлмесен! Хĕр сăн-сăпатне çеç мар, этем сăн-сăпатне те çухатсан!..

Çавăн пек шухăшсемпе асапланса выртса, эпĕ ир енне тин кăштах тĕлĕрсе кайнă. Анчах ирхине, пĕр ултă сехетсенче, Агнипе Марьям ĕçе кайма хатĕрленнине илтсе, вăранса кайрăм. Çапах та вĕсене хам вăраннине систермерĕм. Вĕсем тухса кайсан вара хамăн япаласене пуçтарма тытăнтăм...

Çирĕп шут турăм эпĕ: Василисăпа Сидоров мăшкăлĕ пулнă хыççăн кунта тек пĕр кун та пурăнмастăп, каятăп! Куçăм ан куртăр!.. Хам ĕнтĕ япаласене пуçтарса чăматана чикетĕп, çав вăхăтрах ниçта кайса кĕрейми хурланса макăратăп çав. Епле пулсан та, шелçке-ха юратнă, хăнăхса çитнĕ ĕçе пăрахса кайма, техникумне пăрахса кайма та шел, юлташсенчен те уйрăлас килмест. Çапах та каясах пулать, тетĕп, Василисăпа пĕр пÿлĕмре пурăнма мар, ун çине пăхма та пултараймастăп тин. Сидоровне те курма пултараймастăп, анчах, кунтах юлсан, ăнсăртран тĕл пулма та тÿр килĕ. Василиси вĕçкĕнленсе çÿрет ĕнтĕ, манран каччă тÿртса илнипе мухтанать, манран кулать... Çук, çук! Тусейместĕп эпĕ кун пеккине, чăтма пултараймастăп! Манăн та мăнкăмăллăх пур... Пурăнам-ха пĕр хушă анне патĕнче, лăпланам, кайран курăнĕ унта, халлĕхе ватăлсах кайман!

Сĕтел çине кĕске кăна хут çырса хăвартăм: «Хаклă тусăмсем, Агнипе Марьям! Эпĕ сывалса çитиччен яла кайса пурăнатăп. Манăн утиял-минтерсене коменданта парăр...»

Вара тÿрех автобус станцине кайрăм.

Эп пынăшăн анне питĕ савăнчĕ:

— Кан, вăй ил, хулине тек таврăнмасан та юрать, халь колхозра та пурнăç начар мар, чипер ĕçлесен çăкăр-тăварлă та пулатăн, укçине те лайăх параççĕ,— терĕ.

Эпĕ чăнах та таврăнмарăм. Сывалса çитсен пĕр хушă аннепе пĕрле чăх-чĕп ферминче ĕçлерĕм, унтан мана салтака тухса кайнă пĕр йĕкĕт вырăнне колхоз

библиотекине ĕçлеме илчĕç. Колхозри комсомол организаци секретарĕ те эпех пулса тăтăм. Ĕçĕ сителĕклехчĕ, кичемленсе, тунсăхласа ларма вăхăт çукчĕ. Пĕрмай халăх хушшинче, халăхпа пĕрле. Çав çулах пирĕн колхоза электричество кĕртрĕç, колхозниксен килĕсенче те, клубра та, урамра та радио янрарĕ. Хаçат-журнал лавĕпе пырать, вула та вула, час-часах артистсем пырса каяççĕ, хамăр та спектакльсем лартатпăр. Хуларинчен пĕртте кая пурăнмастпăр!

Эп киле таврăнсан ик-виç эрнеренех, эп Шупашкара таврăнманнине кура, Агнипе Марьям ман пата пысăк çыру ячĕç.

«Леш арçури (Василиса пирки ĕнтĕ ку) пирĕн патран тухса кайрĕ, упăшкипе таçта Кировски поселокра частнăйĕнче пурăнаççĕ,—тенĕччĕ вĕсем,—ун вырăнне пирĕн пата пит лайăх, сăпайлă вырăс хĕрачине кĕртрĕç... Анчах сан вырăнна упраса усратпăр-ха, сана кашни кун кĕтетпĕр! Мĕншĕн халь те килместĕн? Нивушлĕ халь те сывалса çитейместĕн? Кил часрах, сансăр кичем пире! Леш эсрелĕсем çинчен ан та шутла эсĕ, сур вĕсем çине çӳллĕрех йăмра тăрне хăпарса! Вĕсем çинчен шутлани — вĕсемшĕн ытла пысăк чыс пулать, ăна тивĕçсĕр вĕсем! Курăпăр-ха малашне, мĕнлерех пурăнĕç. Пирĕн шутпа, Васькăран кил тытакан лайăх арăм та, ачи-пăчине йĕркеллĕ пăхса çитĕнтерекен амăшĕ те пулаймасть. Çынни çавăн йышшискер вăл, пĕлсе çитрĕмĕр ĕнтĕ, пит лайăх кăтартрĕ хăйне, вĕреçĕлен йăхĕ! А эсĕ тавай, чăхăмласа ан пурăн унта, тух та кил часрах, кĕтетпĕр».

Темиçе кун шухăшласа çӳрерĕм çак çырăва илнĕ хыççăн. Асаилӳсем капланса килчĕç... Хĕрсемпе мĕн тери хитре пурăнни, фабрика суртне хамăр алăпа туни, каç-каç хамăрăн пулас специальноçа вĕренни, унтан цехра ĕçлеме тытăнни куç умне кинори пекех тухса тăчĕ çав. Пĕтĕмпех лайăхчĕ-çке...

Малаллине аса илсен, каллех чун ыратса кайрĕ.

— Мана манманшăн, хăвăрпа пĕрле пулма ырă кăмăлпа чĕннĕшĕн питĕ пысăк тав сире, анчах анне чирлĕ пирки килтен тухаймастăп,—тесе çыртăм тусюлташсем патне.

Лăпланса çитменччĕ-ха эпĕ ун чухне, тӳрленменччĕ чĕрери суран. Эп хам ĕмĕрне те çынна усал туман, юри мар — ăнсăртран та никама кӳрентерсе курман

та, хамран Василисăпа Сидоров çавăн пек мăшкăлланине, манăн таса туйăмсем çине шăршлă тислĕк купаланине питĕ йывăррăн та асаплăн тӳссе ирттертĕм çав... Тем пек манас, аса илес мар тесен те, Василиса: «Куççуль тăкнинчен усси пулмасть, эп Федя Сидорова юрататăп, вăл та мана юратать... Шăхăрса юлтăн эсĕ, Маруся!» — тесе калани аса килетчĕ. Аса илсен вара пĕтĕм ăшчик пăтранса каятчĕ те, пĕр-пĕр улахрах вырăна пăрăнса, вăрттăн макăрса та илеттĕм...

Эп çавăн пек салху çӳренине анне те сисетчĕ. Вăл ыйтса пĕлме тытăнсан, эпĕ операци вырăнĕ ыратни çине яраттăм.

— Çук, вăл мар-ха санăн, темскер урăххи пур,— тетчĕ анне мана ĕненмесĕр, ассăн сывла-сывла.—Кавча каяс пулать санăн, хĕрĕм... Çирĕм пĕре пусрăн, çулĕ пур ĕнтĕ...

— Ман пек çĕтĕк хырăмлă хĕре кам илтĕр?—кулакула калаттăм ăна хирĕç.

— Э, ун пекки кашнийĕнех пулма пултарать, вăл ниме те пĕлтермест!—ал сулатчĕ анне.—Тав турра, сана нихăш енчен те тиркемелле мар-ха! Сăн-питрен те, ăсу-пуçупа та çынсенчен кая мар. Ялта халь нумай вĕреннĕ каччăсем те пур...

— Пăхмасть ман çине никам та,—каллех кулаттăм эпĕ.—Эп хам пырса мăйран уртăнаймастăп ĕнтĕ!

— Ăна суятăн-ха эсĕ... Ав, радиори мастер — техник теççĕ-и çавна — библиотекăран тухма та пĕлмест, тенине илтрĕм. Анчах асту эсĕ, кĕтмен-туман çĕртен яту ан пăсăлтăр! Хĕрĕн ыр ячĕ нимрен те хаклă, ачам!

— Ăна чухлатăп пулĕ-çке эпĕ, анне!

Çавăн майлă калаçусем час-часах пулса иртетчĕç аннепе иксĕмĕр хушăмăрта. Паллах ĕнтĕ, анне манăн малашнехи пурнăç çинчен шухăшланă, мана телейлĕ тума ĕмĕтленнĕ. Мĕнле амăшĕн хăй çуратса, кăкăрне ĕмĕртсе, пĕтĕм чунне парса çитĕнтернĕ ачишĕн ăшĕ хыпмасть пулĕ? Чăн та ĕнтĕ, тĕл пулаççĕ тепĕр чух куккук пеккисем. Çуратаççĕ те ăçта та пулин кайса пăрахаççĕ, хуть те кам пăхса ӳстертĕр ун ачине. Халь-хи вăхăтра ун пеккисем валли детприемниксем пур ав...

...Сивĕ хĕл иртрĕ, чуна савăнтаракан çуркунне çитрĕ, унтан шăрăх кунсем те пуçланчĕç. Эп киле таврăнăранпа сакăр уйăх тулчĕ. Çав хушăра эп Шупашкара

ик-виçĕ хут кайса килтĕм, анчах кашнинчех йăпăртлăха çеç — бибколлектора пырса, кĕнекесем суйласа илетĕп те тӳрех киле таврăнатăп. Манăн никам куçĕ умне те курăнассăм килмерĕ, хама кам та пулин палласа илесрен те шиклентĕм эпĕ — хулара пурăннă чух тем усал ĕç тунă пек, такам умĕнче пысăк айăпа кĕнĕ пек! Агнипе Марьяма питĕ курас килчĕ манăн, çапах та вĕсем патне пĕрре те каймарăм, ăнсăртран Василисăна е Сидорова тĕл пуласран хăрарăм.

Кĕтмен çĕртен, Агнипе Марьям хăйсем пырса тухрĕç ман патăма. Шăп çĕр çырли пиçнĕ вăхăтра пулчĕ ку. Эп хĕрсемпе пĕрле колхоз садне çырла татма кайнăччĕ. Çырли пит нумайччĕ вăл çулхине, пиçсе пыракансене татса та пĕтерме çукчĕ, çавăнпа эп те пулăшкалаттăм. Анне ман тус-юлташсене садах илсе пыч-ĕ.

— Çапах та шыраса тупрăмăр пулать сана, таркăна!— Агнипе Марьям пĕр харăсах ыталаса чуптума тытăнчĕç мана.— Ху пĕрре те пырса курмастăн та, хамăр килсе тĕрĕслес, терĕмĕр. Пурăнатăн-и эс çак çĕр çинче, çук-и...

— Пурăнатăп-ха, чиперех пурăнатăп, куратăр — хĕрсемпе пĕрле çырла тататăп,—терĕм вĕсене хирĕç.

— Пурнăçу та çырла пекех тутлă пуль, эппин?

— Çырла пекех пулмасан та, армути тутиех каламасть,—кулса ятăм эпĕ.

Тĕрĕссипе каласан, вĕсем пынăшăн эпĕ калама та çук хĕпĕртерĕм. Ку хĕрсем маншăн чи çывăх тăвансем пекех пулнă-çке-ха! Эп вĕсене çырла татса çиме хушрăм:

— Ана çинчи пасартинчен тутлăрах, теççĕ...

Унтан эпир пирĕн пата кайрăмăр. Эпĕ тӳрех чăкăтпа çăмарта ăшалама тытăнтăм, анне нӳхрепрен сăра ăсса тухрĕ. Сĕтел хушшине ларсан вара пирĕн вĕçĕмсĕр калаçу пуçланса кайрĕ. Эп тухса кайнăранпа фабрикăра нумай улшăнусем, интересссем пулса иртнĕ-мĕн. Пирĕнпе ĕçлекен хĕрсенчен темиçе çын качча кайнă, пĕрисем лайăх пурăнаççĕ, анчах ик-виç уйăх пурăннă хыççăн уйрăлаканссм те пулнă. Пурин те пурнăç пĕр пек килмест çав...

Паллах, сăмах Василисăпа Сидоров çине те пырса тухрĕ.

Эп хам ыйтмарăм вĕсем çинчен (халь тин мĕн тума кирлĕ вĕсем мана?), хĕрсем хăйсем пуçларĕç:

— Пирĕн леш арçури часах ача амăшĕ пулать, декрета тухрĕ ĕнтĕ,—терĕ Агни.— Эпĕ Василиса çинчен калатăп...

— Питĕ пĕтсе кайнă вара хăй, шăммипе тирĕ çеç юлнă, питçăмартисем, пĕтĕм çамки çине тутăх тапса тухнă, ним майĕ çук,—хушса хучĕ Марьям.

— Сирĕн пата пыркаласа çӳрет-и?—ыйтрăм эпĕ.

— Çук, тухса кайнăранпа пĕрре те пыман, ĕçлессе те урăх çĕрте ĕçлет, эп ăна фабкомра куртăм.

— Калаçрăр-и?

— Калаçрăмăр. Хваттер пирки пынă. Хальхи частнăй хваттер хуçисем вĕсене ача çуралсан усрамастпăр, тесе каланă тет. Макăрать хăй, нуша çукран нуша тупрăм хама валли, тет.

— Васьки пыман пирĕн пата, анчах пĕр икĕ эрне каялла Сидоровĕ хăй пырса тĕлĕнтерсех парахрĕ вара,—терĕ Агни.— Эп пĕчченехчĕ те хăрасах кайрăм малтан...

— Мĕн тума сĕтĕрĕнсе пынă вăл?

— Ӳсĕрпе пынă... Çумĕнче тата çур литр. Эпĕ сирĕн пата чуна уçса пама килтĕм, тет...

— Мĕн чунĕ пултăр унăн!— ал султăм эпĕ.

— Эрехне тепĕр çур стакан ĕçрĕ те тытăнчĕ калаçма! Калаçать-калаçать те йĕрсе илет.

— Йĕме те пĕлет-и вăл чунсăр этем?— Ман чĕре çилĕпе тулма пуçларĕ.

— Ача пек йĕрет!

— Вăл хăй мар, хыпса тултарнă эрехĕ йĕрнĕ ха унăн,—терĕ Марьям.

— Çав ĕнтĕ. Пĕтертĕм эп хам пурнăçа, тет. Ытла та пысăк йăнăш туса хутăм, тет. Мĕнле йăнăш турăн вара эсĕ, çын вĕлермерĕн пулĕ-çке?—тесе ыйтрăм та, вăл мана хирĕç: «Эп хама хам вĕлертĕм... Василисăпа çыхланса!» тесе хучĕ. Унтан, ӳсĕрскер, нихçан илтменнине каласа пачĕ вара. Василиса ăна питĕ шутсăр улталанă иккен! Эс тăрук чирлесе ӳкнипе сана больницăна ăсатнă кунах, каçхине, пирĕн пата пыма тухнă Сидорова Василиса урамра ăнсăртран тĕл пулнă та, сан çинчен темтепĕр лăпăртатса панă иккен...

— Мĕн калама пултарнă вăл ман пирки?!—ыйтрăм эпĕ. Хамăн çав вăхăтрах пĕтĕм пит-куç пĕçерсе кайрĕ.

— Эсĕ, Маруся, питĕ путсĕр хĕр иккен, хĕр те мар,

арсăр арăм, такампа та пурăннă, ача пăрахнă, хĕрарăм чирĕпе чирлетĕн имĕш, халь те — çав кун ĕнтĕ — çавăн пиркиех сана «скорый помощпа» илсе кайнă пулать...

— Турăçăм! Мĕн тери хăрушă çын пулнă иккен вăл!— аран сывлăш çавăрса илтĕм эпĕ.

— Сидоровĕ, сана чăнласах юратнăскер, чут çеç ухмаха ерсе кайман çак суя сăмахсене илтсе. Малтан ĕненесшĕн те пулман, элек ку, ун пек пулма пултараймасть, тенĕ. Василиса çине тăрсах ĕнентерме тапратнă. Эсĕ хăвна пурнăçра йĕркесĕр тытнăшăн, пĕр ватă инженерпа пурăнса унăн çемйине аркатма пуçланăшăн, сана комсомол бюровĕнче сӳтсе явнă иккен, чут çеç комсомолтан кăларса ывăтман, эсĕ, макăра-макăра, «тек ун пек хăтланмастăп», тесе сăмах панипе çеç строгий выговорпа хăварнă. Анчах эсĕ тӳрленме шутламан та, хăвăн ирсĕр йăлуна пăрахман, вăрттăнрах пулнă çеç имĕш.

Эпĕ ним пĕлми хытса лартăм. Чĕре сиксе тухас пек тапрĕ, хушшăн-хушшăн ăш пăтранса килчĕ.

Агни малалла каларĕ:

— Çакăнса вилетĕп эпĕ! Тӳсейместĕп кун пек ултава!— тенĕ ниçта кайса кĕме пĕлмен Сидоров. Василиса ана йăпатанçи пулнă: «Ан ухмахлан! Çавăн пек путсĕр, пĕтнĕ хĕршĕн мĕн хуйхăрмалли пур? Сур та ал сул!»—тенĕ.

Тĕлĕннипе, тарăхнипе сывлăшĕ те пӳлĕнсе ларма пуçланă Сидоров Василисăна хăйĕнпе пĕрле ĕçме пыма чĕннĕ. Василиса хирĕçсе тăман. Вĕсем пристань çинчи ресторана кайнă. Унта вара Сидоров ним пĕлми пуличченех ĕçсе лартнă. Василиси те ĕçнĕ пулмалла ĕнтĕ. Ирхине Сидоров темле ют çĕрте вăраннă, унпа юнашар Василиса выртнă. «Ăçта эпир?»—тесе ыйтсан, Василиса ăна ыталаса илнĕ те: «Çывăр, тусăм, çыхăр, эпир шанчăклă çĕрте»,—тенĕ. Василисăн темле пĕччен пурăнакан карчăк пулнă-мĕн. Хулана килсенех вăл ун патĕнче темиçе кун хваттерте пурăннă. Çавăн хыççăн вĕсем, Сидоровпа иккĕшĕ, унта час-часах çӳреме пуçланă... Ну, кайран мĕн пулнине пĕлетĕн: сан каччăна Василиса пуçĕпех сивĕтсе хăй çавăрса илнĕ. Çавăнпа вăл сан патна больницăна та вуçех пымарĕ, Сидоровĕ пирĕн пата та пырса кĕмерĕ. Халь калама юрать ĕнтĕ: Василиса Сидоровпа çӳренине пĕлнĕ эпир, мĕн-

шĕн тесен вĕсем хулĕсемпе çакланса утнине иккĕ-виççĕ те курнă, анчах сана пăлхатас мар, халь те чирлĕ çын чĕрине ыраттарас мар, терĕмĕр. Василисине хăйне хытă пăскăртрăмăр: мĕншĕн Маруся каччине ыталашса çӳретĕн, намăссăр?! Вăл пире хирĕç пĕррех лаплаттарса хучĕ: хупăр çăварусене, сире мĕн ĕç? Сидоров Маруся упăшки мар-ха, анчах ман упăшка пулма та пултарать, курăр ак, терĕ. Çавăн пек каланашăн эпир ăна кураймиех пултăмăр, анчах мĕн тăвас тетĕн! Пĕлмен-çке эпир вăл сан çинчен ним намăса пĕлмесĕр суйса, элеклесе тултарнине, пĕлнĕ пулсан, Сидоровне хăй ĕçлекен çĕрех кайса ăнлантарса панă пулăттăмăр, хамăрпа пĕрле сан патна больницăна та илсе пыраттăмăр та çав...

Пĕр хушă виççĕмĕр те ним чĕнмесĕр лартăмăр. Ман ĕнтĕ каласа сăмах та тупăнас çукчĕ, ытла та хытă пырса çапрĕ мана Агни каласа пани. Агнипе Марьям, нумай хушă хамăрпа пĕрле пурăннă, эпир чăн-чăн тус вырăнне хунă Василиса çавăн пек тискер ĕç туса хунине аса илсе, шухăша кайрĕç пулмалла.

Унтан Агни каллех калама тытăнчĕ.

— Эпĕ Сидоровран вĕсем халь мĕнле пурăнни çинчен ыйтрăм. Телейлĕ ĕнтĕ эсир, çапла-и?— тетĕп. Вăл ман çине чăр-р пăхрĕ те, ал сулса тепĕр çур стакан эрех ĕçрĕ. «Тӳсме çук телейлĕ! Ниçта кайса кĕмелле мар! Тăшмана сунмăттăм ун пеккине! Йытăпа кушак пекех пурăнатпăр. Ятлаçмасăр, вăрçмасăр пĕр кун та иртмест! Тепĕр чух ир пуçлать те каçченех кăшлать. Таçта тĕнче хĕрне тухса тарăттăм!» —терĕ вăл. Мĕншĕн ун пекех? Тен, эсĕ ху айăплă уншăн, тетĕп. «Манра ним айăп та çук, эп йĕркеллех пурăнма тăрăшатăп. Ĕçрен тухсан, часрах киле чупатăп, çынсем пек буфетсенче-мĕнсенче тытăнса тăмастăп, çула май килте мĕн кирлине илме тăрăшатăп çеç. Укçине те сахалах илместĕп халь — пире, электросварщиксене, лайăх тӳлеççĕ, хăш чух уйăхне çĕр аллă — çĕр çитмĕл ӳкет, хам тĕллĕн нимле расхут та тумастăп, пĕтĕмпех ун аллине паратăп, ăна пурĕпĕр эп хам çума хĕссе хăварнăн туйăнать... Хăш чух ĕç хыççăн тĕрлĕ канашлусем, пухусем пулаççĕ те ирĕксĕрех киле кая юлса пыма тивет... Эх, пуçланать вара ахăрсаман! Аçта пултăн, кампа явăçрăн, кам вырăнĕ çинче йăвалантăн? Кашни телефон юпи çумнех хушса кĕвĕçме хатĕр... Эпĕ вула-

ма питĕ юрататăп та, хăш чух кĕнекесем илкелетĕп. Уншăн та çисе ярать. Нумай пулмасть икĕ лайăх кĕнеке туянсаттăм — вăрçă çинчен. Киле пырсанах тытрĕ те çавсене, лăр-лар çурса тăкрĕ, урайне пăрахса таптама тытăнчĕ. Тӳсеймерĕм, пĕр кĕнекин хуплашкине çĕртен илсе, питĕнчен çупса ятăм. Унччен пĕрре те ал хуманччĕ. Ах ту-ур, пуçланчĕ вара!.. Урайне ӳкрĕ те урисемпе тăпăртатса кравул кăшкăрма тапратрĕ, эп ăна мăка çĕçĕпе пусма тытăннă пек! Хваттер хуçисем те чупса пычĕç, мĕн пулнă, теççĕ, ман арăм çаплах тапкаланса çухăрать: мана упăшка вĕлерме тапратрĕ, часрах милици чĕнĕр, тет. Çавăн пек ыр курса пурăнатпăр эпир!» — тесе тĕлĕнтерчĕ мана Сидоров. Пĕр енчен хĕрхенес те килсе кайрĕ манăн ăна...

— Ну, шуйттан Васьки! Хăй çынна юри улталаса кавча тухать те, халь çавăн пек хăтланать тата, эсрелĕ!—тарăхнипе сĕтел çине çапса илчĕ Марьям.

— Чим-ха эсĕ, каласа пĕтерме пар,—пӳлчĕ ăна Агни.— Пĕр хушă чĕнмесĕр ларсан, Сидоров тăрук хăйне çамкинчен çапа-çапа илчĕ. «Ухмах çав эпĕ, тĕнчере çук ухмах, çав çĕлен элекне пĕчĕк ачалла ĕненсех хамăн телее ĕмĕрлĕхе çухатрăм!» —терĕ çавăнтах. «Мĕнле телее?» — юриех ыйтрăм эпĕ, вăл мĕн пирки каланине тавçăрнă пулин те. «Мĕнле телее пултăр? Марусьăна!— кăшкăрчĕ вăл мана хирĕç.— Эпир унпа пĕрлешесси патнех çитнĕччĕ вĕт! Эпĕ унпа хамăн чăнчăн телее тупаттăм!» —Çапла каларĕ те, пуçне сĕтел çине хурса, ăна ик аллипе яваласа илсе ĕсĕклеме тытăнчĕ. Эп ним чĕнмесĕр лартăм. Унтан вăл тăрук сиксе тăчĕ те, юлашки эрехне ĕçсе ярса, пĕр сăмах каламасăрах тухса кайрĕ... Çавăн пек истори пулчĕ çав пĕррехинче...

— Апла-ха, эппин, пит хитре пурăнаççĕ! Пурăнччăрах, ара, ыр курччăрах, вĕсем çавна шыранă вĕтха,— терĕм эпĕ. Анчах ăшра темле аван мар пулса кайрĕ. Лайăх çынччĕ-çке çапах та Сидоров... Улталанă ăна. Хăй çамрăк, пурнăçа пĕлсех кайман, тӳрĕ чунлă пулнипе чăнлăхпа суяна уйăрса илеймен те танатана лекнĕ. Халь асапланать ав, хăтăлса тухма майĕ те çук унăн. Часах ача çуралать те акă, ун чух пушшех... Сидоров пек çын хăй ачине пăрахас çук...

Агнипе Марьям мана Шупашкара пыма ӳкĕтлеме тытăнчĕç.

— Атя, сана пĕр сăмахсăрах каялла илеççĕ! Каллех пĕрле пурăнăпăр, техникумра та вĕренĕн...

— Çук, тусăмсем, халлĕхе пыраймастăп-ха,—терĕм вĕсене,— кунти ĕçсене те пăрахса кайма май килмест — библиотекине те, комсомол организацине те. Райкомрисем те ярас çук мана...

— Ну, хăвăнне ху пĕл, эппин, сана никам та ирĕксĕрлеме пултараймасть, çапах та çавăн чухлĕ вĕренсе илнĕ квалификацие çухатма шел пулмалла,—терĕ Агни.

— Тен, эс кунта хăвна валли каччă тупса янă?— кулса илчĕ Марьям.—Асту, кавча каяс-тăвас пулсан, пире туя чĕнме ан ман! Эпир хĕрçумĕсем пулăпăр...

— Ку шухăш пуçра та çук-ха, вăл енчен шанчăклă,— эп те кулса илтĕм ăна хирĕç.— Тата кунта каччине тупма та хĕнтерех. Эсир акă манран малтарахран сиксе тухма пултаратăр, хулара каччăсем навалом унта...

— Сан Сидорову пеккисем-и? Кирлĕ мар!— ал сулчĕ Марьям.

— Мĕншĕн? Пĕтĕмĕшпе илсен, Сидоров та начар каччах марччĕ... Çакăн пек улталанман пулсан,— терĕм эпĕ.

— Тен, эсĕ ăна халь те юрататăн?—ыйтрĕ Агни.

— Юратасси тарама-ха вăл. Тĕрĕссипе калас-тăк, хĕрхенетĕп пăртак. Эс каласа кăтартни пĕтĕмпех тĕрĕс пулсан, пĕтме пултарать вăл. Анчах унăн ĕмĕчĕсем пысăкчĕ. Хитре ĕмĕтсемччĕ. Вĕренесшĕнччĕ, лайăх специалист пуласшăнччĕ... Халь темле ĕнтĕ...

— Кун пек пурнăçпа малалла каясса шанма çукрах çав,— терĕ Марьям.— Темшĕн-çке çамрăк чух йăнăшсем нумай тăватпăр!

— Çав йăнăшсене асра тытса, вĕренсе те пыратпăр хăш чух,— ассăн сывласа илчĕ Агни.—Усăллă та пулаççĕ вĕсем...

Каçаллапа эпĕ хамăн тусăмсене Етĕрне çулĕ çине çитичченех — тăватă километр — ăсатса, автобус çине лартса ятăм.

— Час-часрах пыркаласа çӳре хулана, ĕçпе пырсан та пире курмасăр ан кай!— терĕç хĕрсем.

Киле эпĕ пĕчченех таврăнтăм. Питĕ салху пулчĕ мана. Кичем. Хурлантăм. Макăрас килчĕ. Эпĕ те Агнипе, Марьямпа пĕрле пулмаллаччĕ-çке халь, пĕрле ĕç-

лемеллеччĕ, вĕренмеллеччĕ. Пĕтĕмпех çав Василиса пĕтерсе хучĕ! Тен, хам та йăнăш турăм пулĕ, вăл леш каçхине, эп больницăран таврăнсан, кӳрентерсе тăкрĕ те, эп ним тытăнса тăмасăрах, никампа канашласа пăхмасăрах пăрахса килтĕм. Тен, тӳссе ирттерсе ямаллаччĕ манăн? Чĕрене хытармаллаччĕ, шăла çыртмаллаччĕ те — пĕтĕмпех иртсе каятчĕ?

Анчах тӳсеймерĕ çав ун чух хĕр чĕри...

* * *

Ялта ĕçлекенсен çуллахи вăхăтра унта-кунта тухса çӳреме вăхăт пачах та çук, темелле. Колхозниксен çеç мар, партипе комсомол, культура енĕпе ĕçлекенсен те пушă кунсем, ирĕклĕ вăхăт пулмасть. Çавăнпа та Шупашкара эпĕ сентябрь пуçламăшĕнче тин лекрĕм, вăл та хам ирĕкпе мар, ялти комсомол секретарĕсемпе культработниксен пĕр кунлăх канашлăвне чĕннипе пулчĕ. Хамăн хĕр-туссене курас, вĕсемпе пĕрле ытларах пулас, тесе, эпĕ хулана каçах тухса вĕçтертĕм. Пĕр сакăр сехетре çитрĕм те, ниçталла пăрăнмасăрах, тӳрех хĕрсен общежитине кайрăм. Алăкра мана каллех хайхи ватă вахтер Елень инке тĕл пулчĕ. Палласа илчĕ те чарăна пĕлмесĕр пакăлтатма тытăнчĕ. Аçта çухалтăн, мĕншĕн таврăнмастăн, качча каймарăн-и,— темтепĕр ыйтать манран. Çур сехет пуль тытса тăчĕ мана. Анчах эпĕ Агнипе Марьям килте пурри-çукки, хăш сменăра ĕçлени çинчен ыйтсан, вăл мана кӳрентерсех пăрахрĕ:

— Нихăш сменăра та ĕçлемеççĕ халь вĕсем...

— Епле ĕçлемеççĕ? Отпускра-им иккĕшĕ те?

— Отпускра та мар.

— Аçта кайнă, эппин? Мĕн пулнă вĕсене?

— Нимĕн те пулман. Каясси чăнах та кайнă вара. Карчăк мана тарăхтарма пуçларĕ.

— Кушак шăшипе выляннă пек ан выляса тăр ĕнтĕ манпа, Елень инке! Кала тĕрĕссипе, аçта вĕсем? Тен, кунта ĕçлеме пăрахса урăх çĕре куçнă? Манăн питĕ курмаллаччĕ вĕсене!— сасса кăшт хăпартсах каласа тăкрăм эпĕ.

Вăл ман çине пуçне чалăштарарах пăхрĕ те йăл кулса илчĕ.

— Ун пек маттур хĕрсем ĕçлеме пăрахас çук-ха, ухмах мар вĕсем,—терĕ ăшă кăмăлпа,—шăп та шай

лайăх ĕçленĕшĕн вĕсене иккĕшне те фабком шучĕпе поляксен патшалăхне курма экскурсине янă, ачам!

— Поляксен патшалăхне? Польшăна-и?

— Çавăнта çав! Мана валли мĕн те пулин илсе килетпĕр, терĕç-ха хĕрсем. Манмаççĕ пуль-ха карчăка. Ман ывăл шăпах гитлерсене хирĕç Польшăра çапăçса вилнĕ те, асăнмалăх пулать...

— Хăçан таврăнаççĕ?

— Часах мар пуль-ха, виçĕмкун çеç ăсатрăмăр та...

Пулмарĕ манăн туссене курасси, питĕ кăмăлсăрлантăм уншăн. Çав вăхăтрах хам ăшра ăмсанса-кĕвĕçсе те илтĕм: кур-ха, еплерех вĕсем! Урăх çĕршывсене кайса çӳреççĕ! Эпĕ пур — ялтан Шупашкара килсе кайма та вăхăт тупаймастăп. Паллах, эп кунта, фабрикăра ĕçленĕ пулсан, кая юлмастăм-та-ха ĕнтĕ... Хам айăплă! Çăтăр-çатăр пăрахса каймалла марччĕ. Тӳсеймерĕм çав, тӳсеймерĕм-çке. Çав Василисăна пулах...

Агнипе Марьям суккипе, эпĕ Елень инке патĕнче çĕр выртрăм. Каласма юратаканскер, вăл мана час сывăрма памарĕ, тем те каласа кăтартрĕ. Ун пек карчăксем пит нумай пĕлеççĕ вĕт: кам качча кайнă, кам уйрăлнă... Василиса патне те çитрĕ: ача тунă, ачи ывăл, хăйĕн пек хура мар, ашшĕ пек сап-сарă, кăн-кăвак куçлăскер, тет. Кун çинчен ăна Марьям каласа панă, кайса курнă пуль ĕнтĕ лешĕ.

Тĕлĕнсе каймалла! Çакăн çинчен илтсен, ман пуçа калама çук тискер шухăш пырса кĕчĕ! «Манăн пулмаллаччĕ ĕнтĕ çав сап-сар ача... Ман ачана туртса илчĕ Василиса...» шухăшларăм эпĕ. Анчах тепĕр самантранах хама вăрçса илтĕм: кай, мĕн ухмахланатăп çак эпĕ! Мĕнле ман ача пултăр вăл? Вĕсен ачи вăл, вĕсен... Манăн мĕн ĕç пур унта?!

Тепĕр кунне эпĕ канашлура пултăм та каçхине киле çитрĕм. Темшĕн-çке, çывăрма выртсан та мана общежитинчи вахтер Елень инке каланă сăмахсем аса килчĕç: «Ачи ывăл, ашшĕ пек сап-сарă, кăвак куçлăскер, тет...» Тĕлĕкре те куртăм çавăн пек ачана...

Кайран мантăм ун çинчен. Ĕç нумай чухне пурте манăç пулать.

Пĕр уйăх пек иртсен, хĕрсенчен çыру илтĕм. Вĕсем хăйсем Шупашкарти ытти фабрикăсемпе заводсенчи çамрăк рабочисемпе пĕрле Польшăна мĕн тери лайăх

кайса килни, ăçта-ăçта пулни, мĕн-мĕн курни çинчен çав тери хавассăн çырнăччĕ. Лайăххисемпе пĕрле хăрушшине те курнă — Освенцимри вилĕм лагерьне кĕртсе кăтартнă вĕсене, унта нимĕç фашисчĕсем тăватă миллион çын ытла вĕлернĕ...

— Фашистсем асаплантарса вĕлернисене, крематори кăмакисенче çунтарса янисене асăнса лартнă палăк умне эпир чечексем хутăмăр, темиçе минут ним чĕнмесĕр тăтăмăр,— тесе çырнă хĕрсем.

Питĕ хумханмалла çырнăччĕ!

— Юлашкинчен, тусăм, сана питĕ йывăр хыпар пĕлтеретпĕр,— тенĕччĕ çыру вĕçĕнче: — Пĕр эрне каялла Василиса упăшки Атăла путса вилнĕ. Халăх хушшинчи сăмаха ĕненсен, çак хăрушă истори çапла пулса иртнĕ: каçхине, Сидоров ĕçрен таврăнсан, Василиса ăна темшĕн айăплама тапратнă, вĕсем питĕ хыта тавлашнă, урса кайнă Василиса упăшкине мĕн алла кĕнĕ — çавăнпа çапма тытăннă (ăна хваттер хуçисем илтнĕ), вара Сидоров, тӳсеймесĕр, килтен тухса кайнă. Пĕр вунă сехетсем тĕлĕнче ăна ресторанта курнă, вăл унта палланă-палламан çынсене те ĕçтернĕ, анчах хăй ытлашши ӳсĕрех пулман, тет, алăк патĕнчи швейцар Сидоров ресторантан мĕнлерех тухса кайнине астăватьмĕн. Киле таврăнман вăл. Ир те, кăнтăрла та. Каç пулсан та пыман, тепĕр кунне те. Йĕп пекех çухалнă. Василиса ыйтнипе хваттер хуçи милицие кайса пĕлтернĕ. Лешсем шырама тытăннă, анчах усси пулман. Ресторантан тухса кайнă хыççăн Сидорова урăх никам та курман. Милицисем çак каçхине Атăл хĕрринче пĕр çыннăн кимми çухалнине пĕлнĕ те, Сидоров çав кимĕпе Атăл леш енне каçнă е анаталла кайнă пуль, тесе шутланă çеç. Ик кун иртнĕ çапла, виçĕ кун. Тăваттăмĕш кунĕнче тин, ирхине, пулăçсем ун вилли Кувшинка тĕлĕнчи хăйăрлă утрав хĕрринче, шыв ăшăх пулнă çĕрте выртнине асăрханă... Халь ĕнтĕ Василиса тăлăха тăрса юлчĕ. Пĕр енчен шутласан, çавă чух ăна. Пирĕн вахтер Елень инке калашле, çын хуйхи çинче тунă телей — çурхи пăр пекех, е ирĕлсе пĕтет вăл, е шывпа юхса каять. Хăйĕнчен ытларах ачине шеллетпĕр. Ăна курнă эпир, ачи ытармалла мар лайăх, каснăлартнă Сидоров ĕнтĕ...

Çакна вуласа тухрăм та эпĕ, мана такам тăрук хăратнă пек, пĕтĕм кĕлеткепе чĕтреме тытăнтăм. Сидо-

ров... Федя Сидоров! Вилнĕ! Шыва путса вилнĕ! Ун виллине виçĕ кунтан тин тупнă... Турăçăм!..

Çав самантра эпĕ вăл мана пăрахса Василиса упăшки пулса пурăннине те йăлт мантăм. Ман ума салтак тумĕ тăхăннă тĕреклĕ, хитре, йăл кулакан сар каччă тухса тăчĕ. Акă вăл пире, Василисăпа иксĕмĕре, урамра хуса çитет те пирĕнтен уйрăлмасть, акă мана общежити алăкĕ патĕнче тытса чарать, акă эпир унпа кинора, опереттăра... Акă вăл иксĕмĕр пĕрлешесси çинчен калать... Ун сассине те илтетĕп: «Пĕрле пулни вĕренме кансĕрлет-и-мĕн? Çынсем авланаççĕ те частнăй хваттерсенчех пит аван пурăнаççĕ...»

— Ак ĕнтĕ, авлантăн, частнăй хваттерте пурăнса куртăн...—хам сисмесĕрех пăшăлтатса илтĕм эпĕ.— Лайăх пурăнтăн-и? Нумай ыр куртăн и? Эх, Федя, Федя! Кун пекки çинчен мар ĕмĕтленеттĕн те çав эсĕ... пĕтрĕн-çке!

Манăн куççулĕ шăпăртатса анчĕ.

Малтанах, хам больницăран таврăннă леш хăрушă каç Василиса «эпир унпа упăшкипе арăмĕ пулнă ĕнтĕ», тесе мухтаннă хыççăн, Сидорова эпĕ пĕтĕм чунчĕререн кураймастăм. Анчах Сидоров Агнисем патне пырса чунне уçса пани çинчен пĕлнĕ хыççăн манăн пĕтĕм çилĕ иртсе кайрĕ. Хам ăшра пĕтĕмпех каçартăм эп ăна. Айăплă пулман-çке вăл. Пĕтĕмпех Василиса туса хунă. Юлашкинчен акă вăл ăна пуçĕпех пĕтерчĕ. Мĕн тери ырă, лайăх каччă, çутă ĕмĕтсемпе пурăннă çын ĕмĕрĕ татăлчĕ!..

Темиçе кун шухăшласа çӳрерĕм эпĕ çакăн çинчен. Хĕрсен çырăвĕнче Сидоров вилĕмĕ çинчен çырнă вырăна темиçе те вуласа тухрăм. «Тăваттăмĕш куннĕнчен тин, ирхине, пулăçсем ун вилли... утрав хĕрринче, шыв ăшăх пулнă çĕрте выртнине асăрханă...» тенине вуласан, кашнинчех куççулĕ тухрĕ.

Эп хуйхăрнине анне сисрĕ.

— Мĕн пулчĕ тата, эрнипех такам пуçран тукмакпа çаппă пек çӳретĕн?— кăмăлсăр ыйтрĕ вăл.

— Пĕр лайăх паллана çын ăнсăртран Атăла путни çинчен пĕлтерчĕç те, çавна хĕрхенетĕп-ха,— тĕрĕссинех каларăм ăна.

— Ак тата инкек! Арçын-и, хĕрарăм-и?

— Арçын...

— Ватă-и, çамрăкскер-и?

— Çирĕм тăваттăсенче пулма кирлĕ, унтан ытла мар.

Анне, тем сиснĕ пек, мана куçран кăнн! пăхса илчĕ. «Санăн хăвăн каччу мар-и вăл?» тесе ыйтнăнах туйăнчĕ. Анчах вăл:

— Çамрăк çынна пушшех хĕрхенмелле ĕнтĕ,—терĕ çеç.

Питĕ хĕрхентĕм çав. Путса вилнĕ Сидорова çеç мар, ман чуна çав тери хытă ыраттарнă, ман пурнăçа хуçса хунă Василисăна та хĕрхенес килчĕ. Чĕри çавăн пек манăн, йăваш чĕре. Çынсене часах каçаратăп. Мĕнле пурăнĕ-ха ĕнтĕ халь Василиса? Агнипе Марьям калашле, пĕччен пуçăн ачине мĕнле пăхса ӳстерĕ? Тек кавча каясси пулаймасть пуль-ха, хуракăш евĕр пин-пин хĕр ярăнса çӳренĕ çĕрте ачаллă хĕрарăма кам илтĕр? Тата кавча кайма май килсен те, темле арçын лекет-ха: ют çын ачине пĕрле усрасшăн пулĕ-ши вăл? Тепĕр чух тăван мар ашшĕсем тăлăх ачасемшĕн кашкăртан та усалтарах пулаççĕ, кашни çăкăр татăкне сăмахлаççĕ, ăçтан та пулин ӳсĕр таврăнаççĕ те пĕр айăпсăрах хĕнесе тăкаççĕ, мĕскĕн ачасем вара шкулта та начар вĕренеççĕ, çынсенчен ютшăнакан пулса каяççĕ, тепĕр чух, тӳсеймесĕр, килтен тухса тараççĕ те шпанасем хушшине лекеççĕ. Ун пекки темиçе çул каялла хамăр ялта та пулнă пирĕн... Кам пĕлет, тен, Сидоров ачин шăпи те çавнашкал пулĕ? Питĕ хăрамалла. Тата шутсăр хĕрхенмелле! Ача тени—ачаш чечек вĕт вăл, ăна лайăх пăхмасан, вăл пĕр наччасрах хуçăлма та, хăрса ларма та пултарать!

Час-часах шухăшларăм эпĕ çав ача çинчен...

Пăртак тăхтасан, Агнипе Марьям патне çыру ятăм. Хамăн пурнăç çинчен, ĕçсем çинчен çыртăм, каллех хăнана пырса кайма чĕнтĕм, юлашкинчен Василисăпа унăн ачи çинчен ыйтса çыртăм. Питĕ пĕлес килчĕ-çке! Вĕсем часах хирĕç çырса ячĕç: Василисăна комбинат çуртĕнче тепĕр ачаллă хĕрарăмпа пĕрле пурăнмалли пӳлĕм панă, ачине талăкĕпех усракан яслине вырнаçтарнă. Хăйĕн сывлăхĕ тӳрленсех пырать иккен—«малтан та, кайран та арбуз пекех çавракаланать, хĕр чухнехинчен те маттурланса кайрĕ, питех хуйхăрмасть пулмалла, час-часах ăна кинора та, танцинче те курма пулать, ухажорĕсем те çук мар пек туйăнать»,—тенĕччĕ хĕрсем хăйсен çырăвĕнче.

Ку мана питĕ тĕлĕнтерчĕ...

Епле-ха апла? Упăшки вилни нумай та пулмасть, ачи те кăкăр ĕмет пулĕ-ха, анчах вăл танцисене çӳреме те пуçланă... Çук, юратман вăл Сидорова, ытахальтен çеç, «вырнаçас» тесе кăна кавча кайнă. Çавăнпа та Сидоров вилнĕ-вилмен маннă ăна. Халь, тен, урăххине шырать? Ачине юратать-ши хуть, чипер, йĕркеллĕ пăхать-ши ăна? Яслине пани пит лайăх-ха вăл, анчах ача пĕр вĕçĕм унта пулмасть-çке, ăна эрнере пĕрре пулсан та киле илсе пымалла! Çăвас та пулать ăна, çипуçне те таса тытас пулать... Сахал-и!

...Ман хамăн пурнăç йĕркеллех пычĕ. Библиотекăра ĕçлетĕп, паллăрах кĕнекесем пирки вулакансен конференцисене ирттеретĕп, кĕркунне эп чĕннипе Шупашкартан писательсем тăваттăн-пиллĕкĕн пырса кайрĕç, ман библиотекăна мухтарĕç, хăйсен çĕнĕ кĕнекисене парса хăварчĕç. Çак таранччен те «чĕрĕ писательсене» курманнисемшĕн ку тĕлпулу питĕ усăллă пулчĕ. Çаван хыççăн ман библиотекăран кĕнеке илекенсем татах йышланчĕç. Комсомол енĕпе те ĕç сахалах марччĕ— кампанисем ирттермелле, докладсем тумалла, темтепĕр.

Çав вăхăтрах тата... хĕр шăпи çавăн пек-çке вăл! Леш колхоз радиоузелĕнче ĕçлекен каччă, анне сăмахĕпе каласан — «маçтăр-техник» мана юрату çинчен калама тапратрĕ, кавча тух мана, тет. Хам килте çук чухне анне патне евчĕ те янă! Хăй вăл юнашар ялсемччĕ, ман пекех çур тăлăх, ашшĕ вăрçăра вилнĕ. Каччи аптрамастчĕ ĕнтĕ, сăпай, нумай вулать, анчах темле... пиçсе çитменскер. Çирĕм иккĕре пулсан та, амăшĕ ăна час-часах пĕç хушшине хупса хулăпа ĕнтет, тесе кулатчĕç çынсем. Чĕр шуйттанччĕ ĕнтĕ лешĕ чăн та. Ялта ăна «Янра-Мари» тетчĕç — ялан янраса çӳренĕшĕн. Пĕррехинче кăтартрĕ вăл мана мыскара... Кĕтмен çĕртен, кăнтăр кунĕнчех, библиотекăна ӳсĕртерех пырса кĕчĕ те çав, сĕтел çине çур литр сăмакун шап! кăларса лартрĕ.

— Эсĕ пурпĕрех ман кин пулатăн-ха, тавай, килĕштернĕ ятпа, çынсем куриччен, иксĕмĕр çакна çавăрса хуратпăр!—тет. Çавăнтах хĕвĕнчен лăпчăнса пĕтнĕ икĕ панулми кăларса хучĕ:— Акă, саккуски те пур!— тет. Эп ĕçместĕп, тата ĕçре чух ĕçме те юрамасть, тетĕп. Вăл çаплах хăйĕнне перет: «Ĕçетпĕр!

Пире никам та чарма пултараймасть!.. Аран-аран тĕрткелесе кăларса ятăм. Э-эх, янрарĕ вара урамра! Тем те калать мана, шуйттан! Эс апла та эс капла, санăн хулара темиçе упăшка та пулнă пуль-ха, çавăнпа тарса килнĕ унтан, халь ман ывăла муталаса вăйпа качча пырасшăн! Илместпĕр сана, çывăха та ямастпăр сан пек сĕтĕрĕнчĕк хĕрсене, манашка пек тасине те тупатпăр, тет. Хуть те çĕр тĕпне анса кай! Юрать-ха çав вăхăтра таçтан колхоз председателĕпе парторг пырса тухрĕç те эрехне туртса илсе акт çырчĕç, кайран штраф та тӳллеттермелле тунă, терĕç. Ывăлĕ вара тек ун-кун çинчен çăвар та уçмарĕ...

Тем те курма тивет пурнăçра!

Вăхăт шурĕ. Пĕр хушă манăн хулари хĕр-туссем нимĕн те çырмарĕç, вăхăчĕ пулмарĕ пуль ĕнтĕ вĕсен— ĕçлеççĕ, вĕренеççĕ. Тĕлĕнмелли çук, каччăсемпе те çӳреççĕ пуль: театра, кинона, концертсене. Ташлама та пултараççĕ вĕсем, ман пек хĕсĕнсе пурăнмаççĕ.

Çĕнĕ çул умĕн темиçе кун малтан, бюджетри юлашки укçана расхутлас тесе, эпĕ Шупашкара кĕнекесем илме кайрăм. Сентябрьти пекех, юри каçа хирĕç тухса вĕçрĕм — темиçе сехет те пулин туссемпе пĕрле пулас тесе. Питĕ хĕпĕртерĕç эп пынăшăн, ыйтса пĕлме, хăйсем çинчен каласа кăтартма тытăнчĕç. Лайăх пурăнаççĕ иккен, пурнăçĕ пур енчен те ăнса пырать вĕсен. Агни парти кандидатне кĕнĕ, Марьяма фабкома суйланă.

— Капла эсир кĕçех министра та çитетĕр пуль,— кулса илтĕм эпĕ.— Кашни кун ӳсетĕр...

— Шанма çук, шанма çук,—ал сулчĕ Марьям,— часах пуç та çаврăнса каять пулĕ. Эмел илсе янтăлас шут пур-ха...

Яланхи пекех, майĕпе сăмах Василиса çине пырса тухрĕ. Хальхинче ун пирки чи малтан эп ыйтрăм.

— Номер туса хучĕ ĕнтĕ вăл,—терĕ Агни.—Цирк-ри пекех...

— Мĕнле номер тата?— хăранă пекрех ыйтрăм эпĕ.

— Качча кайрĕ пирĕн Васька!

— Качча?! Ан тĕлĕнтер-ха! Кама? Хăçан?—чут çеç кăшкăрса яраттăм эпĕ.

— Пĕр эрне те çитмерĕ пуль-ха,—терĕ Марьям.— Арçынне эпир курман, анчах Васькăпа пĕр пӳлĕмре

пурăннă хĕрарăм каланă тăрăх — самаях ватăскер, кукша, мăн хырăмлă, тет. Урçа тет хăй, таçтан Горький облаçĕнчен командировкăна килнĕскер, тет. Заготовкăсем енĕпе ĕçлекенскер имĕш. Вĕсем кинора пăллашнă. Унтан ресторана кайнă. Çавăнтах калаçса татăлнă пулмалла вара. Тепĕр кунне лешĕ Василисăсен хваттерне эрехсем çĕклесе пынă. Туй тунă. Анчах туйĕнче виççĕн çеç пулнă: çав арçын, Василиса тата унпа пĕрле пурăннă хĕрарăм... Ĕçнĕ-çинĕ те пĕрле выртнă...

— Ачи тата? Ачине хăйĕнпе пĕрле илсе кайнă-и?— Марьяма пӳлсех ыйтрăм эпĕ, çав тери пăлханма пуçласа.

— Çук, ачине хăварнă.

— Епле хăварнă? Кампа?

— Леш кукша арçыннăн услови çакăн пек пулнă: эс мана килĕшетĕн, сана илетĕп, улпут майри пекех пурăнăн ман патăмра,—тенĕ вăл Василисăна,—анчах ют ача кирлĕ мар мана, ачине эпир хамăр та пит лайăх тума пултаратпăр. Ачуна вырнаçтарса хăварас пулать, унсăрăн ĕç тухмасть пирĕн. Василиса вырнаçтарнă вара...

— Ăçта? Кам патне?

— Ачасен çуртне. Детдома мар, Дом ребенка тенине. Çавăн пек закон пур иккен: хăраххăн пурăнакан хĕрарăм хăйĕн ачине пăхса ӳстерме государствăна пама пултарать. Паллах, ун пек хĕрарăмсем пинте пĕрре çеç пулма пултараççĕ — камăн уйрăлас килтĕр-ха хăйĕн тăван ачинчен, хăй выçă ларсан та пăхса ӳстеретех вăл ăна!— анчах пирĕн Васька нумай шухăшласа тăман, уншăн çав кукша арçынпа йăпанса пурăнасси хăй çуратнă ачинчен хаклăрах пулнă иккен... Леш кукши васканă, унăн командировка срокĕ пĕтсе пынă, çавăнпа та Василиса, «тупăшлă качча» вĕçертес мар тесе, мĕн тумаллине пурне те ик кун хушшинчех туса çитернĕ: фабрикăра расчет илнĕ, ачине яслинчен илсе Ача çуртне кайса вырнаçтарнă, пур-çук япалисене пуçтарса чикнĕ те никампа сывпуллашмасăрах, вăрă пек тухса кайнă. Вăл ăçта, хăш вырăна кайнине, халь ăçта пурăннине тĕрĕссипе никам та пĕлмест...

— Путсĕр... Проститутка!—тесе хутăм эп хам сисмесĕрех, калама та çук тарăхса кайнипе.

— Ӑуть те мӗн кала, анчах вӑл пӗртен-пӗр ачине пӑрахсах ыр курма тухса кайрӗ ак,— терӗ Агни.— Тӗлӗнсе хытсах каймалла!

— Анчах эпӗ нимӗн чухлӗ те тӗлӗнместӗп,— ал сулчӗ Марьям.— Вӑл яланах пӗр хӑйшӗн çеç пурӑннӑ. Леш Сидорова та хӑй ыр курасшӑн муталаса хучӗ, кайран вӑл вилнӗшӗн ним чухлӗ те хуйхӑрмарӗ, тӳрех урӑххине шырама тытӑнчӗ. Халь те акӑ ыр пурнӑçпа пурӑнасшӑн, тӑван ачине йытӑ çури пекех пӑрахса хӑварчӗ. Ку ватӑ кукшипе те ӗççем ӑнмасан, тата мӗн те пулин шухӑшласа тупать пулӗ-ха. Опыт пур халь унӑн...

— Ӑçтан пулаççӗ пуль çавӑн пек çӗлен чунлӑ этемсем!—терӗм эпӗ çаплах лӑпланаймасӑр.

— Пиçен-кикене акмаççӗ, вӗсем хӑйсемех шӑтаççӗ,—терӗ те Агни, хӑй умӗнчи хыççӑр пукана тапса ячӗ.

— Çитменнине вӗсене тӑруках тӑпӑлтарса пӗтерме те çук тата,— хушса хучӗ Марьям.

— Ачине кам хушамачӗпе çыртарса хӑварнӑ-ши?

— Хӑйӗнпе мар ӗнтӗ, Сидоров хушамачӗпе! Мӗн тума хӑй çине çыртартӑр вӑл ӑна?— тӗлӗннӗ пек пулчӗ Агни.— Халь акӑ хӑйӗн хушаматне те улӑштарать, леш кукша хушамачӗпе çӳреме пуçлать пуль-ха.

— Апла пулсан, ку ачи ӳссен те амӑшне шыраса тупаймасть?

— Мӗн тума шырамалла ӑна, мӗн тума тупмалла?

— Çапах та, ачи те-ха...

— Вӑл ӗнтӗ чӑнах та ун ачи, анчах Василиси пӗртте ун амӑшӗ мар! Амӑшӗсем çавӑн пек тумаççӗ, чип-чипер пурӑнма май пулнӑ çӗртех тӑван ачисене пӑрахмаççӗ!— терӗ Марьям çилӗпе.— Вӑрçӑ вӑхӑтӗнче пирӗн анне пилӗк ачапа тӑрса юлнӑ,— атте фронтра пӗтнӗ,— çапах та пире нихӑшне те пӑрахман, темле йывӑр пулсан та пӑхса ӳстернӗ. Халь эпир пурте çын пултӑмӑр. Нуша пирки пӑрахса кайрӗ-им Василиса хӑйӗн ачине? Мӑнтӑрпа сикет вӑл!..

* * *

Питӗ салху шухӑшсемпе таврӑнтӑм эпӗ киле.

Василиса хӑйӗн ачипе çав тери çӑмӑллӑн уйрӑлса ӑнсӑртран тӗл пулнӑ «кукшана» кайча кайни ниепле те пуçран тухмарӗ. Çук, «пуçран тухмарӗ» тени тӗрӗс

те мар пулĕ-ха вăл. Василиса çавăн пек тума пултарни ман пуçа вырнаçмарĕ, тесен тĕрĕсрех пулать пулĕ. Лайăх çĕрте ĕçлесе пурнăç валли çителĕклĕ укçа тупакан çамрăк, вăйпитти хĕрарăм пĕрре куç хупса илнĕ хушăрах тенĕ пек çавнашкал тума пултарнине ăнланса илеймерĕм эпĕ, акă мĕн. Епле пулма пултарать-ха ун пекки? Мĕнле чĕре, мĕнле туйăмсем пулмалла ун пек çыннăн?

Хушăран эпĕ хама Василиса вырăнне тăратса пăхрăм. Вăл мар, эпĕ тăлăх арăм пулса юлнă пултăр. Ман алăра пĕчĕк ача пур, тейĕшĕр. Хамăн ача, эп çуратнăскер. Ман ӳт, ман юн. Сасартăк мана качча илме килĕшекен арçын тупăнать. «Анчах ют ача кирлĕ мар мана... ачуна вырнаçтарас пулать»,— тет вăл. Мĕн тăвăп-ши эпĕ? Нивушлĕ çав çын каланипе килĕшĕп, унпа пĕрле пуласшăнах хам ачана пăрахăп? Çук, çук! Пин хут çук! Ун пек пулма пултараймасть. Хуть те пус-кас эс мана, вĕлер, анчах хамăн ачана пăрахмастăпах! Манăн вăл, манăн! Никама та памастăп эп ăна, хуть пĕр-пĕр çынна, хуть патшалăх учрежденине, пурĕпĕр памастăп! Акă вăл, пĕчĕкскер, майĕпе ӳссе, пысăкланса пырать те каласа тытăнать... Кирек хăш ача та чи малтан «анне» сăмаха калама вĕренет. Çавăн пек юта пăрахса хăварнă ача кама «анне» тесе калатăр-ха? Кама? Çак сăмах, тĕнчери чи таса, чи хаклă сăмах ун çăварĕнчен нихçан та тухмасть. Мĕншĕн тесен амăшĕ çук унăн...

Шухăшланă-ши çавăн çинчен Василиса?!

Паллах ĕнтĕ, шухăшламан. Шухăшланă пулсан ун пек туман та пулĕччĕ вăл. Пăрахмĕччĕ ачине.

Тен, унăн чĕри вуçех çук? Этем туйăмĕсем çук? Тен, вăл чипер ăс-тăнлă этем мар, а м а кăна? Канлĕ пурăнас, тутлă çиес те арçынпа йăпанас ĕмĕт çеç унăн?

Каллĕ-маллĕ шутласан, çавăн пек пулса тухать...

...Тата тепĕр хĕл ирттертĕм ялта. Унтан каллех çуркунне çитрĕ, çулла та пулчĕ. Çутçанталăк кустăрми хăйĕн ĕмĕрхи, нихçан улшăнман çулĕпе малалла кусса пырать. Сайра хутра Шупашкара кайма тивсен, кашнинчех хĕр-туссем патне кĕрсе тухрăм. Кашнинчех Василиса çинчен ыйтрăм. Нимĕнле хыпар та çук-мĕн ун пирки. Шыва пăрахнă чул пекех çухалнă вăл. Хĕрсем унпа пĕр пӳлĕмре пурăннă хĕрарăмран та ыйткаласа пăхнă пĕррехинче: тен, сан пата çырать вăл?

Тен, ачи пирки кайса пĕлме пулать? Леш хĕрарăм аллипе сулса вăрçса тăкнă çеç çакна хирĕç:

— Мĕн тума çыртăр вăл ман пата? Этем мар вĕт вăл! Ачине хăй пăрахса хăварчĕ те, ма ыйттăр халь тин ун çинчен? Ачи вилнине пĕлсен те савăнать кăна пуль! Тьфу! Арçынсем хăйсен ачисене пăрахнинчен тĕлĕнмеллиех çук, ун пекки час-часах пулать пурнăçра, подлеццăсем нумай-ха, анчах ку—хĕрарăм-çке-ха, хĕрарăм!.. Эпĕ те акă хăраххăн пурăнатăп,—ман арçынĕ пирĕн ача пулассине пĕлсенех тухса тарчĕ,—анчах эпĕ ачана ниçта та памарăм, пама та шутламастăп, хамах пăхса çитĕнтеретĕп, таркăн ашшĕнчен алимент та шырамастăп, çăва патне унăн шăршлă укçине, хăйĕн карланкине тултарма та çитмест пуль-ха çапкаланчăкăн! Анчах ку Василисăна каçарма çуках. Эпĕ ăна ун пек ан хăтлан, ачуна хăвăнтан ан уйăр, тесе çĕрĕпе ӳкĕтлерĕм,—итлемерĕ вĕт мана, вăл!

— Çавах та вăл сан пата çыру ярас-тăвас пулсан, систер-ха пире, адресне пар,—ыйтнă хĕрсем.

— Паратăп, ара, шалккă-им мана! Анчах çырасса шанмастăп. Тухса кайнă чух ачине кайкаласа курма та хушса хăвармарĕ мана, хăйĕн сысна аçи пек еркĕнĕпе часрах тухса вăркăнма васкарĕ, кĕрт ами!—тенĕ хĕрарăм.

— Ансăртран, эсир Василиса ачине хăвăр кайса курман пулĕ те?—ыйтрăм Агнипе Марьямран.

— Ун çинчен шухăшламан,— терĕç вĕсем.— Мĕн, санăн хăвăн кайса курас кăмăлу пур-и-мĕн?

— Çук, ахаль ыйтатăп,— терĕм эпĕ.— Мĕн ĕç пур ĕнтĕ ман унпа. Ни ман тăван, ни хурăнташ ачи мар...

Анчах Шупашкара тепре пырсан, эпĕ, никама систермесĕр, никама каламасăрах, çав «Дом ребенка» тенине кайрăм. Питĕ пăлхантăм хам. Патне çитсен те чутах каялла çаврăнса каяттăм: мĕн тăватăп эпĕ, мĕне кирлĕ ку мана, тетĕп. Анчах чун малаллах туртать. Мĕнех вара, курса тухнăшăн мĕн пулать? Ачи каснă-лартнă Сидоров, теççĕ. Куратăп та—тӳрех тухатăп, калаçса та тăмастăп...

Директор — хĕрĕхсенчен иртнĕ чăваш хĕрарăмĕ, сенкер платье çинчен сĕт пек шурă халат, çавăн пекех калпак тăхăнпăскер, мана питĕ кăмăллăн, ăшшăн кĕтсе илчĕ.

— Мĕн çăмăлпа килтĕр, итлетĕп сире,—терĕ те вăл, сĕтел умĕнчи çемçе пукан çине ларма сĕнчĕ.

— Манăн сирĕн патра пурăнакан пĕр арçын ача çинчен пĕлесчĕ... Юрать пулсан — курасчĕ те ăна...— терĕм хăюсăррăн.

— Ачин хушамачĕ мĕнле?

— Сидоров.

— Сидоровсем иккĕ пирĕн: пĕри Робик—Роберт ĕнтĕ, тепри Вова — Володя, Владимир. Сирĕн хăшне курмалла-ши?

Ак тамаша! Ачин ятне пĕлмен те вĕт-ха эпĕ! Анчах çухалса каймарăм: чăвашсемех хăйсен ачине Роберт ятне парас çук-ха, Володя çеç пулма пултарать вĕсен, халь тата нумайăшĕ хăйсен ывăл ачисене Владимир Ильич ятне параççĕ, терĕм те хам ăшра, çав ята каларăм.

— Эсир кам пулатăр-ха унпăн?—мана куçран пăхса ыйтрĕ директор.— Тăван-и, хурăнташ-и е амăшĕ хушнипе ахаль курса каясшăн? Тепĕр чух ун пек те пулать...

— Эпĕ... эп ун амăшĕн хурăнташĕ! Пирĕн аннесем пĕр тăван...—шухăшласа тăма вăхăт çуккипе тăрук персе ятăм çакна хирĕç. Чиперех çынна улталарăм!

Директор пĕр ватăрах няньăна чĕнсе илсе Вова Сидорова илсе килме хушрĕ. Виçĕ минут та иртмерĕ пуль, няня директор умне сап-сарă çӳçлĕ, кăн-кăвак куçлă мăнтăркка ача çĕклесе пычĕ. Хĕрсем тĕрĕсех калаçă-мĕн мана: чисти Сидоров! Çамки кăшт лаптакрах, сăмси тӳрĕ, янахĕ шĕвĕр. Василисăран нимĕн те çук, йăлтах Сидоровăн çав!

— Акă, эпир килсе те çитрĕмĕр,— терĕ няня, ачине пĕр аллине кăкăрĕнчен, тепринпе çурăмĕнчен тытса сиктеркелесе.— Эпир Вовик ятлă, хушамат Сидоров пирĕн... Апат лайăх çиетпĕр, шăлсем те пур халь пирĕн, чирлеместпĕр, питĕ хăвăрт ӳсетпĕр... Хаяр та мар эпир, ахаль çавăн пек куç харши айĕн пăхатпăр...

Ачи ман çине чăнах та куç харши айĕн, темле питĕ сиввĕн пăхрĕ. Эп ăна «Вовик, Вова!» тесе хам алла тытасшăн пултăм, анчах вăл вăрт! кăна няня еннелле çаврăнчĕ те пуçне ун хулпуççи çине хучĕ.

— Ютшăнма та пĕлетпĕр эпир,—терĕ няня, ачана каçаннĕнчен лăпкаса.— Палламан çынсем патне каймастпăр...

— Ун амăшĕ ăçта пурăнать халь?— ыйтрĕ директор.

— Пĕлместĕп çав,— терĕм эпĕ.—Таçта, инçетре пулмалла...

— Хурăнташ-çке вăл сирĕн, епле пĕлместĕр пулать? Сирĕн пата та çырмасть-и-мĕн?

— Эпир унпа... килĕштерместпĕр. Ятлаçса уйрăлнă.

— Пулать ун пекки, тепĕр чух çывăх тăвансем хушшинче те хирĕçни пулкалать. Пирĕн пата та çырмасть-ха вăл. Эпир Вовика йышăннăранпа кĕçех çулталăк çитет, анчах çав хушăра амăшĕ пĕр çыру та ямарĕ.— Директор ассăн сывласа илчĕ.—Тĕлĕнмелле хĕрарăм! Ун пеккине пуçласа куратăп... Ачи сывă-и, чирлĕ-и, чĕрĕ-и, вилнĕ-и — уншăн пурпĕрех, эппин. Мĕншĕн ун пек вăл?

— Вăл... вăл качча кайнă,— терĕм эпĕ, Василисăшăн хĕрелсе.

— Пулин! Качча кайни ниме те пĕлтермест. Çапах та Вова ун ачи-çке, епле манмалла ăна? Качча кайнă амăшсем нумай пирĕн, анчах малтанхи ачине те манмаççĕ. Пĕрмай çырусем яраççĕ, пăшăрханаççĕ, ыйтса пĕлеççĕ. Эпир яланах ответ паратпăр...

— Тен, хальхи упăшки çырма чарать ăна,—Василисăна тӳрре кăларма тăнă пек каласа хутăм эпĕ.

— Ну, тусăм... — пуçне пăркаласа илчĕ директор,—ун пек упăшка пулсан, çын та мар вара вăл! Хĕрарăма хăйĕн ачи çинчен шухăшлама, уншăн пăшăрханма кам чарма хăйтăр? Эп пулсан, ун пек упăшкапа пĕр кун та пурăнассăм çук. Эсир хăвăр пурăннă пулăттăр-и? Пурăнăттăр-и?

— Эп качча кайса курнă çын мар, анчах хам ачана пăрахса нихçан та качча каяссăм çук. Каймалла пулсан та, ман ача хам çумрах пултăр!

— Кунпа килĕшетĕп вара эпĕ...

— Эп те килĕшетĕп,— хушса хучĕ няня.

Ăнсăртран çакăн пек калаçса илтĕмĕр директорпа. Унтан ăна хамăн «хурăнташ ачине» курма май панăшăн тав туса тухса кайма хатĕрлентĕм.

— Тата килĕр, килсе куракансене эпир яланах ыр кăмăлпа йышăнатпăр,— терĕ вăл.— Анчах кучченеç таврашĕ илсе килме ан шутлăр, юрамасть, педагогика енĕпе пăхсан сиенлĕ вăл. Ачасене мĕн кирлине эпир пĕтĕмпех паратпăр, пурте пур пирĕн!

Урампа эпĕ хам умра мĕн пуррине те курмасăр утрăм. Ман куç умĕнче пĕр Вова çеç пулчĕ, Вова Сидоров, сап-сар çӳçлĕ, кăн-кăвак куçлă мăнтăркка ывăл ача. Вăл халь те ман çине темле кăмăлсăр, куçхарши айĕн пăхать пек. Мĕн тери юратмалла ача! Мĕнле пăрахса хăварма пултарнă ăна Василиса?! Чĕри вырăнне чул хурса панă-и ăна? Çыру та çырмасть, тетха, тата, ыйтса та пĕлмест ачи пирки! Пулать те иккен çĕр çинче этем!..

Шăп çавăн чух вара ман пуçра питĕ хăюллă шухăш çуралчĕ:

— Усрама илетĕп эпĕ ку ачана! Хам пăхса ӳстеретĕп, çын тăватăп. Володя, Владимир Сидоров пулать. Хитре каччă. Салтак. Студент. Инженер... Анчах чимха, мĕншĕн Сидоров? Сидоров çĕр çинче çук вĕт. Вилнĕ. Сидоров мар, Апанасов пулать вăл. Владимир Апанасов. Ман ывăл... Паллах, шикленмелли те пур. Вăй çитерĕп-ши ăна тĕрĕс пăхса ӳстерсе халăхшăн, патшалăхшăн усăллă çын тума? Хĕрача пулсан татахчĕ, ку арçын ача-çке? Арçын ачасене ӳстерме, вĕсене тĕрĕс воспитани пама, тӳрĕ çулпа илсе пыма пушшех йывăр, теççĕ. Ăна валли çирĕп кăмăл кирлĕ. Арçын алли. Ашшĕсĕр арçын ачасем часах пăсăлса кайма та пултараççĕ. Лайăхрах шухăшласа пăхас пулать. Тĕплĕн, пур енчен те. Халлĕхе кун çинчен никама та калас мар-ха...

...Эпĕ ĕнтĕ час-часах хулана, фабрикăна тавăнасси çинчен шухăшлама пуçларăм. Хĕрсем те çаплах чĕнчĕç. Хамăн та кăмăл туртрĕ. Специальность пур манăн, ĕçе илеççех. Ĕçе илсен общежити те параççĕ. Тен, каллех хамăн хĕр-туссемпе пĕрле вырнаçма май килĕ. Тепĕр хут каçхи техникумра вĕренме тытăнатăп... Производствăри квалификаци пур çĕртех хам ĕмĕре çак колхоз библиотекинче ларса ирттерейместĕп ĕнтĕ. Мана вĕрентсе халăх укçи те сахал мар пĕтнĕ. Эп государство умĕнче парăмлă-ха, манăн çав парăма вăхăта вăраха ямасăрах ĕçлесе татас пулать. Çавăнпа та ялти ĕçсенчен пушанмалла та фабрикăна тавăнмалла. Çапла шухăшларăм эпĕ хам тĕллĕнех. Тĕрĕс шухăшларăм пулĕ, тетĕп...

Ман телее, кĕркунне библиотекăра ман умĕн ĕçленĕ каччă çартан тавăнчĕ. Вăл килнине пĕлсенех, эпĕ ун патне чупрăм.

— Йышăн библиотекăна, ыранах йышăн!— терĕм ăна.

— Эс тата? Ĕçсĕр юлатăн-и?— иккĕленсе тăчĕ вăл.

— Маншăн ан кулян, эп те ĕлĕкхи çĕре каятăп...

— Йăлăхрăн-и ялта пурăнса?

— Уншăн мар, квалификацине çухатас килмест.

— Ку тĕрĕс ĕнтĕ...

Канмалли пулмарĕ йĕкĕтĕн. Эпĕ ăна хăйĕн библиотекине тавăрса патăм, комсомолецсем ăна ман вырăна хăйсен секретарĕ пулма суйларĕç. Кĕскен каласан, **наччасрах кӳлсе** лартрĕç ачана.

Эрнерен Шупашкара тухса кайрăм. Анне те хирĕç пулмарĕ, пĕрре вĕреннĕ ĕçех ĕçлес пулать çав, килçуртне хам та тыткаласа пурăнăп такăнса ӳкиччен, темех мар, терĕ.

Фабрикăна мана пĕр сăмахсăрах илчĕç, общежитинче те вырăн пачĕç. Чăн та, малтанах хамăн туссемпе пĕр пӳлĕме лекеймерĕм, анчах пĕр-ик эрнеренех вĕсемпе пурăнакан пĕр хĕрачапа калаçса татăлтăмăр та, вăл ман вырăна куçрĕ, эп — ун вырăнне. Вара эпир каллех пĕрле пултăмăр. Каçхи техникумра та чăрмав пулмарĕ, кивĕ списоксене тупрĕç те тӳрех «восстановить» тесе çырчĕç. Паллах, пĕрремĕш курса. Агнипе Марьям виççĕмĕшĕнчеччĕ ĕнтĕ, эп вĕсенчен икĕ çул кая юлтăм. Анчах мĕн тăвас тетĕн? Хам айăплă, тухса каймалла марччĕ çавăн чух!

Çапла каллех хула çынни, пысăк предприятинче ĕçлекен çын пулса тăтăм. Пурнăç малтанхи йĕркене кĕчĕ. Савăнтăм. Çав кунсенче вара каллех Василиса ачи пирки шухăшлама пуçларăм. Пĕр вырсарникун, никама систермесĕр, тепĕр хут кайрăм ăна курма. Директор мана тӳрех палласа илчĕ.

— Вова Сидорова курма пуль?— ыйтрĕ вăл.

— Çавна...

— Кăштах чирлерĕ те-ха вăл пирĕн, халь аптрамасть ĕнтĕ, сывалчĕ. Хăвăрт ӳсет. Калаçма пуçларĕ... Питĕ шухă ача!

Няня Володьăна илсе тухсан, вăл ман çине пĕркунхи пекех куç харши айĕн пăхрĕ-пăхрĕ те, мана аллипе тĕллесе сасартăк «мама», терĕ. Ман куç-пуç пĕçерсе кайрĕ, чĕре сикме тытăнчĕ. Кăшт тăрсан ача тепĕр хут «мам-ма», терĕ. Чут çеç куççуль пĕрхĕнсе тухатчĕ манăн...

— Ăçтан вĕреннĕ вăл ку сăмăха?— тĕлĕнсе ыйтрăм директортан.

— Ытти ачасенчен ĕтнĕ. Чылайăшĕ патне амăшĕсем килсе çӳреççĕ-çке. «Мама» сăмаха яланах илтеççĕ вĕсем...

Эпĕ Володьăна алла тытма тăтăм, вăл ютшăнса çурăмпа ман еннелле çаврăнчĕ, няньăна ыталас илчĕ. Анчах няня ăна директор пӳлĕмĕнчен йăтса тухса кайнă чух, алăк патне çитсен, тепĕр хут ман çине пăхса «мам-ма!» терĕ.

Хальхинче вара эпĕ куççуле чараймарăм... Ытла та хĕрхенес килсе кайрĕ-çке ăна! «Мам-ма» сăмаха калама вĕреннĕ, мăнтарăн ачи. Анчах ăçта-ши унăн «мами»? Пăрахнă вĕт вăл ăна, маннă!

Володьăна курнă, ун çинчен пĕлнĕ хыççăн манăн тухса каймаллаччĕ кăна ĕнтĕ, анчах эп выränтан хускалмарăм-ха. Çав тери пăлханса, хăюсăррăн пăхрăм та директор çине, хуллен кăна ыйтрăм:

— Калăр-ха, тархасшăн... эсир хăвăр патра пурăнакан ачасене усрава паратăр-и?

Вăл ман çине тĕлĕнерех, мана сăнаса тĕрĕсленĕ пек пăхрĕ те пĕр çур минутран тин каларĕ:

— Паратпăр... Ун пек йĕрке пур пирĕн. Закон та пур ун пирки.— Вăл лăпкăн кăна ăнлантарма тытăнчĕ.— Пирĕн патра ачасем валли темле лайăх условисем пулсан та, ачасемшĕн эпир, паллах, тăван кил вырăнне, çемье вырăнне, ашшĕ-амăшĕ вырăнне пулма пултараймастпăр. Тем тесен те, çемьере — паллах, вăл йĕркеллĕ, чăн-чăн совет çемйи пулсан — ача лайăхрах, нумай енлĕ воспитани илет. Анчах мĕншĕн ыйтатăр эсир кун çинчен?

— Эпĕ... эпĕ çак ачана, Володя Сидорова, усрама илме шутлатăп...— терĕм тăрук çĕтсе ларнă сасăпа.

— Эсир, çакăн пек çамрăкскер-и?— мана куçран чăр-р пăхрĕ директор.— Миçе çулта-ха эсир?

— Çирĕм иккĕре...

— Качча кайнă-и? Çемьеллĕ-и?

— Çук манăн никам та, ялта анне çеç пур.

— Эсир Вова амăшĕпе хурăнташлă темерĕр-и-ха çав пĕркун?

— Ку... тĕрĕс мар,— хĕрелсе кайрăм эпĕ.— Юри каларăм ун чух, ачине кăтартмасран хăраса. Вăл манăн ĕçри юлташ кăна пулнă. Упăшки вилнĕ хыççăн кĕçех

тепре качча кайрĕ те, халь вăл ăçта пурăнни те паллă мар...

— Анчах эпир вăл ăçтине пĕлетпĕр,— терĕ директор.— Пĕр çыру ячĕ вăл çапах та пирĕн пата...

— Эп çулла килсен, вăл вуçех çырмасть, терĕр-çке?

— Шăпах эсир килсе кайнă хыççăн илтĕмĕр.— Директор темле папка тытса унти хутсене пăхма тытăнчĕ.— Акă... июнь уйăхĕнче çырнă. Адресĕ те пур...

— Апла-ха, эппин, аса илнĕ пулать ачине... Унтан-па урăх çырман-и?

— Çук, çырман.

— Тĕлĕнсех каймалла...

Пĕр хушă чĕнмесĕр лартăмăр. Ман шухăшсем пăтранма пуçларĕç, иккĕленме тытăнтăм. Василиса тупăннă пулсан, вăл кунта çыру çырать пулсан, Володьăна памаççĕ мана. Кăлăхах пулчĕ эп шутлани...

— Ачине сирĕн патран илсе каясси çинчен çырмасть-и вăл?— ыйтрăм кăшт тăхтасан.

— Çук, ун пирки нимĕн те каламан. Ачи кунта пурăнни çинчен справка ярса пама ыйтнă çеç,— терĕ директор.

— Мĕн тума кирлĕ пулнă-ши тата ун пек справка?

— Кам пĕлет. Тепĕр чух çынсем пысăкрах хваттер илме тăрăшса пухаççĕ ун пек справкăсене. Государствăна улталама. Ку та çавăн пекех-и, тен.

— Намăссăр... хăй пăрахнă ачапа та усă курасшăн пулать!

Хĕрарăм-директор чĕлĕм туртаканскер иккен, вăл çăварне вăрăм сигарет хыпса тивертрĕ те, тĕтĕмне аллипе сиркелесе, каллех мана куçран пăхса сăмах пуçларĕ.

— Калăр-ха, тусăм, ăçтан пырса кĕчĕ сирĕн пуçа ку шухăш? Ну, Вовăна усрама илесси?— ыйтрĕ вăл.

— Ачи ытла юратмалласкер...— терĕм эпĕ.

— Çавăншăн кăна-и? Юратмалли ачасем нумай пирĕн...

— Тата... тата эп ун ашшĕне паллană, питĕ лайăх сыннчĕ... ăнсăртран шыва путса вилчĕ. Ачи вара пĕтĕмпех ун сăнлă...— тытăна-тытăна каларăм ăна хирĕç.

— Анланатăп,— терĕ директор.— Тен, эсир унпа туслă та пулнă? Çапла-и?

— Пулнăччĕ... пĕр вăхăт. Пирĕн хушша чунсăр çынсем пырса кĕриччен,— тунмарăм эпĕ.

— Куна та кăштах ăнланатăп... Хĕрарăм-çке эпĕ те, чухлатăп ун пек япаласене. Анчах тӳррипе, ним пытармасăр калаçар-ха сирĕнпе: Вовăна усрама илесси пирки эсир тĕплĕн, пур енчен те шухăшласа пăхнă-и? Паян çеç мар, çур çултан, виç çултан, вунă çултан сирĕн пурнăç мĕнле пулса пырассине хакласа пăхнă-и?

Вăл эп хăйне хирĕç мĕн калассине те кĕтсе тăмарĕ, васкасах ăнлантарма тытăнчĕ:

— Эсир халь çамрăк-ха, питĕ çамрăк...—Темшĕн, вăл мана хĕрхенсе, шеллесе каласнă пек туйăнчĕ.— Вăхăт ытла нумай та иртмĕ, сирĕн хăвăрăн çемье пулĕ, хăвăрăн ачăрсем çуралĕç. Усрама илнĕ ача сире хăвăрăн пурнăçри телее тупмашкăн та кансĕрлеме пултарать, çавăн çинчен шухăшламан-и эсир? Ну, малтан чиперех пурăнăр-ха эсир, унтан... хăвăрăн ачасем пулсан, ăна тек усрас темĕр, каллех пирĕн пата килсе парăр. Çакă вара уншăн, Вовăшăн, мĕн тери йывăр трагеди пулассине ăнланатăр-и? Ачан пĕтĕм психики хуçалма, пăсăлса кайма пултарать. Куркаланă эпир ун пеккине. Кашкăр çурисем пек пулса каяççĕ çемьерен тепĕр хут пирĕн пата илсе килнĕ ачасем. Нимпе итлеттерме çук вĕсене. Ну, калăпăр, эсир ун пек тумăр, каялла памăр. Çавах та эсир ăна яланах хăвăрăн ачуна юратнă пек юратса пурăнасса шанатăр-и? Ют ачана усрама илнĕшĕн нихçан та ӳкĕнмĕп тесе калама пултаратăр-и? Çук, тусăм, ку вăл вăрт-варт туса хумалли ĕç мар. Ыррине те, усаллине те тараса çине хурса виçсе пăхас пулать — хăш еннелле ытларах тайăлать тараса йĕппи. Хăвăн ачу вăл — хăвăн ачу, ун çине пĕр куçпа пăхатăн, ун валли сан чĕрӳнте яланах ăшă кĕтес пур, анчах ют ачаран хăвăн ачу тăвасси — питĕ кăткăс япала... Эпир Вова Сидоров амăшĕ ăна кунтан илес çуккине пит лайăх чухлатпăр, çавăнпа та тивĕçлĕ çынсем тупăнсан, ăна усрава пама пулать те пулĕ, анчах эсир... эсир ытла та çамрăк-çке-ха, хăвăр та ача темелле. Ан васкăр, шухăшлăр лайăхрах, тĕплĕрех шухăшлăр...

Шухăш улшăнмарĕ манăн. Илетĕп, терĕм. Усратăп, пăхса çитĕнтеретĕп. Çын тăватăп. Лайăх çын тăватăп.

Халь аса илсен те тĕлĕнетĕп: ăçтан йăтăнса тухнă манăн ун пек хăюлăх? Мĕнле вăй тĕртнĕ мана çавăн пек харсăр утăм тума? Тахçан Федя Сидорова юратни ун ывăлĕ çине куçрĕ пулмалла çав, урăх ним те мар...

Ку таранччен хамăн шухăша пытарса усранăччĕ, халь вара Агнипе Марьяма каласа патăм:

— Эпĕ Василиса ачине усрава илетĕп...

Малтанах вĕсем питĕ тĕлĕнчĕç.

— Ан калаç-ха пустуй сăмаха!— терĕ Агни.— Пулма пултараймасть ун пек япала!

— Мĕншĕн пулма пултараймасть? Илетĕп те усратăп! Эп кун çинчен хамăн аннепе те калаçса илтĕм ĕнтĕ. Ачасене питĕ шеллекенскер, хирĕç пулмарĕ вăл. Хăвăн çине шанатăн пулсан — илсе усра, терĕ...

— Мĕнле вăй çитерес тетĕн, айван? Ача илсе çитĕнтересси пуканелле вылясси мар вăл, ăнланатăн-и çавна?

— Çынсем çитĕнтереççĕ-çке?

— Çынсем хăйсен ачисене ӳстереççĕ.

— Çавах мар-им? Ку та хамăн пулать. Вăл мана темиçе хут та «мама» терĕ ĕнтĕ. Аллипе тĕллесех каларчĕ. Ачине курасчĕ сирĕн, ача мар, ылтăн муклашки!

Тытăнтăмăр тавлашма. Апла та, капла та калаçатпăр виççĕмĕр. Шухăшсем çакăн пек пулчĕç: пĕр енчен калама та çук ырă, такам та мухтамалла ĕç ĕнтĕ ку. Эпĕ Василиса пăрахнă ачана илсе, ăна пĕтĕм чун ăшшине парса ӳстеретĕп... Паллах, мана вăл «анне» тет, юратать, итлет... Хăй манăн тăван ача маррине нихçан та пĕлмест, сисмест те ăна. Телейлĕ пулать. Тепĕр енчен... йывăр пулмĕ-ши? Эп ĕçлетĕп, вĕренетĕп, пушă вăхăт çукпа пĕрех манăн, халь тата ача пăхма тӳр килет. Сывă чух татах-ха ĕнтĕ. Малтан яслинче, унтан садикре пулать. Анчах та тăрук чирлесе кайсан? Ачанне пĕлме çук, тепĕр чух вĕсем сасартăк чирлесе ӳкеççĕ. Мĕн тумалла вара? Э, тепĕр тесен, пур йывăрлăхсенчен те хăраса, çут тĕнчере пурăнма та кирлĕ мар! Вăрçă вăхăтĕнче тем пекех йывăр пулнă, çынсем выçлăн-тутлăн пурăннă, анчах çавăн çине пăхмасăрах хăшпĕр çемьесем икшер-виçшер тăлăх ача илсе усранă. Тĕлĕнмелле паттăрлăх! Чăн-чăн патриотизм пулнă вăл! Хальхи пурнăçра мĕн хăрамалли пур?

— Хăвăн валли лайăх юлташ тупăнсан... мĕнле пулĕ?— ыйтрĕ Марьям.— Тем тесен те, эпир пурте пурăна киле мăшăрланмалли çынсем-çке? Вăхăчĕ çитсен, эс те качча каятăн акă...

— Пирĕн шăпи çавăн пек-çке,—терĕ Агни.

— Лайăххи, ăсли пулсан, вăл манăн усрав ача пурри çине пăхмасть, усаллипе, ухмаххипе çыхланма çав териех тăнсăр çын мар-ха,— терĕм ăна хирĕç.

— Ил, Маруся!— терĕ юлашкинчен Агни, пат татса.— Ан хăра! Пĕрле пăхса ӳстеретпĕр. Пирĕн коллективлă ывăл пултăр...

Çакăн хççăн Агнипе Марьям Володьăна хăйсен куçĕпе курасшăн пулчĕç те, темиçе кунтан эпир виçсĕмĕр те Ача çуртне кайрăмăр. Директор пире пĕркунхинчен те кăмăллăрах йышăнчĕ. Эпĕ Володьăна усрава илме çирĕп шут тытнине курчĕ пуль ĕнтĕ.

— Делегацинех килтĕр-çке эсир,— терĕ вăл, йăл кулса.

— Манăн чи çывăх туссем вĕсем,— терĕм эпĕ хĕрсем пирки.— Володьăна курасшăн.

— Сирĕн шухăша пĕлеççĕ, эппин? Мĕн теççĕ?

— Пĕлеççĕ. Килĕшеççĕ манпа.

— Пит аван апла...

Хальхинче Володьăна илсе тухмарĕç, директор пире шурă халатсем тăхăнтарчĕ те шалти пӳлĕмсене илсе кĕртсе кайрĕ. Тĕлĕнмелле таса та йĕркеллĕ иккен ачасем çывăракан, апат çиекен, вылякан пӳлĕмсенче. Стени-маччисем шап-шурă, тепĕр больницăра та ун пек таса пулмасть. Урайсем йăлтăртатса тăраççĕ. Ниçта пĕр çӳпĕ кураймастăн çав. Стенасем çине унта-кунта хитре картинăсем çакнă, чӳречесем çинче чечексем.

— Райри пекех кунта,— терĕ Марьям.

— Тăрăшатпăр,— терĕ директор.— Тата пирĕнни пек учрежденисем валли патшалăх укçи-тенкине те шеллемест.

— Йышĕ пысăк-и сирĕн?

— Çителĕклĕ. Виççĕр аллă патриот çитĕнтеретпĕр...

Эпир вĕт-шаксем вылякан пысăк пӳлĕме пырса кĕтĕмĕр. Çемçе кавирсем сарнă урайĕнче пĕр çирĕмпилĕк-вăтăр ача кĕшĕлтетет.... Пĕри кубиксем купалать, тепри пĕчĕк автомобиль кустарать, виççĕмĕшĕ çăмламас упана кутăн-пуçăн тăратать — ташлаттарать пулмалла ĕнтĕ, ик арçын ача хăйсен аллинчи качакасене тĕкĕштереççĕ, хĕрачасем пĕчĕк краватьсем çине пуканесене çывăрма выртараççĕ... Пĕри те ерçмест, пурте ĕçлĕ!

— Аçта-ха пирĕн Вова Сидоров?— ыйтрĕ директор пиньăран.

— Ав, музыка калать,— терĕ няня, инçетре те мар пластмассăран тунă шăхличе пĕтĕм вăйран вĕрсе нартлаттаракан ача çине кăтартса.— Музыкăна пит юратать мар-и ачи! Пианино уçă чухне ун клавишĕсене чышкипе çапа-çапа янратать...

Эпир, ача патне пырса, кукленсе лартăмăр.

— Вова! Вовик! Мĕнле пурăнатăн?

— Кил-ха кунта!

Вăл, шăхличне вĕрме пăрахса, темиçе самант ним шарламасăр, тĕлĕннĕ пек пăхса ларчĕ. Унтан тăрук пурне те тĕлĕнтерсе пăрахрĕ: аллинчи шăхличпе ман çине тĕллерĕ те «мам-ма», терĕ.

Эпир пурсăмăр та кулса ятăмăр.

— Паллакан пулчĕ курăнать вăл сире,—терĕ директор.— Никам çине те мар, сирĕн çине тĕллесе калать вĕт-ха! Маттур ача ĕнтĕ, каламалли те çук...

Тепĕр вунă минутран эпир ун пĕлĕмне таврăнтăмăр. Пире пукансем çине ларма сĕнсен, директор сигарет тивертсе ячĕ те, сĕтел çине чавсаланса, мана куçран пăхрĕ.

— Ну, Апанасова юлташ, шухăшу улшăнмарĕ-иха сирĕн?— ыйтрĕ вăл. (Хам хушамата иртнинче каланаччĕ эпĕ ăна).

— Çук, улшăнман,— терĕм эпĕ.— Акă, хамăн юлташсемпе те нумай калаçрăмăр кун пирки, вĕсем те ырлаççĕ ман шухăша...

— Эпир ăна виççĕмĕр пăхса ӳстерĕпĕр,— терĕ Агни.

— Хăçанччен? Миçе çул?— тута хĕррине кăшт çеç хускатса кулса илчĕ директор.— Эсир пурте хĕрсем вĕт-ха?

— Хĕрсем...

— Ĕмĕр-ĕмĕрех хĕр пулса пурăнас тетĕр-и? Шухăшласа пăхăр-ха каллĕ-маллĕ: паян мар-тăк ыран, кăçал мар-тăк килес çул кавча каятăр, сирĕнтен кашниех хăйĕн çемйипе пурăнма пуçлать, Вовике ăçта чикетĕр вара? Каллех пирĕн пата килсе яратăр-и?

— Эпĕ ăна хам çине çыртаратăп та унран ĕмĕрне те уйрăлмастăп,— терĕм ăна хирĕç.

— Калама çăмăл...— ассăн сывласа илчĕ директор.— Анчах пурнăçра ун пекех пулса пырĕ-ши?

— Çавăн пекех пулать.

— Ачана ăна сахалтан та вунçич-вунсакăр çула çитиччен пăхас пулать. Хăй тĕллĕн пурăнма пултара-

кан пуличчен. Нумай вăхăт вăл! Хăратмасть-и ку сире?

— Çук хăратмасть.

Директор, сигаретне ĕмсе, пĕр хушă шарламарĕ.

— Сире ĕненетĕп эпĕ,— терĕ унтан.— Эсир Вовăшăн чăн-чăн амăшĕ пуласса та шанатăп... Çапах та ĕç тухмасть пирĕн. Сире ача пама пултараймастпăр эпир...

— Мĕншĕн? — чĕре яштах турĕ манăн.

— Сирĕн пӳлĕм çук, эсир общежитинче çеç пурăнатăр.

— Эпир ун валли хамăр пӳлĕмре уйрăм кравать лартатпăр!— терĕ Агни.— Пӳлĕм пысăк пирĕн!

— Ĕненетĕп. Эсир ачана хăвăрпа пĕрле выртгарма та пултаратăр. Анчах ăна усрама лайăх хваттер, тивĕçлĕ услови пулмасан, исполком нихçан та усрава партармасть. Закон вăл, тусăмсем.

Эпир виссĕмĕр те — эпĕ, Агни, Марьям,— ним калама пĕлмесĕр, пĕр-пĕрин çине пăхса илтĕмĕр. Тĕрĕс çав, эпир кун çинчен лайăххăн шухăшламан. Пирĕн этажран ик-виç хĕрарăм хăйсен ачисене ыттисемпе пĕрлех усраççĕ те, эпĕ те çавăн пек пурăнма май пулать, тенĕ ĕнтĕ. Айван пулнă, çамрăк...

— Çапла, тусăмсем,— терĕ директор, пирĕн çине хĕрхенĕ пекрех пăхса.— Пирĕн совет законĕсем ачасен интересĕсене хытă сыхласçĕ, вăл законсене никам та пăсма пултараймасть. Каласса пăхăр хăвăрăн пуçлăхсемпе, тен, шута илĕç эсир ыйтнине, анчах хальхи вăхăтра уйрăм пӳлĕм илесси — ытла та пысăк проблема. Шанма йывăртарах пуль...

— Вăл тĕрĕс ĕнтĕ,— терĕ Агни.

— Эппин, май килмест...— хуйхăрнă пекех хушса хучĕ Марьям.— Питĕ шел. Ачине эпир чăнах та пит лайăх пăхса усранă пулăттăмăр.

— Каларăм-çке, закон çавăн пек,— терĕ директор.— Хамăн ирĕк пулнă пулсан, Вовăна эп сире паянах парса ярăттăм...

Директор патĕнчен эпир питĕ кăмăлсăр тухса кайрăмăр. Эпĕ çеç мар, Агнипе Марьям та кӳренчĕç.

Анчах пурнăçра тепĕр чух темле пысăк йывăрлăхран та хăтăлса тухма пулать иккен. Меслетне е эсĕ ху тупатăн, е юлташусем, çывăх çынсем пулăшаççĕ сана. Вара пĕтĕмпех йĕркене кĕрет.

Хальхинче меслетне Агни тупрĕ. Çав кунах тата! Эпир çутă сӳнтернĕччĕ ĕнтĕ, эпĕ чылайччен Володя çинчен шухăшласа выртнă хыççăн тĕлĕрсе кайма та пуçланăччĕ, сасартăк тĕттĕмре Агни сасси илтĕнчĕ:

— Хĕрсем! Василисăпа пĕрле пурăннă хĕрарăм мĕн ятлăччĕ çав? Астумастăр-и?

— Мĕн тума кирлĕ пулчĕ вăл сана?— ыйхăллă сасăпа ыйтрĕ Марьям.— Феня ятлă вăл. Хушамачĕ Петухова. Маляр хăй.

— Эп çавна аса илтĕм-ха... Унпа пĕрле халь пĕр çамрăк ткачиха пурăнать. Вĕсене час-часах пĕрле куратăп. Енчен те çав хĕрачана урăх çĕре куçарсан...вырăн пушанать вĕт? Василиса хăй тухса тариччен унта ачипех пурăннă-çке? Халь мĕншĕн пурăнмалла мар пуль, э? Калаçса пăхар мар-и?

Вăл та манăн пулас ывăл, паян кайса курнă ача пирки пăшăрханса, ун çинчен шухăшласа выртнă иккен!

— Чăнах та-çке!— сас пачĕ Марьям та.— Епле-ха аса илмен эпир ун çинчен? Калаçса пăхас пулать!

Ку шухăш мана та питĕ килĕшрĕ. Тепĕр куннех, ĕç хыççăн, эпир виçсĕмĕр те çав Петухова патне кайрăмăр. Хирĕç пулма мар, савăнсах кайрĕ вăл — ман ача валли юлташ пулать, унта-кунта кайса çӳремелле пулсан, ачисене иксĕмĕр черетпе пăхатпăр, терĕ. Эпĕ Василиса ачине усрама илме шут тытнине чунтан мухтарĕ:—Ырă ĕç тăватăн, терĕ.

Леш хĕрĕ те, унпа пурăнаканни, ман ырăна, Агнипе Марьям пӳлĕмне куçма хавас пулчĕ: епле пулсан та, ача тени вăл тепĕр чух каç-каç та макăрать, канлĕ сывăрма та памасть...

Унтан эпĕ комсомол комитечĕн секретарĕ Рая Шашкина патне кайрăм. Чылай калаçрăмăр. Иккĕленнĕ пек те пулчĕ вăл, анчах ман шухăша ырларĕ. Унпа пĕрле фабкома кайрăмăр. Председателĕ пирĕн хĕрарăмччĕ, темиçе ача ӳстернĕскер. Ку вара эп мĕн ыйтупа килнине пĕлсенех мана ыталаса, çурăмран лăпкаса илчĕ:

— Маттур, Апанасова! Ил, усра, çитĕнтер пĕр герой, эпир сана яланах пулăшăпăр. Яслинче вырăн парăпăр, унтан садике куçаратăн... Сисместĕн те ачу мĕнле ӳснине!

Мана хут туса пачĕç: фабком Апанасовăна тепĕр хĕрарăмпа пĕрле пурăнма вăтăр икĕ метрлă пӳлĕме кĕртет...

Халь ĕнтĕ пĕтĕмпех пулчĕ пуль, терĕм.

Анчах апла мар иккен. Ача çурчĕн директорĕ ман хута тимлĕн вуласа тухрĕ, пичетне, алă пуснине пăхрĕ те хăй умне хучĕ.

— Пит аван... Питĕ аван!—терĕ вăл, ман çине пăхса.— Çапах та, шел пулин те, ĕç тухмасть пирĕн. Май килмест...

— Мĕншĕн? Мĕн çитмест тата?— тăруках пăлханса кайрăм эпĕ. — Хваттер пулсан, ачана пама пултаратпăр, терĕр-çке эсир?

— Сире хваттер пани лайăх-ха вăл... Анчах тепĕр пысăк чăрмав пур. Ăна шута илмен эпĕ малтан...

— Мĕнле чăрмав?

— Вовикăн тăван амăшĕ пур-çке-ха. Вăл сывă, пурăнать. Унăн амăш правине никам та туртса илмен. Çавăнпа та вăл хăй килĕшмесĕр унăн ачине усрава пама пултараймастпăр. Юрамасть. Закон.

— Епле-ха апла... Нивушлĕ вара хăйĕн пĕчĕк ачине ним хĕрхенмесĕр пăрахса кайнă хĕрарăмăн та ачи пирки мĕнле те пулин права пулма пултарать?!—тарăхсах ыйтрăм эпĕ.

— Пултарать çеç мар, права пур унăн,—терĕ директор.— Вăл правана суд çеç пăрахăçа кăларма пултарать. Анчах хальхинче суд ун пек решени ним тусан та йышăнмасть: закон хăраххăн пурăнакан амăшне хăйĕн ачине пăхса ӳстермешкĕн государствăна пама ирĕк панă. Унтан та ытларах: ăна хăйĕн ачине хуть те хăçан та каялла илме ирĕк панă. Эпир сирĕнпе иксĕмĕр хăйсен ачисене ним нушасăрах, хăйсем ирĕккĕн пурăнасшăн çеç ача çуртне леçнĕ амăшĕсене тем пекех тиркеме, вĕсем пирки хаяррăн калаçма, вĕсене ылханма та пултаратпăр, çапах та вĕсен амăш правине туртса илес çук: вĕсем закона пăсман, законра калана пек тунă. Вова амăшĕ те çавăн пекех.

Эп ни вилĕ, ни чĕрĕ тенĕ пек лартăм. Ман ăшчик хыпса çунма тапратрĕ. Каллех нимĕн те тухмарĕ, эппин! Василисăн, чунсăр, ирсĕр этемĕн амăш прави пур имĕш! Унтан ирĕк ыйтса илес пулать — усрава партарать-и вăл ачине? Çук, çакăнта вилсе выртас пулсан та ыйтмастăп унран!..

Пĕр хушă чĕнмерĕмĕр. Питĕ йывăр пулчĕ. Директор мана хĕрхенсе ларчĕ пулмалла. Эпĕ Володьăна хам пата илесшĕн мĕнле çуннине курчĕ те-ха вăл...

Унтан сасартăк вăл сĕтеле шап! çапса илчĕ.

— Чим-ха, чим-ха, тусăм...—терĕ васкаса.—Пирĕн таçта пĕр инструкци пулмаллаччĕ...—Хăй çавăнтах сĕтел ещĕкĕнчен темиçе папка туртса кăларса унти хутсене уçа-уçа пăхма тытăнчĕ.— Питĕ лайăх инструкци. Ăна пăрахăçа кăларман-ха... Вăл пире шутсăр пулăшма пултарать... Тăхтăр-ха, тăхтăр...

Эпĕ кĕтрĕм. Пĕр вунă-вунпилĕк минут та иртрĕ пулĕ.

— Акă, тупрăм!— терĕ те директор юлашкинчен, папкăри пĕр хутне илсе куçĕсемпе хăвăрт вуласа тухрĕ.—Тĕрĕс! Акă мĕн каланă кунта: ача амăшĕ е ашшĕ хăй çинчен пĕр çулталăк ытла нимĕн те пĕлтермест пулсан, ачана унран ыйтмасăрах усрава пама юрать...

Вăл сĕтелтен тепĕр папка кăларчĕ.

— Вовик амăшĕ миçе уйăх çырмасть-ха? Акă унăн юлашки çырăвĕ... Э-эх, пилĕк уйăх çеç иртнĕ-ха! Тата çичĕ уйăх кĕтес пулать апла.—Вăл ман çине пăхрĕ.— Тен, эпир ун патне çыру ярса пăхăпăр? Çапла та çапла, сирĕн ывăлăра пит лайăх çынсем усрава илесшĕн, тейĕпĕр, эсир хирĕç мар-и? Епле шутлатăр, Апанасова юлташ?

— Çырса пăхăр, ара, анчах ачине кам илесшĕн пулнине ан калăр, эпир пĕр-пĕрне... кураймастпăр!— терĕм эпĕ.

— Амăшне кураймастăр пулать, анчах ун ачине усрама илесшĕн? Мĕнле ăнланмалла куна?—тĕлĕнерех ыйтрĕ директор.

— Эпĕ... амăшĕшĕн мар, ашшĕшĕн.. Ачи ашшĕ пек...

— Ăнланатăп. Эппин, çырса ярăпăр та — ответ кĕтĕпĕр. Юрать-и?

— Юрать...

Директор патне эпĕ тепĕр вунă кунтан кайрăм. Василисăран ответ çукчĕ-ха. Унтан тата тепĕр эрнерен пултăм ун патĕнче — Василиса çав-çавах çырманччĕ.

— Кĕтетĕп-ха, çаплах кĕтетĕп, тата тепĕр çыру ятăм,—терĕ директор.— Закона тытса пырас пулать-çке пирĕн.

Çик-сакăр кунтан виççĕмĕш хут кайсан вара вăл мана татăклăн каларĕ:

— Çырмастех ĕнтĕ Вовик амăшĕ. Юри çырмасть пулмалла. Пĕлет, мур, вăл ирĕк памасăр нимĕн те тума çуккине. Хăй те усрамасть ачине, çынна та партармасть. Анчах эпир ăна пăхса тăмăпăр. Кĕтмелли çур çул çеç юлчĕ, вара хамăрăнне хамăр пĕлĕпĕр.

Кĕтрĕм вара эпĕ çур çул хушши.

Анчах Володьăна ĕнтĕ хам ача тесех пурăнтăм. Темле ерçмесен те, эрнере ик-виçĕ хут каяттăм ун патне. Алла тытаттăм та выляттăм. Манăн ăна епле пулсан та хама ытларах хăнăхтарассăм килетчĕ. Темиçе уйăхран пирĕн унпа пĕрле пурăнма пуçламалла-çке. Чăнах та вăл мана паллакан пулса çитрĕ. Курсанах аллисене çӳлелле çĕклесе «мама! мама!» тесе чупса пыратчĕ çав...

* * *

Хайхи нумай хушă кĕтсе пурăннă самант çитрĕ.

Ача çурчĕн директорĕ янă çырусене хирĕç Василиса пĕр ответ та памарĕ те, унăн «амăш прави» пĕтрĕ. Фабком мана тепĕр çынпа пĕрле панă пӳлĕме исполкомран икĕ хĕрарăм пырса пăхса кайрĕç.

— Кунта ачапа пурăнма юрать,— терĕç вĕсем.

Эпĕ Володя валли пĕчĕк кравать илсе лартрăм, «Детский мира» кайса вылямалли теттесем илсе тултартăм. Ман хĕр-туссем те илчĕç ун валли темтепĕр. Ясли пирки унччене калаçса татăлнăччĕ ĕнтĕ. Пĕр вырсарникун вара Володьăна илсе пытăмăр. Питĕ кăмăллă, ăшă сăмахсемпе, ырă сунса ăсатрĕ пире директор. «Приданăй» та парса ячĕ: хĕлле валли ăшă тумтир, калпак, пушмак, виçĕ мăшăр кĕпе-йĕм тата утиял, простыньсем...

— Телей пултăр сире иксĕре те, лайăх пурăнăр!— терĕ директор ман алла хытă чăмăртаса. Унтан Володьăна тытса темиçе хут чупторĕ: «Ну, Вовик, халь ĕнтĕ санăн аннӳ пур! Юрат ăна, итле, ăслă ача пул. Пы-ысăк ӳс!»

Хăйне мĕн каланине ăнланнă пекех, Володя мана ыталаса «мам-ма»,— терĕ. Ăна пăхса пурăннă ватăрах няньăн куççулĕсем те тухрĕç.

— Ан ман пире, Вовик, килсе кур...

Исполкомра туса панă хут çине Володя хушамачĕ малашне Сидоров мар, Апанасов пулассине тĕ çырнă-

ччĕ. Владимир Федорович Апанасов пулчĕ вăл халь. Ман ывăл!

...Паллах, эпĕ хĕр пуççăнах ача усрама илни нумайăшне тĕлĕнтернĕ. Кун çинчен илтнĕ хыççăн хама паллакансем пурте тенĕ пекех ыйтрĕç: «Чăнах-и ку сăмах? Мĕн тума кирлĕ пулчĕ ку сана? Нуша çук çĕртен нуша... Асту, ӳкĕнетĕн акă кайран! Куççулĕпех макăратăн!»

Çакăн пек калаçусем йăлăхтарнипе, эпĕ: «Ку ача маншăн ют мар, аппа ачи вăл, тăван ачи, килĕнче семье пысăккипе пурнăç йывăртарах та, çавăнпа хам пата илтĕм», теме пуçларăм. Хамăн хĕр-туссене те çавăн пекех калама хушрăм. Кама мĕн ĕç, хуть те кам ачине ӳстерем!..

Макăрасси... пулман мар ĕнтĕ, пулнă, ăна пытармалли çук. Кам амăшĕ макăрман пуль пурнăçра хăйĕн ачисем пирки? Анчах пĕртте ют ачана усрава илнĕшĕн ӳкĕннипе мар. Эп пĕрре те, нихçан та ӳкĕнмен уншăн. Сăлтавĕсем пачах урăх пулнă. Пĕррехинче — эп Володьăна илсе пынă хыççăн çич-сакăр уйăхран — вăл темле шăнса пăсăлнă та, ӳпке шыççипе питĕ хытă чирлерĕ. Шăматкун яслинчен илсе килсенех шутсăр хытă пĕçĕртсе пăрахрĕ, çĕрĕпе вутри пек выртрĕ, тапкаланăрĕ, йынăшрĕ, вăхăчĕ-вăхăчĕпе сывлăшĕ те тухма пăрахнă пек туйăнчĕ... Ниçта кайса кĕме пĕлмерĕм çав, ӳлесех макăртăм. Феня — хампа пĕрле пурăнакан хĕрарăм— «скорый помощь» чĕнме чупрĕ, лешсем темшĕн-çке ир енне тин пычĕç, пырсан та тухтăрĕ мана хăратса çеç пĕтерчĕ: «Йывăр сан ачу, мамаша, питĕ йывăр, ик енлĕ крупознăй воспалени пулмалла... Тем те кĕтме пулать». Эп вара чутах тăнсăр пулса ӳкеттĕм. Вилсех кайрĕ-тĕк ачи, çынсем мĕн калĕç?! Эп ним чухлĕ те айăплă мар пулсан та, мана айăплаççĕ ĕнтĕ: усрава илнĕ ачаран çын тăватăп тесе мухтантăн, вĕçкĕнленсе çӳрерĕн, анчах усраймарăн, упраймарăн! Хăвăн ачу пулнă пулсан упраттăн та ĕнтĕ... Пăхман эс ăна!— тейĕç мана. Çĕрĕпе макăрнипе, пĕр вăй та юлмарĕ, куçсем хуралса килчĕç. Хам та чирлĕ çынпа пĕрех пулса тăтăм...

Ирхине пире ачасен больницине хучĕç. Ик эрне ытла выртрăм унта ачапа, малтанхи кунсенче, «кризис» тени иртсе кайиччен, талăкĕ-талăкĕпе çывăрма-

рăм. Ача кăшт самайлансан, апат çиме пуçласан тин лăпланнă пек пултăм. Атту чун юлманччĕ çав!

Макăрмаллисем татах пулчĕç. Пĕр тăваттă-пиллĕксенче чух Володя ытти ачасемпе пĕрле темле майпа сад картишĕнчи вутă шаршанĕ çине хăпарса кайнă та, шаршанĕ ишĕлнипе, вутă айне пулса, пуçне чут шăтарман — чĕп-чĕр юн пулнă. Каçхине, илме пырсан, ача пуçне марлĕпе яваласа пĕтернине куртăм та, каллех чĕре çурăлса каятчĕ. Кăшкăрса макăрма тытăнтăм, мана валерьянкăсемпе аран лăплантарчĕç. Тепрер çултан, хӳме çинчен сиксе, урине мăкăлтарĕ — ури тукмак пек шыçса кайрĕ. Виç эрне больницăна çӳрерĕм,—каллех ман куççульсĕр пулмарĕ. Анчах пуринчен ытларах вăл мана пĕлтĕр макăртрĕ. Ун çинчен каярахпа калăп-ха...

Çавăн пек йывăр самантсем пулнă пулин те, пĕтĕмĕшпе илсен, хамăн пурнăçа хурлама пултараймастăп. Телейлĕччĕ эпĕ. Володя пит лайăх ӳсрĕ, яслирен — садике, садикрен — шкула. Шкулта вĕренме пуçласан, пурнăç кăшт йывăрланчĕ ĕнтĕ — апатне те килтех пĕçерсе çитермелле, уроксене мĕнле тунине те сăнасах тăмалла, унта-кунта та илсе çӳремелле — хăш чух ача-пăча театрне, кинона, гастроле килнĕ зоопарка, цирка. Курса килнĕ хыççăн вара вĕçĕмсĕр ыйтса пĕлме тытăнать, йăлт ăнлантарас пулать ăна.

— Слон мĕн çиет? Жираф мĕншĕн ула, ăна сăрласа янă-и? Упа мĕншĕн яланах кĕрĕкпе çӳрет, ăна шăрăх мар-и?

— Тен, Чапаев кайран çапах та ишсе тухнă? Путман?

— Ваня Солнцев* халь пурăнать-ши?

Тем те, тем те ыйтать. Пурне те пĕлесшĕн çунать. Вулама вĕренсен вара вĕçĕмсĕр кĕнеке вулама тытăнчĕ. Пĕрремĕш класра вĕреннĕ чухнех хулари ачасен библиотекине кайса çырăнтăмăр.

Пĕррехинче — Володя иккĕмĕш класра вĕренме пуçласан пулчĕ-ха ку — шкула ашшĕ-амăшĕсен пухуне кайсан, класс руководителĕ мана пуху хыççăн юлма хушрĕ, калаçмалли пур, терĕ. Хăрасах кайрăм: ахальтен мар ку, Володя тем туса хунă пуль ĕнтĕ! Хăйне

---

* В. Катаевăн «Полк ывăлĕ» ятлă повеçĕнчи герой.

уроксенче тытма пĕлмест-ши? Алхасать-ши? Учительсене итлемест-ши?

Анчах калаçу пачах урăххи çинчен пулчĕ.

— Юрлама вĕрентекен учительница Лия Васильевна каланă тăрăх, сирĕн Володя музыкăна питĕ лайăх туять,— терĕ класс руководителĕ.— Вăл сире хăвăрăн ывăлăра ачасен музыка шкулне кайса кăтартма сĕнет. Тĕрĕслесе пăхчăр, тен, чăнах та музыкăна вĕрентмелле ăна?

Шутсăр хĕпĕртерĕм çакна илтсен. Эп хам ĕмĕрте алла çурăк тăмра та тытса курман пулин те, музыкăна питĕ юрататăп. Яланах чун уççи вăл маншăн. Халь мана хамăн ывăл музыкант пулма пултарасси çинчен калаççĕ! Ытла та лайăх-çке ку!

Пухуран таврăнсан, Володьăпа калаçрăм.

— Музыкăна юрататăн-и эсĕ, ывăлăм?

— Мĕнле музыкăна?— ман çине тĕлĕнерех пăхрĕ кĕнеке вуласа ларакан ача.— Радиопа калаканнине-и?

— Çук, ăна мар... Ну... юрлама, пианино, сĕрме купăс, баян калама...

— Шкулта юрлаттараççĕ пире, юрланă чухне Лия Васильевна мана яланах мала тăратать, юрăсене пуçлаттарать, анчах нимĕнле пианино та, купăс та калама пĕлместĕп çав эпĕ.

— Халь пĕлместĕн-ха, çавах та ăна вĕренме пулать.

— Ăçта?

— Çавăн пек шкул пур.

— Мускавра-и?

— Мускавра çеç мар, кунтах, Шупашкартах. Атăл хĕрринче, пристаньсем тĕлĕнче... Çав шкулта вĕренес килет-и санăн? Музыкант пулатăн...

Володя хăй умĕнчи кĕнекене хупса аяккалла шутарса хучĕ. Унăн куçĕсем сасартăк хавассăн çуталса илчĕç.

— Вĕренес килет!—терĕ вăл.—Анчах кунти шкула çӳреме пăрахмалла пулать-и вара? Манăн кунта та вĕренес килет.

— Çук, кунта вĕренме пăрахмастпăр. Музыка шкулне ку шкулти уроксем хыççăн çӳрĕпĕр. Тата кашни кун та мар.

— Ой, апла пит лайăх-çке!—çунатланчĕ ман ача. Пĕр-ик кунтан, пушă вăхăт тупса, эпĕ Володьăна музыка шкулне илсе кайрăм. Иккĕн тĕрĕслерĕç ăна—

юрлаттарчĕç, хăйне итлеттернĕ тона, ритма мĕнлерех туйнине сăнарĕç. Пĕр йăнăш та тумарĕ Володя.

— Питĕ музыкальнăй ача,— терĕç вара тĕрĕслекенсем,— епле пулсан та, вĕрентесчĕ ăна...

Çавăнтах мĕнле инструментпа вĕренесси çинчен калаçма тытăнтăмăр: сĕрме купăспа-и, роялпе-и, баянпа-и? Преподавательсем çав инструментсем çине кăтартса, ачаран хăйĕнчен ыйтрĕç:

— Хăшĕ ытларах кăмăла каять сана?

— Ак çакă,— терĕ Володя, баян çине кăтартса.

— Пит аван. Баянист пулатăн, эппин...

Çапла вара манăн тата тепĕр ĕç хушăнчĕ: эрнере виçĕ хут, каçаллапа, Володьăна музыка шкулне илсе каймалла. Анчах нумая пымарĕ ку, виççĕ-тăваттă кайса килсенех, Володя унта хăй тĕллĕнех çӳреме пуçларĕ.

— Эс ан хăра, анне, эпĕ питĕ асăрханса çӳретĕп, машин айне пулмастăп, урам урлă каçнă чух малтан сулахаялла, унтан сылтăмалла пăхатăп. Пире шкулта та çавăн пек хушаççĕ...

...Вăхăт пĕр чарăнмасăр шăвать, çул хыççăн çул иртет. Пурнăç та пĕрмай улшăнса пырать. Акă ĕнтĕ, эпĕ Володьăна хам пата илнĕренпе улт-çич çул та иртрĕ. Манăн хĕр-туссем — Агнипе Марьям — иккĕшĕ те кавча кайрĕç, Агни — инженера, комбинатри гараж начальникне, Марьям — редакцинче ĕçлекен фотографа, иккĕшĕн те ача пур ĕнтĕ. Вĕсем халь ман пата пит сайра кĕрсе тухаççĕ, пуринчен ытла ĕçре тĕл пулатпăр, анчах кашни тĕл пулмассеренех иккĕшĕ те Володя пирки ыйтса пĕлеççĕ. Сывлăхĕ мĕнле? Лайăх вĕренет-и? Манмаççĕ çапах та усрава пĕрле илсе килнĕ ачана. Уншăн та тав тăваттăм вĕсене...

Каçхи техникумран йĕркеллех вĕренсе тухнă хыççăн ик-виçĕ уйăхранах мана мастер помощникĕ туса хучĕç, манăн ĕç йывăрланчĕ — халь ĕнтĕ хăвăншăн çеç мар, пĕтĕм сменăшăн ответ тытатăн-çке-ха. Эп партие кĕтĕм, унта та ĕç хушаççĕ, паян агитатор эсĕ, ыран хваттер ыйтăвĕсене пăхса тухакан комисси членĕ, унтан тата мĕн те пулин тупăнать. Володине те пăхсах тăмалла—уроксене тунă-и вăл, табельте двойкăсем çук-и, çипуçĕ таса-и, çĕтĕлмен-и, хучĕ-кăранташĕ пур-и унăн?

Пĕр виçĕ çул манпа пĕр пӳлĕмре пурăннă хыççăн Феня Петухова та, ачалăскерех, темле хусах шофера

качча кайрĕ. Эпир Володьăпа иксĕмĕрех юлтăмăр. Ирĕк пулчĕ ĕнтĕ халь. Володя валли çĕнĕ кравать, тумтирсем валли тĕкĕрлĕ шифоньер туянтăм, çемçе пукансем. Унтан пĕчĕкрех телевизор илме те вăй çитертĕм. Пӳлĕм сăн-сăпачĕ йăлт улшăнса кайрĕ, тухас та килмест...

Пĕррехинче, çур енне, эп темле пухуран питĕ ывăнса таврăнтăм. Вăхăт вунпĕр çитнĕ пулсан та Володя тем çырса ларатчĕ-ха.

— Эс ма хальччен те çывăрман?—ыйтрăм ачаран.

— Сана кĕтрĕм эпĕ,— терĕ вăл, куçĕсене чышкипе сăтăркаласа.

— Мĕн тума кĕтмелле мана? Çывăрас пулатчĕ, ыран санăн йывăр кун, икĕ шкулне те каймалла...

— Пĕлетĕп. Анчах юри çывăрас темерĕм.

— Мĕн пирки?

— Эп сана ирхине саламлама маннă. Шкултан таврăнсан тин аса килчĕ, хамăн календарь çине пăхса илтĕм те...

— Мĕн пирки саламламалла мана?

— Пĕлместĕн, эппин? Ай-ай, анне, ватăлтăн пуль эсĕ, çавăн пек япаласене те манакан пулнă!—Вăл мăн çине пăхса йăл кулса илчĕ.

— Мĕнле япаласене тата?— тĕлĕне пуçларăм эпĕ.

— Ара, паян эс çуралнă кун вĕт! Çирĕм тăххăр тултартăн...

— Ой, чăнах-çке!— Эп лаках лартăм. Темле пуç çаврăнса кайнă пек пулчĕ самантлăха.—Маннă... астуман та!

— Эп те маннă çав. Хамăн календарь çине тахçанах çырса хунăччĕ, сана пĕлтĕрхи пек пĕр-пĕр парне илсе парасшăнччĕ — кайран маннă, ухмах...—Вăл сĕтел хушшинчен тăрса ман пата пычĕ те ыталаса чуптурĕ.— Саламлатăп сана, аннеçĕм...

Манăн куççулĕ тухса кайрĕ.

— Тавтапуç, ывăлăм...

Эпĕ вăрахчен ачана пуçĕнчен ачашласа лартăм.

— Килес çул епле пулсан та манмастăп, стена çинех çырса хуратăп. Пире шкулта та аннесене çуралнă кун мĕнпе те пулин савăнтарма хушаççĕ... Эпĕ нимĕн те тăваймарăм, терĕ вăл.

— Тен, эп çуралнă кун лайăх отметкăсем илсе килтĕн?

— Икĕ пятерка пур паян. Арифметикăпа тата вырăс чĕлхипе.

— Маншăн ку чи пысăк парне, ывăлăм...

Час çывăрса каяймарăм вăл каç. Тем тĕрлĕ шухăш пырса кĕчĕ. Эппин, çирĕм тăххăр тултартăм... Хĕр ĕмĕрĕ иртрĕ. Ватăлатăп. Тантăшсем качча кайса пĕтрĕç, упăшкаллă, ачаллă-пăчаллă пулчĕç. «Çемье телеййĕ» кил тулли вĕсен. Манăн мĕн пур? Кунĕпе, иртен пуçласа каçчен ĕçре, ниçта та тухса çӳреместĕп, ниçта пулмастăп, кăçал хĕл каçа театра та пĕрре те кайса курман... Пĕртен-пĕр савăнăç — Володя. Вăл питĕ лайăх ӳсет ĕнтĕ, лайăх вĕренет, ăслансах пырать, хампа мăн çын пекех калаçма пуçларĕ. Анчах та çав кăна пулать-ши ман пурнăçра? Анне те калакалать курма килсен: хăçанччен çакăн пек хăраххăн пурăнас тетĕн? Асту, пурнăç пĕрре çеç пулать, вăл та пулин кĕске, тет. Чăнах кĕске ĕнтĕ вăл. Акă, çур ĕмĕр иртрĕ те ... ним курмасăрах...

Питĕ салху пулса кайрĕ мана.

Анчах ир тăрсан каçхи йывăр шухăшсем аса та килмерĕç. Чей вĕретрĕм, çимелли хатĕрлерĕм, Володьăна вăратрăм та яланхи пекех васкаса ĕçе тухса кайрăм.

...Пурнăç — пурнăçах, эп те пĕр арçын тĕл пултăм. Техник-строительччĕ вăл. Эпир унпа вĕсем пирĕн корпусра вĕт-шак ремонт тума пырсан паллашрăмăр. Çынни çамрăк марччĕ ĕнтĕ, вăтăртан иртнĕ. Авланнă пулнă хăй, анчах арăмĕ тăрук чирлесе вилнĕ. Ачи пур, кукамăшĕ патĕнче пурăнать. Хăй питĕ сăпайлă çын. Ĕçмест, туртмасть, ытлашши палкама та юратмасть. Çамрăклах вăрçăра пулнă, наградăсем пур. Килĕштерчĕ пулмалла мана, ремонт пĕтнĕ хыççăн та пыра-пыра ларма пуçларĕ. Володя вулама юратнине кура, ăна хитре кĕнекесем парнелерĕ. Тепĕр чух пӳлĕмре иксĕмĕр кăна юлсан та хăйне йĕркеллĕ тытрĕ, хăшпĕрисем пек иртĕнмерĕ.

Кăмăла кайрĕ вăл мана. Килĕшрĕ. Ик-виç хут театрта пултăмăр. Пĕррехинче юлташĕ патне — леш çуралнă кун — хăнана та илсе кайрĕ. Сисрĕм эпĕ, юри, мана хăйĕн тусĕсене кăтартма илсе кайрĕ вăл ун чухне. Хăнара та килĕшрĕ — ĕçессе нумай ĕçмерĕ, анчах пит хаваслă пулчĕ, юрларĕ, ташларĕ. Тата хăй кăштах музыкант та иккен — сĕрме купăс хитре калать.

Пирĕн туслăх çирĕпленсех пычĕ. Туслăхран юрату та пуçланчĕ. Ун чĕринче мĕн пулса иртнине пĕлместĕп-ха эпĕ, анчах хам чăнласах юратрăм. Ман чĕрене кĕрсе ларчĕ вăл. Пĕрмай ун çинчен шухăшлакан пултăм...

Вăл та мана юратнă пек туйăнчĕ. Кашнинчех мĕн те пулин илсе пырать — е пĕр коробка канфет, е торт, е духи таврашĕ. Володьăна та манмасть. Ачи хăй те ăна хăнăхса çитрĕ: дядя Вася, дядя Вася, тет кăна. Вăл пирĕн пата темиçе кун пымасан тунсăхлать: ăçта çухалчĕ пирĕн дядя Вася?

Володьăна усрава илсе ӳстернĕшĕн мухтатчĕ мана:

— Маттур, питĕ ыр ĕç тунă, чыс та хисеп сире уншăн...

Юлашкинчен эпĕ çав Судаков — ун хушамачĕ çаплаччĕ — пирĕн пулас пурнăç çинчен калаçма тытăннине илтрĕм. Ку саманта чылайранпа кĕтнĕччĕ ĕнтĕ. Унăн хула варринче икĕ пӳлĕмлĕ хваттер, хваттерĕнче уйрăм кухня, ваннăй, газ пуррине, хĕрача виçĕ çул тултарнă кун унăн ячĕпе илсе лартнă пианино та пулнине пĕлнĕ-ха эпĕ, хам кайса курман пулин те.

— Пĕр-пĕрне пĕлсе çитрĕмĕр пулас, Мария Алексеевна,—терĕ вăл пĕррехинче, ман пӳлĕмре иксĕмĕрех ларнă чух,—сирĕн те, манăн та пурнăç шăписем пĕр майлăрах. Пĕрле пурăнма пуçлатпăр пуль, тусăм. Çапла-и? Эсир ман пата куçатăр, пурнăçра мĕн кирли пĕтĕмпех пур манăн. Ăна-кăна илсе расхут тăвас çук. Кухня хатĕрĕсем те тем чухлех, кĕпине те алăпа çумалла мар — ăна валли машин пур, тусанне те пылесос пуçтарать. Сирĕн пымалла та командовать тумалла çеç... Ну, мĕн калăр ĕнтĕ, Мария Алексеевна? Шухăшлама виçĕ минут паратăп.— Вăл, ман çине шăтарасла пăхса, тутине темле пĕр еннелле чалăштарса кулам пекки туса илчĕ.

Эп малтанах кăшт çухалса кайнă пек пултăм, чĕнмесĕр лартăм, унтан кăкăр тулли сывласа илтĕм те каларăм:

— Пĕрле пулма хирĕç мар эпĕ, Василий Максимович, хăнăхрăм эп сире, лайăх çын пек туйăнатăр эсир мана... Сирĕнпе пурнăç тума пулать пулĕ...

— Тавтапуç комплиментшăн,—терĕ вăл, пуçне тайса илсе.

— Комплимент мар ку, эп хам мĕн шутланине калатăп...

— Тата тепĕр хут тавтапуç!

— Анчах сире хамăн татăклă сăмаха каличчен малтан пирĕн пĕр ыйту пирки калаçса татăлас пулать...

— Мĕнле ыйту пирки тата вăл?—тĕлĕннĕ пек пулчĕ мана çураçакан çын.

— Ман ывăл пирки... Эпир пĕрлешсех çитсен, ун шăпи мĕнлерех пулĕ-ши? Эпĕ пĕччен çын маррине пĕлетĕр вĕт-ха эсир?

— Э-э-э... м-мм...— Вăл пĕрре ман çине, тепре аяккалла пăхса илчĕ.— Ун пирки шутланăччĕ-ха эпĕ, каласшăнччĕ сире... Паллах, ку ыйту — çăмăл мар, анчах ăна татса пама пулать пек... Эп çапла шутлатăп, Мария Алексеевна. Ман шухăшпа эсир те килĕшетĕр пуль, тетĕп. Паллах, тĕрĕс ăнлансан... Да...

— Калăр, эппин, хăвăрăн шухăша, эп итлетĕп.

— Ман шутпа, Мария Алексеевна, ачана каялла тавăрса пама тивет пуль. Аçтан илсе килнĕ ăна, çавăнтах пурăнтăр вăл. Ну, эпир пăрахмăпăр ăна, кая-кая курăпăр, кучченессем леçсе парăпăр. Анчах хамăрпа пĕрле усрама май килмест... Да...

Çакна илтсенех ман пуçа юн пырса çапрĕ, анчах ытла тăруках нимĕн те шарламарăм-ха. Судаков, эп хăйне пĕлесрен хăранă пек, хăвăрт, чыхăна-чыхăна калама тытăнчĕ:

— Сăмах та çук ĕнтĕ, Мария Алексеевна, эсир вăл ачана усрама илсе питĕ, питĕ ырă ĕç тунă! Сире уншăн çĕре çитиех пĕшкĕнсе пуç таймалла! Анчах çитет пуль вăл ачапа кун чухлĕ асапланса пурăннипе. Пурпĕрех, ӳссе çитсен, вăл хăйĕн тăван амăшĕ патне каять, сире спаççипĕ та каламасть акă. Çавăнпа та хальтерех тавăрса парас пулать ăна ача çуртне... Уншăн ним хурланмалли те, хуйхăрмалли те çук, пирĕн хамăрăн ачасем пулаççĕ, вĕсене пăхса ӳстерме тивет. Ку ачи ытлашши чăрмав çеç кӳрет пире. Тата арçын ачасем вĕсем ӳснĕçемĕн пăсăлса, усалланса пыраççĕ. Кам пĕлет, темле характер пулать-ха унăн, ӳсерехпе чĕлĕм туртма та, эрех ĕçме те вĕренĕ, урамри шарлатансемпе сыхланса кайĕ, унтан милици, суд, темтепĕр... Çавăнпа та ăна ача çуртне хальтерех тавăрса панине нимĕн те çитмест. Хăвăрах ăнланмалла...

Эпĕ йывăç пек хытса лартăм. Ман ал-урана такам ним хускалмалла мар çыхса лартнăн туйăнчĕ. Пыр та типрĕ. Судаков çине ăна пурнăçра пĕрремĕш хут курнă пек пăхса, чылайччен ним калаймасăр лартăм. Тĕрĕссипе, вăл çакăн пек путсĕр çын, эгоист пулнине, ун чĕринче этемле туйăмсем çуккине чăнах та пĕрремĕш хут куртăм çав. Вăл хăйĕн çинчен, хăй лайăх та канлĕ, «пыл та çу» пурăнасси çинчен çеç шухăшлать, çавăн çинчен çеç ĕмĕтленет иккен. Ăна эпĕ те кухарка, килти прислуга вырăнне çеç кирлĕ — кухньăра хатĕрсем те тем чухлех унăн, кĕпе çума — машин, тусан тасатма — пылесос пур. Урăх ним çинчен те каламарĕ вĕт мана!..

— Ăнлантăм эп сире, Василий Максимович, пĕтĕмпех ăнлантăм,—терĕм кăшт тăхтасан,—тавтапуç сире лайăх лекци вуласа панăшăн! Халь ĕнтĕ çитет пуль, тухса кайма та пултаратăр. Акă алăк... Çак самантран пуçласа ку алăк хăш тĕлтине те, вăл ăçталла уçăлнине те манма ыйтатăп.

Эп пукан çинчен тăтăм. Манăн алăсем чĕтрерĕç.

Вăл та сиксе тăчĕ.

— М-м-м... Мария Алексеевна! Мĕнле ăнланмалла куна?!

— Мĕнле илтрĕр, çавăн пекех ăнланăр,—терĕм эпĕ..— Пирĕн хушăмăрта урăх нимĕнле калаçу та пулма пултараймасть.

— Мĕншĕн? Эп ытлашши нимĕн те каламарăм-çке?

— Ытлашши мар пулсан та, çителĕклех пулчĕ, Василий Максимович. Каларăм-çке, пĕтĕмпех ăнлантăм эпĕ!

— Эсир... эсир хăвăрăн ывăлăр пирки каланăшăн кӳрентĕр-и? Унта ним кӳренмелли те çук, эп сире питĕ тĕрĕс каларăм, шухăшлăр-ха лайăхрах...

— Эп ун çинчен ултă-çичĕ çул каяллах питĕ тĕплĕн шухăшланă, тек ним шухăшламалли те çук манăн!

— Эппин, манпа килĕшместĕр?

— Мăйран кассан та килĕшместĕп!—терĕм эпĕ хыттăн.—Володьăна хăйĕн амăшĕ пăрахса кайни те çитет. Тек нихçан та тăлăх пулмасть вăл, хамран уйăрмастăп ăна! Вăл маншăн никамран та хаклă!

Хам кăшт çеç макăрса ямарăм.

Судаков пĕр хушă чĕнмесĕр пăхса тăчĕ. Сăнран улшăнса кайрĕ — тĕлĕнни те, тарăхни те палăрчĕ, манран йĕрĕннĕ пек те туйăнчĕ.

— Ну,-ну... хăвăрăнне хăвăр пĕлĕр, эппин!—терĕ вăл унтан, сăмса çунаттисене сиктерсе.—Анчах эпĕ темле проститутка кăларса пăрахнă йыт çурине хамăн таса киле кĕртсе, юлташсем умĕнче намăс курса ларма çав териех ухмах мар-ха. Ун пек идиотсене урăх çĕрте шырăр, хисеплĕ Мария Алексеевна! Да!

— Тухса кайăр халех! Куçăм ан куртăр сире!— кăшкăрса ятăм та эпĕ, хам сисмесĕрех ачан пĕчĕк пуканне çавăрса тытрăм. Судаков алăк патнелле пырса хăвăрт кăна плащĕпе шлепкине тăхăнчĕ.

— Улталарăр, эппин, мана! Мăшкăлларăр! Эп сирĕнпе çыхланса тем чухлĕ укçа пĕтертĕм!— терĕ вăл йытă пек йынăшнă сасăпа.—Юрĕ, ырă çыннăм, тавтапуç, анчах эп сире куншăн ахалех каçаратăп тесе ан шутлăр, расхутсене эп йăлтах çырса пынă, пĕтĕмпех тӳллетеретĕп! Судпа шыраса илетĕп!

— Вон! Тухса вăркăнăр часрах!—эпĕ ниçта кайса кĕрейми тарăхса, ăна пеме алăри пукана çĕклерĕм. Вăл çав самантрах коридоралла сиксе тухса алăка шанлаттарса хупрĕ...

...Çапла татăлчĕ манăн иккĕмĕш юрату. Питĕ хытă йăнăшнă-мĕн эпĕ ку çын пирки. Ним чухлĕ те юратман вăл мана, хăйне лайăхрах тăвасси çинчен çеç шухăшланă. Хама чăнласах юратнă пулсан, Володьăна та йышăнмалла. Анчах вăл унран епле хăтăласси çинчен çеç шухăшланă. Юлашкинчен ав мĕн каласа тăкрĕ: «проститутка кăларса пăрахнă йыт çури...» Этем-и ĕнтĕ вăл?! «Пурнăçра мĕн кирли пĕтĕмпех пур манăн», тет хăй. Киленче пианино, кавирсем, кĕпе çумалли машинсемпе пылесоссем пуррипе хăйне телейлĕ çын тет ĕнтĕ, ăна урăх ним те кирлĕ мар, тесе шутлать, мăнтарăн. Анчах унăн этем пурнăçĕнче чи кирли, чи хакли — этем чунĕ, ырă чĕре çуккине ăнланмасть. Анланаймасть те вăл ăна нихçан та!..

Паллах, ăна тарăхнипе, кӳреннипе, пĕтĕм ăшчик кӳтсе килнипе куççулĕпех макăртăм эпĕ. Унтан, кăшт лăпланнă пек пулсан, вăрахчен шухăшласа выртрăм. Хамра айăп çук-ши çак Судаковпа çур çул ытла килĕштерсе пурăннă хыççăн тăрук çакăн пек уйрăлса кайнăшăн? Тен, чăнах та, Володьăн тăван амăшне,

Василисăна шыраса тупмаллаччĕ те ачине хăй патне илме сĕнмеллеччĕ?.. Çавăнтах эпĕ Володьăна усрава илме шут тытсан ача çурчĕн директорĕ калана сăмахсене аса илтĕм: «Володя сире хăвăрăн пурнăçри телее тупмашкăн кансĕрлеме пултарать... Ют ачана усрама илнĕшĕн нихçан та ӳкĕнмĕп теме пултаратăр-и?..» Эппин, çав директор кайран-кайран мĕн пулассине пĕлнĕ...

— Çук, ун пек пулмасть,— терĕм унтан хама хам.—Ӳкĕнместĕп. Володьăна никама та памастăп— ача çуртне те, унăн амăшне те. Вăл ман ывăл. Апанасов. Эп унăн амăшĕ. Урăх амăшне пĕлмест те вăл. Тĕрĕссипе, урăх амăшĕ çук та унăн. Мĕнех вара çав Судаковпа пĕрлешичченех уйрăлса каймалла пулнăшăн? Унпа çавах телейлĕ пулас çукчĕ. Кăтартрĕ ĕнтĕ хăйне! Эп пĕччен мар. Манăн ывăл пур. Юратнă ывăл...

* * *

Иккĕнех пурăнтăмăр эпир. Пире никам та кансĕрлемерĕ, чăрмантармарĕ. Ир тăрса апат çиетпĕр те ывăл шкула каять, эпĕ—фабрикăна. Вара каçсăр та тĕл пулмастпăр пĕр-пĕринпе.

Пĕр çул, ик çул иртрĕ. Хамăн фабрикăри ĕçсем ăнсах пычĕç, мана ĕнтĕ мастер туса хучĕç, ответлăх тата ытларах ӳсрĕ. Партбюрова суйларĕç те унта ĕç яланах тупăнчĕ. Çак хушăра Володя тăрук темле ӳссе, тăсăлса кайрĕ, арçын пула пуçларĕ пулмалла — çӳçне ĕнтĕ машинкăпа мар, «под-польку» кастарать, брюкине ик виç кунта пĕрре хăех якатать, пушмакĕ хуть те хăçан та тĕкĕр пекех йăлтăртатать. «Вăл питĕ хăвăрт ӳссе пырать, эп çав вăхăтрах хăвăрт ватăлса пыратăп...» шухăшлаттăм тепĕр чух, Володя çине вăрахчен пăхса.

Шкулта вăл хăйĕнпе пĕр класра вĕренекен Ирина ятлă хĕрачапа питĕ туслăччĕ. Класра та пĕр парта çинче ларнă вĕсем, уроксем хыççăн та пĕрле таврăнатчĕç, Ирина час-часах пирĕн патра пулатчĕ, уроксене пĕрле тăватчĕç. Эп Володьăна баян илсе парсан вара (килти инструментсăр музыка шкулĕнче вĕренме питĕ кансĕр) Ирина ăна хăй юратнă кĕвĕсене калаттаратчĕ. Кам пĕлет, тен, юратнă та-и вĕсем пĕр-пĕрне. Ача чухнехи юрату та пулать-çке...

Лайăх пурăнаттăмăр. Пĕр ăмăр кун та пулман пирĕн пурнăçра.

Унтан, çавăн пек чип-чипер пурăннă çĕртех, ман пуç çине калама çук хăрушă хурлăх йăтăнса анчĕ...

Пĕррехинче — шкулта çуллахи каникул пуçланас умĕн пулчĕ ку — комбинат картишĕнче мана пĕр хĕрарăм, Яргуткина хушаматлăскер, чарса тăратрĕ. Палланă çын, кунта ĕçлеме те вăл манпа пĕр вăхăтрах килсе кĕнĕ, кирпĕч-хăйăр пĕрле йăтнине те, котловансем алтнине те астăватăп. Халь кайăччĕ ĕнтĕ, ик ачаллăччĕ, хăй ткачиха.

— Итле-ха, Апанасова, манăн сана пĕр сăмах каламалли пур,—терĕ вăл, такам илтесрен шикленнĕ пек ун-кун пăхкаласа.

— Мĕнле сăмах? Кала, ара, итлетĕп,—терĕм ăна.

— Эпир старикпе иксĕмĕр виçĕмкун çеç Пильнăран таврăнтăмăр. Ман старик вырăс, çав станцирен. Пире унта туя чĕнчĕç, шăллĕ авланчĕ. Питĕ вăйлă туй турĕç, каламалли те çук! Ун пек чаплă туй нихçан та курман эпĕ, туршăн та...

Эп ун сăмахне итлесе тĕлĕнсе тăтăм. Ма каласа парать вăл мана кун çинчен? Такам авланнă, туй тунă...

— Мĕн-ха вара?—ыйтрăм тӳсеймесĕр.

— Çав туйра эпĕ лешне тĕл пултăм!—терĕ Яргуткина.

— Кама — лешне?

— Сан ачун амăшне ара, Василисăна! Унăн упăшки ман старик шăллĕн начальникĕ, тет те, çавăнпа чĕннĕ пулмалла вĕсене туя...

Ку мана вĕри шывпа сапнă пекех пулчĕ. Василиса синчен темиçе çул та аса илменччĕ-ха, пуçран та тухса ӳкнĕччĕ вăл. Таçта кайса çухалчĕ пуль-ха, питĕ лайăх ку, тенĕччĕ. Ак, халĕ каллех аса илтерчĕç. Чĕре ыратсах кайрĕ.

Эп ним ыйтмасăрах, Яргуткина мана васкаса каласа пама тытăнчĕ:

— Юсанса кайнă вара, айтурух! Сан хулăнăш иккĕ те пулĕ! Питĕ капăр тумланнă, хăлхинче йăлтăртăлтăр алкасем, пĕр аллинче ылтăн сехет, тепринче браслет... Уй, ун пекки пирĕн ĕмĕрне те пулас çук! Упăшки универмаг директорĕ, тет, хăй сехет сутакан магазинта ĕçлет... Мана палламарĕ вăл, эп хам палла-

са илтĕм, хĕр чухне пĕрле ĕçленĕ, пĕрле выртса-тăнă та-ха... Эс Салмина мар-и?— терĕм те, çавă, терĕ... Анчах эпĕ халь Салмина мар, Жирнова, терĕ.

— Мĕнле пырса лекнĕ вара вăл унта? Эп пĕлнĕ тăрăх, вăл таçта Сергачра пурăнмалла-çке?—ыйтрăм çапах та.

— Сергачран куçса килни тăватă çул çитет, терĕ. Хăйсем çурт лартнă, икĕ хутлă, тет, аялти чул, çӳлти йывăç. Шутсăр пуйса кайнă. Пĕчĕк машин та пур, тет... Адресне пачĕ, тепĕр кунне пырса курма чĕнчĕ, анчах эпир каймарăмăр...

— Пулĕ, пулĕ!—терĕм эпĕ.—Çавăн пек пурнăç шыраса тухса кайнă та-ха вăл, тупнă ĕнтĕ. Ĕмĕчĕ тулчĕ, эппин. Кама мĕн вĕт.

Эп пăрăнса утма тăтăм, анчах Яргуткина мана тытса чарчĕ.

— Сан çинчен ыйтрĕ...

— Мĕн ыйтмалли пур унăн ман çинчен?

— Эс ун ачине усрама илнине пĕлет вăл. Таçтан пĕлнĕ-çке, ăна ыйтмарăм. Ачине чипер усрать-и, выçă лартмасть-и, çĕтĕк-çатăк çӳретмест-и, тет.

— Сволочь!— терĕм эпĕ тӳсеймесĕр.

— Сволочĕ сволочах ĕнтĕ,—ал сулчĕ Яргуткина,— ачин сывлăхĕ çинчен те, мĕнле вĕренни çинчен те ыйтмарĕ! Хам каласа патăм — ик шкулта вĕренет, иккĕшинче те отличник, терĕм. Сан ачу ман шăллăмпа вĕренет те, пĕлетĕп-çке эпĕ...

— Кăлăхах каланă, кирлĕ мар-мĕн калама,—терĕм эпĕ.—Халь тин Володьăшăн вăл çичĕ ют кăна.

— Упăшки вара... çырлахтăр турă! Виçĕ янахлă. Хырăмĕ пичке пек. Пĕр сакăр пăт та пулĕ çав! Ун пек-кисене «Капкăнра» ӳкерсе кăтартаççĕ. Хăй вырăнтан та тăраймасть, ывăннă лаша пек хашкать, эрехне çавах стаканĕ-стаканĕпе хыпать. Василиса унпа юнашар ларнине те курмарăм эпĕ, пĕрмай çамрăксемпе ăмăртнă пек сикрĕ...

— Пурнăç пыл та çу чухне ма сикес мар ĕнтĕ,— терĕм эпĕ.

— Упăшки сисиччен вăрлакалать пулмалла...— хихиклетсе илчĕ Яргуткина.— Çавăн пекрех туйăнчĕ...

— Мăнтăрпа çын темле те иртĕнме пултарать çав, унтан тĕлĕнмеллиех çук,—ал султăм ăна хирĕç.

— Тата... тата пĕлетĕн-и, мĕн каларĕ вăл мана?

— Мĕн?

— Маруç ачине усратăр-ха, çитĕнтертĕр, чармастăп, анчах эпĕ ăна хуть те хăçан та каялла туртса илме пултаратăп, памасан — судпа илетĕп, терĕ.

— Çаплах каларĕ-и? —пĕтĕм пит-куç пĕçерсе кайрĕ манăн.

— Каларĕ çав. Хăй самаях ӳсĕрччĕ ун чух. Каларĕ те ахăлтатса кулса ячĕ, эсремет. Хам та тарăхса кайрăм вара. «Санăн пĕрре те пулин пырса курасчĕ ачуна, парнесем, кучченеçсем илсе пырасчĕ».—«Вăхăт çук ман ун пек çапкаланса çӳреме»,—терĕ мана хирĕç. Сатана эсĕ, терĕм вара хам ăшра...

— Нихçан та илеймест вăл Володьăна,—терĕм эпĕ.— Судпа та, нимпе те. Ачи хăй каясшăн пулсан çеç суд ун майлă пулма пултарать. Володя хăй нимĕн те пĕлмест-ха, мана тăван амăшĕ тесех шутлать, анчах хăçан та пулин пĕлсен те ăна вăл мĕншĕн ман ывăл пулса тăнине калатăп та, мана пăрахмасть пулĕ, тетĕп...

— Вăл тĕрĕс ĕнтĕ, пурте пĕлеççĕ вĕт эс ăна пĕчĕклех илсе килсе, хăвăн ачу пек пăхса ӳстернине!—терĕ Яргуткина.

Уйрăлса каяс чух хуллен кăна асăрхаттартăм ăна:

— Ку сăмаха урăх никама та калас марччĕ...

— Мĕнле сăмаха?

— Эсĕ Василисăна курнине. Ăнсăртран Володя хăлхине пырса кĕрĕ тата...

— Çук, çук, шарламастăп. Мĕн тума кирлĕ вăл мана?

Анчах «шарланă» çав вăл. Пулаççĕ çавăн пеккисем: мĕн те пулин пĕлсен — курсан, илтсен — ун пирки çийĕнчех ыттисене каласа памасăр ниепле те тӳссе тăраймаççĕ. Пĕр-ик çынна çеç те мар тата, вуншар çынна пĕлтермелле унăн: «Илтнĕ-и? Çапла, тет... Тупата туршăн суймастăп... Тĕлĕнсе вилсе каймалла!..» Çак Яргуткина та çавăн йышшискерччĕ, пакăлтатма юратчĕ. Мана тĕл пуличченех янраса çӳренĕ вăл Василисăна курни, лешĕ Володьăна хуть те хăçан та каялла илме пултарассипе мухтанни çинчен. Ăна пулах темтепĕр курса пĕтрĕм вара эпĕ...

...Ман Володя темле тăрук улшăнса кайрĕ. Кашни кун сисе пуçларăм çавна. Тул енчен пăхсан, пĕтĕмпех малтанхи пекчĕ ĕнтĕ: тăрăшса вĕренет, шкултан тав-

рăнсан апат çиет те кăшт кансанах уроксем тума ларать, унтан пĕр хушă баян тытса ларать — музыка шкулĕнче те заданисем парса яраççĕ-çке-ха. Юлташĕсем пыра-пыра каяççĕ, леш Ирина ятлă хĕрача та пыркалать. Хăш чух ушкăнĕпе кинона кайса килеççĕ. Юлашки вăхăтра тата хайхи Яргуткина шăллĕ Тимка çӳреме пуçларĕ пирĕн пата, унччен çӳреместчĕ вăл, анчах шкулта пĕрле, пĕр класра вĕренеççĕ те, туслашса кайнă ĕнтĕ кусем, терĕм. Сăлтавĕ пачах урăх пулнăмĕн, ун çинчен эпĕ шухăшлама та пултарайман.

Çав кунсенчех манăн ача хăйне темле тĕлĕнмелле тыткалама пуçларĕ. Уроксем туса ларнă çĕртех тăрук вулама-çырма пăрахать те, сĕтел çине чавсаланса, ик аллипе те тăнлавĕнчен тытса шухăша каять. Лара-ать вара тем шухăшласа. Хуйхăрнă пек те туйăнать,— вăхăчĕ-вăхăчĕпе хашш! сывласа ярать.

— Мĕн пулчĕ, ывăлăм, хуйхăратăн мар-и эс?— тесе ыйтсан, вăл варт! вăраннă пек пулать те пĕр хушă куçĕсене мăчлаттарса ларать.

— Ним те пулман, задача тухмасть-ха...—тет унтан. Е тата:—Пĕр хăрушă истори çинчен вуларăм та савăн пирки шухăшларăм,—тет.

Апат та япăх çиекен пулчĕ, çĕрле те питĕ канăççăр сывăрать, йывăр тĕлĕксем курать пулмалла. Тапкаланать, йынăшкаласа илет. Пĕррехинче вара çĕр варринче шари! кăшкăрса ячĕ: «Анне! Анне!» Вăранса ун патне чупса пытăм: кунта эпĕ, Володя, кунта, тетĕп. Пуçĕнчен тытса пăхрăм — лачкам шыв выртать ача. Хăй хашкать, чĕри кăнт-кăнт тапать. Вăратас темерĕм, тепĕр майлă çавăрса выртартăм çеç. Вăл вара вăрăммăн йынăшса илчĕ те лăпкăнах çывăрса кайрĕ. Анчах хам ирччен те чăлкăм куç хупмарăм.

— Эс кĕçĕр питĕ хытă кăшкăртăн, ачам, мĕнрен хăрарăн ун пекех?—хуллен ыйтрăм ирхине.

— Нимрен те хăраман,—терĕ вăл ман çине пăхмасăрах.

— Тĕлĕкре темскер куртăн пулмалла...

— Нимĕн те курман!— мăкăртатса илчĕ Володя кăмăлсăррăн.— Тата мĕн тума кирлĕ вăл сана?Эпĕ нихçан та сан тĕлĕкӳсем çинчен ыйтмастăп-çке!

Пĕрремĕш хут Володя манпа сиввĕн калаçса илчĕ. Нимех те каламарĕ пулсан та, чĕрене пырсах тиврĕ вăл.

Каçхине, музыка шкулĕнчен таврăнсан, апат ларт-са патăм та, вăл кăшт çеç çинĕ пек турĕ, унтан манпа калаçмасăрах вырăн çине кĕрсе выртрĕ.

— Эс чирлемерĕн пулĕ-çке? Пуç ыратать-и сан, мĕн-и?— йăвашшăн ыйтрăм ун патне пырса.

— Ним те ыратмасть! Тархасшăн, сывăрма ан кан-сĕрле!— терĕ те вăл, пичĕпе стена еннелле çаврăнса выртрĕ.

— Тен, сана таблетка парас?

— Ху хып таблеткусене, юрататăн пулсан! Мана ним те кирлĕ мар! Ан çыпăç!

Малтанхинчен те хытăрах кӳрентĕм. Халех, вун-пĕр-вуниккĕрех çакăн пек урлă калаçма пуçларĕ пул-сан, кайран, ӳсерехпе мĕн пулĕ?! Итлеме пăрахать вăл мана. Нимĕн те тăваймастăн ăна. Çынсем хăйсен ачи-сене — лешсем итлемесен, иртĕнме пуçласан — ятлаç-çĕ, хăтăраççĕ, кирлех пулсан наказани те параççĕ. Эп мĕн тăвăп? Вăл ман ача мар... Ăна-кăна тума юра-маннн çинчен ахаль калама пултарăп ĕнтĕ, анчах вăрçма, ятлама, мĕнле те пулин наказани пама пулта-рас çук. Çынсем мĕн калĕç?.. «Ак хайхи, ачи хăйĕн мар та, хĕсĕрлеме тытăнчĕ ăна, çиме те памасть пулĕ-ха!..»

Аптранă енне, Володьăсен класс руководителĕ пат-не кайса каласа патăм.

— Ан пăшăрханăр,—лăплантарчĕ вăл мана,— ар-çын ачасем вуннăсенчен иртсен улшăнаççĕ çав... Шăр-чăкланакан пулаççĕ, хăйсене ачашланине те юратмаç-çĕ. Пысăкланаççĕ мар-и! Иртет вăл...

Кĕçех каникул пуçланчĕ. Володя ниçтах та кайса çӳремерĕ, килтех ларчĕ. Питех калаçмарăмăр. Çапах та вăл манран темскер пытарса пурăннă пек туйăнчĕ.

Пĕррехинче вара, темле пуху хыççăн, вунпĕр ирт-сен тин таврăнтăм та, Володя килте çуккине курах кайрăм. Вырăнне ирхине епле витсе хунă — вăл çапли-пех, ăна тĕкĕнмен те.

Мĕне пĕлтерет ку? Володя нихçан та ку таранччен çӳремен. Музыка шкулĕнчен те вуннă тĕлне яланах таврăннă. Аçта пулма пултарать-ха вăл? Кам патне кайнă? Мĕн тăвать? Ним шухăшлама аптрарăм. Ха-мăн чĕре шикленсе, сиксе тапма тапратрĕ. Апат та ан-марĕ. Сывăрма выртасси пирки калаçмалли те çук. Кĕç килет, кĕç килет, тесе, саланмасăрах диван çине

выртрăм. Вуниккĕ çитрĕ. Ман ача килмерĕ. Пĕр сехет... Çук! Тӳсеймерĕм вара, хăпăл-хапăл тумлантăм та Яргуткинсем патне тухса чупрăм— юлашки вăхăтра Володя пĕрмай унăн шăллĕпе пĕрле çӳрерĕ. Алăка шакка-шакках уçтартăм.

— Ман Володя çук-и сирĕн патра?

— Çук, килмен вăл паян кунта,— терĕ алăк умне аялти кĕпепех тухса тăнă Яргуткина.

— Сирĕн хăвăрăн Тимка килте-и?

— Çук.

— Ăçта вăл?

— Халь каникул та... аннесем патне, Комсомольскине кайрĕ.

— Хăçан?

— Паян, кăнтăрла çитеспе.

— Эппин, ман Володя та унпа пĕрле кайман-ши?

— Çук пуль, мĕн тума кайтăр вăл пирĕн яла? Тимки килтен пĕчченех тухса кайрĕ.

Ман пуç çаврăнма тытăнчĕ. Мĕн тумалла? Ăçта шырамалла ку ачана? Ăнсăртран, урамра таçта машин айне лекмерĕ-ши? Ун пекки хулара пулкалать. Тен, вăл халь моргра вилĕ выртать? Ун çумĕнче нимĕнле документ та çук та, вăл камне те пĕлмеççĕ, мана та пĕлтереймеççĕ... Макăра-макăра, хам шухăша Яргуткинăна каласа патăм. Вăл мана хваттерне илсе кĕртрĕ те упăшкине вăратрĕ.

— Унта-кунта шăнкравласа пăхас пулать,—терĕ лешĕ.

Вĕсен шăпах телефон пуррчĕ. Яргуткин милицине шăнкравларĕ — паян пĕр-пĕр правонарушенишĕн сирĕн пата çав-çав ятлă арçын ача лекмен-и? Çук иккен, ун пекки пулман. Унтан хирурги больницине калаçрĕ: ăнсăртран, сарăмсăр аманнипе, çавăн пек ачана илсе пыман-и паян? Пыман... Юлашкинчен вăл ман çине пăхса илчĕ те, кăшт тытăнса пăхнă хыççăн морга* шăнкравларĕ. Лере телефон час тытмарĕç. Эп ĕнтĕ чĕтресе, куççулĕпе чыхăнса çеç тăтăм. Пĕр-ик минутран çеç сас пачĕç моргрисем. «Çук, кунта ĕнер те, паян та нимле виле те илсе килмен...» Çавăнтах шӳт туса илчĕ пĕр ухмахĕ: «Пушă вырăнсем нумай, килсе

---

* Виле хумалли вырăн.

выртма пултаратăр!» «Эп сана хăвнă моргра выртмалла тăватăп акă халех!»—вăрçса илчĕ ăна хирĕç Яргуткин.

Пĕр хушă виççĕмĕр те чĕнмесĕр лартăмăр.

— Акă мĕн,—терĕ унтан Яргуткин,—ирхине Комсомольскине шăнкăравласа пăхăпăр, тен, сан ачу чăнах Тимкăпа пĕрле кайнă? Ача пуçне темле ăс та пырса кĕме пултарать...

Эп киле таврăнтăм. Паллах, çĕрĕпе куç хупмарăм. Ăшчик çунса тухать. Мĕнле пулма пултарчĕ ку? Ыйтмасăр-каламасăр нихçан та каякан марччĕ-çке! Эп çук чух тухса каймалла пулсан та, хут татки çырса хăвараканччĕ! Халь ним тума та çук. Ним те пĕлместĕп... Яргуткинсен Тимкипе кайнă пулсан — кайнă пултăр, вăл темех мар, пĕрле вĕренекен ачапа пĕрле кайнă та — килнĕ. Анчах мĕншĕн систермен вăл мана ун çинчен? Эп ямасран хăранă-ши?

Тул çутăласпа тепĕр хут Яргуткинсем патне чупрăм. Упăшки Комсомольскине шăнкравлама тытăнчĕ. Пĕр сехет пек иртсен лере вĕсем тăванĕсене чĕнсе пычĕç.

— Тимка пырса çитрĕ-и?—ыйтрĕ Яргуткин нимрен малтан.

— Килмеллеччĕ-им вăл? Çук, курман эпир Тимкăна, килмен вăл,—терĕç лерен.

— Пыман, эппин? Ĕнерех çитмеллеччĕ-çке!

— Ним те пĕлместпĕр...

Яргуткин трубкăна шанк! пăрахрĕ.

— Ак сире тепĕр новость! Тимка та çухалнă! Çакă çеç çитместчĕ-ха пирĕн пурнăçра! Ну, шуйттан ачипăчи!..

— Эппин, вĕсем пĕрле тухса кайнă ăçта та пулин,— ассăн сывласа ячĕ Яргуткина.—Туршăн та хулăпа ăшаламалла иккĕшне те, купарчаран юн пĕрĕхиччен! Пăх-ха, тухаççĕ те каяççĕ! Ăш хыптарса лар кунта вĕсемшĕн. Тимки улталаса хăварать-ха тата.

Эпир васкасах хамăрăн халь мĕн тумалли, ачасене ăçта шырамалли çинчен калаçма тытăнтăмăр.

— Милицие кайса пĕлтерес пулать, урăх мĕн тăватăн?— терĕ Яргуткин— Вĕсем розыск параççĕ...

— Вара тупма пултараççĕ-и?— иккĕленерех ыйтрăм эпĕ.

— Тупаççĕ! Ют çĕршыва кайман вĕт ачисем. Мили-

ширен нумаях пытанса çӳреймĕн! Наччас ярса тытаççĕ!

Юрать-ха, вырсарникун пулчĕ ку, ĕçе каймалла марччĕ. Эпир Яргуткинпа иксĕмĕр милицие тухса утрăмăр. Автобус чарăннă тĕле çитеспе пирĕн ума хайхи Ирина, Володьăпа туслă пурăннă хĕрача, тухса тăчĕ. Бăл магазина сĕт илме каять-мĕн. Пире сывлăх сунчĕ те манран тӳрех ыйтрĕ:

— Мария Алексеевна, сирĕн Володя ăçта кайрĕ?

— Вăл кайнине епле пĕлетĕн эсĕ?— хирĕç ыйтрăм унран.

— Ман анне ĕнер чугун çул станцине Мускавра пурăнакан йăмăкне кĕтсе илме кайнă та, вăл курнă. Тимкăпа иккĕшĕ те вагона кĕрсе кайрĕç, тет. Пĕри кутамккапа, тепри пĕчĕк чăматанпа, тет. Инçе кайрĕç-и вĕсем? Час таврăнаççĕ-и? Манăн Володьăпа пĕр ĕç пурччĕ те, çавăнпа ыйтатăп...

— Пĕлместĕп, Ирина, вăл мана каламасăр тухса кайнă...—Манăн тӳрех куççулĕсем шăпăртатса анчĕç.— Таçта вăл халь...

— Володя çавăн пек тума пултарнă-и?!—хĕрача аллинчи бидон чăнкăртах тротуар çине ӳкрĕ.—Апла... апла ухмах ача вăл! Тек унпа нихçан та туслă пулмастăп!

— Хуть те мĕн кала ĕнтĕ, Ирина...

...Милици уйрăмĕнче пире дежурнăй — чикан тĕслĕрех çамрăк лейтенант йышăнчĕ. Малтан эпир мĕн каланине тимлĕн итлерĕ, унтан ачасен ячĕсемпе хушамачĕсене, вĕсем хăш вăхăтра тухса кайнине, миçе çултине, мĕн тăхăннине, аллисенче мĕн пуррине çырса илчĕ.

— Мĕн те пулин палла пулсанах систеретпĕр,— терĕ юлашкинчен.

Вĕсем çав кунах, пĕр-ик сехетренех пур чугун çул линийĕсем тăрăх та васкавлă телеграмма янă: «Шупашкартан ашшĕ-амăшĕсенчен вăрттăн тухса тарнă Владимир Апанасовпа Тимофей Яргуткин ятлă вуник çулхи ачасене тытса чарса киле ăсатăр... Вĕсене тытсанах пĕлтерĕр...»

Милицирен киле таврăнсан, алăк патĕнчи старик-вахтер мана çыру тыттарчĕ. Марка таврашĕ те, почта штемпелĕ тĕ çукчĕ конверчĕ çинче. Адресне кĕнекери пек саспаллисемпе çырнă.

— Ăçтан тупрăн эс ку çырăва?—хăвăрт ыйтрăм эпĕ.

— Тупман, почта ещĕкĕнчен хаçатсемпе, ытти çырусемпе пĕрле кăларса илтĕм,—терĕ вăл.

«Мĕнле тĕлĕнмелле çыру тата ку? Камран?»—терĕм те хам ăшра, конверта тӳрех çурса пĕчĕк кăна хут татки туртса кăлартăм. Володя алли! Вăл çырнă иккен! Сывлăш пӳлĕнсех ларчĕ. Темиçе сăмах çеç чĕркелесе хунă хут çине, питĕ васканă пулмалла:

«Каламасăр кайнăшăн каçар. Мана ан шыра. Эп хамăн тăван анне патне каятăп. Сывпул. В.»

Манăн куç хуралса килчĕ, пуç çаврăнса кайрĕ. Коридорти сак çине лартăм та аран сывлăш çавăрса ятăм. Çамка çине шултра тар тапса тухрĕ...

— Апла-ха, эппин... апла, эппин...—пăшăлтатса илтĕм эпĕ.—Амăшĕ патне кайнă вăл... Мана пăрахса, мана каламасăр, вăрă пек вăрттăн... Турăçăм! Мĕнле тӳссе ирттерес куна!..

— Усал çыру илтĕн-и-мĕн, сăнран та тăрук улшăнса кайрăн?—ыйтрĕ вахтер.— Кам мурĕ çырать тата çаван пек кӳрентерекен çыру?

— Çук, апла мар... Ахаль, темле вăй пĕтсе килчĕха...—терĕм ăна хирĕç хуллен.

— Ачу пулă тытса килчĕ-и?

— Мĕнле пулă?— картах сикрĕм эпĕ.

— Ара, ĕнер кăнтăрлапа вăл «юлташпа иксĕмĕр пулла каятпăр», тесе хăварчĕ мана. Çурăмĕ хыçне пĕчĕк кутамкка çакнăччĕ...

— Таврăнман-ха, вĕсем... икĕ кунлăха кайнă...

«Старике те улталаса хăварнă!»— шухăшласа илтĕм хам.

Аран-аран тенĕ пек хамăн пӳлĕме хăпартăм та диван çине выртса макăрса ятăм...

— Ывăл илсе çитĕнтертĕм пулать хам валли! Вунă çула яхăн пăхрăм, унăн кашни утăмĕшĕн пăшăрхантăм, миçе каç çывăрмарăм пуль... Пĕтĕм пурнăçа патăм... Юлашкинчен мĕн пулса тухрĕ-ха?

Çавăнтах хама качча илме тăнă Судаков сăмахĕсем аса килчĕç: «Пурпĕрех, ӳссе çитсен, вăл хăйĕн тăван амăшĕ патне каять, сире спаççипă та каламасть акă...» Мĕн пулассине куçпа курса тăнă пекех каларĕ-çке вăл! Ӳссе çитсен тин мар, халех, ачаллах тухса кайрĕ!.. «Эп хамăн тăван анне патне каятăп...»—тесе çырса хă-

варнă. Анчах ăçтан, епле майпа пĕлнĕ-ха вăл унăн «тăван амăшĕ» пуррине?! Кам каланă ăна ун çинчен? Тухса кайма хăюлăх çитернĕ пулсан, унăн адресне те пĕлет ĕнтĕ вăл! Ахальтен мар юлашки вăхăтра манран ютшăнчĕ, манпа хăр-хар калаçкаларĕ... Никам та мар, Яргуткина туса хучĕ çакна! Володьăна хăйнех каламан пулсан та, хăйĕн шăллĕ Тимка умĕнче лăпăртатнă та вăл, лешĕ Володьăна каласа панă... Шут тытнă вара ку кайма. Хăйĕнпе пĕрле юлташне, Тимкăна та илсе кайнă... Анчах Василиса йышăнĕ-ши-ха ăна? Çук пуль, хăй килĕшсен те упăшки килĕшес çук...

Çавăн пек шухăшсемпе пăтрашса выртса, çывăрса кайнă.

Каçалапа мана Яргуткина пырса вăратрĕ. Пуç çурăлсах тухать манăн. Пĕр вăй та çук...

— Василиса çинчен Володьăна каласа панă-и эсĕ?—ыйтрăм унран.

— Туршăн та, хĕвелшĕн те ун умĕнче çăвар уçман! Эс мĕн, вăл ун патне кайнă тесе шутлатăн-им?

— Çыру çырса хăварнă...

— Ухмах ача! Леш сатани çавах усрамасть ăна! Ан хăра, унта кайнă пулсан чип-чиперех таврăнса килет акă каялла. Курăн. Тимки те унпа пĕрле сĕтĕрĕнсе кайнă пулсан, эп ăна çапса пăрахатăп... Кĕтсе пăхарха. Хăйсем çаврăнса килеççĕ-и, милици илсе килет-и шуйттан çурисене...

...Тăватă кун кĕтрĕмĕр эпир. Тăватă кун та тăватă каç вутпа çунчĕ ман чĕре. Ниçта кайса кĕме пĕлмерĕм, пĕрмай макăртăм. Чирлесех кайрăм. Пуç пĕр вĕçĕм янрать. Тухтăрсем мана «нервное расстройство» тесе бюллетень пачĕç, лăпланса пурăнма хушрĕç, анчах епле лăпланма пултарнă-ха эпĕ?

Пиллĕкмĕш кунĕнче ир-ирех телеграмма пырса пачĕç:

«Ваш мальчик задержан срочно выезжайте милицию станции Пильна Казанской дороги...»

Вăй çук пулсан та, тумланкаласа, Яргуткинсем патне васкарăм. Вĕсене те халь çеç çавăн пек телеграмма пырса панă иккен те, арăмĕпе упăшки ун пирки пăлханса калаçаççĕ:

— Мĕн тăватпăр ĕнтĕ?—ыйтрăм эпĕ.

— Мĕн тăвассу пур? Каяс пулать! Кам пĕлет, тем пирки лекнĕ вĕсем унта?— терĕ Яргуткин çилĕпе.

— Кунтан телеграмма панипе тытса чарнă ĕнтĕ, мĕншĕн пултăр тата?— терĕ арăмĕ.

— Ун пек кăна пулсан вĕсене милицисем хăйсемех киле ситерсе ямалла, анчах темшĕн пире хамăра чĕнеççĕ!

Эп каллех пăшăрханма тытăнтăм: нивушлĕ чăнах та мĕн те пулин туса хунă Володьăпа Тимка? Тытса хупнă-ши вара вĕсене? Çĕр тĕрлĕ шухăш та пырса кĕрет пуçа ун пек чухне...

Яргуткинпа иксĕмĕр Пильнăна ирхине, пĕр çичĕ сехетре, ситрĕмĕр те тӳрех милици уйрăмне пытăмăр. Телеграммăна кăтартрăмăр, паспортсене.

— Тĕрĕс,—терĕ дежурнăй,— сирĕн ывăлăрсем пирĕн патра, халь ачасен пӳлĕмĕнче сывăраççĕ.

— Курма пулать-и вĕсене?—шутсăр пăлханса ыйтрăм эпĕ.

— Курма пулать, анчах халех мар, начальник килсен çеç, вăл саккăр патне ситет.

— Хăçан илсе килнĕ вĕсене кунта?— ыйтрĕ Яргуткин.

— Икĕ кун ĕнтĕ.

— Мĕншĕн тытса усратăр, пирĕн Шупашкарти милици вĕсене тупсанах киле ăсатма ыйтнăччĕ-ске?

— Ун пек тума май килмен. Вĕсем преступлени тунă...

— Преступлень?! Мĕнле преступлени?

— Пасарта пĕр карчăкăнне сумка вăрланă.

Каллех пуç çаврăнса кайрĕ манăн, каллех куç хуралса килчĕ, тăруках вăй пĕтсе ларчĕ.

— Мĕнле сумка? Укçа сумки-и?—татах ыйтрĕ Яргуткин. Халь ĕнтĕ вăл та хытă пăлханчĕ.

— Укçа сумки мар, апат-çимĕç сумки. Темех те пулман унта, икĕ шур батон та çур кило колбаси çеç. Анчах çапах та вăрланă-ске вĕсем, преступлени тунă. Ну, вĕсене çийĕнчех хуса ситсе тытнă та кунта илсе килчĕç. Нименле документсем те çук вĕсен... Малтанах хăйсем камне те, ăçтан килнине те, ашшĕ-амăшĕсем пурри-çукки çинчен те каласшăн пулмарĕç. Кăларса ярăр, эпир хамăрах киле таврăнатпăр, теççĕ кăна. Пирĕн ун пек закон çук, преступлени пĕчĕкçеç пулсан та, ăна тăваканни кам иккенне пĕлмеллех. Тата начальник те çукчĕ, района кайнăччĕ. Начальник таврăнсан каласа патăмăр та, вăл сĕтелĕнчен Шупаш-

карти милици телеграммине туртса кăларчĕ: «Çавсем пулĕ-ха ку вĕçен кайăксем!» терĕ. Ачисенĕ илсе пырсан, тӳрех ыйтрĕ: «Калăр, сирĕнтен хăшĕ Владимир, хăшĕ Тимофей?» Лешсем каллех каламаççĕ. «Хăвăрăн ятăрсене те мантăр-им?» Татах чĕнмеççĕ. «Ну, апла пулсан, сирĕн тĕпĕр хут леш пӳлĕме кайса хăвăрăн ятăрсене аса илме тăрăшас пулать,—терĕ начальник. —Аса илсен систерĕр, калаçăпăр вара...» Тинех калаçма тытăнчĕç ачасем. Йăлтах каласа пачĕç: ăçтан, мĕн тума килнĕ, карчăк сумкине мĕншĕн вăрланă...

— Халь вĕсене ... суд тăваççĕ-и ĕнтĕ?— питĕ хăраса ыйтрăм эпĕ.— Хупма та, колоние яма та пултараççĕ-и?

— Çу-ук, мĕн сучĕ пултăр!—ал сулчĕ дежурнăй.— Пĕр енчен, вунă-вуник çулхи ачасене никам та суд тумасть, тепĕр енчен — вĕсем преступниксем мар вĕт! Выçса çитнĕскерсем карчăк сумкинче булкăсем курнă та...

Çав вăхăтра телефон шăнкăртатрĕ те дежурнăй трубкăна тытса калаçма тапратрĕ.

— Итлетĕп, майор юлташ... Çук, çĕр каçа нимĕн те пулман. Пĕтĕмпех йĕркеллĕ. Анчах кунта сире кĕтекенсем пур. Леш ачасен ашшĕ-амăшĕсем çитрĕç... Юрать, майор юлташ!— Вăл трубкине хучĕ.

— Халех начальник килет...

Начальник чăнах та нумай кĕттермерĕ, тепĕр вунпилĕк минутранах пычĕ те, пире сывлăх сунса, хăйĕн кабинетне илсе кĕртрĕ. Эпир пукансем çине ларсан, йăпăртлăха дежурнăй пӳлĕмне тухса кĕчĕ те пирĕнпе калаçма тытăнчĕ.

— Эсир ĕнтĕ пирĕн телеграммăна илнипе килтĕр пуль?— ыйтрĕ чи малтан.

— Çавăнпа. Тавтапуç сире пĕлтернĕшĕн,—терĕ Яргуткин.

— Мĕншĕн, мĕнле майпа тухса тарнă-ха вĕсем килтен? Мĕншĕн пирĕн станцине килсе лекнĕ?

— Ăна ак Мария Алексеевна тĕплĕрех каласа пама пултарать,—пуçĕпе ман еннелле сулса илчĕ Яргуткин.

— Ну, эсир каласа парăр, эппин... Итлетĕп.

Эп вара тĕпĕ-йĕрĕпе каласа кăтартма тытăнтăм. Çур сехете яхăнах каларăм пулмалла Малтанах питĕ пăлхантăм, пĕр-икĕ хутчен куççулĕ те тухса кайре манăн, çыхăнуллах пулмарĕ калавăм, анчах майĕпе лăплантăм пулмалла та йĕркеллех каласрăм. Йăлт ка-

ларăм — Володя манăн тăван ывăл пулманнине, унăн ашшĕне амăшĕ камсем пулнине, Василиса ăна мĕншĕн ача çуртне панине, эп ăна унтан илсе мĕнле усранине, вăл икĕ шкулта вĕреннине, тухса тариччен мĕн çырса хăварнине...

Начальник мана пĕрре пăлмесĕр, питĕ тимлĕн итлерĕ.

— Хăйĕн тăван амăшĕ кунта пурăннине,унăн адресне ăçтан пĕлнĕ-ха вăл?—ыйтрĕ унтан.

Эп хам куншăн пĕтĕмпех Яргуткина айăплă тесе шутланине ун упăшки умĕнче калас темерĕм те (кам пĕлет, тен йăнăшатăп) пуçа пăркаласа илтĕм.

— Пĕлместĕп çав...

— Сирĕн ывăлăр хăйĕн амăшĕ патĕнче пулнă, ăна пĕлетпĕр эпир, пире каласа пачĕ вăл ăна, леш хĕрарăмне те чĕнсе каласа тиврĕ,—терĕ начальник.

— Вара... вара мĕн пулнă?

— Мĕн пултăр... Пĕрре пĕчĕк чухнех пăрахса кайнă вĕт-ха вăл ăна? Ну... халь те йышăнман, килне те кĕртмен! Мĕн тума сĕтĕрĕнсе килтĕн, кам чĕннĕ сана, кай кунтан часрах, ман упăшка таврăниччен, атту вăл иксĕмĕре те хĕнесе тăкма тултарать, е, акă, овчаркăна вĕçертсе ярать, тенĕ.

— Пулать те иккен çĕлен чĕреллĕ хĕрарăм!— лач! сурчĕ Яргуткин.— Персе вĕлерес пулать ун пеккисене...

— Пулаççĕ çав ун пек амăшсем,—йывăрăн сывласа илчĕ начальник.— Хамăрăн парктикăра сахал мар куркаланă вĕсене.

— Унтан... унтан вара мĕн пулнă?

— Ачасем станции таврăннă, юлашки укçисемпе буфетра çикеленĕ. Вăхăт нумая кайнă ун чухне. Пĕр сак çине пуçа-пуçăн выртнă та çывăрса кайнă. Вĕсем Мускав енчен килекен пĕрремĕш пуйăс çинех «мулкачла» ларса каятпăр, тесе шутлана, анчах каяйман, çывăрса юлнă. Ирхи пуйăс çине лартман вĕсене — билетсем илме укçисем пулман. Пĕр пуйăс ирттерсе янă çапла, теприне. Килтен илсе тухнă çăкăрсем пĕтнĕ, выçăпа аптрама пуçланă. Вара пасара кайнă та... çимеллисем хунă сумкăна илсе тарма тăрсанах лекнĕ. Шăпах çавăн умĕн вĕсене тытма ыйтакан телеграмма килнĕччĕ. Вара эпир сире чĕнтĕмĕр. Çавăн пек истории сирĕн ачасен... Ну, халь ĕнтĕ хăйсене курас тетĕр пуль?

— Курасчĕ çав, курасчĕ...—терĕм эпĕ.

Тепĕр икĕ минутранах паçăрхи дежурнăй Володьăпа Тимкăна илсе кĕртрĕ. Çак темиçе кун хушшинчех иккĕшĕ те шуралса, начарланса кайнă — пĕр уйăх больницăра выртнă пек. Пире курсан, иккĕшĕ те алăк патĕнчех юпасем пек хытса тăчĕç. Тĕлĕнчĕç те, хăрарĕç те пулмалла, шереметсем...

— Кунтарах килĕр, ан вăтанăр, тăванăрсене хăвăра илме килнĕшĕн тав тăвăр ĕнтĕ,—терĕ начальник.

Вĕсем темиçе утăм малалла ярса пусрĕç. Нихăшĕ те чĕнмерĕç-ха. Унтан сасартăк Тимка макăрса ячĕ те Яргуткин умне кĕпсĕрт! чĕркуçленсе ларчĕ.

— Каçар, йысна, эп урăх нихçан та ун пек тумастăп...

— Ан ухмахлан, тăр часрах!—тарăхса кăшкăрчĕ Яргуткин.— Эп каçарăп-ха, мана мĕн? Анчах аппу санпа куншăн урăхла калаçĕ!

Володя, шăлĕсене çыртса, ним хускалмасăр тăчĕ. Макăрмарĕ те вăл, хăй пăлханнине те кăтартасшăн пулмарĕ. Анчах ман паталла пыма та хал çитмерĕ унăн.

— Эс мĕншĕн каçару ыйтмастăн тата, Апанасов?— терĕ ăна начальник.—Ман шутпа, санăн айăпу пысăкрах.

Володя чĕнмерĕ, пуçне усса мăшлатса тăчĕ çеç. Вара эпĕ хам тӳссе тăраймарăм, ун патне пырса мăйĕнчен ыталаса илтĕм.

— Пĕтетĕн вĕт капла, ывăлăм..

Иксĕмĕр те пĕр харăс макăрса ятăмăр.

— Эп айăплă... питĕ айăплă... каçар, анне...—пăшăлтатрĕ Володя куççулĕ витĕр.

— Ну, халь ĕнтĕ пĕтĕмпех йĕркене кĕчĕ,—терĕ начальник, кăшт тăхтасан.—Килĕр-ха кунтарах,—кăчăк туртрĕ вăл ачасене,—манăн юлашки сăмаха итлĕр тата. Лайăхрах итлĕр!

Володьăпа Тимка сĕтел умне пырса тăчĕç. Начальник, васкамасăр, пĕрре пĕрин çине, тепре теприн çине шăтарас пек пăхрĕ.

— Акă мĕн, çулçӳревçĕсем... пĕчĕк таркăнсем,— терĕ унтан.— Эпир сире пĕррелĕхе каçарас, терĕмĕр. Эсир хăвăр туса хунă йăнăша лайăх ăнланса илнĕ пек, уншăн ӳкĕннĕ пек туйăнать. Тĕрĕс калатăп эпĕ е йăнăшатăп-и?

— Тӗрӗс калатӑр...—пӑшӑлтатса илчӗç ачасем.

— Урӑх кун пек хӑрушӑ номерсем тумастӑр пуль? Килтен тухса тармастӑр, карчӑксен сумкисене тивместӗр, çапла-и?

— Çапла...

— Шанатпӑр эпир сире, хӑвӑрӑн сӑмахӑра çирӗп тытасса ӗненетпӗр. Е шанмалла мар-и?

— Шанмалла... Нихçан та пулмасть ун пекки...

— Питӗ аван! Калаçса татӑлтӑмӑр, эппин. Халӗ, Тимофей, эсир йыснупа иксӗр коридора тухса кӑштах кӗтсе ларӑр, манӑн Володьӑпа уйрӑм калаçмалли пурха тата.

Вӗсем алӑкран тухсанах начальник сӗтел пуçӗнчи кнопка çине пусрӗ те пӳлӗме дежурнӑй кӗрсе тӑчӗ.

— Жирновӑна чӗнсе килтӗр-и?—ыйтрӗ начальник.

— Так точно,—терӗ дежурнӑй.

— Калӑр, кӗтӗр.

— Итлетӗп!

«Мӗнле Жирнова тата ку? Мӗнле хӗрарӑма чӗнсе кӗртме хушрӗ милици начальникӗ? Мӗн тума?»—тӗлӗнсе шухӑшларӑм эпӗ. Яргуткина мана Василиса хӑйӗн хушаматне улӑштарни çинчен каланине мансах кайнӑ мар-и!

Кӗçех пӳлӗме Василиса кӗрсе тӑчӗ. Чӗре пӑчӑртансах ларчӗ манӑн ӑна курсан. Яргуткина калана пек, чӑнах та палламалла мар улшӑннӑ вӑл. Самӑрлса кайнӑ — тур çырлах! Питӗ капӑр тумланнӑ тата — йӑлтӑркка кӗрен платье, сап-сар жакет, эрешмен карти евӗр çыхса тунӑ чӑлха, пӑта пек кӗлеллӗ туфли. Çӳçне, яваласа, пуç тӳпине купаласа хунӑ, хӑлхисенчен пысӑк нӑрӑ евӗр хӗрлӗ клипсысем çакса янӑ, аллинче лакированнӑй хура сумка.... Ӗмӗрне те çак çын темиçе çул каялла кӑна брезент йӗмпе брезент пиншак тӑханса, кирпӗч, хӑйӑр, гравий йӑтнӑ, каменщиксем валли раствор çӑрнӑ, тесе шутлас çук çав! Гранд-дама!

Кӗрсен, алӑк патӗнче чарӑнса тӑчӗ те, хӗп-хӗрлӗ сӑрласа лартнӑ тутисене пӑчӑртаса, пире, пӳлӗмрисене, ӑраххӑн кӑна пӑхса çаврӑнчӗ.

— Иртӗр малалла, Василиса Прокопьевна, акӑ, ларӑр,—терӗ начальник, сӗтел пуçӗнчи пукан çине кӑтартса.

Василиса ун патнерех пычӗ, анчах лармарӗ.

— Эсир мӗн, майор юлташ, мана кашни кун сӗтӗр-

ме пуçларăр?—терĕ тутине мăкăртса.—Эпĕ — ĕçри çын, манăн кашни çапкаланчăкпăн сирĕн пăчăх пӳлĕме килсе çӳреме вăхăт çук! Мĕнле йĕрке ку? Ĕнер пĕр сехет ирттертĕм, сире мĕн кирлине пĕтĕмпех каларăм пулас, паян каллех сĕтĕреççĕ!

— Никам та сĕтĕрмен сире, Жирнова юлташ, чĕннĕ çеç,— ун çине çăра куç харшисем айĕн сиввĕнтерех пăхрĕ начальник.— Тепĕр енчен, пит кирлĕ пулсан, татах та чĕнме пултаратпăр, мĕншĕн тесен ку ĕç сирĕнпе таччăн çыхăнса тăрать!

— Нимĕн те çыхăнмасть манпа! Шухăшласа каларатăр çав кирлĕ мара!—Василиса, пукан çине ларса, урисене яврĕ те сумкинчен пĕчĕк тĕкĕр кăларса çӳçне тӳрлеткелесе илчĕ.—Каниτель тăватăр!

— Хамăрăн мĕн тумаллине эпир хамăрах пĕлĕпĕр, Жирнова юлташ, эсир вĕрентмесĕрех,— терĕ начальник.— Сирĕн ĕç — эпир ыйтнисене хирĕç тĕрĕс ответсем парасси çеç. Халь акă калăр-ха, эсир çак хĕрарăма паллатăр-и?— Вăл пуçĕпе ман еннелле сулса кăтартрĕ.

Василиса ман çине чăр-р... пăхрĕ те пуçне пăркаласа илчĕ.

— Çук, палламастăп! Пуçласа куратăп!—Хăй çавăнтах, темшĕн, сумкине уçса çийĕнчех чанк! хупрĕ. Унтан, пĕр урине вылятса, чӳрече витĕр урамалла пăхрĕ.

— Палламастăр пулсан — паллашăр,—терĕ начальник.—Ку вăл Мария Алексеевна Апанасова, сирĕн хĕр чухнехи юлташăр. Астумастăр-и? Эсир унпа пĕрле ĕçленĕ, пĕр пӳлĕмре пурăннă, туслă та пулнă. Çапла мар-им?

— Çук, астумастăп!—Василиса каллех сумкине уçса хупрĕ.

— Паллах, манма та пултарнă... Унтанпа вăхăт нумай иртнĕ ĕнтĕ, пи-итĕ нумай...—юри унпа килĕшнĕ пек пулчĕ пулмалла начальник.—Ну... ку ачипе ĕнерех паллаштарнăччĕ-ха эпир сире — Вăл Володя çине кăтартрĕ.— Владимир ятлă, сирĕн ывăл. Тĕрĕс-и?

Василиса, хăрах урине çаплах вылятса, шухăша кайнă пек пулчĕ.

— Тĕрĕс мар,— терĕ унтан.

— Епле тĕрĕс мар?! Хăвăрăн ывăлăра та йышăнмастăр апла?

— Ана манран туртса илчĕç. Кăшт ӳсерехпе ана хам пата каялла илесшĕнччĕ, анчах... анчах çак хĕрарăм...— вăл пуçĕпе ман еннелле сулса илчĕ,—хамран ыйтмасăрах, эп ирĕк памасăрах, ăна ача çуртĕнчен темле жуликла майпа илсе тухса кайнă! Эп шыраса тупасран ача хушаматне те улăштарнă! Мана пĕлтермен те ун çинчен. Ăçтан ман ача пултăр-ха вăл халь тин?!—Василиса куçĕсем хăрушла çуталса илчĕç, вăл каллех сумкине уçса хупрĕ.

— Çук, Василиса Прокопьевна, вăхăт нумай иртнипе маннă пулмалла эсир, пăтрататăр пăртак,— терĕ начальник малтанхи пекех лăпкăн.— Ĕçсем эсир каланă пек пулман...

— Ним те пăтратмастăп, йӳтеме вăхăт çитмен-ха манăн!—татса хучĕ Василиса.

— Ача çуртĕнчен сирĕн пата темиçе те çырса янă хăвăрăн ывăлăр пирки, ăна усрава парас пирки те систернĕ, анчах эсир пĕр ответ та паман...

— Илмен эпĕ нимĕнле çыру та! Хам çырса ярсан тин ответ килчĕ: сирĕн ачăра усрава панă, терĕç.

— Эсир лăплантăр-и вара?

— Мĕн тумаллаччĕ-ха манăн тата? Çакăнса вилмеллеччĕ-и уншăн?

— Курас та килмерĕ-и ывăлăра, вăл мĕнлерех ӳснине çинчен те пĕлес кăмăл пулмарĕ-и?

— Пĕлместĕп! Астумастăп!— тутине пăчăртаса лартрĕ Василиса.

— Так, так... — Начальник пăлханма, тарăхма пуçларĕ пулмалла, васкасах пирус тивертсе ячĕ.—Василиса Прокопьевна, эппин, эсир ăна хăвăр ывăл теместĕр пулать. Анчах та ачи, ак çак Володя, сире хăйĕн амăшĕ тесе шутлать-çке, сирĕнпе пĕрле пурăнасшăн килĕнчен вăрттăн тухса тарнă! Мĕн тумалла халь?

Начальник пӳрнисемпе сĕтеле тăкăртаттарчĕ.

Эпĕ хама сывлăш çитмен пек тăтăм.

— Хăй килмен пуль вăл, ăна хальхи амăшĕ хăйĕнпе усрас мар тесе юри хăваласа янă пуль?—тутине мăкăртса илчĕ Василиса.—Пĕччен хĕрарăма ирĕк кирлĕ вĕт! Кавча никам та илмест, анчах арçын тени кирлех. Паян пĕри пырать, ыран тепри. Ача кансĕрлет... Хăвалană та янă!

— Терес мар ку, Апанасова юлташ хавалăман анă, вăл хăех килнĕ, сире шыраса тупнă, анчах эсир... киле те кĕртмĕн ачана!

— Упăшкапа калаçмасăр епле кĕртем-ха эпĕ ют ачана?

— Каллех ача «ют» тетĕр, эппин?— сассине хытарчĕ начальник.

— Мĕнле калас тата ман ăна?—парăнма шутламарĕ Василиса.—Ют ача çав! Унăн урăх амăшĕ пур, манăн хампа пĕрле пурăнакан хамăн хĕрача пур! Çитменнине тата, ăна хальхи амăшĕ йăлтах пăсса янă, вăрра вĕрентнĕ. Вăрланăшăн лекнĕ-çке вăл сирĕн пата, эсир ĕнер хăвăр каласа патăр! Епле йышăнма пултаратăп-ха эп ун пек шпанана?

Эпĕ çак тискер калаçăва илтсе мĕнле тӳссе ларнине те пĕлместĕп. Ухмаха тухма пуçланă çын пекех пултăм курăнать. Пуç янрама тытăнчĕ. Вăхăчĕ-вăхăчĕпе милици начальникĕн пӳлĕмĕ енчен енне сулăннă пек туйăнчĕ. Начальникпе Василиса калаçни те таçтан аякран илтĕне пуçларĕ. Ăшчик тулса килчĕ манăн — кӳренни, тарăхни, курайманни пĕтĕмпех пĕрле пулчĕ пулмалла. Юлашкинчен тӳсеймерĕм вара, пит-куçа алăсемпе хупласа макăрса ятăм...

— Мĕн эсир, Мария Алексеевна... Мĕн эсир? Лăпланăр!— терĕ те çакна кура милици начальникĕ, часрах графинран шыв ярса пачĕ.

Эп стаканри шыва темиçе çăвар сыпса илтĕм, анчах лăпланасси пулмарĕ. Ытла та чун кӳтсе çитнĕ ĕнтĕ манăн. Çав вăхăтрах мана Володя ыталаса илчĕ те хыттăн кăшкăрчĕ:

— Анне! Атя часрах киле! Киле каяр!..—Хăй те макăрма пуçласа мана çурăмран ачашларĕ:—Лăплан, анне! Атя киле...

— Ай-ай, вăйлă артистсем-çке иккĕшĕ те!—илтĕнчĕ çавăн хыççăнах Василиса сасси.—Пĕр-пĕр театра çеç ямалла кусене!

Ана милици начальникĕ хаярăн кăшкăрса пăрахрĕ:

— Пĕтĕмпех эсир айăплă çакăншăн, гражданка Жирнова! Тухса кайăр! Урăх ĕç çук сирĕн кунта! Халех кайнă пултăр!..

Эпĕ пуçа çĕклерĕм те Василиса пĕтĕм кĕлеткипе юри пăркаланса алăк патнелле утнине куртăм. Пĕр

аллипе алăк хăлăпĕнчен тытсан вăртах каялла çаврăнчĕ те тепĕр аллипе вĕл-вĕл сулса илчĕ:

— Телейлĕ пулăр! Ха-ха-ха..

— Ы-ых, ирсĕр чĕрчун!—тесе юлчĕ ун хыççăн милици начальникĕ.—Лекĕн-ха эсĕ те хăçан та пулин, ĕмĕрех çакăн пек ахăрса пурăнаймăн! Санăн та макăрмалла пулĕ, тен...

* * *

Эпир киле таврăнтăмăр...

Çул çинче те, киле çитсен те эпĕ Володьăран нимĕн те ыйтмарăм: кам каланă ăна Василиса çинчен, ун адресне ăçтан тупнă, çакăн пек тухса тарма мĕнле шут тытнă, чăнах «тăван амăшĕ» патне юлса пурăнма ĕмĕтленнĕ-и е кайса курасшăн çеç пулнă? Выççа çитсен пасарта леш карчăк сумкине вăрлас шухăш малтан кам пуçне пырса кĕнĕ? Хăшĕ илсе тарнă сумкине? (Ку ĕçе Володя тума пултарнине ниепле те ĕненес килмерĕ-çке!)

Ыйтса-тĕпчесе ачана тепĕр хут пăлхатса ярас темерĕм эпĕ. Ахаль те асапланса пĕтнĕ вăл, мăнтарăн. Вуниккĕ те тултарман ача, ют хулара, пĕр палланă çын та çук çĕрте выçă çýретĕр-ха! Аптраса çитнипе çимелли вăрласан, тýрех милицине лектĕр-ха! Мĕнле туйăмсем пулмалла унăн? Пĕчĕк чĕри мĕнле тýсмелле? Ун çинчен шухăшама та хăрушă вĕт-ха! Çавăнпа та манăн халь ăна çак истори çинчен аса илтерме мар, епле пулсан та часрах мантарса лăплантарас килчĕ çеç. Унăн шухăш-кăмăлĕ йĕркене кĕтĕрччĕ кăна!

Фабкомра пионер лагерьне каймалли путевка пачĕç — Володя пĕр уйăх питĕ лайăх канса килчĕ унта. Вĕри хĕвел çинче хĕртĕнсе чикан ачи пекех пулса кайнăччĕ, канлĕ пурăнса ýт те хушнă, питçăмартисем çавракаланнă.. Унтан таврăнсан, ытти шкул ачисемпе пĕрле, вунă кун Атăл тăрăх похода кайса çýрерĕ — ку та усăллă пулчĕ уншăн. Кĕскен каласан, вĕренýçулĕ пуçланиччен ман ача лайăх канчĕ, сывлăхне çирĕплетрĕ. Хĕпĕртерĕм уншăн. Çуркунне пулса иртни çинчен пĕрре те сăмах хускатмарăмăр, ăна маннă пекех пултăмăр. Хăш чухне çеç, Володя çине вăрттăн пăхса, хам тĕллĕн шухăшлаттăм: мĕнле пурăнаттăмши эпĕ ăна çухатнă пулсан, вăл чăннипех Василиса

n + 1

патĕнче пурăнма юлнă пулсан? Вилеттĕм пуль тунсăхласа! Унсăр епле пурăнам-ха эпĕ?! Мĕн тери аван пире иксĕмĕре! Эп ĕçлетĕп, вăл вĕренет, ӳсет... Пире никам та кансĕрлемест... Телей мар-им ку?

...Анчах кансĕрлекен тупăнчĕ. Каллех пирĕн телее аркатма пикенчĕç. Кам пултăр? Каллех Василиса!

Кĕркунне, лапра-çĕпре тапрансан, юрпа çумăр хутăш çунă кун, каçхине, ман пата хайхи Яргуткина пырса кĕчĕ. Володя çукчĕ, музыка шкулĕнчеччĕ.

— Пĕр хыпар пур, Маруся!— терĕ вăл ун-кун пăхкаласа.—Юри сана каласа пама чупса килтĕм...

— Эс хыпарсăрах çӳрекен мар-ха, яланах мĕн те пулин пĕлетĕн,—кулса илтĕм ăна хирĕç.— Лар, эппин, каласа пар. Ытла хăрушă мар пулсан...

— Темле каламалла — хăрушă-ши вăл, хăрушах мар-ши... Ана хăвах чухласа илĕн,—терĕ вăл шăппăнтарах.— Леш шуйттан Василиси Шупашкарта çӳрет!

— Ан тĕлĕнтер-ха... пулма пултараймасть!—терĕм эпĕ. Ман пыр патне тӳрех темскер капланса ларчĕ.

— Ара, хам куçпа куртăм-çке!

— Йăнăшрăн пуль эсĕ...

— Ним те йăнăшман! Çавах, тупата туршăн çав! Пасартан таврăннă чух Хĕрлĕ площадьре тĕл пултăм. Çывăхранах иртрĕм, анчах хама паллаттармарăм — курас килмест вăл çĕлене хăй пирĕн ачасене милицие лекмелле тунă хыççăн... Виççĕн пыраççĕ—Василиси пĕр пилĕк-ултă çулхи хĕрача çавăтнă, вĕсемпе пĕрле тепĕр карчăк утать. Ана та паллатăп-ха эпĕ, вăл таçта Атăл хĕрринче, тăвар склачĕ таврашĕнче пĕр-пĕччен пурăнать, тепĕр чух эпĕ ăна урамра ӳсĕр çӳренине те куратăп... Хайхи, вĕсенчен иртсен, каялла çаврăнса пăхрăм. Ăçта каяççĕ? Василиси ачипе пĕрле почтăна кĕчĕ, карчăкĕ пасаралла утрĕ. Эп—ун хыççăн. Питĕ пĕлес килсе кайрĕ-çке,—мĕн туса çӳрет кунта çав вĕреçĕлен? Кам патне, мĕн тума килнĕ?.. Карчăка часах хуса çитрĕм. Сывлăх сунтăм, сăра киоскĕ тĕлне çитсен сăра ĕçес килмест-и, манăн хамăн мухмăр-ха, терĕм те вăл савăнсах кайрĕ: манăн та мухмăр çав, тет. Укçа шеллесе тăмарăм, ик курка ĕçтертĕм çакна. Унтан лешин пирки ыйтса пĕлме тытăнтăм: хăçан килнĕ, ăçта пурăнать, мĕн ĕçлет... Эпир хĕр чухне унпа туслă

пурăннă та, çавăнпа пĕлес килет. тетĕп. Кăштах хĕрĕнкĕленнĕ карчăк йăлт каласа пачĕ вара: таçта, темле станцинче питĕ пуян пурăннă вĕсем, терĕ, упăшки пысăк магазин директорĕ пулнă, анчах нумаях та пулмасть упăшкине тытса хупса суд тунă, сакăр çул панă, пĕтĕм пурлăхне — çуртне, машинине, хаклă кавирсене йăлт туртса илмелле приговор йышăннă, вара упăшкин чĕри судрах çурăлса кайнă... Çав-çавах, упăшки ыл-нĕ пулсан та, пурлăхне сутнă вĕсенне. Халь вара ку, ачине илсе, Шупашкара килнĕ. Вăхăтлăха хваттере çав карчăк патне кĕнĕ — ăна унччен те паллана та-ха вăл...

— Пуçĕпех килнĕ пулать-и вара?

— Пуçĕпех çав. Прописка та тунă, тахăш магазина ĕçлеме те кĕнĕ, тет!

— Ак тата тепĕр хурлăх..—ассăн сывларăм эпĕ.

— Мĕн хурлăхĕ пултăр сана уншăн? Мĕн тума пултарать вăл сана халь тин? Ачуна туртса илме— саккун ун енче мар, тата çуркуннехи хыççăн Володька хăй те ун патне ĕмĕрне те каяс çук, ăнланчĕ пуль вăл мĕнле çын иккенне!

— Уншăн хăрамастăп-ха эпĕ, тепĕр чух ăнсăртран тĕл пулма пултарать... Мана та, Володьăна та... Анчах манăн унпа тĕл пулма мар, тĕсне те курас килмест!

— А эсĕ ан пăх ун çине! Сур та иртсе кай!

...Çапах та тĕл пулма тӳр килчĕ вĕт! Пĕр пӳлĕмре хире-хирĕçех тăмалла пулчĕ! Тата ăçта тесе шутлатăр? Судра! Леш Анна Антоновна Ярусова патĕнче!

Çĕнĕ çул умĕн мана тăрук повестка пырса пачĕç. «Явиться в качестве ответчицы», тенĕ. Пĕтĕм ăспуç пăтранса каятчĕ: мĕне пĕлтерет ку? Мĕншĕн, кам умĕнче «ответчица»? Мĕн пирки ответ тытмалла ман, хам ĕмĕрте эп никама та нименле усал та туман пулсан?! Чупса кайрăм суда. Мана шăпах çав Ярусова йышăнчĕ. Тытăнтăм ыйтса пĕлме. Çапла çав, пĕр хĕрарăм заявлени килсе пачĕ, тет судья. Мĕнле хĕрарăм? Мĕнле заявлени пачĕ, мĕн пирки? Эсĕ усрава илнĕ ача амăшĕ, тет. Нименле амăшĕ те мар вăл, тетĕп. Унтан пĕтĕмпех каласа патăм ăна, Пильнăри милици начальникне каласа панă пекех. Ан пăлханăр, терĕ мана Ярусова, йышăннă заявление пирĕн пăхса тухасах пулать, анчах суд ун майлă пулмасть пулĕ, терĕ. Кунта куçса килнĕскер, вăл часрах хваттер илесшĕн ĕнтĕ,

çавăнпа ик ачаллă пуласшăн. Ачасен хŭттипе хваттер илме çăмăлтарах, тесе шутлать пуль...

Сучĕ чăнах та пулчĕ. Ах тур, хăтланчĕ те вара леш эсремет! Сидорова качча кайнă хутне те, вăл вилнĕ хутне те, Володя çурални çинчен панă свидетельствăна та илсе пынă... Эпĕ унăн чăн-чăн амăшĕ, Володя манпа пулмалла! Ача çуртĕнчен ăна ултавлă майсемпе, саккунсăр, манран ыйтмасăр илсе кайнă, ачана чупкăн хĕрарăм патĕнче усрама пултараймастăп! Ахаль те пăсса янă вăл ăна, вăрлама вĕрентнĕ, пĕрре милицие те лекнĕ ĕнтĕ ăна пула!—тесе кăшкăрать çав...

Ман енчен виçĕ свидетель пулчĕ — Агнипе Марьям тата Яргуткина. Вĕсем эпĕ Володьăна ача çуртĕнчен илнĕренпех питĕ лайăх пăхса усранине çирĕплетсе пачĕç. Яргуткина вара чутах виçерен те иртсе каятчĕ— темтепĕр калама тапратрĕ Василисăна, пăсăрлантарчĕ кăна! Судья аран чарчĕ ăна, асту, судра ытлашши пакăлтатнăшăн ответ тытмалла пулать, штраф тŭлетĕн акă кун пек, тесе асăрхаттарчĕ. Тин лăпланчĕ вара Яргуткина. Кулăш пĕр енчен.

Эпĕ судра, ытлашши пăлханса, йĕркеллех калама пултараймасран шикленсе, укçа шеллемесĕрех адвокат та тытнăччĕ. Хĕрарăмччĕ вăл. Ну, хитре каларĕ вара! Пĕтерчĕ Василисăна. Суда итлеме пынă çынсем хăйсем витĕр электричество токĕ янă пекех ларчĕç çав!

Володьăран хăйĕнчен те ыйтрĕ судья:

— Санăн кунта икĕ анне ĕнтĕ, хăшне ытларах юрататăн эсĕ? Хăшинпе пурăнас килет санăн?

— Манăн анне пĕрре анчах,—терĕ Володя хуллен.

— Хăшне аннŭ тесе шутлатăн?

— Çакна...—Вăл ман çине тĕллесе кăтартрĕ.—Урăх мана никам та кирлĕ мар!

...Канашламалли пŭлĕмре судьясем нумай та лармарĕç. Пĕр çирĕм минутранах каялла тухрĕç те хăйсем мĕн йышăннине вуласа пачĕç: «Гражданке Жирновой в иске отказать...» Залра тахăшĕ ал çупса ячĕ. Василиса каллех çухăрма тапратрĕ:

— Тĕрĕс ма-ар! Эсир совет законĕсене хирĕç пыратăр! Эп Верховнăй суда кассаци паратăп! Мускава çитетĕп!..

— Сире ун пек тума никам та чармасть, гражданка Жирнова, таçта та çырма пултаратăр,—терĕ

судья,—анчах çапах та эсир ку ачана пурĕпĕр илейместĕр...

Те панă вăл кассаци, те паман, ăна-кăна пĕлместĕп, анчах пире судсем тăрăх тек сĕтĕрмерĕç. Лăпкăнах пурăнатпăр çавăнтанпа...

* * *

Çапла каласа кăтартрĕ пĕчĕк баянист Володя Апанасов амăшĕ Мария Алексеевна хăйĕн пурнăçĕ çинчен. Пысăк шухăша ячĕ вăл мана. Чĕрене пырса тивекен, пăлхатса яракан калав пулчĕ-çке ку. Калав та мар, ырă чĕреллĕ хĕр çинчен калакан кăткăс повесть... Эпир вăрçăри, ĕçри паттăрсене çав тери хисеплетпĕр, вĕсем çинчен итлеме, вулама юрататпăр. Анчах Мария Алексеевна паттăр ĕç туман-им? Ун çинчен те çынсен пĕлмелле мар-им?..

...Эпир каласа хыççăн темиçе кунтан, пĕр ирхине ирех, пирĕн корпус умне тирпейлĕ тумланнă пĕр вăтăр пилĕк çулсенчи арçын пычĕ. Эпĕ шăпах чӳречерен пăхса тăраттăм. Вăл мана асăрхарĕ те: «Мария Алексеевна Апанасова çак çуртра пулма кирлĕ, ăна курма пулать-ши?» —тесе ыйтрĕ.

— Кунта,—терĕм эпĕ.—Чĕнес-и?

— Сире йывăр пулмасан...

Эпĕ Апанасовсен пӳлĕмне чупса кайрăм.

— Темле арçын килчĕ сирĕн пата, кăвак костюмлăскер...

— Афанасий Васильевич ĕнтĕ ку!—вырăн çинчен вăртах сиксе тăчĕ Володя.—Командировкăран таврăннă, эппин!—Вăл çара уранах коридора сиксе тухрĕ те тулалла чупрĕ. Мария Алексеевна кăштах хĕрелнĕ пек пулчĕ, васкасах çӳçне-пуçне тирпейлеме тытăнчĕ.

— Мĕнле арçын вара вăл?—ыйтрăм унран.

— Вăл-и?—Мария Алексеевна халь хĕрелсех кайрĕ.—Ман упăшка вăл... Саккунлă упăшка.

— Нумайранпа-и? Эсир мана хăвăрăн упăшка пурри çинчен нимĕн те каламарăр-çке?

— Виçĕ уйăх ĕнтĕ... Хам çамрăк мар пулин те, лайăх çын тĕл пултăм та... Володьăпа та питĕ туслашрĕç те...

— Эсир лайăх çынна тивĕçлĕ те çав!—терĕм эпĕ.

ҪĂМАРТА

Кулăшла калав

— Сан Терентти халь те чăх-чĕп патшинчех çӳрет-и?— тесе ыйтрăм Праскирен, вăл нумаях пулмасть ман патăма пырсан.

— Халь те çӳре-ет!— темле пит йăлăхтарнă япала çинчен каланă пек, аллипе аяккалла сулса илчĕ вăл.— Пенси илме пуçлани те темиçе çул иртрĕ ĕнтĕ, çаплах пăрахмасть, ватсупнă! Тем чухлĕ те каларăм—çитĕ сана чăх-чĕппе аппаланма, кан ĕнтĕ, терĕм. Итлемест! Мĕн туса пурăнас ман çĕр çинче? Тунсăхласа вилетĕп эпĕ ĕçсĕр, аптранипе таçта пьянчука тухса кайăп, тет. Тул çутăлнă-çутăлман тăрать те, тепĕр чух ним çимесĕрех тухса танккать хăйĕн киккириккисем патне!

— Ĕçне юратать те-ха ĕнтĕ, çавăнпа пуль. Тата унта ĕçленипе чапа та тухрĕ вăл санăн — ун çинчен кĕнеке тĕ çырса кăларчĕç, виçĕмçул, авă, орден та пачĕç, тата çулсеренех премисем те илет пулмалла,— терĕм эпĕ.

— Тем тума кирлĕ пуль ун премийĕсем!— каллех, тарăхнă пекех, ал сулчĕ Праски.— Çакăнса тăраççĕ вĕсем кĕлетре... тутăхса!

— Мĕнле тутăхакан премисем тата вĕсем?— ăнланаймарăм эпĕ.

— Пăшал параççĕ ăна ялан! Кашни кĕркунне районран çĕнĕ пăшал йăтса таврăнать. Умлăн-хыçлăн... тăватă пăшал пачĕç! Сакăр кĕпçе çакăнса тăрать халь кĕлетре. Такама перçе вĕлермелĕх те пур. Тем тума па-

раççĕ-ске? Эп фронтра снайпер пулнине, çирĕм çичĕ фашиста леш тĕнчене ăсатнине пĕлеççĕ вĕсем, çавăнпа вăл», тет Терентти. Сунара çӳрес пулсан, ăна пĕр пăшалĕ те çитмелле, анчах сунарçă мар вăл манăн, тата сунара çӳреме пирĕн тăрăхра путлĕ вăрманĕ те çук — йĕри-тавра çап-çара, хăвах пĕлетĕн! Тепринче тупă сĕтĕрсе килетĕн пуль-ха, терĕм тарăхнипе, юлашки пăшалне илсе килсен. «Парсан, ăна та илес пулать, премие суйласа тăмаççĕ», терĕ мана хирĕç кула-кула. Сут, эппин, пăшалĕсене, мĕн вĕсем ним усăсăр çакăнса тăраççĕ! Пĕр-пĕр усăллă япала илĕпĕр хуть вăл укçапа! тетĕп. «Премисенех сутса намăс курас мар-ха, япала илес тесен пирĕн перекет кĕнеки те ытла пушах мар», тет...

— Пăшалĕсене хăй тытса та пăхмасть-и вара?

— Çулталăкра пĕрре-иккĕ тытса пăхать... тутăхасран çу сĕрме.

— Сирĕн ывăлсем тăваттă тăм вĕт-ха, кашнине пĕрер пăшал памалла та — шăп вырăнлă пулать.

— Илмеççĕ пĕри те! Сĕнсе пăхса! Сунара çӳремелли çынсем пулмарĕç вĕсем манăн. Асли — хĕрарăм тухтăрĕ, иккĕмĕшĕ — выльăх фершăлĕ, тепри кунта, Шупашкарта, сĕтел хушшинчен тухмасть — отне сăвă çырать, отне сăмах çинне сăмах купалать, чăн кĕçĕнни вăрманта мар — çĕр çинче те сахал пулать, ялан сывлăшра вăл — летчик. Тен, мăнуксенчен сунарçăсем пулĕç-и, тесе çеçе шанса пурăнатăп-ха. Вĕсем саккăр манăн, пурте шутсăр маттур ӳсеççĕ. Пăшал — тимĕр япала, çĕрсех каймĕç вĕсем ӳсиччен!

...Эпир Праскипе пĕр ялтан, çитменнине — пускилсем, пĕрле ӳснĕ, шкулта та пĕр парта хушшинче ларнă, ӳсерехпе каччăсем çине те пĕр вăхăтрах пăхма пуçланă, анчах каярахпа пирĕн пурнăç çулĕсем уйрăлса кайрĕç — вăл качча тухрĕ те ялтах юлчĕ, эп хулана куçса килтĕм. Çапах та ача чухнех пуçланнă туслăх халь те пĕтмен пирĕн. Шупашкаралла килес-тăвас пулсан, Праски нихçан та ман патăма кĕрсе курмасăр каймасть. Иртнине асăнса, хальхи пурнăçшăн савăнса, пĕрер черкке килти «наливкă» ĕçетпĕр вара унпа. Хам пултараймастăп эпĕ, анчах Праскийĕ хаяртараххине те тиркесех тăмасть.

Маттур карчăк! Пĕчĕк чухнех паттăрчĕ вăл — ха-

мăр урамра Праски тытса хĕнемен арçын ача юлман. Ӳссен, хĕр пуççăнах, пулăçсен бригадирĕ пулнăччĕ— пирĕн ялĕ Атăлпа юнашарах та ара. Хăйĕн Терентийĕпе те çавăн чух пĕрлешнĕ вăл. Лешĕ пĕррхинче, кĕр енне ĕнтĕ, пулă тытнă чух темле майпа кимĕрен тухса ӳкнĕ те путмах тапратнă. Праски ăна çăлса çырана туртса кăларнă та тӳрех çапла каланă имĕш:

— Мансăр пĕтетĕн эсĕ, Терентти, çĕр çинче пурăнакан çын пулаймастăн! Шеллетĕп сана, айвана. Атя, ыранах тупкăчсем яр ман пата, йăли пултăр, унтан кайса хут уйăрттарăпăр...

Лайăх пурăннă вĕсем упăшкипе. Ырă мар сăмах нихçан та тухман вĕсем пирки ял хушшине. Пурнăç тума тăрăшнă ĕнтĕ!

Хутла пит вăйлах пĕлмен пулин те, вăрçă вăхăтĕнче, упăшки фронта кайсан, Праски колхоз председателĕ пулнă, çав вăхăтрах тăватă ывăл çитĕнтернĕ. Ашшĕсĕр ӳсекен арçын ачасем, пĕлетĕр ĕнтĕ, ашкăнчăкрах пулаççĕ, тепĕр чух пăсăлса та каяççĕ. Анчах Праски хытă тытнă ывăлĕсене, иртĕнме паман. Ĕçре пиçĕхтернĕ. Пит йĕркеллĕ ӳснĕ вара лешсем. Амăшне хисепленĕ. Халь те хисеплеççĕ. Хисеплеççĕ кăна мар — хăраççĕ, мĕншĕн тесен Праски пĕр-пĕр ывăлĕн çемйинче кăлтăкмăлтăксем пулнине илтсенех унта вĕçтерсе çитсе наччас йĕрке тăвать. Амăшĕн правипе усă курса, ывăлĕсене халь те çăтти-çатти паркаласа илет. Уйрăмах, леш сăвă çыраканне час-час лекет, теççĕ,— вăл виçерен иртсе сыпкалать.

Ыттисем те — хĕрĕхе çитекен аслă ывăлĕ таранах— хăраççĕ иккен унран. Мĕн те пулин туса хурсан, ялан пĕр сăмах, тет, вĕсен:

— Апия ан калăрах кун çинчен! Ытти — тарам...

Амăшĕ çапах та ывăлĕ йĕркерен тухни çинчен ăнсăртран та пулин пĕлсе вăркăнса пырсан, лешĕ ваннăя питĕрĕнсе ларать, тет те, амăшĕ кайиччен те тухмасть, тет...

Çавăн пек вăл манпа пĕрле ӳснĕ, пурнăçра тем те курнă Праски.

Паллах, упăшкине те çирĕп тытать. Анчах... мĕнех тытмалли пур ĕнтĕ ăна? Ĕçлет вăл лара-тăра пĕлмесĕр. Вăрçăран таврăнсан ик-виç çултанах чăх-чĕп фермин заведующийĕ пулма уйăрнă та ăна, пĕр вĕçĕм — çирĕм çул ытла!— çавăнта кăштăртатать. Фермине малтан

çап-çара, ним ӳсмен чуллă-хăйăрлă çырмана пырса чикнĕччĕ. Халь çав çырмара — сĕм вăрман. Сахалтан та пĕр çирĕм пин йывăç. Йăлтах Терентти тăрăшнипе пулнă çав вăрман. Малтан фермăра виççĕр-тăватçĕр чăх çеç пулнă, халь вунă пине те çитет, теççĕ. Малтанхи тăйлăк-тăйлăк хӳшĕсем вырăнне — кирпĕчрен купаланă «чăх кĕрменĕсем»...

Тăрăшакан çыннăн ĕçĕ ăнать çав. Ĕçе ăнтарма пĕлсен — хисеп те, чап та, мухтав та пулать ăна. Терентин те çавăн пекех ăнса пынă. Хăй ăшĕнче Праски те савăнса мăнкăмăлланнă стариккишĕн: тахçан хăй шывран туртса кăларнă шеремет Терентине «Хисеп палли» пачĕç, ун çинчен кĕнеке çырчĕç, кĕнеки çинче ун сăнĕ те пур тата, икĕ хутчен пĕр пус тӳлеттермесĕрех курорта ячĕç ăна, çийĕнчен тăватă пăшал пачĕç!

— Ман старик пекки сайра-ха вăл, ылтăн старик манăн!— мухтанкаласа та илет Праски тепĕр чух. Унăн тиркемелли çук Праские, чăнах та мухтанмалла ĕнтĕ Терентти пек старикпе. Ан тив, ăна «чăх-чĕп патши», теччĕр хăшĕсем. Кӳренмелли ятах мар-ха вăл, «качака патши» тениех мар. Мĕн чухлĕ усă кӳнĕ Терентти колхоза çирĕм çул хушшинче, мĕн тери тупăш панă! Миçе пин (пин-пин!) сын çинĕ пуль Терентти чăх-хисем тăвакан çăмартана! Ун ферминче ӳстернĕ автан тукмаккисене кам-кам çисе ыр курман пуль тата!..

Питĕ килĕштерсе пурăнаççĕ Праскипе Терентти, калама та çук.

Анчах пурнăç тени ытла пур чух та пĕр пек тикĕс пымасть çав. Тепĕр чух чип-чипер, янкăр уяр кун та аслати кĕрлесе илет.

Çак телейлĕ карчăкпа старик хушшинче те пĕррехинче пулнă çавăн пекки. Пĕлтĕр. Чут çеç килтен хуса кăларса яман Праски хăйĕн Терентине. Ун çинчен вăл мана хăй каласа кăтартрĕ. Каçса кайсах кулать каланă чух, анчах леш историйĕ вăхăтĕнче кулман, тимĕр тылă пек сикнĕ курăнать. Уйрăмах, унăн характерне шута илсен...

...Пĕр вырсарникун ирхине эпир кӳршĕ хĕрарăмĕпе иксĕмĕр эп тин çеç пĕçернĕ варенипе чей ĕçсе лараттăмăр. Çав вăхăтра Праски пырса кĕчĕ. Пĕр-пĕрине сывлăх сунса, кăш-кашт калаçкаласа илнĕ хыççăнах, вăл сумкинчен хутпа уйрăмăн-уйрăмăн чĕркенĕ çăмарта кăларса хума тытăнчĕ. Йăли çавăн пек унăн — нихçан

та пуш алăпа пымасть, ялан мĕнле те пулин кучченеç илес килет ман валли ялтан: çуркунне — симĕс сухан, каярахпа — симĕс купăста çулçи, унтан çырла — чие, слива, хăш чух вара пĕрер теçетке çăмарта. Миçе каланă пуль эп ăна ун пек ан хăтлан, тесе, пурĕпĕр хăйĕннех тăвать. Тен, пымассерен пĕр-ик черккĕ (хăш чух — ытларах та) «наливкă» (тепĕр чух—хаяртараххи те) сыптарнине асра тытать-и? Парăмлă пулас мар, тет пулинех...

— Мĕн тума илсе килтĕн, ма чăрманатăн, çăмарти лавккара та яланах пур, ĕнер кăна аллă штук илсе хутăм!— терĕм Праские хальхинче те.

— Лавккара эсир укçалла илетĕр, ку пирĕн — ахалех пулать, чăххисем кашни кунах тăваççĕ! Тата... авалтан туслă пурăннă çын патне кучченеçсĕр мĕнле пырса кĕретĕн?— терĕ вăл.

Ман кӳршĕ хĕрарăм Праские паллатчĕ, ун старикки тахçантанпах чăх-чĕп ферминче ĕçленине те пĕлетчĕ. Чĕлхине питех чарма пĕлменскер, çав халь каларĕхучĕ:

— Çăмарти сирĕн килти çеç мар пулĕ-ха, старикку фермăран та кашни кунах йăткалать пуль! Пинпин çăмарта купинчен çирĕм-вăтăр çăмарта илнине никам та сиссе юлас çук...

Çак сăмахсене илтни Праскишĕн темле хытă япалапа пуç тӳпинчен тӳнк! тутарнă пекех пулчĕ. Картах сиксе илчĕ вăл. Сĕтел çине хума сумкăран илнĕ юлашки çăмартине урайне шач! ӳкерсе çĕмĕрчĕ. Хăй тăруках кăвакарса кайрĕ... Ытла та кĕтмен сăмах пулчĕ çав уншăн ку, чĕринех пырса тиврĕ курăнать. Унăн Теренттине хăй пĕтĕм вăйне хурса пăхса усракан чăхсен çăмартине вăрттăн «йăтма» пултаракан çын тесе шутлаççĕ! Терентти — вăрă! Колхоз пурлăхне çаратать! Ĕмĕрне пулман, пулма та пултарайман япала!..

Çав самантра эпĕ Праски чĕринче мĕн пулса иртнине пит лайăх ăнлантăм. Этем майсăр кӳрентерчĕ-çке ăна манăн шапăлти кӳршĕ! Праски алли час-часах вăрăм пулнине астуса, вăл çак вырăнсăр сăмах каланă хĕрарăма çутăлтарса ярасран хăраса, пукан çинчен сиксе тăтăм — хĕнеттерес пулмасть ĕнтĕ çынна!

Анчах Праски ал çĕклемерĕ. Хĕрарăма витĕр шăтарас пек тăй-й... пăхса тăчĕ те пĕр хушă, унтан тăрук кулса ярса пукан çине лак! ларчĕ.

— Тӗрӗс каларӑн, йӑмӑк, пит тӗрӗс каларӑн эсӗ ман старик пирки, хӑвӑн куҫупа курса тӑнӑ пекех,— терӗ вӑл, пӗҫҫине ҫат! ҫапса илсе.— Ҫӑмарта йӑткалать вӑл манӑн, йӑткалать, эсрел пуҫӗ! Хура курак пек вӑрлать хӑш чух. Кӑҫал хамах тытрӑм ӑна пӗрре... Тытрӑм та — питӗ хытӑ пӗҫеркка патӑм. Ан вӑрла! Ан йӑт! Аслӑ-тӑнлӑ пул!

Эп ним ӑнланаймасӑр лартӑм. Ман кӳршӗ те тӗлӗнсе нимле мар пулчӗ. Чӑнах калать-ши Праски е шӳт тӑвать?

— Киле пӗр-ик теҫетке ҫӑмарта илсе пынӑшӑнах мӗн пӗҫеркки памалли пур ӗнтӗ тата...— Праски стариккине хӗрхеннӗ пек каларӗ вӑл.— Хӑй ӗҫлет те-ха вӑл унта, хӑй тӑрӑшать те... Тепӗр чух ҫӑмарти ытлашши те пулма пултарать пуль...

— Киле илсе пымасть ҫав вӑл, килтен илсе каять!— терӗ тӗ ӑна хирӗҫ Праски, ахӑлтатса кулса ячӗ.— Килтен йӑтать, мур!

— Килтен йӑтать?! Мӗн тума? Санран вӑрттӑн сутса хӑй валли ҫур литрлӑх тума-и?

— Асту, сутать пуль! Тьху!— сурса ал сулчӗ Праски.— Ҫак тарана ҫитсе те пӗр ҫӑмарта сутса курман вӑл. Ҫур литрне эп ӑна хам та ҫулталӑкра пӗр-иккӗ илсе паратӑп, унтан ытла ӗҫмест те вӑл.

— Эппин, мӗншӗн йӑтать-ха вӑл килти ҫӑмартана? Тата ӑҫта йӑтать, кама парать? Сӑлтавӗ те, вырӑнӗ те пулмалла-ҫке!

Праски йӑл кулса кӑкӑр туллин сывласа илчӗ.

— Теприсем каласан та ӗненес ҫук: фермӑна йӑтать, хӑямат! Фермӑна, хӑямат пуҫӗ!— терӗ унтан.

— Мӗнле фермӑна? Ӗне-выльӑх е сысна фермисенче ӗҫлекен тусӗсене ҫитерме-и?

— Унтах илсе каяс ҫук-ха, тата унта никам та выҫӑ лармасть. Хӑйӗн патне, чӑх-чӗп фермине илсе каять, акӑ мӗн! Шутласа пӑхсан — камит вӗт! Чӑн камит!

— Унта ахаль те пин-пин ҫӑмарта-ҫке..— терӗм эпӗ.

— Тӗрӗс, пин-пин ҫӑмарта, анчах...

— Мӗн — анчах?

— Анчах тепӗр чух, кӗтмен-туман ҫӗртен, уйӑх вӗҫӗнче хӑйсен планне, хӑйсем йышӑннӑ обязательствӑсене тултарма икҫӗр-виҫҫӗр штук ҫитменни палӑрать. Час-часах пулмасть ун пекки, анчах пулма та пултарать. Тепӗр чух инкекрен килет. Пӗррехинче вӗ-

сем ăсатма хатĕрленĕ ещĕке ӳкерсе çĕмĕрсе пăрахнă — унта пин çăмарта пулнă! Мĕн тумалла-ха? Намăс курас килмест, унччен илнĕ ыр ята ярас килмест. Плана тултармаллах! Пасара кайса илейместĕн ĕнтĕ çав çитмен виççĕр çăмартана. Ман Терентти вара...

— Килтен тултма тытăннă-и?

— Хăй çеç мар, хăйĕн помошникĕсемпе пĕрле, каласа килĕшнĕ те вĕсемпе...

— Тытрăн-и вара эс ăна?

— Тытрăм çав! Питĕ кулăшла тытрăм тата ватсупнăна!— Праски каллех ахăлтатса илчĕ.— Чăххисене хам та чылай усратăп эпĕ, кашни кун вунпилĕк-çирĕм çăмарта пухăнать. Пĕр хушă сасартăк ман çăмарта сахалланчĕ. Ик-виç йăвара та виç-тăват çăмарта çеç тупăнать. Мĕн пулчĕ ку чăхсене, ма пăрахрĕç çăмарта тума? Е кураксем йăтаççĕ-и? Тен, кушак, пăсара тавраш ернĕ? Мĕн мурĕ? Тĕлĕнмелле!.. Никамах та каламарăм-ха кун çинчен, сăнаса пурăнатăп. Çаплах сахал пулать çăмарта. Чăххисем тума пăрахрĕç, эппин, терĕм. Пĕррехинче çăл кутĕнче мана Матви арăмĕ сăмах тĕксе илчĕ: «Эсĕ старикку пирки ним те сисместĕн-и, чупмасть-и вăл сан?» тет. Ухмаха ан ер-ха, ăçта чуптăр ĕнтĕ утмăл пиллĕкрен иртнĕ çын!—тетĕп ăна. Вăл хăйĕннех перет: «Шан эсĕ хальхи арçынсене, ĕлĕкхи пек мар вĕсем, паттăр, пултараççĕ, лешкасри Ястах авă, карчăкĕ вилсен, сакăрвунникĕре авланчĕ, хăйĕнчен вăтăрпилĕк çул кĕçĕннине илсе ача тутарчĕ!» тет. Çакна илтсен, эпĕ те иккĕленсе илтĕм: чăнах ара, кам пĕлет!.. Эс тем илтмерĕн пуль те ман Терентти çинчен?— тесе ыйтатăп хайхи. «Илтмен», тет Матви арăмĕ. Мĕн каласан, эппин, илтмен пулсан? «Хам куртăм!» тесе хучĕ вăл. Ăçта куртăн, мĕн куртăн? «Кашни ир, тул çутăлнă-çутăлман, Маргарит патне кĕрсе каять. Мĕн тума кĕрет? Сăмах пур пулсан, хăйсен ферминче калаçаймаççĕ-и вĕсем? Эппин, сăмах мар вĕсен, темскер урăххи, çынсене систермелле марри пур! Виçĕмкун вара, сан Терентти пырса кĕнине курсан, сапур урлă сиксех кайса пăхрăм Маргарит чӳречинчен... «Мĕн куртăн вара? «Иккĕшĕ...» Мĕн иккĕшĕ? «Çăмарта шутласа тăраççĕ... Сан Терентти кĕсйисемпе хĕвĕнчен çăмартасем кăларать, леш вĕсене шутласа пĕрнене хурать. Терентийĕ каçхине фермăран вăрласа килнĕ те, халь кăна сутма парать, кайран пĕрле ĕçме...»

Праски самантлăха чарăнса сывлăш çавăрса илчĕ.

— Çавăнтах ман пĕтĕм кĕлеткене вĕри тар тапса тухрĕ! Ал-урасем чĕтреме тытăнчĕç. Маргарит вăл — Теренттипе пĕрле ĕçлекен çамрăк хĕрарăм, упăшкинчен уйрăлнăскер. Кам пĕлет, тен, ваттисене те тиркемест-и? Ах, турă, тем курас пулĕ! Эс кун çинчен никама та каламарăн пуль те?— тесе ыйтрăм Матви арăмĕнчен. «Çук-ха, каламан», тет. Тархасшăн, ан кала, намăс ан кăтарт! Çулне-йĕрне эп хамах тупăп, кăтартăп, кăтартăп вĕсене мĕн кăтартмаллине! Вĕрентĕп!.. «Кăтарт çав, кăтарт, лайăхрах вĕрент!»— ăс пачĕ Матви арăмĕ. Ну, паллах, çавăн хыççăн тытăнтăм сыхлама... Теренттине хăйне ним те каламастăп-ха. Манăн вĕсене наличнă тытмалла-çке, малтанах систерсе шуйхатмалла мар... Терентти ир-ирех ĕçе кайма тухать те, эп те, ăна систермесĕр, хыççăн тухатăп, ăçталла кайнине пăхса юлатăп. Пĕр кун иртрĕ çапла, иккĕ, виççĕ. Ман старик тӳрех фермăна каять-ха. Тăваттăмĕшĕнче вара, тăкăрлăкпа пăрăнса уялла каяс вырăнне, пĕррех Маргарит еннелле ярăнтарчĕ. Тĕрĕсех иккен Матви арăмĕ калани! Эпĕ, паллах, ун хыççăн, урамри йывăçсен хӳттине пытанса пыратăп. Вăл курмарĕ мана, каялла пĕрре те çаврăнса пăхмарĕ.

— Çитрĕ те калинккерен шаккарĕ, Маргаричĕ тăма ĕлкĕрнĕ пулмалла, тӳрех тухса уçрĕ.

— Кĕтнĕ ĕнтĕ вăл ăна, ĕнерех каласса татăлнă та..— терĕм хам ăшра. Чĕрем кăкăртан тухса вăркăнас пек тапать. Ара, тытрăм-иç кусене! Ну, тăхтăр-ха, эп сире... ы-ыхх!

Кĕрсе кайрĕç. Эп хапха çумне йăпшăнса хашкаса тăтăм. Ытла тăруках хăратас темерĕм. Анчах чун чăтмарĕ, пĕр минут та иртмерĕ пуль — ыткăнса кĕтĕм пӳрте. Сĕтел умĕнче тăраççĕ иккĕшĕ те, Терентти кашни аллинче ик-виçшер çăмарта, Маргаричĕ пĕчĕкрех пĕрне тытнă. Мана курсан иккĕшĕ те кĕл тĕслĕ пулса кайрĕç.

— Эсир... эсир капла-и-ха, эсреметсем?!—кăшкăрса ятăм эпĕ.— Мĕн хăтланатăр, çĕр çăтманскерсем?!

— Эпир-и? Эпир... ним те мар, так аҫаль çеç...— аран мăкăртатса илчĕ Терентти.— Ак, çăмарта шутлатпăр...

— Мĕнле çăмарта вăл сирĕн?

— Чăх çăмарти ара...

— Ăна эс каламасăрах куратăп — хура курак çăмарти мар. Эс вăл çăмартана ăçтан вăрласа килнине кала! Кала, атту-тăк иксĕре те халех тем туса тăкатăп!— вĕсем патнелле пыма пуçларăм эпĕ. Ман çине пăхма та хăрушăрах пулнă пулмалла çав,— иккĕшĕ те чака пуçларĕç. Эп татах кăшкăртăм:— Вăрăсем иккен эсир! Фермăна çарататăр! Халех председателе кайса калатăп, акт çырса суда паччăр! Сана.. сана вара, шуйттана...— Эп Терентти сухалĕнчен ярса тытрăм.— Тек киле те кĕртместĕп! Ват кушак аçи! Чупкăн!:— Унтан Маргаритне çулса илтĕм:— Эсĕ тата, эс мĕн хăтланатăн?! Ман хăрăк Терентирен çамрăкраххине тупаймарăн пулать? Ай, пурте тиркеççĕ-и?!

— Итле-ха, карчăк, ăнлан-ха...— сăмах хушма тăчĕ старик, анчах эп ăна çăвар уçма та памарăм.

— Итлеместĕп! Итлемесĕрех йăлт ăнланатăп! Ак мĕнлерех ăнланатăп!— Сĕтел çинчи пĕрнене ярса тытрăм та ăна урайне çавăрса çапма çĕклерĕм.

— Карчă-ăк!.. Ан хăтлан-ха ун пе-ек!— макăраслах кăшкăрса ячĕ Терентти.— Пĕтеретĕн пире! Ахаль те пирĕн план валли тăватçĕр çăмарта çитмест — леш эрнере хурлăх пулчĕ, Маргаритпа иксĕмĕр пĕр ещĕк çĕмĕрсе пăрахрăмăр...

— Ташларăр-им вăл ещĕк çинче?

— Машина çине çĕклесе хунă чух ӳкертĕмĕр... ăнсăртран... Халь çавăн вырăнне пухатпăр. План тултармалла-çке... Ăнлан-ха эсĕ!

Эп Терентти çине пăхрăм та, ман ăна шутсăр хĕрхенес килсе кайрĕ. Тăрать, мĕскĕн ман умра чĕтресе. Айăпа кĕнĕ йыт çури пек пăхать. Куçĕсем чарăлнă, тути усăнса аннă, пăлханса ӳкнипе сайра шăлĕсем шак-шак тăваççĕ... Лайăх ĕçленипе чăваш халăхĕ умĕнче чапа тухнă, орден, тăватă пăшал илнĕ çын вĕт-ха вăл! Хама та нихçан та кӳрентермен, анчах эп ăна ав епле пăсăрлантаратăп. Пĕтĕм çиллĕм пĕр наччасра иртсе кайрĕ манăн.

— Эс ун çинчен мана мĕншĕн ку таранччен каламан?— сасса çапах та хытарса ыйтрăм эпĕ.

— Хăрарăм... вăрçасран шикленетĕп,—терĕ старик.

— Манран хăрама — эп кашкăр мар пуль? Сан арăму пуль?— кăмăлсăр пулнă пек каларăм ăна хирĕç.— Е ним ăнланман тăмсай вырăнне хуратăн-и ма-

на? Килйышра хурлăх пулсан, ăна упăшкипе арăмĕн пĕрле тӳссе иртермелле пуль? Каланă пулсан, тахçанах тултараттăмăр çĕмĕрĕлнĕ çăмарта шутне! Эсĕ пур— йăваран курак пек вăрласа пурăнатăн. Плана нумаях тултараймăн ун пек вăрланипе! Айван!

— Лайăх çын-çке эсĕ, Праски инке,— терĕ çав вăхăтра хам халь çеç пăскăртнă Маргарит.— Кăмăлу ылтăн санăн...

— Мĕн каламалли! Ылтăнран та ирттерет...—куçĕсене мăч-мăч туса илчĕ Терентти.

— Юрĕ, юрĕ, ан йăпăлтатăр ытлашши, атту каллех çилленсе лартатăп!— хăратрăм çаксене.— Шутлăр часрах хăвăрăн çăмартусене, çитменнине хам парăп, кăштах пурччĕ-ха манăн пухса хуни! Анчах малашне ещĕксемпе ан перкелешĕр, çăмарта — чул мар, хуппи çӳхе!

...Праски йăл-йăл кулса илчĕ:

— Çав кунах çăмарта планне тултартăмăр вара. Эсир пур — «фермăран йăтать», тетĕр...

ТУПМАЛЛИ

Алевтина. Повесть 5
Вĕсен амăшĕ. Калав 59
Хисеплĕ пассажир. Калав . . . 65
Ялан кĕтнĕ хăна. Калав . . . 70
Хĕр чĕри. Повесть 81
Çăмарта. Кулăшла калав . . 196

ЛАЗАРЕВА АЛЕКСАНДРА НАЗАРОВНА

СЕРДЦЕ ДЕВИЧЬЕ

Повести и рассказы

На чувашском языке

Редактор *В. Л. Садай.*
Художник *Владислав Агаков*
Художественный редактор *Е. Е. Михайлова*
Технический редактор *В. И. Павлова*
Корректор *Н. З. Романова*

НТ 03545. Сдано в набор 22-III-71г. Подписано к печати 11-XI-71 г. Изд. № 47/71 г. Формат 84×108 1/32. Типографская № 1. Физ. печ. л. 6.5. Усл. печ. л. 10,92. Учетно-изд. л. 10,32. Заказ № 1495. Тираж 8000 экз. Цена 55 коп.

Чувашкнигоиздат, Чебоксары, пр. Ленина, 4
Типография № 1 Управления по печати при Совете Министров Чувашской АССР
Чебоксары, Володарского, 5

Чăваш АССР кĕнеке издательствинче юлашки вăхăтра çакăн пек кĕнекесем пичетленсе тухрĕç:

А. Пушкин. Борис Годунов. (*Трагеди.*)

А. Талвир. Суйласа илнисем.

Н. Мранька. Ĕмĕр сакки сарлака. *(3-мĕш кĕнеке. Иккĕмĕш кăларăм.)*

О. Горчаков. Вăлах—Вудсток капрал. *(Повесть.)*

Юхма Мишши. Кăвак çĕмрен. *(Роман.)*

Ш. Ракипов. Чечексем каласа пĕлеççĕ. *(Повесть.)*

Коллектив. Йĕппи хыççăн çиппи. *(Кулăшла калавсем.)*

В. Бурнаевский. Адмирал мундирĕ. *(Калавсем.)*

М. Николаева. Хура кушак. *(Повесть.)*

Г. Айхи. Палăрăм. (*Сăвăсем.)*

А. Воробьев. Юпа уйăхĕ. *(Сăвăсем).*

Г. Ефимов. Çитмĕл çичĕ чечекрен çĕленĕ кĕпе. *(Сăвăллă юмах.)*

Г. Юмарт. Курак тăманĕ. *(Ача-пăча сăвăсем.)*

Асăннă кĕнекесене эсир Чăвашкниготорг магазинĕсенче туянса вулама пултаратăр.

Цена 32 коп.